К84.09(=Чув)
К89
Ч-42155



Владимир КУЗЬМИН

# Тымар



I кĕнеке



Национальная библиотека ЧР
4-042155

Обяза. экз.

К84.0Ч(=Чув)
К89

**ВЛАДИМИР КУЗЬМИН**

# ТЫМАР

Роман

Пĕрремĕш кĕнеке

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2009

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6-4
К 89



*Раççей Федерацийĕнчи писательсен тата Раççей журналисчĕсен союзĕсен членĕ Владимир Прокопьевич Кузьмин Чăваштанăн Вăрнар тăрăхĕнчи Хурăнсур Çармăс ялĕнче çуралнă, хресчен ĕçĕнче пурнăç çулне такăрлама пуçланă, комсомолта, çарта хастарлăхĕпе çирĕплĕхне туптанă, вăтам тата аслă шкулсенче ăс-тăнне пуянлатса журналистикăра, илемлĕ литературăра ăсталăхпа пултарулăхне халăх куçĕ умĕнче çивĕччĕн, сăнарлăн уçса хăйĕн сассине панă. Сăнарлăх тĕнчийĕ унăн анлă, унта аслă стройкăсен, мăнă заводсен, уйхир, искусство паттăрĕсен ĕçпе илем кĕввийĕ. Халăхăн кулленхи пурнăçĕнчи шÿтлĕ кулăпа сăмах сăнни те яланах унăн çумĕнче.*

*Пултарулăх картлашкипе хăйне май çÿлеллех хăпарать пулин те вăл пуç тăрринчи чап хуранĕнчен ылтăн-кĕмĕл çăлтăрĕсем ывăçласа илмешкĕн аллине тăсмасть. Уншăн чи вăйлă та мухтавлă парнесем вĕсем — ашшĕ шанса панă суха пуç аври тата амăшĕ тыттарнă çивĕч çурла.*

Кузьмин В.П.
Тымар. Роман. 1-мĕш кĕнеке. — Шупашкар: «Çĕнĕ Вăхăт», 2008. — 272 с.

*Виçĕ кĕнекерен тăракан хайлавĕнче автор чăваш ялĕн, хресченĕн, интеллигенцийĕн пурнăçĕ çур ĕмĕр хушшинче мĕнле аталанса, çĕнелсе пынине анлăн сăнарланă. Тĕнче вут-çулăмĕнче нумай ĕмĕр хушши нушаланса тĕрекленнĕ чăваш хăй çуралнă çĕрĕ çинче ырă̆лăхшăн, этем телейĕшĕн кĕрешет, тăван çĕршыв тĕрекĕшĕн вăйне-халне шеллемест, инкек-синкекне парăнтарса малаллах талпăнать, йывăрлăха çĕнтерсе хăйĕн илем тĕнчине ырă кăмăлтуйăмĕпе ăслăн, пултаруллăн пуянлатать.*

ч-42155
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ПРОВЕРЕНО

© Кузьмин В.П., 2008

# ТЫМАР

Таса çăлра таса шыв

*Ваттисен сăмахĕнчен*

## ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

### 1

Вăрманкасран тухакан çулпа Макçăм Крутов кукăрмакăр çырмасем урлă тата анлă уйсем тăрăх тухăçалла васкаса утать. Унăн тăрăхла та типшĕмрех питне ирхи хĕвел пайăркисем кĕрен тĕспе сăрлаççĕ. Экзаменсем вăхăтĕнче шурсах кайнăччĕ вăл. Ку уншăн нимех те марха, вăхăтлăха çеç. Кĕнеке умĕнче пуçа чиксе ларман пулсан совпартшкулта хĕрлĕ диплом илме хĕнтерехчĕ çав. Каччă çĕр сĕткенĕн ӳсĕртекен шăршине кăкăр тулли çăтать. Майĕпен хĕвел пайăркисем те хĕрӳрех пĕçертекен пулчĕç: ӳте сăнăлла тирĕнсе тăварлă тар кăлараççĕ. Хирĕç уласа иртекен автомашинăсем хыçĕнчен мăкăрланса юлнă тусан тарлă кĕлетке çине хуллен витĕнет.

Карлăклă йывăç кĕпер урлă каçсан вăрăм тăвайкки пуçланчĕ. Шуралнă ыраш пуссипе çул пĕкĕ пек авăнса хăпарать. Çулăн икĕ айккипе ӳсекен утмăл турат, сив курăкĕ, салтак тӳми, тĕрлĕ тĕспе йăлтăртатса, куçа шартарса яраççĕ. Илемлĕ чечек йăранĕсене кунта ятарласа акса çитĕнтернĕ тейĕн. Тăвайккире çамрăк вăрман симĕс çăмха евĕр чăмăртанса ларать. Çĕр-аннен пуç кăшăлĕ пекех курăнать çак ытарма çук чуна туртăмлă ӳкерчĕк Макçăма. Тĕлĕнмелле капăр çулпа утнă май вăл хăйне хăй çунатланнăнах туйрĕ.

Унччен те пулмарě, ăна хирěç тӳрěрен, ыраша çăрса, лав сирпěнтерсе тухрě. Урапа ещěкне тиеннě арçынпа виçě хěрарăм çăвар çурасла ěçкě юрри янраттараççě. «Ухмаха ернě-им эсир?!» — тесе Крутов вěсен лашине чарма хăтланчě, анчах — кăлăхах. Хăлха çумěнче пушă вěçě вăшлатни тата «Кулхус тырри шалккă-им сана, пуçтаха!» тесе çухăрни çеç илтěнсе юлчě.

Макçăм çулран părănса tăpălkka пěчěк вăрмана кěчě, кěтесри уçлăхра сарăлса ӳсекен юмансем тěлěнче чарăнчě, пиншакне симěс курăк çине сарса сулхăна ларчě, пуçне чиксе шухăшларě: «Эх, чунсăр çынсем, çынсем... Мěншěн киревсěр-ха эсир, мěншěн шелсěр, мěншěн хăвăршăн кăна çунатăр, çěртен мăшкăллатăр? Чăтатăн çав эсě — çěр-анне, илемӳпе пуянлăхна таптаса çăрнине те, пурне те тӳсетěн, ырă кăмăллипе усалли валли те сěткенлě çимěç ӳстеретěн. Ăна лайăххи те, усалли те пěрешкел çиет. Эх, эсě, çěр-анне...»

Ăна лăплантарнăн, вěлтěрен тăрри хăйěн вěçěмсěр юррине тăсать. Сасă сылтăмра илтěнет, самантрах хыçала куçать, унтан — ума. Ун çумне хушăннă урăх кěвве — улăхри чечек çинчен юрлакан юрă кěввине — Макçăм майěпенех уйăра пуçларě. Акă вăл вăйланса, вăйланса çывхарчě те туххăмрах пач татăлчě. Хăлхара вěлтрен тăррин сасси çеç тăрса юлчě. Макçăм тин пуçне çěклесе пăхрě: унран икě-виçě утăмра утмăл турат чечеклě çӳхе кěпе тăхăннă сарăрах çӳçлě, хăмăр ӳтлě, аллине кěнекепе улăм шлепке тытнă хěр тăрать. Сăмаха хěр пуçарчě:

— Салам çул çӳревçе! Эсир, мěн, пит хуйха пуснăн ларатăр-çке?

Калаçнă май унăн сулахай пит çăмартийě пăрça хумалăх путса кěрет. Çӳлти капан шăлне пытарма хăнăхнă алли тутине йăпăрт хупласа илет.

Крутов хěрěн çутă чакăр куçěнчен пăхрě.

— Канма тесе ларнăччě те тěлěрсех кайнă.

— Эй, суятăр, куçăр пěртте çывăрнă çынăнни пек мар, ытла тарăхуллă.

— Чăн та, эсир йăнăшмарăр, — аллинчи пучаха пĕтĕрчĕ Макçăм. — Тĕрĕсех, питĕ тарăхнăччĕ тырă ани тăрăх катаччи чупакан путсĕрсене. Çак пучах мĕнле тертпе ӳснине, уншăн халăх мĕн чухлĕ тар тăкса хурлăх курнине туяççĕ-ши вĕсем? Пĕр тесен, хăйсемех акса тăваççĕ, хăйсемех çăрса пĕтереççĕ. Çăкăр хакне чунчĕрепе туйма пĕлменни çеç кунта — этем культури çитменни, — çапла каласа Крутов хĕре çул çине илсе тухрĕ.

— Лăпланăр. Такамшăн та чунна ан ыраттарăр. Пурпĕрех пĕччен нимĕн те тăваймастăр. Хурăнвар тĕлне çитсен тĕлĕннипе палтах кайса ӳкĕр ак. Унта уя йăлтах урлă-пирлĕ таптаса пĕтернĕ. Петрав эрни пуçланнă-çке. Таврари ял çынни хăнана пухăнса тулнă.

— Сĕтел çинче чашлаканни пур чухне уйра кашласа лараканни кирлех мар пуль çав...

Вĕсем урапа çулĕпе тепĕр пусса çитрĕç.

— Авă, курăр-ха, — аллипе тĕллесе кăтартрĕ хĕр, — комбайн каллех ĕçлемест, Мулла Микушĕ ӳсĕр пуль ĕнтĕ.

Комбайн хуçи чăнах та улăм купи çумĕнче хуп турттарать. Вун-вун ик çулсенчи арçын ача машина пайĕсене сĕрет.

— Эх, эсĕ те çав, аçуна чарайман, начар помощник, — ачан тăрмаланчăк çӳçне шăлса илчĕ хĕр.

— Итлеттерсе пăх-ха ăна... Тыр турттаракан машинăпа яла кайса килчĕ те... Пĕччен ĕçлеме хăрап, тем тăвас ман халь... — нĕр-р йĕрсе ячĕ Микуш ачи.

Нумай шухăшласа тăмарĕ Крутов, аллинчи пиншакне хĕре тыттарчĕ те штурвал умне ларчĕ, мотора тапратрĕ. Кĕç комбайн çатăртатса-шалтăртатса малалла туртăнчĕ, бункера ыраш юхма пуçларĕ. Çирĕп алăсене лайăх итлет «уй-хир карапĕ». Макçăм Шупашкарта вĕреннĕ чухне ялти практикăра тракторпа та, комбайнпа та ĕçленĕ-çке. Паян вара пĕлни шăпах кирлĕ пулчĕ ăна.

Халиччен курман каччăран шалтах тĕлĕннĕ хĕр вырăнта юпа пек хытса тăрса юлчĕ. Ял енчен çаврăнса килекен комбайн кĕрлевĕ унăн чунне савăнтарчĕ, улăм купи çумĕнче харлаттарса выртакан Микуш — тарăхтарчĕ. Комбайн хăйпе танлашсанах хĕр ларкăчран уртăнчĕ те каччă патне пусмапа хăпарчĕ, унпа малтанах паллашайманшăн хăйне хăй ÿпкелесе те илчĕ, çапах, хăюлланса, ыйтрĕ:

— Мĕн ятлă эсир?!

— Макçăм!

— Мана Лина тесе чĕнеççĕ. Ял хуçалăх институчĕн студентки эп. Тымартан. Кунта — практикăра. Эсир хăвăр ăçтисем пулатăр?

— Эпĕ-и? — Эпĕ — Вăрманкасран!

— Çывăхрисемех апла. Мĕн çăмăлпа килтĕр?

— Питех пĕлес килет-и? Мухтаннă пек пулать те ĕнтĕ... Çапах, халь каламасан та, каярахпа пурпĕрех сас-хура тухĕ. Пĕлтерем, эппин: райком мана çак колхоза ĕçлеме ярасшăн.

— Партком секретарьне мар пуль? Çавăн пирки сăмах çÿретчĕ.

— Çапла, тĕрĕсех. Йышăнасса те йышăнаççĕ-ха колхозĕнче, темле. Малтан разведкăна килсе курас терĕм.

— Апла пулсан кĕçех пĕрле ĕçлеме тытăнăпăр. Сире тĕл пулнипе темле хамăн та кăмăл уçăлчĕ.

Ял çумĕнчи йывăç кĕлетсем патне виççĕ хутларĕç, унта бункерти тырра тăкса хăварчĕç. Вĕри сывлăшпа тусан ăшĕнче самаях пăшăхрĕç. Тÿрĕрен çывхаракан мотоцикла асăрханă хĕр савăнса пĕлтерчĕ:

— Акă, пулăшакан килет. Трактор бригадин бригадирĕ Воробьев, Павăл Фомич. Атя, анар.

Сăран аттипе хыт хăмăла сăтăрттарса утакан вăтам çулсенчи тăлпан арçын тап чарăнчĕ те комбайн çинчен сиксе аннă Макçăма алă пачĕ:

— Микуш вырăнне ĕçлетĕр апла? Пулăшнăшăн тавтапуç. Кĕлет патĕнчех каласа пачĕç-ха мана хĕрарăмсем практикантка-агроном уйра темле йĕкĕтпе кĕрлеттерет тесе.

Крутов ăна виç сăмахпа хăй камне тата «Шурăмпуç» колхоза мĕн сăлтавпа килнине пĕлтерчĕ.

— Авă кам?.. — ĕнсине кăтăрт-кăтăрт хыçрĕ бригадир. — Илтнĕччĕ, илтнĕччĕ пĕркун райкомра сирĕн пирки. Хавасах паллашма. Ĕçĕсем пирĕн, авă, хăвăрах куратăр, чаплах мар-ха. Аптăрасах ӳкетпĕр. Ним тума та çук. Петрав эрнинче ассах каяççĕ хăшĕсем. Пăркăчламалла та çав йĕркене пăсакансене, анчах пăркăчне хытарса вăй çитерекенни тупăнмасть. Çавăнпах штурвал умне те халĕ хамăн ларма тивет.

Макçăм татах ĕçлесшĕнччĕ, анчах бригадир яхăнне те килĕшмерĕ.

## 2

Линăпа Макçăм çула тухрĕç. Ку тĕлте шăпах темиçе пусă чикĕленнĕ илемлĕ çĕр лаптăкĕ. Çурла кĕтсе ывăннипе хуйхăрса шуралнă ыраш авă çумри сарă тулă пучаххипе выляса йăпанать. Çĕр çумнелле лăпчăннипе кăмăлсăрланнă пăрçа йăп-йăрăс сĕлĕ тунине кĕвĕçӳллĕн ыталаса илнĕ. Урпи пуçне чиксех кĕреке юрри шăрататать. Шăрăха çĕнтересле çине тăрса вĕрекен çилĕ «уй-хир пикин» кăтрине якатать. Вĕсен тăнăçлă пурнăçне сыхланăн, ватă хырсем юмахри пăхаттирле мăнаçлăн сарăлса лараççĕ. Икĕ ял пусĕнчи тӳпемре çил арманĕсем ăмăртмалла авăраççĕ.

— Эх, художник пулсанччĕ, — ассăн сывларĕ Макçăм, — çак илемлĕхе тĕрлĕ тĕслĕ сăрăпа хам ăнланнă евĕр сăнласа парăттăм; эх, композитор пулсанччĕ — çав пучах кĕввиллĕ, чĕрене пырса тивмелли, чуна тыткăнламалли симфони çырăттăм...

— Хăюллă та пултаруллă çын пулас эсир, — Макçăмăн хуп-хура пичĕ тăрăх пӳрне вĕçĕпе йĕр туртса тухрĕ Лина. — Тусан ăшне путнă вĕт эпир иксĕмĕр те. Пейзажпа симфони çыриччен çăвăнса тасалмалла пуль. Çитменнине кунашкал чикан сăнĕпе иксĕмĕре яла та кĕртмĕç. Вă-ăн унта, Тăмпуç çырминче, пĕве пур, чупар.

Шыва кĕрсе тухнă хыççăн çан-çурăм çăмăлланчĕ, кĕлеткене çĕнĕ вăй хушăннă пекех пулчĕ. Пĕве çумĕнчи сукмакпа вĕсем тăвалла хăпарчĕç. Сукмак икĕ енĕпе те чечек кавирĕ. Çăмăллăн ярăнса утакан Лина пĕр вырăнта çаврăнса илчĕ.

— Паян ман савăнăç кунĕ — çуралнă кун.

— Чăнах-и? — хыпăнса ӳкрĕ Макçăм. — Апла пулсан саламлатăп. Ăçта-ха хăлхисем?..

Ирхи хĕвел пек йăлкăшакан хĕр качча куçран пăхса каларĕ:

— Хăй вырăнĕнчех. Çывăх палламан çынна турттармастăп çав хăлхана. Атьăр ман пата. Эпĕ Тарăнварта председательсем патĕнче пурăнатăп. Александр Семенович ман аттен авалхи тусĕ. Пĕлесех килсен, аннепе атте те вĕсем патĕнчех.

— Ытла аван мар пуль, «Шурăмпуçне» курма килнĕкилмен председатель патне лекетĕп капла. Çитменнине тата манăн сире валли парне те çук.

— Мĕн аван марри çак? Арăмĕпе иккĕшĕ те лайăх çынсем вĕсем. Атьăр ĕнтĕ? Кунашкал турткаланса тăрса эсир мана кӳрентеретĕр вĕт. Савăк кăмăла хуçатăр манне. Ялта ахаль те кичем. Атьăр, тархасшăн? — йăлăнсах качча хулран çавăрса тытрĕ Лина.

— Юрĕ, эппин, пырасах тăк, çакна та пулин парнелем хăть, — палламан хĕре хĕрхенсех килĕшнĕ хыççăн каччă чечек татма пуçларĕ. — Акă пулчĕ те. Ман шутпа, эсир, вăтам шкул пĕтернĕ хыççăнах института

вёренме кёнё пулсан, çирём икке çитме кирлё. Çавăнпа çирём икё утмăл турат татрăм. Кашни чечекёнче утмăл турат пулсан, сире тата пин те виççёр çирём çул телейлё пурăнма çирёп сывлăх сунатăп.

— Тавтапуç, Макçăм. Хăвăр та çирёп сывлăхлă пулăр. Эх, пёлесчё сирён, мён тери савăнăçлă эпё паян!

Лина куçне хупсах çăмăллăн çаврăна-çаврăна илчё, сукмакран пăрăннипе ăнсăртран путăка пусрё те сулăнса кайрё. Йёкёт хёре ўкме памарё, ăна пилёкёнчен меллён тытма ёлкёрчё. Кётмен çёртен çапла пулса тухнипе вăтаннăскерсем пёр-пёрин куçёнчен ытарлăн пăхса шăппăн тăчёç, унтан васкамасăр малалла утрёç. Уй чиккипе такăрланă сукмак тăрăх çамрăксем часах яла çитрёç.

Макçăм çиелтен хăмапа тул туртнă, сарă сăрăпа сăрланă ултă кётеслё пўрте, вёр çёнё вырăсла хапхана тата пёчёк пахчара ўсекен çамрăк хурăнсене, сиреньсемпе чиесене тёсесе пăхса илнё май хёр уçнă алăкран хăюсăррăн кёчё.

Хăнасене пўртре аллăсенчен иртнё тулли кёлеткеллё кил хуçи хёрарăмё кётсе илчё. Унпа паллашма ёлкёреймерё Крутов, шалти пўлёмрен йăрăмлă тум тăхăннă тăртаннă пит-куçлă арçын тухрё.

— Лексантăр мучи, ку ман çён юлташăм, Макçăм. Ашшё ячёпе хушаматне хам та ыйтса пёлеймерём-ха, сирён колхоз уйёнче тупрăм та пёрлех илсе килтём, — пёлтерчё хёр.

Арçынсем аллисене хыттăн чăмăртарёç.

— Крутов. Максим Максимович.

— Мана Александр Семенович теççё. Хушаматăм — Кириллов.

Сасса илтсе шалтан Лина ашшёпе амăшё сиксе тухрёç. Хёрён ашшё Макçăма аслă пўлёме çавăтса кёртсе юнашар лартрё.

— «Çăлтăр» колхоз председателĕ Маминов пулатăп эпĕ, — терĕ вăл, — ятпа, атте ячĕпе, снашăтă, Сергей Тимофеевич.

Лина кухньăран утмăл турат чечекĕсене янă кĕленче савăт çĕклесе тухрĕ, апат-çимĕç тултарнă сĕтел варринче пушă вырăн тупса ăна майлаштарса лартрĕ. Сĕтел хушшине вырнаçсан пурте Линăна саламларĕç. Сăмах май, Крутовран вăл кунта мĕн сăлтавпа килнине ыйтса пĕлчĕç.

Кириллов, паян-ыран çĕнĕ секратарь кĕтекенскер, хыпара илтнипе шартах сикрĕ, Крутовăн тăрăхла питкуçне тепĕр хут пăхса илчĕ.

— Çакăнти пек пĕр шухăшлă, пĕр чĕлхеллĕ пулса ĕçлемелле сирĕн, снашăтă, малашне, — пуçа ухрĕ Маминов.

— Пире ĕнтĕ, Максим Максимович, хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче килте ĕçсе ларнăшăн ятламаллипех ятламалла, — лайăхмарланчĕ Кириллов.

— Эпĕ сирĕншĕн халь кĕтмен хăна çеç, каккуй ятлама унта, апачĕшĕн тавтапуç. Кĕтмен хăнана мĕнле шăпăр лекессине пĕлетпĕр, — шӳтлерех пачĕ Крутов.

Кириллов арăмĕ пурне те Лина ячĕпе хатĕрленĕ шăрттана астивсе пăхма сĕнчĕ.

Сĕтел хушшинче çывăхланнă качча ăсатма Лина армансем патнех тухрĕ. Акă ял хыçĕнчен пĕр грузовик тусан мăкăрлантарса килет. Машина хăйсемпе танлашсан Макçăм тырă миххисем çине çăмăллăн хăпарса ларчĕ. Лина çил арманĕ çумĕнче шурă тутăр вĕлкĕштерсе юлчĕ. Каччă ăна хирĕç карттусĕпе сулса саламларĕ.

Вăрманкаса çитичченех хĕр кулли, ирхи хĕвел пек çиçекен ăшă кулă, Макçăм куçĕ умĕнчен çухалма пĕлмерĕ.

### 3

Макçăм Крутов иртнĕ эрнере килсе курнă «Шурăмпуç» Вăрманкас районĕнчи вăтам хуçалăхсенчен

пĕри шутланать. Унта кĕрекен Хурăнвар, Тарăнвар тата Кайривар ялĕсем Санар улăхĕ тăрăх йĕркипе ларса тухнă. Хурăнварĕпе Тарăнварĕ айлăмра, Кайриварĕ — юхан шыв леш енче, тăвайккире. Правлени Тарăнварĕнче, колхоз варринче, вырнаçнă. Çĕрĕсем вĕсен вун пилĕк çухрăмах тăсăлаççĕ, вăрман енче «Çăлтăр» колхоз уйĕсемпе чикĕленеççĕ.

Тарăнвара ĕçлеме килесси Крутовăн çакăнтан пуçланчĕ. КПСС обкомĕн совпартшкулĕнче экзаменсем çывхарас умĕн вăл Вăрманкаса, килне, таврăннăччĕ. Шупашкара кайиччен, малашнехи ĕç вырăнĕ пирки тĕплĕнрех ыйтса пĕлес шутпа, Макçăм райкома кĕчĕ.

Йĕркелӳ ĕçĕн пайĕнче ăна нимех те шантарса каламарĕç, «пĕрремĕшпе канашламалла» терĕç. Райком секретарĕ Яков Сидорович Мургаев час ерçмерĕ. Çавăнпа Крутовăн йышăну пӳлĕмĕнче чăтăмлăн кĕтсе лармалла пулчĕ. Çав вăхăтра алăк уçăлчĕ те Яков Сидорович патĕнчен Макçăмпа пĕрле вĕренекен Пантелеймон Христофорович Оманов саркаланса тухрĕ, ун умĕнчен сулахай куçне юриех мăчлаттарса: «Иртерех вăранмаллаччĕ, çывăрса юлтăн», — тесе мăшлатса иртсе кайрĕ. Крутов сăмах хушмарĕ. Унран вăл ахаль те вĕçĕмсĕр тĕлĕнет.

Оманов лутака кĕлеткеллĕ, пысăк пуçлă çын. Тăрăхларах тачка пит çăмартисем, çаврăнса тухса тăракан тута хупаххисем, çап-çутă, тĕссĕр куç, хĕрлĕ çӳç ăна илемлĕх тĕнчине кĕртмеççĕ тейĕн. Ячĕпе ашшĕ ячĕ хăвăрт каланă чухне татăларах юлнăран, ăна ялан Панхристоф тесе чĕнеççĕ. Вĕренекенсем тата, мăшкăллаcа, юриех çакăн хыççăн унран Пан Христос тесе кулма тытăнчĕç. Хӳтлĕх шыраса Оманов совпартшкул директорĕ патĕнче те пулнăччĕ. Йĕплĕ сăмах пурпĕрех эртел чĕлхинчен татăлмарĕ.

Чĕлхи ĕнтĕ чи малтан хăйĕн йĕплĕ-ха. Пĕр-пĕр çыннăн çитменлĕхне асăрхаса, ун пирки ыттисене

вăрттăн пĕлтерсе тухса лешне мăшкăлтăк шывне тĕксе ярас килет унăн. Омановшăн пурте юрăхсăр, хăй çеç ылтăн чăмăркки. Крутов унра этемĕн киревсĕр енĕсене — икĕ питленнине, йăпăлтатнине, майлашăннине пит лайăх курса сисме пултарчĕ. Такама сутма та хатĕр. Хăйсене вĕрентекен çамрăк философа «юсани» аса килчĕ. Наукăна шăл витереймен Панхристоф, хăйне япăх паллă лартса панăшăн, тусĕсемпе куç курми пуличчен хăналаççĕ те куна, хупахран тухсан милицисен «хура çăханĕ» çине лартса яраççĕ. Çунчĕ вара карьера ачан. Пан Христос куçне мăчлаттарса йăхлатни халĕ те ахальтенех пулас çук пек туйăнчĕ. Чăнах та, тепĕр темиçе минутран, хăйне секретарь йышăнсан, Крутов ун сăлтавне ăнланчĕ. «Инструктор вырăнĕ пурччĕ, унта ĕçлеме тин çеç Оманов юлташа шантартăм, — терĕ Мургаев. — Кĕçех пĕр партком секретарĕ кирлĕ пулать. Диплом илсессĕнех «Шурăмпуçне» ярăпăр. Крутов нумай шухăшласа тăмасăрах килĕшрĕ.

Çапла вара Оманов, вĕренӳре вăтам кăна ĕлкĕрсе пыраканскер, пĕрремĕш секретарь умĕнче йăпăлтатсах хăйне майлă вырăн тупрĕ. Яков Сидоровичĕ те юратать пулас унашкаллисене. Ахальтен хăй çумне çывхартас çук. «Хамăр пуçлăха парăнсан, пуçлăх умĕнче палăрма пултарсан эпир ĕçре яланах хăпарса пырăпăр, пысăк хуçа пулăпăр. Пурăнма вĕренĕр, сар тутасем», — тесе мухтанма юратать Панхристоф яланах. Крутов унпа нихăçан та килĕшмест, ăна хирĕçлесе çапла калать: «Йăнăшатăн эс, Пантелеймон Христофорович, çынна юратса, уншăн вăй-хала шеллемесĕр унпа пĕрле ĕçлесен тин эпир халăх хушшинче сумлă пулма пултарăпăр». «Ĕçлеме пуçлар-ха, курăпăр унта кам пуçĕ çинче мĕнле çĕлĕк ларнине», — лăхлатсах кулать хăйĕн карьери çинчен çеç шухăшлакан ĕмĕтсĕр.

Вĕренӳ вĕçленсен Макçăм хăй яла лекнĕшĕн пĕртте хуйхăрмарĕ. Унăн çĕнĕ ĕçе халăх хушшинче, пурнăç авăрĕнче пуçлас килетчĕ-ха. Ĕмĕчĕ тин тулать ĕнтĕ халь.

«Шурăмпуçне» Мургаевпа пĕрле çĕнĕ инструктор Оманов та килчĕ. Пуху, çын çитмен пирки, палăртнă вăхăтра пуçланаймарĕ. Райком секретарĕ мăкăртаткаларĕ те, мĕн тăвăн ĕнтĕ ĕçрен час пушанайман, парти йĕркине юратсах кайман коммунистсене — вĕсен куçĕнченех пăхма тиврĕ, хăшне-пĕрне машинăпах лартса килчĕç.

Парторганизаци мĕн-мĕн туни çинчен калаçнă вăхăтра Мургаев çирĕплĕх çуккишĕн вĕсене çине-çинех асăрхаттарчĕ, пулас секретаре чи малтанах çирĕп йĕркешĕн тăрăшма хушрĕ. Çĕнĕрен суйланă партком ларăвĕнче çӳлтен сĕннĕ ют çынна, Крутова, хирĕçлекен пулмарĕ. Райком шанать тĕк, пире мĕн, сасси çирĕп, куçĕ хаяр мар, пире килĕшет, тăнĕ çитсен ĕçлетĕр терĕç.

Суйлав ыйтăвĕсем вĕçленсен партком членĕсем саланчĕç. Иккĕшех юлсан Оманов Крутова чиперех вĕрентме пуçларĕ:

— Эс, Максим Максимович, хуçа урапине чуптар, вара сан йĕркелӳ ĕçĕ те, ăнлантару-вĕрентӳ ĕçĕ те çупа сĕрнĕ пек пулса пырĕ. Кунта эс пурпĕрех Кирилловран иртейместĕн. Тĕрĕссипе, пулман та вăл пирĕн патра ку таранччен парторг пуçлăхран иртни. Куртăн-и Мургаев ăçта чăмрĕ? Кириллов пӳлĕмне-хупахне. Иксĕмĕре чĕнмерĕç те. Эс пушали чĕрре кĕрсе тапаçлан, вĕсем пурпĕрех хăйсем майлă татса параççĕ пур ыйтăва та. Ячĕшĕн лартнăскерсем эпир: эсĕ те, эпĕ те. Ăнлантăн-и?

— Эх, айван, — терĕ тарăхса Крутов. — Райкомра виç кун ĕçличченех мана тăн пама пуçларăн. Кампа мĕнле пулмаллине, кам куçĕнчен пăхмаллине ăна эпир хамăрах пĕлĕпĕр-ха. Эс пĕрремĕш кутне ытларах çулла. Çулласан-çулласан, тен, çуллă пăтă çиме çăпала çавăрса тытăн.

Оманова ку сăмахсем килĕшмерĕç, аллисене хыçалалла тытса каллĕ-маллĕ утрĕ те вăл, куçне çутăлтарса, шăл витĕр сăрхăнтарчĕ:

— Юрĕ, астăвăпăр ку калаçăва. Çапах та эс ял секретарĕ кăна-ха, хăв ман вырăна йышăнайманшăн кĕвĕçсе ытлашши ан çи мана.

— Эп инструктора ларма ĕмĕтленмен, Панхристоф. Мана ялти коммунистсем хушшинчех лайăх пек-ха. Вĕсемпех ĕçлесе пурăнасчĕ. Юлатăн-и пĕр-ик кунлăх? Колхоз пурнăçĕпе, ял çыннисемпе тĕплĕнрех паллашăпăр.

— Тупнă ухмах, — алă сулчĕ Оманов. — Сана секретаре килсе янă — эс вĕсемпе паллаш. Коммунистсене эпир партком секретарĕ урлă ертсе пыратпăр. Енчен те, кирлех пулсан, сана чĕнсе тĕпĕртеттеретпĕр. Ăнланмалла-и йĕркине?

— Эс мĕн шухăшлине, мĕншĕн мана райком секретарĕн ура йĕррипе утма сĕннине халĕ тата тарăнрах ăнлантăм. Малалла каятăн кун пек эс, сиккипех. Атя, вĕçтер. Авă, Яков Сидорович кĕтет, сулланса тăрать, тăрăнса аниччен çитсе тыт.

— Ăнăçу сунатăп, секретарь. Çул суйлама вĕрен.

— Хăвăн çулу такăр пултăр.

Райком çыннисене кăвак çутла тин ăсатнă хыççăн пуçлăхпа комиссар правлени умĕнче тăрса юлчĕç. Ӳсĕрпе урă çыннăн темшĕн калаçу çыхăнмарĕ. Алă тытса иккĕшĕ икĕ еннелле пуçа чиксе утрĕç.

## 4

Ульки акка Макçăма кĕтсе ывăннă, ăна яшка ăшăтса çитерчĕ. Вырăн çине выртсан Крутов ниепле те çывăрса каяймарĕ. Тухăç енчи чӳрече йăмăх сăрăпа сăрланма пуçларĕ, майĕпен-майĕпен çуталса пычĕ, кĕç куç-пуçа шартарса яракан шĕл кăвар тĕслĕн выляма тытăнчĕ. Урамран сурăхсем макăрни, ĕнесем муклатни, трак-

тор кĕрлевĕ илтĕнет. Хваттер хуçи (ăна ватă пулин те темшĕн пурте Ульки акка тесех чĕнеççĕ) çут витрине чăнкăртаттарса тулалла тухрĕ. Ĕне сума кайрĕ ĕнтĕ.

Пӳртре пĕччен юлсан Макçăм пĕр хушă шухăша кайса выртрĕ.

«Паян, пин те тăхăр çĕр утмăл тăваттăмĕш çулхи утă уйăхĕн çирĕм пиллĕкмĕшĕнче, эсĕ çирĕм виççĕ тултартăн, Крутов. Саншăн çак кун пурнăçри паллă вăхăт пулĕ. Эсĕ паянтан çĕнĕ ĕçе пуçăнтăн, çĕнĕ çул çине тухатăн. Сан аллунта халь — утмăл коммунист, утмăл кăмăл. Пултарăн-ши эсĕ вĕсене ертсе пыма е пултараймăн-ши? Вăю çитĕ-ши санăн вĕсемпе ĕçлеме, вĕсемпе пĕрле колхоз урапине туртса пыма. Çамрăк тихана мăн хăмăт тăхăнтартнă пек мар-ши ку ĕç саншăн. Вăрăм çула тухсан măйна шăйăрса пăрахмăн-ши? Аса ил-ха пухура мĕн-мĕн калаçнисене? «Эпир ку таранччен мĕнле ĕçленĕ, малашне те çавнашкалах ĕçлĕпĕр, райком пире хăть пионер ярса патăр, пирĕншĕн пурпĕрех мар-и?..» Шанчăксăр куçпа, ют кăмăлпа ытахальтен тенĕ пек кăна йышăнчĕç мар-ши вĕсем сана, Мургаев «кăмиссарне». Партин тахçантанпа пыракан юрăхсăр йăлине хирĕçлейми пулса çитнĕрен çеç», — янăрать пуçра.

«Пулма пултараймасть иккĕленӳлĕх! — кĕрлет тепĕр сасă хăватлăн. — Сан çулунта пысăк ĕçре ĕçленĕ çамрăксем сахал пулнă-и? Вĕсем яланах çĕнтернĕ! Çирĕп пул! Авă стена çумĕнчи сехет çăпали те сана çавăн çинчен аса илтернĕнех чарăнмасăр шаккаать: çирĕп пул! çирĕп пул!.. Пух вăйна, хытар шăнăрусене! Умра — пысăк экзамен, совпартшкулта патшалăх экзаменĕсем панинчен пин хут йывăр экзамен. Ăна тытнă чухне коммунистсемпе ял халăхĕ пурнăç кĕнеки çине мĕнле паллă лартса парасси — хăвăнтан нумай килет. Çавăнпа çирĕп пул!»

«Шурӑмпуҫ» коммунисчӗсем демократи централизмӗн йӗркине пӑханса пурӑнаҫҫӗ. Райком бюровӗ йышӑннӑ сана унта ямашкӑн, вӗсем аслин сӑмахне итленӗ. Епле-ха пурнӑҫламастӑн ҫӳлтен хушнине?» — чарӑнасшӑн мар малтанхи сасӑ.

«Енчен те Мургаев «Ман хыҫҫӑн!» тесе шыва сиксен, пурин те ун хыҫҫӑн ярӑнмалла-и? «Пирӗншӗн пурпӗрех» ятлӑ касарма киммипе Вӑрманкас енчен вӗрекен улшӑнман ҫиле май тек анаталла юхмалла-и? «Демократи централизмӗ» пулсан, ҫӳлте йышӑнасси халӑх килӗшӗвӗнчен килмелле-ҫке, халӑх кӑмӑлне тивӗҫтермелле-ҫке, халӑх ячӗпе тӗп вырӑнта хатӗрленӗ тӗплев кӑна пулмалла мар. Акӑ халӗ мӗнле пулса тухрӗха? Мургаев «Райком бюровӗ ҫапла шутлать...» терӗ те, сана коммунистсем умне кӑларса тӑратрӗ, ик-виҫ сӑмахпа ӑҫта ҫурални, вӗренни, ӗҫлени ҫинчен каласа пачӗ, парткома суйлаттарса алӑ ҫӗклеттерчӗ. Кам эсӗ, мӗнле ҫын, чӑн-чӑн коммунистах-и? — никам та ыйтмарӗ, кӑсӑкланмарӗ. Партком членӗсем пӗр саслӑн секретаре суйларӗҫ. Суккӑрла, сурӑхла хӑтлану мар-и ҫакӑ? Пушӑ кӑтартнине, хыттӑн кӑшкӑрнине, ҫӑвара ҫӑрапа питӗрме е шыв сыптарма хӑнӑхтарнӑ йӑла йӑлли халӑх мӑйӗнчен салтӑнасшӑн маррине пӗлтермест-и-ха ҫакӑ?»

Макҫӑм йывӑҫ кравать ҫинчен тӑрса чӳречерен пӑхрӗ: ҫӗнӗ кун хӗвелӗ, таврана ӑшӑ хӗм сапса, тӳпенелле кармашать.

Ульки акка тулли витре йӑтса кӗчӗ.

— Сывлӑх сунатӑп, — терӗ ӑна ҫул парса Макҫӑм.

— Тавтапуҫ, ывӑлӑм, ху сывлӑхлӑ пул. Ӑш сӗт ӗҫсе парха, пит усӑллӑ пулаканччӗ вӑл, тин ҫеҫ сунӑ кӑпӑклӑ сӗт.

— Кӑшт тӑхтӑр-ха, Ульки акка, эпӗ ҫӑвӑнам.

— Юрӗ-ҫке, унччен эп сӗтне сӗрсе пӑрахам-ха.

Тулта Макҫӑм тавралла пӑхса ҫаврӑнчӗ. Кил-ҫурчӗпе Ульки аккан савӑнмаллиех ҫук. Хуралтӑсем хӑй пекех

ватăлса тайăлнă. «Мĕнле те пулин пулăшмалла», — шухăшларĕ вăл сысна курăкĕ пусса илнĕ кил хушши тăрăх чупнă май. Хул-çурăма çемĕçтернĕ хыççăн каччă çăлран каçпа ăсса лартнă шывпа пилĕк таран килениччен çăвăнчĕ те пӳрте кĕчĕ. Ульки акка ăна сĕт тултарнă тăм курка тыттарчĕ.

— Ах, ытла сĕтеклĕ-çке, хулари шыв хушнă сĕт пек мар, çăра, — куркана пушатнă хыççăн сывлăшне аран çавăрса ячĕ Макçăм. — Тавтапуç, Ульки акка.

— Калап вĕт сана, сĕт вăл ăшăлла чух паха тесе. Ярса парам-ха тепре, ывăлăм, — аллине пысăк саватă еннелле тăсрĕ карчăк.

— Çитет, Ульки акка, хăвăр ĕçĕр, — ватă çыннăн кăмăллă куçĕнчен тинкерсе пуçĕпе сĕлтрĕ Макçăм.

— Юрĕ эппин, ирĕксĕрлемĕп. Çакна ыйтса пĕлем-ха санран: ăçтисем пулатăн эс, Макçăм?

— Каçарăр ĕнтĕ мана, Ульки акка, — хăйпе тӳрех паллаштарайманшăн ватă çын умĕнче лайăхмарланчĕ каччă. — Вăрманкас ачи пулатăп. Атте-анне унта Тымартан вăрçăченех куçса пынă.

— Тымартан терĕн-и çак? «Çăлтăр» кулхусран-и? — сулахай хăлхине Макçăм еннелле туса тепĕр хут ыйтрĕ карчăк.

— Çапла, Тымартан.

— Эй, Турă, хамăр ялсемех-çке эс. Хам та эп Тымар хĕрĕ, Карăк Еххĕмĕн çиччĕмĕш ачи пулнă-çке. Краштăн вăрçи хыççăн çакăнта, Хурăнвара, Салакайăк Мĕтрине качча килтĕм. Камсен пулатăн-ха вара эс, ывлăм?

— Крутовсен. Максим Матвейч ачи. Анне Урине ятлă.

— Крутовсен тетĕн?.. — çамрăк çын пек пуçне вашт! ухрĕ карчăк. — Вĕсен пулсан Кăра йăхĕ ĕнтĕ. Асл аçупа, Матвипе, пĕрле выляса ӳснĕ. Хĕлле е пирĕн патра, е сирĕн патра улахраччĕ, çуллахи каçсенче çеремлĕ урамри вăйă картинчеччĕ. Ташлама юрататчĕ аслаçу. Пирĕн туйра

К-42155
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
Чувашской Республики

та хурӑнварсене тӗлӗнтерсе хӑварчӗ. Асласу ман шӑллӑмпа, Симунпа, пӗр тантӑшчӗ, салтака та вӗсене пӗрлех илчӗҫ. Вӑрҫӑран иккӗшӗ те сусӑрланса таврӑнчӗҫ. Аслаҫу ҫав суранранах сывалса ҫитеймерӗ пулас, вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗчӗ. Пирӗн Ҫимун кӑштӑртаткаласа ҫӳрет-ха, иртнӗ эрнере ывӑлӗ-кинӗпе пӗрлех петрава килсе курчӗ. Аҫуаннӳ сывах пурӑнать-и тата? Эп вӗсене тӗтре ӑшӗнчи пек ҫеҫ астӑватӑп. Ватлӑхра тӑн та пӗтсе пырать ҫав.

— Аптрамасть пурӑнаҫҫӗ темелле-ха. Анне ман шофер, вӑрмантан йывӑҫ турттарсах ватӑлчӗ.

— Ан тӗлӗнтер-ха, пӑх-халӗ ӑна, епле маттурскер, арҫын ӗҫне юратнӑ.

— Атте вӑрманпромхозра, хуралта. Йывӑр ӗҫ тӑваймасть. Вӑрҫӑран сулахай урасӑр таврӑннӑскер, эп астӑвассах протезпа нушаланса ҫӳрет, — чукун утюк ӑшне кӑвар тултарнӑ май ӑнлантарчӗ Макҫӑм.

Кинемей ҫакӑн хыҫҫӑн стена ҫумӗнче ҫакӑнса тӑракан хӑмӑр рама ӑшӗнчи сӑн ӳкерчӗксене куҫлӑх тӑхӑнсах пӑхма пуҫларӗ. Макҫӑм та кӑсӑкланса ун ҫумне пырса тӑчӗ.

— Ман та Ваҫҫук ятлӑ ывӑл пурччӗ, аҫупа, Макҫӑмпа, Тарӑнвар чиркӗвӗнче пӗрле, пӗр хуранта, шыва кӗртнӗскер. Каснӑ-лартнӑ сан пекскерччӗ, сатурскерччӗ. Ак ҫакӑ вӑл, арӑмӗпе юнашар тӑрать. Ваҫук аллинчи — пӗчӗк мӑнукӑм, Владик, — шывланнӑ куҫне тутӑр вӗҫӗпе шӑлса илчӗ Ульки акка. — Ывлӑм учитлӑччӗ, кин артисткӑччӗ. Вӑрманкасра вӑрҫӑччен кулхус театрӗ ӗҫлетчӗ-ҫке. Артистсем яла камит кӑтартма килсен паллашрӗҫ пулмалла вӗсем, кайран — ҫырӑнсах пӑрахрӗҫ. Ачи ҫуралсан хам та тем пекех савӑннӑччӗ те, старик те... Вӑрҫӑ тухсанах Ваҫҫук салтака кайрӗ, хыҫҫӑнах вилнӗ хучӗ вӗҫсе ҫитрӗ. Кин вара ялта нумай пурӑнмарӗ, ачипех таҫта тухса кайрӗ. Те пур вӑл халь ҫут тӗнчере, те ҫук, ачи те чӗрӗ, те вилӗ, нимӗн те

пĕлместĕп. Стариккин те телей пулмарĕ, таврăнаймарĕ вăрçăран. Уçланкăри тăлăх тунката пек пĕччен тăрса юлтăм. Йĕре-йĕрех, куляна-кулянах куç вăйĕ пĕтрĕ ĕнтĕ. Ни вилейместĕп. Пурнас та килмест тепĕр чухне. Ай, çав усал вăрçа кам шутласа кăларнă-ши ăна?..

Ватă çын  хуйхине кăшт та пулин пусарас тесе Макçăм ăна ăшă сăмахсем каларĕ.

— Лăплантăм ĕнтĕ халь, Макçăм. Хамăн ача пӳртре пур пекех туя пуçларăм ĕнертенпе. Турриех илсе килчĕ пуль сана, ывлăм, ман киле. Сăпаççипах, — кĕтеселле çаврăнса сăх сăхса илчĕ те вăл кăштăртатса пӳлĕме кĕрсе кайрĕ.

Сăн ӳкерчĕкри çамрăк арçынна Макçăм таçта курнă пекех. Çук, ниепле те курма пултарайман вăл ăна. Ульки акка каланă тăрăх, Ваççук Макçăм çуралнă çул фронтра пуçне хунă. Апла пулсан, ун пек çынна тĕл пулнă. Сухал хырма пуçласан тин вăл ĕнсине кăтăрт-кăтăрт хыçса илчĕ: ăна хирĕç тĕкĕртен шăпах çав сăн ӳкерчĕкри Ваççуках пăхса тăрать тейĕн. Авă, хура çӳç пайăрки сылтăм куçĕ çинех усăнса аннă. Кулнăран сулахай пит çăмарти чалăшса туртăннă. Çăра куç харшисем, каçăртарах сăмса, хулăнрах тута хĕррисем, сарлака та çӳллĕ çамка... «Пулать вĕт тĕнчере пĕр йышши çын, Ульки акка ывăлĕпе мана пĕр тăванах темелле», — çапла шухăшласа вăл хĕрнĕ утюкпа шăлаварне якатма пуçларĕ.

Тумне йĕркене кĕртнĕ хыççăн Крутов ĕçе кайма тухрĕ. Ульки акка ăна чӳречерен пăхсах ăсатса ячĕ.

Çуртсем çумĕнче таптанмасăр юлнă çерем пе Максим Максимович аната лла анчĕ. Урам вĕçĕнче Т сас паллине аса илтерекен пысăк клуб сарăлса ларать. Стенисене пĕренерен пураланă, тăррине шифер витнĕ. Ялти культура керменĕ çине вăл питĕ кăсăкланса пăхрĕ, ăшĕнче шухăшласа пычĕ: «Вăрçăччен вăйлă колхоз пулнă пулас Хурăнварта, начар хуçалăх хăй тĕллĕн çакнаш-

кал капмар çурт лартаяс çук. Тарăнварсен авă ку таранччен те клуб çук. Спектакль-концерт е кино курма та, пухусене те кунта çӳреççĕ».

Ялпа ял хушши инçех мар, çухрăма яхăн çеç. Унисчерен тухсан, анкартисем хыçĕнче, колхоз йĕтемĕ. Унта ĕç шавĕ илтĕнмест-ха.

Правлени Тарăнвар варринче, çырма хĕрринчи тăрхала йывăç çуртра. Унăн çур пайне библиотека йышăнать. Тĕттĕмрех коридорта хăй пĕлекен алăка шаккаса уçрĕ Крутов. Пӳлĕмри сарлака сĕтел хушшинче Лина тем çырса ларать.

— А-а, секретарь килчĕ-çке. Иртĕр, иртĕр, — ура çине сиксе тăчĕ хĕр.

Ăна Макçăм хăй малтан яла петрав эрни пуçлансан килнĕ чух курнăранпа урăх тĕл пулманччĕ. Лина кăштах улшăннă пек. Çăтă-çăтă тытакан чечеклĕ кĕпи хĕвелпе пиçнĕ кĕлеткине татах та ытларах капăрлатать. Çӳçне те тепĕр майлă тураса якатнă. Чакăр куçĕ çавăн чухнехи майлах асамлă хĕм сапать.

— Акă сирĕн вырăнăр, Максим Максимович. Числов çавăнта ларатчĕ, — тепĕр сĕтеле тĕллесе кăтартрĕ Лина.

Петр Петрович та сăмах çинех персе çитрĕ, сывлăх суннă-сунман тимĕр ещĕкрен папкăсем, тĕрлĕрен хутсем кăларма пуçларĕ, хăй çав хушăрах тăрăшса калаçрĕ:

— Тинех хăтăлтăм ку ĕçрен. Александр Семенчпа тытăçсах ĕмĕре ирттереп пуль тенĕччĕ. Чистиях чуман лаша пек вăл. Хăй еккине яриччен çапсан та, тапсан та вырăнтан тапратаймастăн. Ара партком секретарьне çӳпĕ вырăнне те хумасан ăçтан-ха пĕр алăпа кăвар туртан? Вăй-хал çитмерĕ, çавăнпа хамах ыйтрăм шкула куçарма. Эпĕ — учитель. Ман вырăн — класра, ачасем хушшинче, вĕсене истори вĕрентмелле. Шкулти парторганизацие колхозрипе пĕрлештерсе партком турĕç те секретаре суйламалли йĕркеллĕ çын тупаймарĕç. Вăн вара

мана ӳкӗтле-ӳкӗтле ҫаклатрӗҫ серепене. Ҫемҫе кӑмӑла пулах килӗшрӗм, нуша куртӑм. Ӗнерхи пуху хыҫҫӑн тин хама хам ҫурӑм хыҫӗнчи йывӑр кутамккана вӗҫертсе хунӑ пек туя пуҫларӑм. Шкулти коммунистсем колхозра тӑни шутсӑр аван, пӗрле пӗр ӗҫ тӑваҫҫӗ. Кунта акӑ, Максим Максимович, пурне те йӗркипе ҫӗлесе хунӑ, ҫырса пынӑ: партком, партпуху протоколӗсем, райкомран ярса панӑ кӑтартусем, кандидата кӗме ыйтса ҫырнисем... Нухратовӑн ӗҫӗ. Хаяр выговор пама хатӗрленнӗччӗ, ӗҫне халь сирӗн вӗҫне ҫитермелле пулать ӗнтӗ. Председатель ӑна сысна ферми те шанса пачӗ, ҫук, шанӑҫа тӳрре кӑлармасть, ытла сысналла хӑтланать. Пин проблема...

Ҫӗнӗ секретарь Числова тӑнласах итлерӗ, ҫав вӑхӑтрах шухӑшласа илчӗ: «Шкулта хӑй вырӑнӗнче чипер ӗлкӗрсе пынӑ ҫынна килӗшмен ӗҫе хӗтӗртсе кӗртнипе райком нумаях усӑ курнӑ пулас ҫук. Ма ҫапла хӗсӗрлеҫҫӗши? Устав, дисциплина тесе ҫынна мечӗк пек унталлакунталла тапса йӑвантараҫҫӗ. Эп тата хам вырӑнтах-ши? Хапхана тӗрӗсех тапса кӗртрӗҫ-ши мана та?..»

Парторганизаци ӗҫ хучӗсене пӗр аларан тепӗр алла куҫарасси нумая тӑсӑлмарӗ. Кун хыҫҫӑн Числов васкасах райкома тухса кайрӗ. Ӑна Тарӑнварти вӑтам шкул директорне лартас ыйтупа чӗнеҫҫӗ-мӗн. «Мӗншӗн райкома-ха, — шухӑшларӗ Крутов, — райсовет ӗҫтӑвкомне, ҫут ӗҫ пайне мар? Тӗлӗнмелле пулса тухать: райком пурне те хӑй аллипе ҫавӑрттарать».

Максим Максимович паҫӑр практикантка кӑтартнӑ сӗтел хушшине тин кӗрсе ларчӗ. Телефон шӑнкӑртатрӗ. Райкомран ӑна Оманов ҫуралнӑ кун ячӗпе саламлать иккен, ҫав хушӑрах Числова хӑйсем патне кӑларса янипе-яманнипе кӑсӑкланать.

Калаҫу вӗҫленсен пӳлӗмре шӑп пулчӗ. Хӗрлӗ кӑранташпа шур хут ҫине чӗре майлӑ йӗрсем кукӑрткаласа ларакан Лина тем вӑхӑтран тин пуҫне ҫӗклесе ыйтрӗ:

— Максим Максимович, сирӗн паян ҫуралнӑ кун-и? Миҫе тултартӑр?

— Тултартӑм ӗнтӗ, Лина. Кӗҫех чӗрӗк ӗмӗр хыҫала тӑрса юлать. Анне каланӑ тӑрӑх, эпӗ хӗвел тухнӑ чухне ҫуралнӑ, халӗ кӑнтӑрла ҫитет.

— Епле ырӑ кун паян. Мӗн парнелес-ши сире, Макҫӑм?

— Нимӗн те кирлӗ мар, Лина.

Хӗр пукан ҫинчен хуллен тӑчӗ те каччӑ умне хӑюсӑртараххӑн ҫывхарчӗ, унӑн ҫиҫӗмле ялкӑшакан куҫӗнчен ытарлӑн пӑхрӗ, ҫав самантрах: «Эпӗ сире, Макҫӑм, акӑ мӗн парнелӗп!» — тесе тути хӗрринчен чӑп! чуп туса илчӗ, вара, вӑтаннипе-ши, пуҫне чиксе вӑшт ҫеҫ тухса тарчӗ.

5

Партком секратерӗ ларакан пӳлӗме Александр Семенович кӑххӑм-кӑххӑм! ӳсӗрсе пырса кӗчӗ.

— Салам пултӑр. Мӗнле кантӑн?

— Хӑвӑра та сывлӑх сунатӑп, аванах, Александр Семенович. Хваттере питӗ кӑмӑллӑ ҫын патне лекрӗм пулас, — хуравларӗ Крутов.

— Хваттерӗ ҫеҫ мар, ялӗ те, колхозӗ те кӑмӑла кайӗ ак, енчен те хӑв кӑмӑллӑ пулсан...

— Пурнӑҫ кӑтартса парӗ-ха, Александр Семенович. Хӑвӑр патра, хӑна сӗтелӗ хушшинче, япӑхах марччӗ те... Ӗҫре темлешкел пулӗ ӗнтӗ.

Кириллов хыҫлӑ пукан илсе ун ҫумне пырса ларчӗ, малалла калаҫрӗ:

— Пуласси вӑл, секретарь, хамӑртан килет. Пӗр чӗлхеллӗ пурӑнмалла, акӑ мӗн. Унсӑрӑн, тӳрех калатӑп, пирӗн ҫулсем ик еннелле кайӗҫ. Числов мана пӗрмай шкул ачине тӑн панӑ пек вӗрентме тӑрӑшатчӗ. Пушали павра унта. Ӗҫне татса паракан̆ӗ пурпӗрех эпӗ — пред-

седатель. Ан кӳрен те, ҫапах та санран, авӑ, духи шӑрши кӗрет, манран — тусан шӑрши. Кӑвак ҫутлах ура ҫинче, пур ҫӗре те ҫитсе ҫаврӑнтӑм. Ӗҫсем чаплах мар. Кайриварта комбайн ҫӗмӗрӗлсе ларнӑ. Пӑрҫа ҫумӑр ҫусанах йӑлт арканать. Тулӑ та пулса ҫитнӗ. Ыраш мӗн чухлӗ. Хамӑрьялсем ҫырма уттине пухса капана хывайман. Пӗтерчӗ ку пире кӑҫал тырӑ маларах пиҫни. Унччен ӗлкӗркелесе пынӑччӗ. Ай, ӗҫсем, ӗҫсем... Тем тумалла, ачам. Петрав мурӗ тата...

— Мӗн тумаллине ӑна эсир хӑвӑрах питӗ лайӑх пӗлетӗр-ха, манран канаш ыйтас ҫук. Чӑххи ҫӑмарти вӗрентнине юратсах каймӗ. Ман сирӗнпе пӗр ҫулпах утасчӗ-ха, хамӑра парти кӑтартса панӑ тӗрӗс ҫулпах.

— Максим Максимович, эпӗ вӗт, мӗн, эпӗ сана хӑратса мар вӗт, эпӗ, мӗн юлташла. Хӑвна йывӑр ан ил уншӑн.

— Хӑранӑ пулсан-и, Александр Семенович, эпӗ ҫакӑнта сирӗнпе хирӗҫ пӑхса ларас та ҫук. Председательпе, паллах, пӗр чӗлхеллӗ пулни те чармасть пуль кирлӗ чухне, анчах та партком секретарӗ вӑл хушнине ҫеҫ пурнӑҫласа пыма тытӑнсан, темле, пурнӑҫ малалла каяссӑн туйӑнмасть. Пуҫларӑмӑр тӑк ку калаҫӑва, вӗҫнех ҫитерер. Парти ӗҫне эпӗ чӗре хушнӑ пек туса пыма шутлатӑп. Чӑннипе эпӗ сирӗн колхоза та, сирӗн ҫынсене те лайӑх пӗлместӗп-ха. Ҫапах, ман шутпа, хресченӗн ун чӗри кашни ялтах пӗрешкел пулма, пӗрешкел вутпа ҫунма кирлӗ. Унӑн ӗнтӗ хӑй ӳстернӗ тыр-пула ҫӗре ӳкме памалла мар. «Тем тумалла», — терӗр. Ӗнер парти пухӑвӗ йышӑннине пурнӑҫламалла: пӗр тӑхтаса тӑмасӑр ялти кашни вӑй питти ҫынна уя, йӗтем ҫине кӑлармалла, техникӑна тухӑҫлӑ ӗҫлеттермелле. Ҫухатнӑ вӑхӑта кунӗнҫӗрӗн ӗҫлесе ҫӗнсе илмелле.

— Сӑмаххусем лайӑх-ха сан, ҫыпӑҫуллӑ, — пуҫне пӑркаласа ларчӗ Кириллов, — анчах вӗсемпех тырӑ выраймӑн ҫав.

— Çамрăк пулин те çаплах калатăп: сăмаха пурнăçа кĕртеймесен пире, Александр Семенович, халăх питренех сурма пултарать.

— Ай-ай, хĕрӳ эс. Числовран та ирттерен. Кун пек парторга юратмах тивет. Юрĕ, килĕшер, пар ална, парти комитечĕ хушнипе кашни пучахшăн кĕрешмелли план тăвăпăр. Унччен вара сана «Камчаткăпа» паллаштарам. Пирĕн шăл йĕренсем Кайривара çав ят панă. Кунтан вăл шăпах пилĕк çухрăмра ларать.

Машинăна председательпе партком секретарĕ юнашар кĕрсе ларчĕç. Газике Кĕркури ятлă вăтам çулсенчи хурарах сăнлă, кĕске мăйăхлă, лутра арçын тытса пырать. Чылай кайсан вĕсем кĕпер урлă хăлтăртаттарса каçрĕç те чăнкă тăвайккине хăпарчĕç, ыраш ани тĕлне çитсен чарăнчĕç, хăмăл çине сиксе анчĕç.

Тавраллах — çулса пăрахнă тырă. Хулăн паккуссем çырма хĕррипе авкаланса инçете тăсăлаççĕ, çинçелсе, çинçелсе пыраççĕ те леш вĕçĕнче шĕвĕрĕлсе пĕр çĕре пĕрлешеççĕ. Кĕлтери ыраша çĕр çине йĕркипе сарса тухнă тейĕн.

— Атя-ха пăхар, мĕн тăвать унта Хумма Петĕрĕ, — чĕнчĕ парторга Александр Семенович.

Камбайн патне çитсен Крутов мăлатукпа эхлетсех шаккакан арçынна «Вăй патăр!» тесе сывлăх сунчĕ.

— Тав хăвна та, — терĕ те лешĕ хăйĕн ĕçне малалла турĕ.

Председателе çакă килĕшмерĕ-ши, тем амакĕ пулчĕ, тӳрех çухăрма пуçларĕ:

— Халь те юсаман! Çаплах чаваланан! Хĕвел ăçта çитнине куратăн-и? Миçе сехет пустуй çухатнине пĕлетĕн-и, Фомич?

Комбайн хуçи тин пуçне çĕклерĕ. Унăн тусанпа-çупа витĕннĕ хыткан пит çăмартийĕсем туртăнса илчĕç, хура куç хупанкийĕсен айĕнчен мăшăр вут-

çулăм курăнса кайрĕ. Акă кĕçех вĕсем, çавракаскерсем, сиксе тухаççĕ те умри çынсене çунтарма тытăнаççĕ. Акă, акă вĕсем сиксе тухаççĕ...

— Çак мăлатукпа ярам та пĕрре, луччĕ тĕрмене кайса ларам! — сăмаххисене шăл витĕр сăрхăнтарса хăмсарчĕ комбайнер.

Ку çын ăшĕнче тахçантанпах тăвăл кĕрленине Крутов тӳрех ăнланчĕ. Кириллов кӳрентерни ăна çĕнĕрен аталантарса картран кăларчĕ пулас. Акă халĕ вăл алхасать, çавăрттарать. Председатель каялла чакса, чакса пырать...

— Аха, хăратăн-и?! — вăрăммăн ярса пусрĕ Хумма Петĕрĕ. — Хăратăн,ултавçă! Ман кунта мĕн çĕмĕрĕлнипе те интересленмерĕн, мана мĕнле запас пай кирли çинчен те ыйтмарăн. Камантă патăн та, качакалла çухăртăн та... Хӳрӳне те курса юлаймарăм. Эх, мотор вырăнне хам чĕрене лартăттăм, анчах вăл икĕ йытă вăйлĕскер кăна. Кăçал та эсир мана аллă гектар çинче ташлаттарасшăн-и? Çак тимĕр купине халь те списать тумастăр... — шан! тутарчĕ вăл пĕтĕм вăйран комбайна. Хулăн хĕç тимĕр чан сассилле янраса кайрĕ. Шан! çапрĕ каллех...

Максим Макимович унăн сиксе тухас пек хаяр куçĕнчен пăхса:

— Лăпланăр, юлташăм, атьăр пĕрле юсаса пĕтерер, — терĕ лăпкăн.

Сехри хăпнипе хут пек шурса кайнă Кириллов пĕр хушă вырăнтан тапранаймасăр тăчĕ, майĕпен хăйне алла илсен, мăкăртатрĕ:

— Вăт, куратăн-и, камсемпе ĕçлеме тивет ман? Чĕре те, нервăсем те чăтас çук, тимĕртен пулсан та. Сана-и? Сана, Петĕр, куншăн ахаль каçармастăп. Хăçан та пулин астутарăп!

— Мĕн тăвасшăн-ши эс мана? — хирĕç тавăрчĕ Петĕр. — Çак тимĕр купи çинчен илсе пересшĕн-и? Пашалстă! Паянах ĕçрен кăлар.

Крутов вĕсен калаçăвне хутшăнмарĕ, мĕншĕн тесен ăнланчĕ, пурпĕрех усси çук, ытла та тарăхтарса çитернĕ иккен Петĕре. Максим Максимович комбайнера пулăшма пикенчĕ.

Председатель тарăхса аллине ласт! сулчĕ те машина патнелле уттарчĕ, çаврăнса каласа хăварчĕ:

— Çула май кĕрсе илетĕп, Максим Максимович.

Хумма Петĕрĕпе пĕрле Крутов пуçне мотор патне чикрĕ.

— Паллашар. Салакайăк Хуммин иккĕмĕш ывăлĕ пулатăп ĕнтĕ эпĕ, председателе хирĕç тăракан каскăн, ял чĕлхипе — Хумма Петĕрĕ, — хура питне аллипе сăтăрса илчĕ комбайнер. — Атте те, анне те хушман та мана кунашкал хăтланма, пичче те... Эппин, тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлтерем-ха хамăр çинчен. Асаттене Карачăм мучи теççĕ, аттене — Хумма. Асатте кĕлет хуралĕнче тăрать, атте халь те колхоз лашисене пăхать. Пичче, Павăл, мана камантлать, трактористсен пуçлăхĕ-çке вăл. Шăллăм, Раман, ял бригадирĕ. Кĕçĕн шăллăм та пур, Васли. Вăл Кашкăр Тельманĕпе пĕрле агронома вĕренсе тухрĕ те халĕ Оренбург çеçен хирĕнче тырă ӳстерет, кунталлах килесшĕн-ха, хамăр колхозах çĕклесшĕн. Эпĕ сире, пĕрремĕш хут куратăп пулин те, камне тӳрех ăнлантăм.

— Тĕлĕнмелле, телепат пуль эсир?

— Унашкал çын мар та, çапах... Микуш каланăччĕ мана сирĕн çинчен.

— Лешĕ, уйра çывăраканни-и?

— Çав Мулла ĕнтĕ, кам пултăр урăх. Хăй питĕ кулянать, намăсран та намăс куртăм, тек тырă вырса пĕтериччен те сăра-эрех тавраш ĕçвара ямастăп тесе сăмах пачĕ механизаторсен пухăвĕнче.

— Чăтсан аванччĕ.

— Çав чăтăмлăх çитменни пĕтерет ĕнтĕ пире. Эп те, вăн, паян мĕн мыскари кăтартрăм. Каçарсамăр эсир мана уншăн, — айăпа кĕнĕн хушса хучĕ Хумма Петĕрĕ.

— Унашкалах хӑтланма кирлӗ марччӗ те, — аллинчи ключпа гайкӑна хытарса пычӗ Крутов.

— Чун чӑтмасть. Пӗлтӗр те ҫакна юсасах ҫу каҫрӑм.

— Ҫӗнӗ комбайн ҫине лартмалла та, ман шутпа, сире...

— Кӗтсех тӑрӑр ҫӗннине парасса. Ман пиччепе, Павӑлпа, пӗр чӗлхе тупӑн. «Сана ырӑ кӑтартсан ыттисем мӗн калаҫҫӗ» тет те ӗҫӗ те пӗтет. Иртнӗ ҫулла та кӑҫалхи пекех тыррине ҫул терӗҫ. Хамӑн комбайна майлаштарса туххӑмрах чашлаттарса пӑрахрӑм. Пучахри тырӑ хытарахпа паккуссене пухса ҫапма тытӑнтӑм кӑна — ҫумӑр ячӗ. Эрни-эрнипе лӗпӗстетсе тӑчӗ. Ҫанталӑк уяртсан ҫӗмӗрӗлсе лартӑм. Запас пай ҫуккӑ та юсаймастӑп. Ыраша урӑх комбайн ярса пуҫтарттармарӗҫ. Кашни бригадӑна сапӑтса тухнӑ-ҫке пире, кашни хӑйӗншӗн ҫунать. Салат пулчӗ тырӑран. Кайран сыснасене ҫитерчӗҫ. Хӑйсем ҫаплах хуҫалӑх расчечӗ ҫине куҫатпӑр тесе лӗпӗртетеҫҫӗ. Кунашкалах ӗҫлесе пырсан вӗсенчен пӑтӑ пиҫмест.

Каланӑ май ҫын йӑлтах улшӑнса пычӗ. Каскӑн та, кахал та мар иккен Хумма Петӗрӗ, техникӑна лайӑх пӗлекен, юратакан, уҫӑ кӑмӑллӑ, вашават ҫын.

— Эп вӗсене хӑрамасӑрах тӳрех куҫран калап. Ҫавӑнпа юратмасть мана председатель, — парторг енне ӑшӑ куҫпа пӑхса илчӗ Петӗр. — Тырӑ вырма тухсанах-ха вӑл паян иксӗр килнӗ пек кӗрлеттерсе ҫитрӗҫ. Кирилловӗ тем вӑрҫкаласа Кайривара шӑвӑнчӗ. Кумми пур-ҫке унта. Тем тесен те халӗ вӑл ҫавӑнта юмах ҫапса ларать. Числовӗ мана тӑн пама пуҫларӗ. «Эсир, Петр Фомич, — тет, — ирех уя тухса каятӑр, киле сӗм ҫӗрле тин таврӑнатӑр, ҫавӑнпа, паллах, хаҫат вулама та, радио итлеме те вӑхӑт пулас ҫук. Ҫавна шута илсе эпӗ сире тӗнчери лару-тӑру ҫинчен каласа парасшӑн, ҫӗршыври хыпарсемпе паллаштарасшӑн. Африкӑра халӗ ирӗклӗх ялавӗ

те миçе çĕршывра вĕлкĕшет, Конгăра...» Чăтаймарăм, мăлатукпа тимĕре чанлаттартăм та парторг лекцине чарса лартрăм. «Эсĕ, Петр Петрович, — терĕм, — Африкăри ялав пирки мар, Воробьев комбайнĕ çине хăçан хĕрлĕ ялав çакасси çинчен шухăшласа пăх-ха пĕрре, мана чĕлхепе мар, алă вăйĕпе пулăш. Тĕнче хыпарĕсене эпĕ вĕсене хамах аван пĕлетĕп». Хам ăсталанă радиоприемника ярса кăтартрăм çакна. Мускав шăпах юлашки хыпарсем паратчĕ. Хăй те тĕлĕнсе, тăнласах итлерĕ.

Ваннă пая иккĕн майлаштарса улăштарнă хыççăн Хумма Петĕрĕ каллех çак калаçăва малалла тăсрĕ:

— Числов вăл начар çын мар, анчах ытла интеллигент. Çыпăçмасть ун сăмахĕпе ĕçĕ. Кĕмест ун агитацийĕ ман ăша, витерейместь чĕрене, хăлха çумĕнчен иртсе каять. Пире акă паянхи пек ĕçлĕ агитаци, чăн-чăн пурнăç агитацийĕ кирлĕ. Çавăн чухне эпир те вăя шеллеместпĕр, вăхăта та уямастпăр, кĕрлеттеретпĕр кăна! Пĕччен пулсан паян каçченех чаваланаттăмччĕ-ха. Тавтапуç сире, Максим Максимович.

Мотор тикĕссĕн улама тытăнсан Крутов хăй те пĕчĕк ача пекех хĕпĕртерĕ. Хумма Петĕрĕ çӳлтен алă сулса тем кăшкăрчĕ. Парторг çаврăнса пăхрĕ те тĕлĕнчĕ — çывăхрах Кириллов машини тăра парать.

— Ĕçлет, курăр, мĕнле кĕрлеттерет! — аллисене хăмăлпа шăлса тасатрĕ Крутов.

— Курма куратăп-ха, — кăмăлсăррăн хуравларĕ председатель машина алăкне хăйăклаттарнă май. — Ыран çĕмрĕк ларнине те курăпăр-ха.

Крутов ăшĕнче тем вĕресе кайрĕ, вара вăл сассине улăштарчĕ:

— Эх, Александр Семенович, пĕтнĕ вĕт комбайнĕ, списать тумаллискер çеç. Пустуй нушалантаратăр пулас эсир Воробьева.

— Пакăлтатрĕ пуль-ха кирлĕ-кирлĕ мара. Ну, сана, Фомич, тăхта! — алăка шалт! хупса хучĕ Кириллов, унтан каялла çаврăнчĕ те: — Комбайн вăл — машина. Машинăран мĕн пама пултарнине пăчăртаса кăлармалла. Çынран та — çавах, — хушса хучĕ юлашкинчен тарăхуллăн.

— Машинăна та хисеплемелле, çынна вара — пушшех. Паян пирĕн вăя йăлтах пăчăртаса кăларсан, ыран валли мĕн юлать. Çавăн çинчен те шухăшламалла кăштах, — калаçăва хутшăнчĕ Кĕркури шофер. — Леш, Тейлор йĕрки-саккунĕпе ĕçлеттерсе вăй-халран ярасшăн мар пуль те эс, Александр Семенович, механизаторсене, пур халăха та...

— Эс тата мĕн лĕпĕртетсе пыран кунта темле «телĕрсемпе», ялан тем амакĕ шухăшласа кăларан, — шĕвĕр пӳрнипе юнарĕ ямшăкне председатель.

— Эп урăх нимĕн те пĕлмес, курман-илтмен, сăмах çук, — шăпланчĕ Кĕркури.

Ăшра кулса илчĕ те Крутов чее ямшăка пулăшма шутларĕ.

— Тейлор-телĕрсем, вĕсем, — терĕ, — тĕлĕрттермеççĕ çав. Сирĕн шутпа ĕнтĕ, Александр Семенович, Кĕркури лĕпĕртетсе пырать. Çу-ук, пустуй павранă пек туйăнмасть вăл. Америкăри Тейлор инженер çинчен эсир хăвăр пĕлместĕр пулас. Ĕлĕкех çавă шухăшласа кăларнă та ĕнтĕ рабочисемпе машинăсен юлашки вăйне силлесе кăлармалли çирĕп ĕç нормисене. Тейлор меслечĕпе усă курса капиталистсем калама çук пысăк тупăш илме пуçланă, халĕ те çаплах асаççĕ. Тейлоризм, паллах, пирĕншĕн сиенлĕ юхăм пек туйăнать. Пирĕн, хăвăрах пĕлетĕр, çынна ĕçпе кăна лутăркаса тăкас тĕллев çук, ăна чун хавалĕпе хастар ĕçлеттерсе, çав вăхăтрах унăн сывлăхне сыхласа хăварассишĕн, ăс-хакăлне пуянлатассишĕн те тăрăшас шухăш çеç. Кĕркурисемпе Петĕрсем авă ăна ăнланаççĕ пек.

Кириллов мăк-мак турĕ те Кĕркури енне сиввĕн пăхрĕ. Парторгран ытларах халĕ вăл шофера тарăхрĕ. Яла кĕрсен тин мĕн каламаллине каларĕ:

— Сирĕн шутпа, эпĕ капиталист пек пусахлатăп пуль колхозниксене. Ах, ку Кĕркурипе Петĕр мĕн туса шутсăр лутăрканаççĕ-ши? Нумаях вĕренмен пулин те, эпĕ пурнăçне сирĕнтен ытларах курнă. Çавăнпа, ачамсем, мана эсир ытлашши ан кӳрентерĕр.

— Кӳрентермерĕ вĕт сана Максим Максимович, ăнлантарса çеç пачĕ, — терĕ Кĕркури.

— Хуп луччă çăварна! — кăшкăрсах пăрахрĕ председатель. — Хăвала килелле. Чĕре ыратать. Часрах вырăн çине выртса канас. Максим Максимович, юрĕ, калаçу калаçупах пĕттĕр. Эпĕ хам сахал пĕлнине хамах туяп. Пулмарĕ пуль çав халь тин вĕренесси. Ак çакăнтан кашни кун хытăрах та хытăрах чикет. Ыранччен.

Вырăсла хапха умне анса юлнă Кириллов çине Крутов хĕрхенсе пăхрĕ: «Чăн та, хавшанă, ывăннă вăл. Унран халĕ нумай ыйтма май çук пулĕ».

Трактор бригадин бригадирне аран-аран шыраса тупнă хыççăн Крутов машинăран уçă сывлăша тухрĕ. Павăл Фомича хыпăнтарсах шăллĕ ĕçлекен уя пулăшма ячĕ. Хăй вара çывăхри фермăна кĕчĕ.

Сăмсапа çăвара тислĕк шăрши çитсе çапрĕ, чутах чыхăнтарса яратчĕ. Йывăç витере сыснасем нăриклетни илтĕнет. Çурчĕн хăш-пĕр чӳречине улăмпа мăкланă, çумĕнче тислĕк купаланса выртать. Çийĕ тата... Çуррине улăмпа витнĕ, çуррин çуррине — чуспа, хĕррине — пĕр рет шиферпа. Шифер тăрринче хĕç тимĕр татăкки выртать. Унтан кăшт аяларах саманран купаланă тепĕр хăрăк-харăк вите ларать. Пĕве хĕрринчен тулли витресем йăтса хăпаракан хĕрарăм палламан çынна курнипе тăпах чарăнчĕ. Вăл пуçне кăвак тутăр çыхнă, халатпа резина атă тăхăннă, типшĕмрех питлĕ. Хĕрарăм

ирĕкленнĕ аллисемпе часрах куçне-пуçне сăтăрса илчĕ те: «Салам, кам пултăр çак эсир?» — тесе ыйтрĕ. Максим Максимович хăй камне пĕлтерчĕ. Çакăн хыççăн хĕрарăм сылтăм ывăç тупанне халат аркипе шăлса тасатрĕ те алă пачĕ.

— Эп Муллина пулатăп. Сысна пăхакан Укахви.

Крутов тулли витресене йăтма пикенчĕ.

— Ай-яй чее пуласшăн, ырă çыннăм. «Фермăра Мулла Укахвине пулăшрăм», — тесе мухтанасшăн пулĕ-ха эсир те. Пайтах курнă эп вунă çул хушшинче ыр ятлă пулса çӳрекенсене. Числов Петĕрĕ те виçĕм çулах витре йăтса панăччĕ, шыв уçламаллине çаплах ларттараймарĕ. Хăй пĕрмаях пире кăмунисăм никĕсĕ хывма вĕрентет. Шутлатăн вара ирĕксĕрех: нивушлĕ хăлтăр-халтăр никĕс çинче тытăнса тăмалли савăк пурнăç керменĕ кĕтет пире? Анра-сухрасем мар-и? Хитре сăмахпа сысна çури те, аш та нумаях илеймĕн çав. Апат çитмест, витесем çавра çил илсе каяс пек. Çĕр çинчи тамăк мар-и? Эх! Кунĕн-çĕрĕн çак çăрăлчăкра. Киле те вăхăтра çакланаймастăн. Фермăра çухалса пурăннипе ачасене те этем ĕретлĕ пăхаймастăн. Микушĕ ман, упăшкам, пĕр ерçмест: хĕлле тракторпа, çулла комбайнпа... Таçта кайса кĕмелле. Юрать чăтма хăнăхнă та. Эп кунта ĕçлеме пуçланăранпа миçе çын пăрахса тармарĕ-ши? Хăвăра чăнчăн парторгах тетĕр пулсан, ырă çыннăм, пулăшăр фермăра йĕрке тума. Çитет сăмах-юмахпа тăрантарса пире. Нухрат Кавăрлине те пăркăчлăр.

Мулла Микушĕн арăмĕн мĕншĕн шанчăк çухалнине Крутов ăнланчĕ. Укахви «Хăвăр ĕçлесе пăхăр-ха çак çăрăлчăкра» тесе ахальтен каламасть. Ферма çине алă сулни куç умĕнчех. Çак юхăнчăк хуçалăхшăн правленипе пĕрлех партком та айăплă. Çавна май Максим Максимович пуçĕнче малашлăх ĕçсен тĕвви тĕвĕленчĕ: ыйтăва вăраха ямасăр парткомра тĕплĕн сӳтсе явмалла.

## 6

«Шурăмпуçне» килнĕренпе Макçăм Крутов канăçне йăлтах çухатрĕ. Кунĕ-кунĕпе уйсемпе фермăсем тăрăх çӳресе çамрăк шăм-шак та тимĕр пек йывăрланса çитет. Йĕркипе ларуне те, канашлуне те ирттермелле, правленире те пулмалла...

Иртнĕ пуху йышăнăвĕ мĕнле пурнăçланни çинчен парткомра председателе итлени ĕççире сиксе тухнă пушара сӳнтермелли тĕрĕс меслет пекех туйăнчĕ. Александр Семенович çăвара темле йӳçĕ çимĕç ирĕксĕрлесе хыптарнă евĕрех тутине пăркаларĕ те çапах кутăнлашма хăяймарĕ, парти ыйтакан çирĕп йĕркене пăхăнчĕ. Умра тырă тăкăнма пуçлани те хăйне чĕреренех касрĕ пулас.

Ларура трактор бригадин бригадирне Воробьева та самаях лекрĕ. Павăл Фомич хăйĕн айăпне çын çине йăвантармасăр йышăнма пĕлни, малашне техникăна тухăçлăрах ĕçлеттермешкĕн кирлĕ майсене çивĕччĕн татса пама пултарни кăмăла кайрĕ Крутова. Председателе те куçран калама хăраса тăмасть вăл. Парткомра унашкал хастар, принциплă коммунистсем пурри секретарьшĕн енчĕкри ылтăн пекех. Вĕсен çути халăха сумлă çул уçса пама пулăшасса шанать вăл.

Агиткультбригада концерчĕ хыççăн Крутов колхоз агрономĕпе Тельман Волковпа пăрçа çулакансем патне кайма тухнăччĕ. Тельман Хурăнвартан, зооветтехникум хыççăн Шупашкарти ял хуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухнă. Килĕнче чирлĕ амăшĕ пĕчченех пурăннăран ăна ĕçлеме таçта аякка яман. Тельман ытла та кăмăллă, вашават, питĕ тавçăруллă каччă. Куçĕ унăн чăл-чăл çиçет. Кулнă чухне шап-шурă шăлĕсем йĕркипе тухса тăраççĕ. Сарлакарах туталлă пулнăран-ши, каччă вĕсем кăштах илемсĕрлетеççĕ. Типшĕмрех пит çăмартийĕсем пĕр çĕререх пуçтарăннипе, сăмси каçăртарах пулнипе Тельман хăш чух пĕр-пĕр мыскараçа аса илтерет. Чăн та, вăл пур çĕрте яланах кулă та шӳт, шӳт те кулă.

Çул çинче Крутовсене Хурăнвар бригадирĕ Воробьев лашапа хуса çитрĕ. Роман Фомич урхамахне чарса вĕсене çатан урапа çине лартрĕ. Тур лаша хăнăхнă алăра йăрлаттарса кăна пырать.

— Эпир капла улпутсем пекех, — шӳтлерĕ Волков. — Ял халăхĕ тăрăхлама тытăнĕ пирĕнтен. Ăçта кайса кĕрес вара?

— Çапли çаплах-ха, Тельман, çын куласран хăранипе çуран утса ĕлкĕреес çук, — агроном çине ытарлăн пăхрĕ бригадир. — Хăвах пĕлен, ялта малтан ултă бригадăччĕ, аллăмĕш çулта виçĕ колхоза пĕрлештерсен, пĕрре çеç тăрса юлчĕ. Юрать çак Çилçунат пулăшать. Но-оо! Яла çын шырама каятăп. Пăрçана çăлса хăвармаллах. Но-оо!

Роман Фомич пăхсан ватă сăнлă пек. Пĕркеленнĕ пит çăмартийĕсем ăна хĕрĕх еннеллех кăтартаççĕ. Тĕрĕссипе вăл вăтăра та çитмен-ха, бригадирта виççĕмĕш çул ĕçлет. Кам-кам ĕçе тухнипе тухманнине пĕлекенскер, лашине тӳрех Нухрат Кавăрлисем умĕнче тăратрĕ. Алăка уçсанах вĕсене хирĕç хаяр йытă сирпĕнсе тухрĕ. Талпăнса вĕрекен анчăк сассипе сарайĕнче ĕçлекенсем пуçĕсене çавăрса пăхрĕç.

— Вăй патăр! — ушкăн умне маларах çитсе сывлăх сунчĕ Крутов.

— Шĕкĕр Турра, хăвăрăн сывлăхăрсем лайăх пулччăр, — шăрт сухалне якатса илчĕ Кавăрле. — Мĕн сăмахпаччĕ? Ферма пирки мар пуль?

— Çук-ха, — терĕ партком секретарĕ.

— Апла юрĕ, кусем ĕçлеччĕр, чăрмантарар мар, сире пӳрте чĕнетпĕр. Карчăк, йăшăлтаткала-ха унта! Пысăк хăнасем килчĕç...

Лаç умĕнче чаваланакан ватăрах хĕрарăм кил хуçшине кĕнĕ çынсене вăрттăн сăнаса пăхрĕ те пӳртелле вăшалантарчĕ. Пĕр хушă никам та сăмах чĕнмерĕ.

— Вӑрӑ ҫуралчӗ пулмалла, — капан шӑлӗсене кӑтартса кулса ячӗ Салакайӑк Йӑванӗ.

— Ан епресе тӑр! — чышкӑ кӑтартрӗ ӑна Фомич. — Сире-и... сире... сулхӑнра чӗлӗм паклаттарса пурӑнтарам. Пӑрахӑр та пуртту-савуна, халех маршнӑ пултӑр пӑрҫа ҫулма!

Калаҫу мӗнпе вӗҫленессине сиснӗ Нухратов хӗсӗк куҫне тата хӗсерех парса бригадиртан йӑлӑнсах ыйтрӗ:

— Нимене вӗҫлеме ирӗк пар ӗнтӗ, Раман. Ыран пурте пӗрле тухатпӑр. Эп те халӑха агитацилесшӗн.

— Мӗн ними тӑван ҫак эс, Кавӑрле пичи? — верстак хыҫӗнче выртакан ещӗксене тин асӑрхарӗ Фомич. — Ара тупӑксем вӗт кусем?! Курӑр-ха, килсе курӑр?

— Мӗн тупӑкӗ пултӑр ҫак, Раман, сысна валашкисем вӗсем, фермӑшӑн ҫунатпӑр-ҫке, колхозшӑн. Мана, партийцӑна, намӑс ан кӑтарт-ха эс. Куҫу чалӑш курать пуль...

Платниксем ахӑрса янинчен тарӑхнӑ Нухратов ниҫта кайса кӗреймесӗр пӗр вырӑнта кукалесе тӑчӗ.

— Иртерех мар-и тупӑк хатӗрлеме? — ыйтрӗ Крутов. — Тен, ҫӗр ҫул ытла пурӑнӑр та, виличчен ҫӗрсе каять вӗт?

— Ҫӗрсен тата тӑватпӑр. Пирӗншӗн ӗҫ ҫавах мар-и? Пӑрҫа ҫулакансем унта хӗрарӑмсем те пур. Арҫын аллинче пуртӑ-сава выляни килӗшет. Колхозра ахаль те пирӗнсӗрех ӗҫсӗр аптӑраса ҫӳрекен нумай. Вӗсене хӑвалӑр, мӗн пирӗн ҫума ҫыпҫӑнатӑр? Ӗҫлекен ҫын патне пыриччен... Мӗнле каланӑччӗ-ха ваттисем? — Салакайӑк Йӑванӗн хӗрӗнкӗрех пичӗ-куҫӗ пушшех тискерленсе кайрӗ. — Кашнин хӑйӗн пуҫ пур тата. Эпӗ хам пӗлнӗ пек пурӑнап, Кавӑрле пичи — хӑй майлӑ. Мана пурнӑҫ сирӗнсӗрех йӑлӑхтарса ҫитернӗ. Акӑ курӑр, эп хам валли те тупӑк тунӑ, шӑпах юрӑхлӑ, — тесе вӑл вӑрӑмраххи ӑшне йӑпӑр-япӑр кӗрсе выртрӗ. — Витӗр хуппине, ҫапса лартӑр пӑтапа! Чӗрӗллех пытарӑр! Халех!

— Ăна ан итлĕр эсир, Максим Максимович, — алă сулчĕ Воробьев. — Ĕçе-ĕçе ăсран тайăла пуçланă вăл. Урă чухне йĕркеллех. Хушăран пăлахая те перет пулмалла. Хамăр тăванах та, аттен шăллĕ.... Аптрамалла унпа.

— Ах, ку пурнăçа пĕлме çук, тем пулса тухать, ĕçпуçа йĕркипе типтерлĕ туса пыма хăнăхнă та ачаран... — шалт аптраса ӳкрĕ кил хуçи.

Тупăк тăвакансем итлерĕç-итлерĕçех. Нухратов патĕнчен ятлаçкаласа тухса кайрĕç. Роман Фомич та вĕсенчен юлмарĕ. Нухрат Кавăрли Крутова чарса йăлăнчĕ:

— Халь мана эсир выговор панипе те çырлахмăр, партирен те кăларас тейĕр. Тархасшăн, хĕрхенĕр ват çынна. Ахаль тумăп. Ывăл та ман вĕренет, тухтăра тухать, пурнан пурнăçра, тен, вăл та кирлĕ пулĕ. Хуларан таврăнсанах иксĕре паллаштарăп...

Партком секретарĕ ăна нимĕн те шантармарĕ, сыв пуллашса урама тухрĕ, юлташне хăваласа çитрĕ. Кулăшла та, çав хушăрах тарăн шухăша яракан ӳкерчĕк тĕлне пулчĕç паян. Ун пирки калаçнă май Тельман ăна йĕтем çинче ĕçлеме çамрăксен бригадисем йĕркелени çинчен савăнсах пĕлтерчĕ.

Агрономăн хăйĕн ĕçĕ, партком секретарĕн те — хăйĕн. Çавăнпа вĕсен кунĕпех пĕрле çӳреме май çук. Тельман Волковран уйрăлсан Крутов ĕне ферминче, çуллахи лагерьте пулчĕ. Унтан тухнă çĕре хĕвел те анчĕ. Санар улăхне каçхи уçă сывлăш сарăлчĕ.

Каччă çырма тăрăх хăпарса Тарăнвар хыçне ӳкрĕ, хăмла пахчи çумĕнчи хăмăшлă пĕве патне çитрĕ. Линăпа çыхăнман пулсанах çак илемлĕ вырăн, тен, ытлах тыткăнламастчĕ те пуль. Халĕ темле асамлă вăй çыранран ямасть. Кирилловсен анкартийĕнчен Лина сукмакпа çакăнта тухать: шыва кĕме те, çунă япаласем чӳхеме те, ĕçе кайма та, Макçăм патне те... Темиçе каç ĕнтĕ

вĕсем пĕрле. Лина кĕпе çумалли-чӳхемелли пĕчĕк кĕпер çинче ларма юрататъ. Акă вăл халĕ те унтах. Хĕрĕн çара урисем ăшă шывра шăмпăртатаççĕ, таврана саланакан хумсем шыв тĕкĕрне силлентереççĕ те хăмăшсем çумне сĕртĕнсе çухалаççĕ. Чăшăл-чăшăл, чăшăл-чăшăл! — нумай саслăн юрлаççĕ хăмăшсем. Чĕркуççирен çӳлерех хăпарса кайнă кĕпине темшĕн аялалла туртмасть Лина. Хăмăр тĕслĕ тăпăлкка урасем Макçăма тăнсăр шухăша яраççĕ. Тăмпуç пĕвинче шыва кĕнĕ чухне вăл вĕсене кунашкал куçпа пăхманччĕ, халĕ, тĕлĕнмелле, вăтантараççĕ те, илĕртеççĕ те. Чăшăл-чăшăл, чăшăл-чăшăл! — илтĕнет таврара.

Макçăм та хĕрпе юнашар ларчĕ, шăлавар пĕççисене чĕркуççи таран тавăрса урисемпе шыва шăмпăртаттарма пуçларĕ. Вăл Линăпа колхоз çыннисем, вĕсен шухăшкăмăлĕ, хуйхи-суйхи çинчен калаçать.

— Тĕлĕнмелле этемсем пур. Тыр-пул уйра çĕрсессĕн те вĕсемшĕн икĕ алăра пĕр туя, — терĕ Крутов.

— Култаран эс, Макçăм, — урисене хуçлатса ларчĕ Лина. — Кунта çавах йĕркеллĕрех-ха. Тымара пырса курасчĕ сан. Унта халăх пушшех ярункана кайнă. Никам та итлеттерейместь. Вăрман пур та, пурнăç та пур вĕсен. Атте те вара: «Хăтланччăр-и кам мĕнле хăтланма пултарать, çынна усал тăвас мар, хамăрăн лайăхрах пурăнса юлас», — тет. Унăн шухăшĕ-ăнлавĕ, сан шутпа, тĕрĕс мар пуль. Çапах та, тарăнрах çавăрттарсан пуçра, мĕн, ик ĕмĕр пурăнатпăр-им эпир çĕр çинче? Шăпа мĕн панине мĕншĕн сирсе хăвармалла?

Ура çине тăчĕ те Макçăм тавралла пăхса çаврăнчĕ, Линăна тăма пулăшрĕ.

— Пурăнма, паллах, пулать тем тĕрлĕ те. Анчах чи малтан халăх интересĕсене маларах хумалла-çке, сирĕн аçу пек, уйрăм çынсен кăмăлне кăна тивĕçтермелле мар, — терĕ вара вăл.

— Çамки хĕссе килчĕ пуль-ха аттен, кам мана çиет-ши тет ĕнтĕ. Халăх уйрăм çынсенчен тăнине те ан ман, Макçăм.

— Юрĕ-çке, — аллисене хĕр хул пуççийĕ çине хуллен хучĕ Макçăм, — ан кӳрен уншăн, мана аçу мар-ха, урăххисем тарăхтараççĕ. Совеç çукка вĕсен. Намăса çухатнă вĕсем.

— Камсем?

— Ара, тин кăна ахăрттартăм-çке хăвна мыскара курни çинчен каласа парса. Нухратов патĕнче тупăк тăвакан Салакайăк Йăванĕсем тарăхтараççĕ те, шухăшлаттараççĕ те. Çынсем каланă тăрăх, ылтăн алă вĕсен. Йĕркелесе яма пултарсанччĕ вĕсенчен строительсен бригади, вăт вара питĕ лайăх пулнă пулĕччĕ. Пĕр чĕлхе тупайман курăнать вĕсемпе. Роман Фомичпа ахаль те ферма пирки калаçмалли пур-ха.

— Итле-ха, Макçăм, атя вăхăтлăха кирлĕ-кирлĕ мар çинчен пуплеме пăрахар. Пăх-ха тӳпене, мĕн чухлĕ çăлтăр вылять унта... Атя эпир те тытмалла вылятпăр. Çитеетĕн-и мана? Эх!

Çыран хĕррипе чупса кайнă хĕре Макçăм пĕве хӳринче тин хуса çитрĕ, хуса çитрĕ те... алă çине çĕклерĕ. Лина пуçне каччă кăкăрĕ çумне йăпăшт хурса çӳлелле туртăнчĕ, ăна икĕ аллипе те мăйĕнчен явса илчĕ...

Чăшăл-чăшăл, чăшăл-чăшăл! — чуна килентермелли сасăпа юрлаççĕ хăмăшсем.

## 7

Вăрçăччен лартнă пушар каланчи Хурăнварта темле сыхланса юлнă, халĕ те тăп-тăп ларать. Ун çывăхĕнчех — колхоз кĕлечĕсем. Салакайăк Карачăмĕ хăçантанпа ĕнтĕ вĕсене хураллать. Ывăлĕсене авлантарса, хĕрĕсене качча парса пĕтернĕ, мăнукĕсем те мăшăрланма ĕлкĕрнĕ. Ачисемпе мăнукĕсенчен ученăйсемпе генералсем, тава тивĕçлĕ артистсемпе врачсем тухман пулин те уншăн питех кулянмасть. «Пурте енерал пулсан тата кам «ать-

тва!» утать», — тет те кӑвапа таран ӳстернӗ шап-шурӑ сухалне шӑлкаласа йӑл кулать.

Хӑй каланӑ тӑрӑх, курманни юлман Карачӑм мучин. «Эпӗ ӗнтӗ, ачамсем, Уйӑх ҫинче ҫеҫ пулман. Пурпӗрех ӑна сирӗнтен ҫывӑхарах куратӑп. Ҫӗрле, ялйыш ҫиччӗмӗш ыйхӑра чухне, каланча тӑрне хӑпарса пинукӑльпе пӑхатӑп. Кӑшт ҫӳлерех хӑпартсассӑн-и ҫав вышка, ун ҫине пушар сӳнтермелли вӑрӑм пусмана тӑратсассӑн-и — ним те мар улӑхса каймалла. Анчах хӑратать ҫав, кӑлхус тыррине хуралламалла, утветлӑхӗ пысӑк», — шӳтлекелет вара тепӗр чухне авалхи старик.

Ашшӗ пекех чаплӑ шӑпӑрҫӑ пулнӑ Карачӑм. Мӗтри пиччӗшӗ авланнӑ чухне Тымартан вӑйлӑ туй кӗрлеттерсе ҫитнӗ. Урапа ҫинчен сиксе аннӑ шӑпӑрҫӑсем кӗвӗ шӑрантарма тытӑннӑ. Карачӑм та вӑкӑр хӑмпинчен тунӑ шӑпӑрне вӗрсе хӑпартнӑ. «Ӑн-на, ӑн-на, ӑнна-на!» — вӑрӑм тунасем хушшине кӗрсе кайнӑ пӑван пек, пурне те хупласа хунӑ унӑн шӑпӑрӗ. Тымарсем те тар юхтарсах ӑмӑртнӑ. Карачӑм туйнӑ: вӗсем виҫҫӗн — ҫӗнтермешкӗн чеелӗх кирлӗ. Вӑшт ҫухалать вара. Тымарсем савӑннипе курка хыҫҫӑн курка ӳпӗнтереҫҫӗ. Карачӑм вӑл вӑхӑтра сарай ҫунаттинчи йӑваран патвартарах салакайӑк чӗппи суйласа илет те ӑна шӑпӑр ҫумне ҫиппе ҫыхса хурать. Акӑ Карачӑм шӑпӑрӗ каллех хӑй юррине тӑсать: ӑн-на, ӑн-на, ӑнна-на! Шӑпӑр кӗпҫинчен салакайӑк чӗппи сиксе тухать те чӗррик-чӗррик! туса каллех ҫухалать. Тымарсем тин Карачӑма ҫӗнтернӗ ятпа саламлаҫҫӗ.

Ҫӗн хӑтара та аптӑраса ӳкмен Карачӑм, шӑпӑрне каланӑ-каланӑ та Хурӑн Ульянӗ текен чиперкке хусах матка саппунӗ айӗнче ҫухалнӑ. Хӑй яла таврӑниччченех усал сӑмахӗ утпа вӗҫсе ҫитнӗ ҫав. Арӑмӗнчен вӗри турчка вӗҫӗ лекнӗ вара Карачӑма, тути хӗррине самаях пӗҫертсе янӑ. Катӑк пулса юлнӑ тута хӗррине намӑсран пытарас тесе вӑл ҫамрӑклах сухал ӳстерме пуҫланӑ.

Граждан вăрçинче хаяр çапăçнă тет Салакайăк Карачăмĕ. Урал çывăхĕнчи тан мар çапăçура тыткăна лекнĕ. Турри пĕрлех пулнă çав унăн. Хăйсене вите умĕнче хураллакан салтак чăвашла юрă ĕнĕрлесе тăнине илтнĕ те Карачăм унпа тăван чĕлхепе калаçса кайнă. Çĕрле хайхи колчаковец вĕсене вăрттăн кăларнă, хăй те пĕрлех хĕрлисем патне тарнă. Çапăçусенчи сурансем Карачăм сывлăхне, паллах, хытă хавшатнă, çавăнпа вăл колхозра та хуралçă ĕçĕсĕр пуçне ытти ĕçсене тухсах кайман. Халăх пурлăхне лайăх сыхланăшăн правлени ăна икĕ кĕпçеллĕ пăшал парнеленĕ. Паянхи кунччен хурала çав пăшалпа çӳрет. Кăнтăрла унăн аллинче — шăмă авăрлă туя. Уксахламасть пулин те хăйĕнчен уйăрмасть ăна. Вăрçă вăхăтĕнче вĕсем патĕнче пĕр офицер çемйи пурăннă. Арăмĕпе ачисене шыраса тупнă çар çынни Карачăм мучие хăйĕн чаплă туйине тата шахмат курупки парнелесе хăварнă. Тепрехинче офицер, Тухăçран таврăннă вăхăтра, ырă кăмăллă чăваш çыннисене тепĕр хут тав тума тесе ятарласа Хурăнвара килнĕ. Хальхинче хăна кил хуçине офицер карттусĕпе çар биноклĕ панă. Салакайăк Карачăмĕ çавăнтанпа, праçниксем çитсен, хитре карттуса тăхăнать, кăкăрĕ çине медалĕсене йĕрки-йĕркипе çакать те урама тухать, вара шăмă авăрлă туйипе тăклаттарса, шурă сухалне икĕ еннелле вĕлкĕштерсе, мăнаçлăн утса çӳрет.

Шăпăр каласа кăна çӳремен иккен Карачăм мучи, ăсталăхĕпе те палăрнă. Санар тăвайккинчи тăмран тунă чашăк-тирĕке хăй вăхăтĕнче Ачча пасарĕнче кам кăна юратса туянман пуль. Пурнăç мути улшăннă май çак ремесла та майĕпенех пăрахăçа тухнă. Воробьевсен килĕнче пĕр хĕрлĕ кăкшăм çеç темле майпа сыхланса юлнă. Хурала кайнă чухне карчăкĕ унта ăшă сĕт тултарса парса ярать. Ялта тăм савăт-сапа савăчĕ уçас пирки вăл Кирилловпа темиçе хутчен те тавлашса пăхнă. Алек-

сандр Семенович: «Саманран сысна вити тăвар-ха малтан, унтан тăм куршук çинчен те шухăшлама пуçлăпăр», — тесех ирттерсе янă усăллă калаçăва.

Пушар каланчи çинче тахçантанпах рельс татăкĕ çакăнса тăрать. Карачăм мучи çав чана кашни сехетрех тĕп-тĕрĕссĕн шаккать. Пĕве хĕрринче Линăпа ларнă чухне Карачăм мучин чанĕ миçе çапнине Крутов та пĕр хут кăна мар итленĕ. Акă вăл виççĕ чанлатрĕ.

Партком секретарĕ Карачăм мучи патĕнче час-часах пулать. Халĕ те вăл кĕлетсем патне çитсен ăна алă парса ытти чухнехи пек тытăнса тăмасăрах тырă кĕртекенсем еннелле пăраннăччĕ.

— Чим-ха, ывăлăм, — тăрук чарчĕ Крутова мучи. — Лар кăштах,васкатăн пулсан та лар. Сăмахламалли пур.

— Мĕн пирки-ши тата, Герасим Филиппович? — ыйтрĕ Крутов.

— Акă мĕн, ывăлăм, — кукăр чĕлĕмне васкамасăр чĕртсе ячĕ Карачăм мучи. — Ман ачана эсир хаçат çине тĕрĕс кăларнă. Ĕçкĕ пĕтерет ăна. Чарăнаймасть пĕрре ĕçме тытăнсан. Чĕрĕллех хăйне валли тупăк тăвап тесе ман ята ячĕ, мур илесшĕ. Вилесси çинчен шухăшламалла-и халь пурнăçра? Ташĕ эпĕ кĕртместĕп çав усал шухăша пуçа. Ма аçа çапмасть ăна пĕреххут. Тем чул каланă, амăшĕ те вĕрентнĕ, çук, итлемест. Вăрçăчченех авлантартăмăр ăна, Мĕтрисемпе эртелпе пӳрт лартса патăмăр. Арăмĕ шуйттанласкер пулчĕ, кĕрт йытти. Салтакран таврăнсан Йăван çавăншăн ĕçме тытăнчĕ.

Максим Максимович халь ăнланчĕ ĕнтĕ: Нухратов патĕнче тупăк тăвакан Салакайăк Йăванĕсем çинчен стена хаçатĕнче статья кăларнăччĕ. Йăвана Крутов виçĕм кун уйра курчĕ. Йăван пăрçа çулма чарăнсах йăлăнса ыйтрĕ: «Тархасшăн илсе пăрахăр çав картинкăна. Урана çавапа татнинчен те йывăр вăл маншăн. Çын çине пăхма та намăс халь мана».

— Çапла вăл пурнăç тени, тур пӳрмерĕ пирĕн Йăвана арăм енĕпе, аскăнчăк хĕрарăм лекрĕ ăна, — лач сурчĕ Карачăм мучи çĕр çине. Макçăм васканине пăхмасăрах вăл ывăлĕн пурнăçĕ çинчен каласа пачĕ.

8

Салакайăк Йăванне вăрçă тухичченех салтака илнĕ пулнă. Çĕнĕ пӳртре çамрăк арăмпа тин çеç çуралнă ывăл, Ваççа, тăрса юлнă. Крахвине ытла та чиперкке пулнă çав. Ялта ăна пурте ăмсаннă. Йăвана çакă, паллах, килĕшмен. Хăй ăшĕнче вăл хитре арăмĕшĕн савăннă та, кĕвĕçнĕ те. Ĕçкĕ-çикĕре ют арçынсемпе ташлама та чарнă. Мĕн тăвăн-ха эсĕ илемлĕх тĕнчине? Унта такам та кĕрсе курасшăн, йăпанасшăн.

Хурăнварти Трахвин Йăванч Шмыков Крахвинен çĕмĕрт пек хура куçĕсене, пилĕкрен аяларах усăнса тăракан мăшăр çивĕтне, тăпăл-тăпăл кĕлеткине, акăш юххи пек уттине вăрçăчченхи çулсенчех вăрттăн сăнанă. Йăрăс пӳллĕ, икĕ метр çӳллĕш сап-сарă таса арçынна Крахвине хăй те кăмăлланă, ун умĕнче чипертерех курăнас тесех пуль капăртарах тумланма тăрăшнă. Çапах Шмыковăн ăмсануллă телейне Салакайăк Йăванĕ туртса илнĕ. Крахвине темшĕн Трахвин Йăванча сивленĕ, Йăванах качча тухнă. Кавалери офицерĕ Шмыков, фронтра аманнă хыççăн, яланлăхах яла таврăннă, хăрах урине çĕклесе икĕ туяпа сиксе çӳренĕ. Çав çулнех ăна колхоз председательне суйланă, вара вăл тур лашапа тăрантас çинче ларса çӳреме пуçланă. Ачаллах купăс калама юратаканскер, вăл хуларан аккордеон туянса килнĕ, унран кăнтăрла та, каç та тек уйрăлман.

Трахвин Йăванч Крахвинепе темиçе хутчен те куçакуçăн тăрса калаçасшăн пулнă, анчах салтак арăмĕ унран вăтанса кашнинчех пăрăнса кайнă. Шмыков хушăран каллех ун çумне пыра-пыра çыпçăннă. Упăшки

фронтра хыпарсӑр ҫухални ҫинчен пӗлсен нумаях та вӑхӑт иртмен, Крахвине Трахвин Йӑванч сӑмахӗсене парӑннӑ, ялта вӗсем пирки сас-хура тухнӑ.

Пӗррехинче Крахвинене хӗр чухнехи тантӑшӗ, урама хирӗҫле пурӑнакан Нинук тытса чарнӑ.

— Мӗнле намӑс мар-ха сана, Крахвине? Йӑвана ытла хӑвӑрт манса кайрӑн-ҫке? — тенӗ кӑмӑлсӑррӑн Нинук.

Кӳрши ун ҫине тӗлӗнерех пӑхса илнӗ те ҫӑмӑллӑн тавӑрса хунӑ:

— Сана мӗн, упӑшкунтан эрнере тенӗ пекех ҫыру илсе тӑратӑн та... Мӗн сана, лайӑх ӗнтӗ. Вӑрҫӑ чарӑнсан Хветут кӑкӑр тулли орден ҫакса таврӑнать. Эсӗ ӑна мӑйран уртӑнса кӗтсе илетӗн. А манӑн ҫуккӑ, пӗлетӗн вӗт, ҫуккӑ! Ҫухалнӑ, ятсӑр-шывсӑр тӗп пулнӑ. Кама кӗтмелле манӑн? Ватлӑха-и? Тен, эпӗ телейлӗ, ӑҫтан пӗлетӗн мана? Асту, Нинук, эпир ҫирӗмре ҫеҫ-ха. Курӑпӑр-ха Нинук мӗнле «хӑрса пурӑннине».

— Ан сӳпӗлтет, Крахвине! — хыттӑн татса каланӑ Нинук. — Ытла та ҫӑмӑлттайла шухӑшлатӑн. Ҫамрӑклӑх иртсе каять тесе санашкал упӑшкам чысне варалам астӑп. Вилес пулсан та эпӗ хамӑн Хӗветута нихӑҫан та юратма пӑрахмастӑп, яланах унпа, унӑн ячӗпе, унӑн шухӑш-туйӑмӗпе пурӑнатӑп. Никампа та улӑштармастӑп эпӗ хамӑн юратнӑ упӑшкана. Илтетӗн-и? Улӑштармастӑп! Эсӗ вара... Эсӗ — кӗрт ами. Ан тарӑхтарнӑ пултӑр мана ун пек сӑмахпа...

Крахвинепе Нинук пӗр-пӗринчен питӗ хуҫӑк кӑмӑлпа уйрӑлнӑ. Мӗн чухлӗ хӗрарӑм куҫҫуль тӑкнӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче, мӗн чухлӗ тӑлӑх арӑм тӑрса юлнӑ... Ҫав шутра Нинук та пулнӑ. Кӗтсе илеймен вӑл хӑйӗн юратнӑ Хӗветутне, Крахвинепе тавлашнӑ хыҫҫӑн темиҫе уйӑхранах ун килне те фронтран хурлӑхлӑ хыпар ҫитнӗ. Нинук пӗчӗк Тельмана лӑпка-лӑпка ӳстернӗ, ял ҫине

япăх сăмах кăларман. Вăл урăх никама та каччă тухман, пĕчченлĕхе çĕнтерсе, йывăр хуйха-суйха парăнмасăр тĕрĕслĕх çулĕпе утнă, пурпĕрех хăйне телейлĕ туйнă, вунă çул ытла бригадирта ĕçленĕ, упăшки пекех правур, кăмăллă ача ӳстернĕ. Унпа пĕрле савăннă. Тельман çиччĕмĕш класран вĕренсе тухсан ял хуçалăх техникумне кайса кĕнĕ, диплом илсен ялтах ĕçленĕ, каярахпа Шупашкарта институт пĕтернĕ. Çамрăклăх туйăмĕсене сӳнтерес мар тесе хыпăннă Крахвинен пурнăçĕ çурхи вăрман чечекĕ пекех хăвăрт шаннă. Пăрахнă ăна Трахвин Йăванч. Çĕрлехи шăплăхра тăлăх арăм хапхисене вăрттăн уçа-уçа хупса йăлăхнă Шмыков вăрçă чарăннă çул авланнă.

... Мăн урам вĕçĕнчи униче хапхинчен Хурăнвара кутамкка çакнă Салакайăк Йăванĕ çитсе кĕнĕ, салтакла утăмпа килне васканă. Акă унăн пӳрчĕ, вăрçа каяс умĕн туса пĕтерейменхапхи. Чалăшнă алăк умĕнче арçын ачапа хĕр ача кĕмĕрккелле вылянă. «Çаках-ши ман Ваçук? Хэ епле çитĕнсе кайнă», — тесе вăл арçын ачана алла илсе чăмăртасшăнччĕ çеç, шĕвĕрккесем иккĕшĕ те картишнелле вĕлтĕртеттерсе кĕрсе тарнă. «Анне, анне, пирĕн пата темле пичче килчĕ!» — илтĕннĕ шалтан ача сасси.

Пахчара çум çумланă çĕртен хыпăнса тухнă Крахвине кил карти варринчи Йăвана палласа илсен юпа пек хытса тăнă. Пĕрре тĕлĕннипе, тепре сехĕрленнипе пулас, куçне-пуçне чарса пăрахнă, упăшки çитсе тăнипе çеç çĕре тӳнсе каяйман.

— А-а-ах, Йăван, Йăван... — Крахвинен вĕри куççуль тумламĕсем Йăван кăкăрĕ çине юхса çĕре тумланă. — Ăçта кайса çухалтăн-ха эсĕ? Ах, Йăван...

Амăшĕ ӳлесе йĕнипе хĕр ача та чăтайман, лĕрр! макăрса янă.

— Ку тата кам ачи? — арăмĕн тапчăм уринчен пăталаса тытнă шĕвĕрккерен тĕлĕннипе ыйтнă Йăван.

— Манăн, Йăван, манăн, ман хĕр ача, ман Венера, — пуçне çĕклеме вăтанса аран-аран сасă кăларнă Крахвине. — Эс çухалсан... Пĕлес пулсанччĕ мана ун чухне пĕччен пурăнма епле йывăррине... Эпĕ сана майĕпен кĕтме те пăрахнăччĕ ĕнтĕ. Аçу та, эпĕ хам та чиркӳре асăнтарнăччĕ. Ах, Йăван... Ах, тур-тур... Каçарăн-ши эсĕ мана куншăн е каçармăн...

Йăван ним калама аптраса тăнă, урамалла çаврăнса пăхнă та кӳршĕ хĕрарăмне, Нинука, курнă, унтан ывăлне сылтăм аллипе йăтса пӳрте кĕрсе çухалнă.

«Эх, Крахвине, çамрăклăх туйăмĕсем хаклăрах теттĕнччĕ-и-ха? Савăнса юлтăн-и халь çамрăклăхпа? Çĕр тĕпне анса каймалла сан, аскăнчăкăн!» — йĕппе тирнĕ пек тирсе илнĕ Крахвинене тантăшĕн вĕри сăмахĕсем.

Крахвине ăна хирĕç нимĕн те калайман, йĕме чарăннă хĕр ачине çавăтса тайлăк картлашка çине ярса пуснă.

Арăмĕ кĕнине риснĕ пулин те Йăван ун еннелле çаврăнса пăхман, тĕпелте Ваççука ачашласа ларнă. «Çак мăшкăла чăтма эпĕ темиçе хутчен вилĕм умкинчен тухрăм-ши, юратăва вут-кăвар ăшĕнче çунтармасăр, куçран тухман куççуль ăшĕнче сӳнтермесĕр сан пата илсе çитертĕм-ши?» — тесе аллинчи концлагерь номерĕ çине пăха-пăха шухăшланă вăл.

Салакайăк Йăванĕ тепĕр эрнерен вербовкăпа Çĕпĕре тухса кайнă. Трахвин Йăванч Крахвине патне ӳсĕрпе çаплах-ха хушăран кĕркелесе тухнă. Крахвине ăна ниепле те чарма, хирĕçлеме пултарайман, ун сăмахĕпе яланах килĕшнĕ. Юратнă вăл Трахвин Йăванча, уншăн Йăванран ытларах тунсăхланă, хăйĕн пĕтĕм хĕрӳлĕхне ăна пама тăрăшнă.

Йăван та арăмне малтанхи пекех юратнă, Шмыковпа ача тунă пулин те, уншăн вăл çĕр çинче çук чи

хитре хĕрарăм пек туйăннă. Суккăр юрату хистевĕпе вăл арăмне каçарнă, Хурăнварах таврăннă.

Арканнă çăмхана каялла чăркама питĕ йывăр, саланнă çип ăçта та пулин çыхланса ларать, ăна вара татса сыпмасăр та майлама çук. Салакайăк Йăванĕн те çемйи çавнашкалах чăлханса пĕтнĕ. Ăна малтанхи пек йĕркеллĕ юсама май килменнине вăл ăнланнă, анчах ăшри тăвăла пусарса чăтса пурăннă. Анчах Йăванăн та çамрăклăхри юрату тымарĕсем майĕпенех типме тытăннă. Крахвинепе хирĕçме, ятлаçма пикеннĕ вăл. Çемьере харкашуллă пурнăç пуçланнă. Ăна тĕппипех аркатас шухăш та пырса кĕнĕ ун пуçне. Çук, пултарайман уйрăлма. Арăмне ватса сусăрлатнăшăн Йăвана тĕрмене хупнă. Унтан пусăрăнса таврăннăскер вăл вара ĕçме пуçланă, колхоза сахал тухнă, платникре çӳресе калăм укçипе тытăнкаласа пурăннă.

Хирĕçӳ-тытăçу хушшинчех Крахвинен ывăлпа хĕр ӳснĕ. Ваççук пĕлтĕр авланма та ĕлкĕрнĕ. Венери те хĕр пулса çитнĕ ĕнтĕ.

— Вăт, çавăн пек, ывăлăм, — калавне каласа пĕтерсен чĕлĕм тĕпне каткари шыва шаккаса пăрахрĕ Карачăм мучи. — Йывăр пулчĕ пирĕн Йăван пурнăçĕ, пурпĕрех эсир ăна хаçат çине тĕрĕс кăларнă.

Каярахпа çак калаçăва Макçăм темиçе хутчен те аса илчĕ. Тĕрлĕрен шухăшласа пăхрĕ вăл кун пирки. Карачăм мучи хăйĕн ывăлне сивлет. Çапах, тĕплĕнрех çавăрттарса пăхсассăн, урăх шухăш та сисĕнмест мар-и ун сăмахĕсенче? Тен, юри çеç шахвăртса çапла калаçать вăл? Çынсемпе тĕплĕнрех, тарăнрах паллашмалла.

9

Ваççук Воробьев ашшĕ пекех çӳллĕ ӳснĕ. Çавăнпах пуль Чăсмак Ваççук тесе те кулкаласа илеççĕ унран тепĕр чухне. Вăл фермăран районти çу заводне сĕт турттарать.

Машина-трактор паркĕнче çын тăп-тулли. Шӳтлĕ кулă, ытти шăв-шав илтĕнет. Председатель шоферĕ Кĕркури Афанасьев шăпах Ваççук пирки юмах яма пуçланă иккен.

— Акă хăй те персе çитрĕ. Мана суять тетĕр пулсан хăйĕнчен ыйтма пултаратăр, — тутине кулăшла пăркаласа илчĕ Кĕркури.

— Мĕн, мĕн пирки эсир? — ним ăнланмасăр аптăраса тăчĕ Ваççук.

— Космонавт парни пирки-çке, — савăнса ӳкрĕ лешĕ, — тăнлантарап-тăнлантарап вĕсене, усăсăр каласса ахалех çăвар тутине пĕтереп...

— Эс униăн кулянсах ӳкмĕн-ха, председательпе çăвар тутине çиччас тупан, — терĕ Ваççук. — Пирĕн, аякра çӳрекенсен, юрамасть. Астăватăр-и ирпе ĕçе кам тайкаланса килнине, Павел Фомич ун вырăнне Шупашкара мана тытса янине? Манман пулсан итлĕр эппин:

— Тĕп хуларан таврăннă чухне шалкăм çумăр çапрĕ, витререн тăкнă пек чашлаттарать. Машинăна çул варрипе хуллен тытса пыратăп. Каç енне сулăннă май хирĕç пулакан та, хыçран хăвалакан та курăнмасть. Карай тăвайккинче çеç пĕр хура «Волга»ураписемпе мăкăрлантарать. Ăна тĕртсе кăларассишĕн виççĕн усăсăр пылчăкра çăрăлаççĕ. Пĕри, лутрараххи, сăмси урлă тăм катăкĕ лектерни, мана хирĕç кăмăллăн пăхса кулнă пекки турĕ. Тути хĕррисем çӳхерех, шăлĕсем сайрарах хăйĕн. Ну, пĕр вăтăр-вăтăр пиллĕксенчи хурарах сăнлă тăлпан арçын. Таçта курнă чăваш пекех туйăнчĕ, анчах аса илеймерĕм ăçта курнине. Юрать тата Шупашкарта трос туяннăччĕ, хăйсен вĕсен çуккă, çаклатса туртса кăлартăм вара. Пĕри хĕрлĕ укçа сĕнчĕ. Илмерĕм. Палламан çынсем мана питĕ хытă тав турĕç те хăйсен çулĕпе малалла вĕçтерчĕç, эпĕ — килелле.

Ун ҫинчен хыҫҫӑнах манса кайнӑччӗ ӗнтӗ. Ҫулра пӗр-пӗрне пулӑшасси сахал пулать-и? Ӑнсӑртран Мускавран посылка килни тӗлӗнтермеллипех тӗлӗнтерсе пӑрахрӗ. Хам ятпах та, иккӗленсе те илтӗм. Посылкинче Циолковский бюсчӗ, «Восток» карап макечӗ, шоколад, мандарин тата сӑн ӳкерчӗкре хайхи Карай тӑвайккинче тӗл пулнӑ ҫын ӑшшӑн кулса тӑра парать. Ҫырӑвӗнче ҫапла ҫырнӑ: «Хисеплӗ тусӑм! Ҫумӑрта канавран туртса кӑларса ҫӑлнӑшӑн тавтапуҫ. Шупашкара йӗркеллех ҫитрӗмӗр. Хисеплесе, космонавтла салампа Андриян Николаев».

— Тӑхта-ха, тӑхта, Ваҫҫук, — калама чарчӗ ӑна пӗр ҫамрӑк. — Хӑвӑнтан ыйтса тӗпчемесӗрех ӑҫтан пӗлнӗ-ха эс камне? Ӗненме йывӑр.

— Мӗн сӳпӗлтетен ҫак, — пӳлчӗ ӑна Кӗркури, — ҫамку ҫинче тата кут хыҫӗнче номер пуррине ан ман. Таҫтан туртса кӑларӗҫ сана. Эх, эсӗ те ҫав, сӑмакуна пулах чапа тухаймарӑн. Шупашкара хӑв кайнӑ пулсан ун чух, тен, космонавтпа кумлӑ пулӑттӑн, парни те Чӑсмак Ваҫҫана мар, сана лекетчӗ, ачуна та халь манах тыттармалла пулать. Ваҫҫукӑн авӑ арӑмӗ кӗҫ-вӗҫ ҫӑмӑлланмалла. Хурӑнварти пӗрремӗш Ваҫҫук виҫҫӗмӗш космонавтпа кумаллӑ пулма та пултарать.

Юлташӗсем ахӑлтатса кулнипе кӑмӑлсӑрланнӑ Воробьев ушкӑнран тухрӗ те Кӗркурие тавӑрас шутпах ҫапла каласа хучӗ:

— Эп такам та пулӑп. Эсӗ ху вара, Кӗркури, ҫирӗм пиллӗкмӗш председателӗн юлашки ямшӑкӗ. Ӑнлантӑн-и?

Механизаторсем тата шавлӑрах кулса ячӗҫ, унтан хӑйсен вырӑнӗсене саланчӗҫ. Механик Ваҫҫук машинине тӗплӗн тӗрӗслерӗ: пурте йӗркеллӗ, рейса тухма хатӗр. Кӗҫех унӑн газикӗ тусан пӗлӗчӗ ҫӗклесе ферма картишне ҫитсе кӗчӗ. Сепаратор ҫурчӗ умӗнче кӗпӗрленсе тӑракан ҫынсен ушкӑнӗ кӑшӑ-ӑл аяккалла пӑрӑнчӗ. Карҫинкаллӑ-кугамкаллӑскерсем ӑҫта кайма хатӗрленнине

лайăх пĕлет вăл — Вăрманкаса, суту-илӳ тума. Вĕсен вăрттăнлăхне те сисет. Машина патне тӳрех кĕпĕрленсе пымарĕç, акă кăшт аяккарах вырнаçрĕç те юмаха ячĕç. Пĕр Кахал Праски çеç Ваççук патне йăпшăнса çывхарчĕ, сăмах çукран сăмах туса хуллен ыйтрĕ: «Çумăрмĕн пулмасть-ши паян?»

Ĕне сăвакан хĕрсем тулли бидонсене хăвăртах тиесе пĕтерчĕç. Çав вăхăтрах ушкăн кĕшĕлл тапранчĕ, автомашинăна тавралла кăткă пек сырса илчĕ. Сĕмсĕрсене ятласа та ыванна ĕнтĕ вăл, пурпĕрех вĕсенчен хăпаймасть, çемçе кăмăлне пула пурне те лартса ярать. Тапранса кайма пуçланăччĕ кăна, яла электричество кĕртекенсем хашкаса çитрĕç...

Вăрманкасалла хăпарнă çĕрте, вăрман кĕтессинче, автомашинăна ГАИ инспекторĕ чарчĕ, нумай калаçса тăмасăрах Штыков Воробьевăн талонне шăтăрт шăтарса хучĕ.

Çу заводĕнчен вăл питĕ хуçăк кăмăлпа таврăнчĕ, çул тăршшĕпех çак «пассажирсенчен» малашне мĕнле майпа хăтăласси çинчен шухăшласа пычĕ. Çĕрле тин пырса кĕчĕ ăслă шухăш пуçа.

Ваççукран кӳршĕсем тĕлĕннĕ. Ниме тумасть пуль те ку çак хĕрӳ тапхăрта, сенкĕ-кĕрепле пухать теççĕ. Машинăпа килне килсе ĕç хатĕрĕсене хурса кайсан та никам пĕлеймерĕ шофер вăрттăнлăхне. Хĕрсем бидонсене вырнаçтарса ĕлкĕрнĕ-ĕлкĕрмен пасар каманти йăшăлтатма пуçларĕ. Паян Ваççук пит савăнăçлă, шоферсен юррине шăхăркалать. Хĕрринчи çил арманĕ патне çитерехпе руле сулахаялла пăрчĕ те урапа çулĕпе уялла шăхăрттарчĕ. Кузоври çынсем ун-кун пăхкаласа пĕрпĕринпе калаçнине вăл тĕкĕр витĕр аван курать, ăшĕнче кулать. Пăрçа ани çине çитсен машинăна хăвăрт чарчĕ, кабинăран сиксе тухрĕ.

— Роман Фомич! — кăшкăрчĕ шофер партком секретарĕпе тем калаçса тăракан бригадира. — Йышăн добровольцсене!

Кахал Праскисем ирĕксĕрех кăпăшка çĕр çине сиксе анчĕç. Машина патне çитнĕ бригадир пĕрне сенĕк, теприне кĕрепле тыттарчĕ. Ĕçрен пăрăнса çӳреме хăнăхнă вăй питти çынсем улатса тапранса кайнă машинăна хурлăхлăн ăсатса ячĕç.

Ĕнер милицирен правление шăнкăравланă чухне Крутов унтахчĕ. Паян ирпе шăпах мастерскоя кайма тухнăччĕ. Механизаторсемпе калаçу ирттерме шутланăччĕ, Фомич бригадинчен час тухайманнипе кая юлчĕ. Кирлех те пулман иккен Воробьевпа уйрăммăн пуплеме. Авă вăл епле ăнăçлă тӳрлетрĕ хăйĕн йăнăшне! Пуçа та пырса кĕрес çук унашкал ĕç тăвасси тепринне. Маттур Салакайăк Йăванĕн ачи! Иртнинче те ăслă шухăш сĕннĕччĕ вăл правленире — шоферсене икĕ сменăпа ĕçлеттересшĕн.

## 10

Каçхине калаçса татăлнă пекех, Макçăм хваттерне Тельман Волков хĕвел тухнă-тухманах килсе çитрĕ. Хăйĕнчен бензин шăрши кĕрет.

— Фу! — терĕ Макçăм кулкаласа, — мотоцикл туянтăн та пĕтĕм яла бензин шăрши сарса çӳретĕн. Асту, хĕрсем юратма пăрахаççĕ ак.

— Паллах, — мăйне хытарса пуç сĕлтрĕ Тельман, — авланиччен чупса юлас-ха. Темле кăмăлли тупăнать. Çапăнса вилесрен хăрĕ те виç кунтанах суттарĕ.

Макçăм тусĕн чăл-чăл çиçекен куçĕнчен тепĕр хут ытарлăн пăхса тумланма пуçларĕ. — Ну, мĕнле, вымпелсем çухалса пĕтмен-и? — тусĕ тем шыранине курса ыйтрĕ Тельман. — Ĕнер каç хăмăш кӳллине ӳксе юлман-и? Хăш-пĕрисем çурçĕр иртнине пăхмасăрах çавăнта çӳреме юратаççĕ тенине илтрĕм-ха эпĕ...

— Шăпрах калаç, сапăртарах пул, — пĕчĕк пӳлĕмри Ульки акка еннелле хăранă евĕррĕн пăхса илчĕ Макçăм.

Ĕнер парткомпа правлени ларăвĕ пулнăччĕ, мала тухнă комбайнерсене хавхалантарма йышăннăччĕ. Вымпелĕсене, ирхине парткома кĕрсе çавра çул туса çӳрес мар тенипе, Макçăм каçхине хăйпе пĕрле илсе кайрĕ. Çавăн пирки шӳтлекелесерех каласрĕ халь агроном.

Ульки акка пӳлĕмрен тухса каччăсене ăшшăн ăсатса ячĕ. Тельманпа Макçăм, икĕ ял хушшинчи масар çумĕнчен пăрăнса, кайриваралла çул тытрĕç. «Хир карапĕсен» ушкăнĕ айлăмранах курăнать. Председателе парткомра итленĕ хыççăн техникăна çĕнĕ меслетпе ĕçлеттерме тытăннăччĕ. Волков çурăмĕ хыçĕнче ларса пыракан секретарь халĕ уншăн савăнмаллипех савăнчĕ.

Комбайнсем чарăнчĕç те хуçисем Крутовпа Волков патне пухăнчĕç. Парторг вĕсене ĕнерхи лару çинчен каласа пачĕ. «Çынсен тахçанах пур та çав йăла, пирĕн пата темшĕн чи кайран çитет», — илтĕнчĕ Хумма Петĕррин ӳпкевлĕ сасси ушкăнран.

Микуш Муллин хĕрлĕ вымпела алла илнĕ май ним калама аптраса тăчĕ, пĕрре парторг çине, тепре юлташĕсем çине пăхкаларĕ. Хăйне Максим Максимович хул пуççирен лăпкасан тин тарлă çамкине шăлса:

— Тавтапуç, кунашкал кăмăл тăвассине кĕтменччĕ, хăрасах пурăнаттăм сиртен, халĕ тин çăмăллăн сывласа ятăм... малашне тата вăйлăрах ĕçлĕпĕр, — терĕ.

Хумма Петĕрри çав вăхăтра шăхăркаласа хăйĕн комбайнĕ патнелле уттарчĕ.

— Куртăн-и, Тельман, мĕнле хаклă вăл хĕрлĕ хăмач, — касăлнă пучаха çĕртен çĕклерĕ Макçăм. — Фомич кӳренчĕ пулас. Чăннипе ун вырăнĕнче эпĕ хам та тарăхмалла. Çĕнĕ комбайнпа ĕçлесен-и вăл... тем тесен те Муллинран юлас çук. Çитес çул ăмăрту условийĕсене урăхларах тумалла. Вымпелпа пĕрле укçа парсан та лайăх

пуль. Пĕрремĕш-виççĕмĕш вырăна тухнисен килĕсене паянах салам хучĕ ярар. Сан паян кун пирки кинохаçат кăлармалла, кайрисене тĕртсе илме те ан ман.

— Хам тивĕçе манмăп-ха, Макçăм, «Çăмăл кавалери» листокĕсене те эс килнĕренпе ĕнтĕ виçĕ кунта кашни ял валли виçшер экземпляр кăларса тăратпăр. Асту, комсомолецсем те çывăрмаççĕ. Эх, тырă ӳстерме те çăмăл мар та, çынсемпе ĕçлеме тата йывăртарах. Мĕн чухлĕ ытларах çывăх пулатăн, калаçатăн вĕсемпе, хавхалантаратăн вĕсене, халăх та сана çавăн чухлех ăнланать, шанать.

— Тĕрĕс сăмахсем, Тельман, анчах хăшне-пĕрне кӳрентерме те тивкелет.

— Максим Максимч, — хушса хучĕ Волков, — хăшпĕр çын вăл тепĕр чухне, чăн та, хытса ларать. Вăт çавна вырăнтан хускатма йывăр вара. Пĕр сăмах калас-ши, калас мар-ши сана?... — Макçăма куçран тĕллесе пăхрĕ вăл. «Кала, кала, мĕншĕн каламалла мар», — сăмахсăрах пĕлтерчĕç лешĕн куçĕсем. — Итле-ха, Макçăм, — терĕ вара Тельман. — Эсĕ килсен пирĕн председатель те çамрăкланма тытăнчĕ пек туйăнать.

Макçăм хĕрелсе кайрĕ.

— Чăнах, чăнах! Тупата, туршăн, — хĕрӳллензсех çирĕплетрĕ хăйĕн сăмахне агроном.

Хыçалта хăмăл чăшăлтатни илтĕнчĕ. Велосипедпа Лина килсе çитрĕ-мĕн.

Пурнăç
Манран ыйтать вăл,
Мана тĕпчет,
Мана хушать вăл,
Мана хистет,
Малтан мала каймашкăн хăвалать,
Çĕнтер! тет...

Хĕре сăвăпах кĕтсе илчĕ Тельман Волков.

— Çĕнтер! — аллине çĕклерĕ Лина та.

— Халтăр-р! турĕ çав вăхăтра Нурăс сали енчен. Çиçĕм йăлт-ялт çиçрĕ, каллех аслати авăтрĕ.

Тельман йĕтем çине, тырă тасатнă çĕре, кайрĕ. Линăпа Макçăм улăха анчĕç. Инçете тăсăлать Санар. Хĕвел тухăç енчи сăртра юман кати пур. Çумăр шапăртаттарсах çăвиччен унта çитсе ӳкме май çук-ши терĕç хĕрпе йĕкĕт. Ак ĕнтĕ çил вăйлăраххăн та вăйлăрах вĕрме пуçларĕ. Велосипеда халь вĕтĕ кăткă тĕмиллĕ çерем тăрăх каччи çавăтса пырать. Хĕрĕ çĕкленекен кĕпе аркине кашни утăмран тенĕ пекех аллипе аялалла турта-турта тӳрлетет. Калаçас килет унăн, Макçăма ăшă сăмахсемпе йăпатас килет, анчах темшĕн кирлĕ сăмахсем аса килмеççĕ, çитменнине, Макçăмĕ те чĕнмест.

— Хăлтăр-хăлтăр, шалтăр! — турĕ аслати пуç тăрринчех. Лина хăраса Макçăм аллине ярса тытрĕ, ун çумне пăчăртанчĕ, часах вăл йĕкĕт ытамĕнчен вĕçерĕнсе малалла утса кайрĕ.

— Макçăм, илтетĕн-и, Макçăм, — каччă енне çаврăнчĕ хĕр самантран. — Çак вырăнта вăрçăччен, Тельман ашшĕ председательте чухне, юман кати таранах вăрман лартнă пулнă тет, анчах кайран йывăççене пăхса ӳстерме ала çитмен. Выльăх ярса таптаттарнă, вара вăрманĕ те çитĕнмен. Шел вĕт, Макçăм... Кур-ха, унтакунта çеç пĕр-икĕ йывăç юлнă.

Велосипед тикĕс мар çерем çинче тăлтти-талтти сикелет. — Çак çереме те лайăхлатма пулать те çав, Санара та пĕвелеме май пур та — каллех ала çитмест пулас вĕсен.

— Тыра вырса пĕтерер-ха, — сăмах хушрĕ Макçăм, — председательпе правленире калаçăпăр ун çинчен, халăхпа канашлăпăр, сан сĕнĕвне пурнăça кĕртме тăрăшăпăр. Халĕ вара... çак шырлан урлă сиксе каçăпăр...

Линăна вăл вăшт çеç ытамне илчĕ те шырлан урлă чалт сикрĕ. Сиксе каçсассăн та пĕр вăхăт ытамĕнчен

вĕçертмерĕ вăл ăна, «Ак чуп тăвать, ак чуп тăвать» — терĕ пулмалла хĕр, куçне хупрĕ. Макçăм вара чăтаймарĕ — тутинчен çеç мар, ăна пит-куçĕнчен те умлă-хыçлă чуп туса илчĕ.

— Лина, сана...

— Сăмах вырăнне тепре чуп ту, Макçăм, ак çапла...

Шăпăр-р, шăпăр-р саланать улăх тăрăх çумăр, йăлт-ялт! çиçет çиçĕмĕ, хăлтăр-халтăр-р! кĕрлет аслатиййĕ. Хĕр каччă кĕлетки çумне хыттăнрах та хыттăнрах çыпçă-нать те ачашшăн пăшăлтатать:

— Ы-ыш! Илтрĕн-и, Макçăм, ку сасă мана Туçи рацци енчен урапапа улăп халтăртаттарса аннăнах туйăнчĕ. Эх, чăн пулсанччĕ, Макçăм, ларăттăмăр та халĕ иксĕмĕр çав урапа çине, ярăнăттăмăр чун килеиччен. Эх! Мĕнле канлĕ кун пек. Эх!

Хĕр питне çумăр çăвать, йĕпеннĕ тутине каччă чуп тăвать...

Хулĕ ывăнса çитнипе Макçăм Линăна ирĕксĕрех çĕре антарса тăратрĕ, велосипедне шырлан урлă каçса илчĕ, вара вĕсем малалла утрĕç. Çумăр иртсе кайрĕ, Кайривар хыçĕнче асамат кĕперĕ карăнчĕ. Хура пĕлĕтсем хыçĕнчен сиксе тухнă хĕвел шевлипе Лина кĕпи çинчи утмăл ту-рат чечекĕсем те пуçĕсене кăшăлах çĕкленĕн туйăнчĕ.

Ытла та чарусăр-çке вăл юрату урхамахĕ! Нимле çăварлăха та парăнмасть, качча йĕнер çинче тăнран ту-хиччен сиктерсе курăнман çулсем витĕр асаплăх тĕнчине илсе тухать. Макçăм та çапла ниçта кайса кĕрейми пулчĕ. Кăнтăрла та, каç та Линăна курас килет унăн. Аслатиллĕ çумăр хыççăн пушшех вăйланчĕ çак туйăм. «Чăнахах та юратăвах-ши çакă?» — шухăшла-шухăшла тĕлĕнет вăл хăйĕнчен.

Акă Макçăм каçалапа, капăр тумланса, Тарăнвара васкарĕ. Çула май вăл икĕ ял хушшинчи йĕтем çине кĕрсе пăхма шутларĕ. Çитрĕ те ĕç вĕрекен çĕре, тырă

тасатакан каччăсемпе хĕрсенчен ниепле те уйрăлаймарĕ. Çурçĕр çитичченех михĕ йăтрĕ, унтан тин юрату урхамахĕн çулĕпе утрĕ.

Йăмраллă ял тутлă ыйхăра. Йĕтем çинчен çеç сăвăракан-тасатакан машинăсем пĕр саслăн сĕрлесе тăни тата анкарти хыçĕнчи пĕверен шапасен юрри илтĕнет.

Акă вăл, вырăсла хапха, ултă кĕтеслĕ пӳрт, виçĕ хурăн, урамалла тухакан виçĕ чӳрече... Варринчи чӳречи яр уçă. Чӳрече янаххи çине такам пусĕ усăннă...

— Лина, Лина! — чĕнчĕ Макçăм, унтан шăппăн, никам сисмелле маррăн карта урлă каçрĕ те чӳрече айнех пырса тăчĕ.

— Ах, Макçăм, эсĕ-çке ку, — вăранса пуçне çĕклерĕ Лина.

— Эпĕ, Лина. Чăтаймарăм, йĕтем çинче ĕçлерĕм-ĕçлерĕм те, урасем мана хăйсемех кунта, сан патна, илсе килчĕç.

— Эпĕ те сана кĕтнĕччĕ, Макçăм... — пăшăлтатрĕ хĕр. — Калаçса татăлманччĕ хамăр, пурпĕрех эсĕ килессе кĕтрĕм.

— Тух кунта, Лина. Ан хăра, чӳречеренех тух!

Лина вăшт-вашт çĕкленчĕ те самантрах Макçăм ытамне кĕрсе ӳкрĕ. Çывăхрах такамăн ура сасси илтĕнчĕ. Иккĕшĕ те чие хушшине лăп кукленсе ларчĕç. Çатăрр пĕçертрĕ Макçăмăн питне вĕлтрен. Лина çĕкленнĕ май тата çав вырăнтанах çивĕт вĕçĕпе кăтăклантарса илчĕ.

— Каçĕ мĕн тери лăпкă, каçĕ мĕн тери ырă, — терĕ йĕкĕт таплаттарса иртсе кайнă çын хыççăн пăхса, унтан хĕре пĕчĕк пахча алăкĕнчен урама илсе тухрĕ.

— Хамăр кӳлĕ патне-и? — ыйтрĕ Лина.

— Хамăр пĕве хĕррине, — терĕ Макçăм.

Хваттерне каччă шурăм пуç çутипе таврăнчĕ. Лина хăйне юратни çинчен каланине тĕрĕслес тенĕ пек, ку таранччен хăйсем мĕн-мĕн пупленине, иккĕшĕн

хушшинче мĕн-мĕн пулса иртнине  кил хушшинчи каска çинче тул çутăличченех аса илсе ларчĕ. Ульки акка ĕне сума тухсан тин вăл пӳрте кĕчĕ. Ватă çын, ăна хĕрхенсе, ассăн сывларĕ.

## 11

Кĕркунне çитрĕ. «Шурăмпуç» колхозра тыр-пула та, çĕр улмипе пахча çимĕçе те чиперех пуçтарса кĕртрĕç.

Пĕррехинче Крутов райкомран таврăнчĕ те тӳрех председатель пӳлĕмне пырса кĕчĕ.

— Çĕнĕ хыпарсем илсе килтĕм, Александр Семенович, — терĕ вăл сĕтел хушшинче тем çырса ларакан председателе. — Пирĕн колхозра пĕлтĕрех ял хуçалăх пĕлĕвĕсен университетне уçмалла пулнă иккен, анчах, тем сăлтава пула, эсир те, Числов та ун пирки манса кайнă...

— Пĕлетĕп, — çырма пăрахса хутне айккинерех шутарчĕ Кириллов, — калаçма калаçнăччĕ те ун çинчен, ĕçне вара туса пĕтерейменмĕр. Кăçал, ман шутпа, уçмаллах. Хам ертсе пыраяс çук университетне, чĕре хытă чикекен пулчĕ. Ку ĕçе заместителе, Волкова, хушас.

— Тĕрĕс, Александр Семенович, уçмаллах университет, райкомра та хытă асăрхаттарчĕç ун пирки. Тельман Федотович пирки те килĕшетĕп. Сăмах май, ăна манăн комсомол организацине ертсе пыма сĕнес килет.

— Ну, ку ĕнтĕ, санăн ĕç...

— Мĕншĕн манăн ĕç? — тĕлĕнчĕ Крутов. — Пирĕн ĕç. Унсăр пуçне тата тепĕр сăмах пур-ха, Александр Семенович. Куратăр ĕнтĕ, техника çулсерен нумайланса пырать. Атьăр механизаторсем вĕрентессине те хамăр алла илер. Çамрăксене вара училищĕне суйласа ярăпăр. Каçхи вăтам шкул çумĕнче шоферсен курсне уçсан та пăсмасть. Числов та кĕрес пек калаçатчĕ сирĕн пата ку ыйтупа.

— Хăйне директора лартсанах пулнăччĕ-ха унпа калаçу.

— Председатель шухăшĕ, килĕшĕвĕ кирлех-çке. Каччăсемпе хĕрсене аслă шкулсенче вĕрентме укçа тупасси çинчен те шухăшлама вăхăт пуль. Колхоз стипендиачĕсем кайран хамăрах темиçе хут ытларах пулăшу парĕç. Эпĕ шанатăп çакна.

— Ытла мăнна хапсăнатăн эс, ачам. Итле, пурне те вĕрентсен ĕçлекенĕ кам пулĕ-ши? Алла кĕсьене чиксе çӳрекенсем ахаль те нумай.

Крутов лăпланмарĕ, малашлăха курма пултарайман, паянхипе çеç пурăнакан хуçа умĕнче хăйĕн шухăшнех çирĕплетрĕ:

— Инженерсем, агрономсем, зоотехниксем, экономистсем, электриксем акă мĕн чухлĕ кирлĕ пулаççĕ пире, Александр Семенович. Вĕсемсĕр аталану пирки калаçмалли те çук. Вĕрентмеллех çамрăксене, паянах вĕрентмелле. Ырана хăварсан ку ĕçе — кая юлатпăр. Эсир хăть мĕн тăвăр, эпĕ вара çак ыйтупа е партком ларăвĕ, е партпуху ирттеретĕп. Мĕнпур малашлăх та вĕреннĕ çынсем çинче çеç...

Пĕр-пĕринчен вĕсем кăмăлсăр уйрăлчĕç. Тепĕр кунне Крутов парти комитетне пухрĕ. Ун шухăшĕпе пурте килĕшеççĕ, председатель çеç: «Укçа çук, çамрăксем вĕренсе тухсассăн та ялтан тараççĕ», — текелесе кутăнлашрĕ. Колхоз бухгалтерĕ Василий Марков, чипер хĕр пек вăр çавракa питлĕ, çăра çырă çӳçлĕ, хăмăр куçлă, çемçен калаçакан вăтам пӳллĕ Хурăнвар йĕкĕчĕ, хуçаран хăрамасăрах евитлерĕ: «Вĕсене валли вилсен те, çурăлсан та укçа тупатпăрах. Çамрăксене пирĕн хамăртан уйăрмалла мар». Вара кăçалах ял хуçалăх институтне икĕ стипендиат, медицинăпа культура институчĕсене пĕрер стипендиат яма килĕшсе татăлчĕç. Кириллов тутине тăсрĕ те, анчах мĕн тăвăн, парткома хирĕç тăма пĕччен вăй çитерeймерĕ. Унччен «Пушали павра, ĕçне татса параканĕ пурпĕрех эпĕ — председа-

тель» теме юратаканскер, эртел вăйне çĕнтереймен-нипе, хăй тĕллĕн урса çӳрерĕ.

Вăтам шкулта шоферсен курсне уçрĕç. Машинăпа çӳреме вĕренес текенсем хушшинче Крутов Хумма Петĕрĕпе Мулла Микушне, Венера Воробьевана курчĕ.

Венера чăх-чĕп ферминче ĕçлет, каçхи шкулăн вун пĕрмĕш класĕнче вĕренет. Чипер хĕр. Тельман хăй каламасть те ун çинчен, анчах Макçăм пурпĕрех сисет: питĕ лăпкă мар чунпа пăхать Венера çине агроном. Шутласассăн, агрономăн унта ним тумаллиех те çук ĕнтĕ. Çапах мотоциклне унталла пăрать. «Эпĕ те агитатор-çке, мансах кайман пуль, Макçăм Максимович?» — тет вăл çавăн чух хĕрелсе.

Тарăнварти чиркӳрен юсаса çĕнетнĕ вăтам шкул çуртĕнче çапла çĕрле те çутă час сӳнмерĕ. Унта сӳннĕ хыççăн вăл колхозниксен килĕсенче çуталчĕ. Акă вĕренӳрен таврăннă Хумма Петĕрĕ алла каллех кĕнеке илчĕ. Нумайăшне манса кайнă-çке. Ахальтен мар кăнтăрла ĕçленинчен ытларах ывăнать механизатор парта хушшинче. Тăвата ывăлĕнчен пĕри вăранчĕ те ашшĕ патне пычĕ.

— Атте, паян эп «пиллĕк» илтĕм. Эсĕ мĕн? — тесе ыйтрĕ куçне сăтăркаласа.

— Эпĕ те «пиллĕк» илтĕм, ывăлăм, çывăр, çывăр, — ачашласа выртарчĕ ăна ашшĕ.

Çав вăхăтрах ял хуçалăх пĕлĕвĕсен университечĕ те ĕçлеме пуçларĕ. Унта Карачăм мучи те çырăнчĕ. Клубран вăл занятисем хыççăн питĕ савăк кăмăлпа таврăнакан пулчĕ, библиотекăран илнĕ кĕнекесемпе кашнинчех вăрахчен аппаланкаласа ларчĕ. Карчăкĕ «пустуй краççын нумай пĕтерен» тесе мăкăртаткаласа та пăхрĕ, старик пурпĕрех итлемерĕ ăна, «кĕçех Ильич лампипе» вĕренме тытăнатпăр» тесе лăплантарчĕ. Çав çулхи-

не чӑнах та «Шурӑмпуçне» электричество кĕртме хатĕрленетчĕç. Урамсем тӑрӑх çӳллĕ юпасем лартса тухсан та, вĕсем çине пралук карсан та чылай кĕтмелле пулчĕ-ха хӑватлӑ çутӑ çутӑласса. Анук тӑнран ячĕ Карачӑма.

— Вара çав пралук тӑрӑх чупса килет-и вӑл, лектрицӑ текенни? Леш, юпа çинчи шур чӑмӑрккинчен такӑнса ӳкĕ те пирĕн пата çитеймĕ те... Урам вĕçĕнче пурӑнатпӑр-çке эпир, Карачӑм? — шанчӑксӑррӑн пуçне пӑркалать вӑл.

— Эх, Анук, Анук, — аптӑранипе сухалне чĕпĕтет Карачӑм, — пета санпа, ӑнлантармах тивет. Лектричествӑ ĕнтĕ вӑл, карчӑк, куçа курӑнман, алла лекмен япала, ху ӑнкартнӑ пекех, чӑн та, пралук тӑрӑх чупать, тулĕк шутсӑр пысӑк хӑвӑртлӑхпа. Сиссе те юлаймастӑн эсĕ ӑна, вӑшт! çеç кĕрсе каять пӳрте...

— Ӑ-ӑ-ӑ, çапла пуль çав, çапла пуль. Эп ӑçтан пĕлеп ĕнтĕ лектрицӑ мĕнле чупнине, сан пек нумай вĕренменскер... Латнӑ эс темле нуверситетсене те çӳретĕн те, сан пĕлесех пать, старик. Итле-ха, вара мĕнле çуталса каять-ха хайхи «Ильич лампи» текенни?

— Ай пета, пета санпала, Анук, тĕпĕ-йĕрĕпех ӑнлантарса памалла пулать. Вӑт, сана малтанах каларӑм-çке питĕ хӑвӑрт чупать тесе... Çапла çав лектричествӑ ятлӑскерне станцӑран кӑларса яраççĕ те, вӑл, аçа-çиçĕм, туххăмрах пирĕн пата персе çитет. Ак çапла, куç хупса иличчен. Çитет те çак лампочка ӑшне кĕрсе каfive. Курӑтна-и, шалта икĕ вĕçлĕ пралук пур, иккĕшне те явса çыхӑнтарнӑ. Çавӑнта çитет те лектричествӑ, ниçта кайса кĕреймесĕр пĕр вырӑнта ташлама тытӑнать, тапӑртата-тапӑртата хĕртет пралук вĕçĕсене, вара çутӑ кӑларать. Ӑнлантӑн-и халь. Анук?

— Ӑнлантӑм, Карачӑм, эй, Турӑ çырлахтӑрах, тем те курӑпӑр ваçка ку ыр пурнӑçра. Лектрици ташланӑ чухне кĕленчи ванса каймасан пырĕччĕ хӑть, — хаш сывлать Анук.

Кĕçех ку праçник яла çитрĕ. «Шурăмпуç» колхозĕ патшалăх линийĕнчен районта чи малтан электроэнерги илсе тăма пуçларĕ. Тавралăха кĕрхи ĕнтрĕк çапма пуçланăччĕ ĕнтĕ. Сасартăк ял çап-çутă çăлтăрлă кавирпе витĕнчĕ. Урамсем, пӳртсем халиччен кунта ĕмĕрте пулман çутăпа ялкăшрĕç. Мачча варрине çакса янă чăмăр кĕленче çуталса кайнинчен тĕлĕннĕ Анук шартах сикрĕ, сулахай аллипе куçне хупласа ун çинелле хăраса пăхрĕ.

— Карачăм, кур-ха, кур, чăнах та ташлать лектрицă! — кăшкăрса ячĕ вăл савăннипе.

Карачăм карчăкне кĕпе çумалли машинăна хăй те хăра-хăрах ĕçлеттерсе кăтартрĕ, плиткăпа чей вĕретме лартрĕ, çуралнă кунĕнче парнеленĕ радиоприемникне кĕрлеттерчĕ.

— Халĕ, — терĕ вăл, — ку краççын лампине музее паратпăр. Тĕрĕссипе, килте музей уçатпăр.

Тепĕр кунне Карачăм мучи кӳршĕ ачине хăйсем патне чĕнсе килчĕ, хăй чикки чĕртрĕ, краççын лампи, электричество çутрĕ, карчăкĕпе юнашар ларса сăн ӳкерттерчĕ. Пурнăçра усă курма пăрахнă тĕрлĕрен ĕç хатĕрĕ, йăларан тухнă тумтир тавраш вĕсен килĕнче туллиех.

Шухăшĕ мучин тарăн-ха. Каланча çумĕнчен иртсе пынă чухне Крутов унпа калаçса кайрĕ. Ăна килти ăпăр-тапăра упрассисĕр пуçне урăххи те хумхантарать иккен. Акă колхозра çил арманĕсемех улттă тан пур. Халĕ, электричество вăйĕпе çăнăх авăртма тытăннă май, вĕсем çине алă сулнă та иккĕшне пăсма палăртнă.

— Нивушлĕ колхоз çав армансенчен пĕрне те пулин тытса тăраймĕ, э, ывăлăм? — пăк-пак тутарать старик чĕлĕмне. — Сыхласа хăвармаллах, пире валли мар, хăвăра валли, хăвăрăн ачусем валли, эппин. Пурнăç палăкĕ вĕт вăл, э? Ял илемĕ. Радиопа итлерĕм те тĕлĕнтĕм. Чулхулара, вăн, музей валли аран-аран лайăх арман шыраса тупнă вĕт, ăна хулана илсе пырса вырнаçтарнă.

Курăпăр ак, пирĕн те çавнашкалах пулса тухма пултарать, пĕр арман та шыраса тупаймастпăр кайран...

Çавăн чухне вăл Макçăма килте музей уçни çинчен «мухтанса» кăтартрĕ. Парторг та ватă çын сăмахне хăлхана чикрĕ. Каярахпа, ял музейне уçнă чухне, тӳрех Карачăм мучисем патне пычĕ. Мĕн пуррине йăлтах парса ячĕ Воробьев. Музейре халĕ та Карачăм мучипе карчăкĕ яла электричество панă вăхăтра ӳкерттернĕ историллĕ сăн ӳкерчĕк упранать.

Хаяр хĕл пулчĕ çав çулхине. Паллă ĕнтĕ, çанталăк мĕн чухлĕ сивĕ, апатне те выльăх çавăн чухлĕ нумайрах çиет. Хĕлĕн хырăмĕ аслă тесе ахальтен каламан пуль çав.

Карачăм мучин ĕнипе сурăхĕсем валли утă-улăм çитмесси кĕркуннех паллă пулчĕ. Туянасшăнччĕ вăл ăна таçтан та пулин, анчах сутаканĕсене тупаймарĕ. Хăшпĕр колхозниксем уйри улăма вăрттăн сĕтĕрме пуçларĕç.

Пĕррехинче Карачăма та карчăкĕ йĕтем çумĕнчи улмури патне çунашкапа кайса килме хушрĕ. Карачăм, кĕçĕр ял хуçалăх университетĕнче вĕренмелле тесе, итлемерĕ ăна. «Тĕнчене култарса пурăнан» тесе хытах çуйхашса юлчĕ Анук. Тепрехинче мучи пилĕк аптратни çине печĕ. Виççĕмĕшĕнче вара хирĕçлемелли сăлтав нимех те тупаймарĕ те кайса килмеллех пулчĕ унăн улмури патне.

Йăлтах хăшкăлчĕ мучи тарăн юр тăрăх тулли çунашка сĕтĕрсе. Униче патне çитсен пĕтĕмпех вăйран кайрĕ те улăм çумне хашлатса сĕвенчĕ.

Çав самантра Карачăм мучи çурăм хыçĕнче юр кăчăртатнине илтрĕ. «Кам мурĕ çӳрет-ши тата?» — хăраса пăхрĕ вăл хыçалалла. Пăхрĕ те сехри хăпнипе кăшт çеç йăванса каймарĕ. Ун умĕнче хăй хисеплекен çын — кăмиссар тăра парать.

Нимех те чĕнмерĕ Карачăм мучи, çунашка кантрине хул пуççи урлă ярса малалла туртăнчĕ. Çунашка вырăнтан та тапранмарĕ. «Эх, мучи, мучи, йывăр-çке ка-

пла сире, ватă çынна!» — терĕ те парторг, йĕлтĕр сырнăскер, çунашка кантрине хăй ярса тытрĕ, ăна вырăнтан хускатма пулăшрĕ.

Мучи çаплах-ха нимех те чĕнмерĕ, пуçне усса малаллах талпăнчĕ. Крутов вара хăй тĕллĕн кулса илсе çунашка кантрине вĕçертрĕ. «Лайăх çитĕр, Герасим Филиппович», — тесе йĕлтĕрпе анаталла ярăнса кайрĕ.

Килне урнă пек тулхăрса çитрĕ Карачăм. «Вăт маттур, тахçанах çапла тумалла, улăмлă пултăмăр халь», — тесе кĕтсе илекен карчăкне хăмсарчĕ, кĕске кĕрĕкне урайне хывса печĕ, шавлама-хирĕлме пуçларĕ:

— Сана итлесех пĕтеп эп, саншăнах намăс курап! — лап выртрĕ тӳшек çине Карачăм. — Пĕтертĕн эс мана. Пĕрре кайса вăрра лекрĕм. Кăмиссар хăй тытрĕ. Çырмаран çунашка туртса кăларса пачĕ тата, мăшкăлланă пек... Эх, сана...

Анук Карачăма тепĕр енчен ярса илчĕ:

— Эп пĕтерепп сана, йытă пуçĕ?! Пăх-ха, усă тунă вăл мана, пĕр çунашка улăм туртса килнĕ те урнă йытă пек туллашать. Ха, эп пĕтереп ăна! Ват çын эс, сана никам та ним те тумасть. Ха, эс пĕтертĕн тет. Эп пĕтереп пулсан сана тахçанах Тымарти ĕлĕкхи еркĕнӳ, ясар Ульян патне хуса кăларса ямалла. Пăх-ха, усă тунă пулать вăл çемьене...

— Чарăн! — сиксе тăрса кăрст! тапрĕ урайне Карачăм. Кăмака тăрринчи кушак та хăранипе çĕре чалтах сикрĕ.

Çакăнпа ирччен ĕçĕ-вĕçĕ пĕтрĕ, анчах Карачăм çывăраймарĕ. Мĕн тĕрлĕ кăна шухăш явăнмарĕ пуль ун пуçĕнче! Тул çутăлас умĕн тин кăштах кăтăш пулчĕ вăл. Вăранчĕ те çăвăнчĕ, кĕрĕкне тăхăнса кил картине тухрĕ. Анука каламасăрах улăм тиенĕ çунашкине урамалла сĕтĕрчĕ.

— Ăçта илсе каян улăма, ăçта?! — сиксе тухрĕ Анук. — Йытă пуçĕ, анранăскер! Киле ан кил, кĕртместĕп. Каланччу çинех кайса вырт!

Урампа иртекен кашни çын Карачăм çине тĕлĕнсе пăхать. Хăшĕсем кулса та илеççĕ, «Ачча пасарне улăм сутма каятăн-им, Герасим Филиппович?» теççĕ. Карачăм никама та итлемест, правлени еннеллеваскать.

Председатель пӳлĕмне кĕрсен вăл сывлăх сунмарĕ, тӳрех çапла каласа хучĕ:

— Лексантăр Çимунч, эпĕ ĕнер улăм вăрларăм, кăлхусăнне, хуть те мĕн тăвăр...

Кириллов ăнланманнипе кулса илчĕ, старик çине тĕлĕнсе пăхрĕ.

— Ун пек-кун пеккине илтменччĕ-ха сирĕн çинчен, Герасим Филиппович, — сĕтел хушшинчен тухса алă тытрĕ мучие председатель. — Ирех шӳтлесе çӳретĕр тем...

— Турăшăн та, хĕвелщĕн те, ак хĕрес, тĕп-тĕрĕс, — терĕ Карачăм мучи. — Хăвăрăн леш, Крутов текенни, хăй тытрĕ.

Председатель чӳрече патне пырса пĕр вăхăт тем шухăшласа тăчĕ, унтан каллех Карачăм мучи еннелле çаврăнчĕ.

— Вăрларăрах пулсан, фермăна леçсе парас пулать, — терĕ вăл кулмасăр. — Ахаль те хăш-пĕр улмурисене кăмпа пек çеç тăратса хăварчĕç ĕнтĕ...

— Ман вăл кунтах, çунашкапа туртса килтĕм.

— Апла пулсан, хăвăр ялти ферма заведующине парса ярăр, кунтахчĕ вăл, лашипехчĕ.

Çунашкана улăмран тасатнă хыççăн чунĕ уçăлсах кайрĕ Карачăмăн. Çыпçăнса юлнă пĕрчисене те лав çинех илсе пăрахрĕ вăл. Çула май шоферта ĕçлекен Ваççук мăнукĕ патне кĕчĕ. Кинĕ ăна апат çитерчĕ, хĕрлĕ эрех ĕçтерчĕ. Калаçса ларнă май старикĕн кăмăлĕ самаях уçăлчĕ. Киле таврăнма та хăюлăх тупăнчĕ.

Каçпала, колхоз радиопередачи пуçлансан, Карачăм мучи репродукторта хăйĕн ятне илтех кайрĕ. Парторг колхоз пурлăхне çаратакансене питлет иккен, çавна

май Герасим Филиппович Воробьева та асăнать. Анчах Карачăм мучине вăл улăм вăрласа килнĕшĕн ятламарĕ, çав улăма чĕре хушнипе правление каялла кайса панăшăн ырларĕ.

— Илтетĕн-и, карчăк, намăс çинĕ Герасим Воробьева, намăс çинĕ тет кăмиссар ман çинчен. Çавăнпа вăл йăнăш çулран тĕрĕс утăм тунă тет. Та-а, карчăк, хам ватăлсан та сувĕç ватăлмасть, таса чун йӳтемест.

— Намăсу-симĕсӳпе тăрантар-ха, эппин, ĕнӳне, сурăххусене, — сĕрсе илчĕ Анук. — Хĕлĕн хĕрĕх чĕлĕх, тет. Илтетĕн-и, епле макăраççĕ, картишне янратаççĕ. Сана мĕн, хырăму тутă, каллех тухан та каян хăвăн нуверситетна. Тем парать ĕнтĕ сана, ват супнăна, халь тин вĕренни...

— Ĕмĕр пурăн, ĕмĕр вĕрен, тенĕ ăслă çынсем, Çавна манмастăп эпĕ, Анук.

Ватти те, вĕтти те тенĕ пек, пурте колхозра вĕренĕве пикенчĕç. Ялсенче çĕрлехи çутăсем йышланчĕç. Çав çутăра çĕнелнĕ çынсен ăс-тăнĕ малалла ӳссе аталанать.

## 12

Тăр-р-р! — янраса кайрĕ будильник сасси пӳлĕмре. Венера чалтах сиксе тăчĕ. Амăшĕ те вăранчĕ.

— Шеллетĕп сана, хĕрĕм, — анаслаcа илчĕ Крахвине. — Ĕнер те çур çĕрте тин килсе выртрăн. Кăшт канлĕрех пурăнма вĕрен-ха. Пур ĕçе те ăçтан ĕçлесе пĕтерĕн! Чăх пăхатăн — çитет. Шофер ĕçĕ — арçын ĕçĕ вăл. Тем тăван унпа.

— Анне, эс йăнăшатăн. Малашне пире темиçе специальность та кирлĕ пулать, тен, хамăрăн та машина илмелле пулĕ. Каярахпа тракториста вĕренесшĕн-ха эпĕ. Тельманпа калаçрăм та юрать тет. Анчах вăтам шкул пĕтерсен мана вăл институтах кайма сĕнет, — хуллен тумланчĕ Венера.

— Ах, çав Тельманпа тем пулса тухĕ ĕнтĕ сирĕн, — ассăн сывларĕ Крахвине. — Амăшĕ, Нинук, çисе ярĕччĕ мана. Кашни тĕл пулмассерен йĕппе тирнĕ пек тирсе илет. Юратмасть вăл пире.

— Тельман маншăн япăх мар-çке, анне. Питĕ ырă каччă вăл. Юрататăп. Сисетĕп: хăй те юрататъ вăл мана... Ĕнер каçхине те киле пĕрлех килтĕмĕр. Сирĕн хушăришĕн эпир айăплă-и вара?

Амăшне çапла лăплантаркаларĕ те Венера пӳртрен тухрĕ. Çул çинче вăл тахçан килĕнче мĕн пулса иртнине аса илчĕ.

Салакайăк Йăванне атте тесех ӳснĕ Венера, ăна ашшĕ пекех юратнă, халĕ те ун пирки çаплах шухăшлать. Пĕррехинче, каçалапа, Венера чӳрече умĕнче питĕ канăçсăр шухăшпа Тельмансен хапхи çинелле пăхса тăратчĕ. Тельмансем Венерăсемпе хирĕçлех пурăнаççĕ. Халь-халь алăк уçăлассăн, халь-халь унтан Тельман, унăн юратнă Тельманĕ, кулкаласа тухассăн туйăнатчĕ ăна. Пӳртре никам та çуккипе йăлтах вăл телейлĕ ĕмĕт ытамĕнчеччĕ.

Сасартăк алăк уçăлса кайрĕ те пӳрте ашшĕ кĕчĕ. Ура çинче аран-аран тăрать хăй. Йăлтах тилĕрсе кайнă.

— Пурте мана кураймаççĕ, пурте манран мăшкăллаççĕ. Сан Тельману мана хаçат çине кăларнă. Савăнтăн пуль-ха эсĕ те, Шмыков чĕппи. Тухса кай кунтан! Тасал куç умĕнчен! Аннӳнтен аякка ӳкмен пуль эсĕ те...

Венера малтан ни макăрма пĕлмерĕ, ни кăшкăрса ярай марĕ. Каярахпа çеç, ăнланса илсен, пӳртрен сирпĕнсе тухрĕ те сарайне, çын çук çĕре, кĕрсе кайрĕ, улăм çине выртса куççульпе йĕчĕ.

«Мĕншĕн мана çапла хăртрĕ-ха атте, мана анне вăл çуккă чухне çуратнăшăн эпĕ айăплă-и? Тен, анне килте çуккипе çеç ман çине сиксе ӳкрĕ вăл? Чăнах та,

хăйне те йывăр ĕнтĕ, аттене. Анне йăнăш тунă, пысăк йăнăш тунă. Çавна эпĕ питĕ лайăх ăнланатăп, çавăнпа хама хам тупа тăватăп: нихçан та анне пек пурнăçра çăмăлттай пулмăп! Атте мана тем те каласа пĕтерчĕ пулин те, Тельман арăмĕ пулсан ăна нихăçан та никампа улăштармăп».

Çавнашкал шухăшсемпе, аса илӳсемпе утрĕ паян Венера хăй ĕçлекен чăх-чĕп фермине, çул çинче партком секретарьне тĕл пулчĕ.

— Эсир те ирех тухнă-çке, Максим Максимович, правление васкатăр-им? — сывлăх сунчĕ ăна хĕр.

— Правление мар-ха, сирĕн пата çитсе курасшăн, — терĕ Крутов. — Партком ларăвĕ умĕн фермăсен тупăшлăхĕ пирки тĕплĕнрех пĕлесшĕн ăшталанса çӳретĕпха. Тин çеç сысна ферминче пултăм.

Нухрат Кавăрлине, партирен кăларнă хыççăн, ферма пуçлăхĕнчен те хăтарчĕç. Партком çине тăнипе унта зооветтехникум пĕтернĕ Нухрат Çинахванĕн ачине, Павлике, комсомол путевкипе ячĕç. Çĕнĕ заведующи ĕçе питĕ хĕрӳллĕн тытăнчĕ. Апат кухнине майласа ячĕ. Шыв уçламалла турĕ. Çĕр улми çителĕксĕррине пĕлсен... апата йăлтах тутлăлантарса пама пуçларĕ. Хумма Петĕрри ДКУ машинăпа кăшман вĕтетет. Туранă кăшмана нимĕç пăрçи силосĕпе хутăштарса паста тăваççĕ. Заведующи выльăх тухтăрĕ пулни те аван иккен. Парторг общежитирен тухас умĕн кăна Муллина хашкаса чупса çитрĕ, икĕ ами те харăс çăвăрлама пуçларĕç, пĕри йывăртарах терĕ. Заведующи унта чупрĕ. Сысна пăхакансен кăмăлĕ уçăлнине Крутов фермăна кашни кĕмессерен туякан пулчĕ.

— Нухратсен йăхĕнчен те ырă çынсем сахал мар тухнă, — пĕчĕк калаçу турĕ Мулла Укахвийĕ. — Çинахван ашшĕ Хĕлип ялти ятлă çынччĕ. Çинахванĕ салтака кайиччен ман çинчен куç илместчĕ те çав... Салакайăк

Петĕрĕ ум пӳлчĕ ăна, телейне тыттармарĕ. Çинахван вун çиччĕре фронта кайса танкистра çапăçрĕ, салтакран килсен тракториста вĕренчĕ, халь авă ман упăшкапа, хĕршĕн çапăçнă пекех, вилсе каясла ăмăртать комбайнпа ĕçлесе. Ку Павликĕ аслашшĕпе асламăшнех хывнă пулсан эпир те перетпĕр-ха фермăра.

— Ĕçĕсем, вĕсем, пирĕн те аптрамаççĕ-ха, — терĕ Венера, — пăчкă кĕрпи çеç çитмест, ай сарăмĕ валли. Колхозăн улăм ахаль сахал теççĕ, ăна тата кун сиктерсех улăштармалла. Пăчкă кĕрпи виçĕ куна çитет...

Крутов председательпе канашласа вĕсене паянах пулăшма пулчĕ. Ферма картишĕнче вăл Тельман Волкова курсан нимĕн чухлĕ те тĕлĕнмерĕ. Кĕркуннеренпе, комсомол комитечĕн секретарьне суйланнăранпа, кунтан тухма та пĕлмест вăл. Халĕ ĕнтĕ унчченхилле «агитатор» ячĕпе витĕнсе çӳремест, комсомолкăсемпе ĕç пирки çеç калаçать пулас. Çапах ăна-кăна ăнланать-ха Крутов, çавăнпа юлташне вăрттăн пӳрнипе юнать. Фермăри лару-тăрупа тĕплĕн паллашнă хыççăн Крутов Тельмана ирĕксĕрлесех пĕрле илсе тухрĕ. Каччă темиçе хутчен каялла çаврăна-çаврăна пăхрĕ, вара чунне уçсах пачĕ:

— Авланатăп, çăва тухсанах авланатăп. Эс те авлан, Максăм. Санăн Лину кĕçех диплом илет вĕт. Иксĕмĕр те пĕрле туй тăвăпăр.

— Эпĕ халех килĕштермелле те клубра комсомолла туй кĕрлеттермешкĕн... — алă тытрĕ ăна Максăм. — Анчах... хĕрĕсем мĕн шутлă-ши?

— Мĕн шутлă тетĕн-и? Ман Венера паян тесен паян пĕрлешес пек туйăнать. Кӳтсех çитнĕ вăл. Тăван мар ашшĕ вилесле кӳрентернĕ те ăна... Юрать хам çавăртăм кăмăлне.

— Сан аван-ха, Тельман, çăлтăру çумрах. Кăмăлне, ăна, каçпа уçăн. Ман аяккарах-çке... Пĕлтерес пуль апла, паянах çыру ярас ун патне туй пирки...

Çапла калаçса пынипе вĕсем правлени çурчĕ патне çитнине те сисмен. Шалта, пӳлĕмре, Александр Семенович тарланă çамкине шăлса ларать. Юлашки вăхăтра вăл чирпе ытларах аптăрама пуçларĕ, çавăнпа унăн сывлăхĕ сисĕнмеллех хавшарĕ. Райком секретарĕ Мургаев хистенипе Шупашкар пульницинче те выртса пăхрĕ.

— Тельман, — терĕ Кириллов çинçе сасăпа, — пулмасть манран ларса, киле кайса выртатăп. Хăварас пуль хам вырăна, заместителĕм. Мĕн-мĕн тумаллине акă кунта йăлтах çырнă. Нуша çитсе çапсан киле пыр. Ĕçлĕр, ан кахалланăр, ачамсем.

Темиçе кунран Кириллова каллех Шупашкара ăсатрĕç. Çур аки те çывхарса килет ĕнтĕ, çаплах тухаймарĕ-ха Александр Семенович пульницаран. Тельман Волковăн, ĕнси çине икĕ ĕç тиеннĕ пирки, ку яхăнче чăх-чĕп ферминчи хĕрсем патне каймa та вăхăт сахалланчĕ. Макçăм Крутов та, юлташне пулăшас шутпа, чылай ĕçе хăй çине илчĕ. Çапах иккĕшĕ те çамрăксен пурнăçĕнчен юлмарĕç: хорта та юрларĕç, спектакльсенче те вылярĕç, университет занятийĕсене те вăхăтра ирттерчĕç, каçхи шкула та пулăшрĕç.

Венера партком секретарьне пăчкă кĕрпишĕн тав турĕ.

## 13

Практика вăхăчĕ иртсен Лина «Шурăмпуç» колхозран Шупашкара тухса кайнăччĕ. Малтанах Макçăм çырусем йĕркеллех илсе тăчĕ, каярахпа хĕр тем сăлтава пула йĕкĕте сайрарах та сайрарах сас-хура паркаларĕ.

Крутов, ял хуçалăх институтĕнче хăй тĕллĕн вĕренекенскер, сессие пынăччĕ, хăнăхнă йăлапа совпартшкул общежитине вырнаçрĕ. Вăл çăвăнса-тасалса тумтир улăштарчĕ те урăх пĕр тăхтамасăрах Лина патне, Карл Маркс урамĕнчи общежитие, тухса утрĕ.

Питĕ пăлханса пырса кĕчĕ Макçăм Линăсен пӳлĕмне. Алăка каçăр сăмсаллă лутра хĕр уçрĕ.

Тăваттăн пурăнаççĕ иккен кунта. Икĕ стена çумĕнче икшер койка ларать. Хĕрсем пурте институтран таврăннă. Лина та пур. Халат тӳмисене тӳмелекелерĕç хăшĕпĕрисем, теприсем çӳç-пуçне вăр-вар юсакаласа илчĕç.

Лина савăннипе сиксех тăрать пуль тенĕччĕ Макçăм, анчах вăл ун пек тумарĕ, хĕрелсе кайса хăюсăррăн алă пачĕ те, ыттисем пек халат мар, уява кайма хатĕрленнĕн капăр тумланнăскер, каялла чакса тăчĕ, Макçăма вырăн сĕнме те манчĕ. Тенкелне вара качча каçăр сăмсаллă лутра хĕр лартса пачĕ.

Аптраса ӳкнипе Макçăм ним тума пĕлмерĕ.

— Лина, — куç-пуçне чалкăштарчĕ каçăр сăмсаллă хĕр, — пĕлтĕм, пĕлтĕм! Хайхи, эс практикăра пулнă колхозри парторг ку! Ну, мĕнле, тĕрĕс каларăм-и?

— Çавă, — кулса илчĕ Лина. — Макçăм, Максим Максимович.

Макçăм Линăна куçран сăнаса пăхрĕ. Лина каллех кулса илчĕ, анчах ун кулли яланхи пек тухмарĕ, сулахай пит çăмарти те пăрçа хумалăх путса кĕмерĕ.

— Лина, — терĕ вара Макçăм, — кинона чĕнме килтĕм сана. Каяр-и?

— Çук çав, каяймастăп, — ассăн сывларĕ Лина.

— Мĕн пулчĕ тата?

— Кăмăл çук. Ниçта та тухас килмест. Тен, ыран кайăпăр, вăхăт тупăнсан...

Çав вăхăтра такам алăка шаккамасăрах уçрĕ те хушăкран темле йĕкĕт курăнчĕ. «Кай-ха, кай, ан кĕр-ха хальлĕхе!» — аллипе хыпаланчăклăн сулса чарчĕ ăна пурне те чи малтан курса ĕлкĕрекен лутра хĕр, алăк вара ерипен-ерипен, питĕ хупăнас килмесĕррĕн пек хупăнчĕ.

— Лина, мĕн пулнă тата сана паян? — ӳкĕтлерĕç Линăна тантăшĕсем. — Ара Макçăм пирки калаçса

çывăрма памастăн ĕлĕкрех. Халĕ кинона та каясшăн мар. Кайса кил ĕнтĕ, ан хăтлан ун пек.

— Каймастăп! — пат татса хучĕ вĕсене Лина. — Ан чăнкăлтатăр чакак евĕр. Хамăнне хам пĕлетĕп.

— Апла эпир каятпăр. Виççĕмĕр те. Шоколадлă канфетне те хамăрах çисе яратпăр. Туртатпăр та илетпĕр каччуна! — шӳтленçи пулчĕç хĕрсем.

— Сире те памастăп, кинона та ямастăп, акă куртăр-и? — пĕчĕк чышкине чăмăртаса кăтартрĕ Лина. Унтан шăп пулчĕ.

Макçăм, çаплах тенкел çине ларманскер, чӳрече умне пырса тăчĕ. Урам урлă «Хуплу-кукăль» текен кафе курăнать. Вăрçă хыççăн тыткăнри нимĕçсем тунă хĕрлĕ кирпĕч çурт мăрйинчен тĕтĕм мăкăрланать... «Хуплу-кукăль» — темиçе хут та вуларĕ Макçăм капăр кафе çинчи пысăк сас паллисемпе çырнă сăмахсене, вара, каялла çаврăнса, Линăна тепĕр хут пĕрле пыма ыйтрĕ. Лешĕ пуçне çеç сулкаларĕ. Нимле мар пулнăшăн намăсланса вăл пӳлĕмрен кăрслаттарсах тухса кайрĕ.

Каçхине, вунă сехетсем çитес чух, Макçăм совпартшкултан, хăйĕн унчченхи юлташĕ патĕнчен тухрĕ те Ленинград урамĕпе тăвалла утрĕ. Чăваш академи театрĕ çумĕнче тепĕр кафе пур. Тротуар çӳллĕрен-ши, кафе залĕ аялта пулнăран-ши, çакăнтан иртнĕ чухне ху сисмесĕрех шалалла пăхса илетĕн. Макçăмăн та пуçĕ çавăнталла пăрăнчĕ, пăрăнчĕ те пĕр вырăнта хытса тăчĕ. Анлă чӳрече çумĕнчи сĕтел хушшинче, янкăр çутă залра, Лина ларать, çăварне вăрăм сигарет хыпнă, ăна хирĕç — шукăль тумланнă йăрăс каччă. Умĕнче — сĕтел тулли апат-çимĕç. Каччă. Чим-ха, ăçта курнăччĕ-ха çав каччa Макçăм? Ах, ара мĕн шухăшласа пуçне ватать-ха вăл? Паçăр кăна Линăсен алăкне уçса пăхнăччĕ-иç?

Хура çӳç пайăрки сулахай куçĕ çинерех усăнса аннă, хăрăмпа сăрланă пек măйăхĕ, курпунтарах сăмси...

Ха, куçĕпе епле сăнать Линăна! Лини те ирĕлсе кайнă. Сигаретне кĕл савăчĕ çине хурать те шоколад катса хыпать, куç айĕн каччи çине пăхса кулать, çавна май сулахай пит çăмарти пăрçа хумалăх путса кĕрет. Ăна, çав путăка, каччă пӳрнипе пусса илет. Пĕрре те тĕксе ямасть ун аллине Лина...

Урăх уçăлса çӳрес килмерĕ Макçăмăн, каялла çаврăнчĕ те общежитие васкарĕ. Каччă хăлхинче вĕçсĕрех Линăн ултавлă сăмахĕсем янраса тăчĕç.

Линăсен пӳлĕмне Макçăм тек пырса шаккамарĕ, вĕренӳ сессине ăнăçлах вĕçлерĕ, вара района тухса кайрĕ.

Тепĕр уйăхран вăл Линăран çыру илчĕ. Лина диплом хӳтĕленĕ иккен, ĕçлеме ăна хăйсен районнех янă. Çитес тунти кун Вăрманкаса килет, Макçăмпа тĕл пулма ĕмĕтленет. Суймасть Лина, çав кунхине Шупашкарта вăл пĕр çамрăкпа курнăçма калаçса татăлнă пулнă, анчах ун çинчен Макçăма тӳррĕнех калама хăюлăх çитереймен. Халь йăлтах-йăлтах, пĕр чĕптĕм суймасăр ăнлантарса пама хатĕр...

Лина хуларан кĕрлеттерсе çитес кун район центрĕнче шăпах парторганизаци секретарĕсен çур аки умĕнхи семинарĕ пуçланнăччĕ те, Крутова станцие тухма меллĕ пулчĕ. Малтан вăл Линăна чăтма çук хытă тарăхнăччĕ, ăна ĕмĕрлĕхех манма та шутланăччĕ. Çук, манаймарĕ. Акă вăл семинартан вокзала васкарĕ. Перрон çинче хăйĕнчен хăй хăраса тăчĕ, чĕри, вакун урапи кăртлатнă пек, кăртлатса тапрĕ. Уткаласа та, шăхăркаласа та пăхрĕ Макçăм, анчах чĕре таппи улшăнмарĕ унăн. Юлашкинчен пуйăс килсе çитрĕ. Вакун картлашкинчен сиксе аннă Линăна Макçăм катаранах курчĕ, ун патнелле чупрĕ. Лина ăна пысăках мар чăматан тыттарчĕ те:

— Çырăва илтĕн пуль, мана «Çăлтăра» яраççĕ, Макçăм, — терĕ. — Сана курма çеç килтĕм. Паянах каятăп. Çуранах. Вăхăт пулсан ăсатса яр кăштах.

Вěсем Тымар çулě çине тухрěç. Юр ирěлсе пěтеймен-ха, ура айěнче тěллěн-тěллěн сěлкěш шěмпěлтетет. Стадион патěнчен пăрăнса вăрман хěррине çитрěç. Пěрпěрин çине пăхмаççě, пысăк шыв кӳлленчěкěсем çумěпе иртнě чух çеç кутăн утакан каччăпа хěре кураççě.

— Çапах та, Макçăм, каçаратăн-и эс мана Шупашкартишěн? — тăп чарăнса тăчě Лина юлашкинчен. — Кала тěрěссине: каçаратăн-и?

Макçăм хул пуççине хăпартса илчě, хěр çине ăнланмастăп кун пек ыйтăва тенěн пăхрě.

— Хăвах ăнланма тивěç, Макçăм. Сана куричченхи каччă-çке вăл ман, пěрле çӳренěскер. Хамăр ялсем — Тит Милов. Практика хыççăн тăнран ячě. Авланасшăн. Мана качча илесшěн. Атте-анне те хирěç мар. Хěрхентěм эпě ăна.

— Тухас пулать апла...

— Эсě тата, Макçăм, эсě?

— Эпě... Эпě те авланас тенěччě, Лина. Ун чухне санпала шăпах çавăн çинчен калаçса татăлма пынăччě.

— Эх, мана, ухмаха, мěн туса хутăм! Сана та юратăп, ăна та манаймастăп, — тесе чăп тутарчě вăл каччăн çилпе кушăрханă тутинчен.

Макçăм кěлетки ток çапнă пек сăрăлтатса илчě. Юпа пек хытса тăчě вăл пěр вырăнта, хěр вăрман кěтессинче курăнми пуличченех тапранмарě. Çурхи Тымар çулě Линăна малалла, курăнман çěрелле, илсе кайрě.

14

Çур акине вăхăтра, лайăх irttерчěç шурăмпуççем. Колхоза уншăн районти Хисеп хăми çине кěртрěç. Ял çыннин кăшт сывлăш çавăрса ямалăх ирěклě вăхăт та тупăнчě. Çавăн чухне ěçпе юрă уявě irttерчěç.

Хурăнвар вăрманě капăр тумпа тумланнă. Тăпăлкка çăкасемпе патвар юмансем хěрлě хăмач çыхнă тейěн: пур çěрте те лозунгсемпе плакатсем, ялавсем... Вăйлă

репродуктор ака-суха юрри янратать. Капăр тумланнă халăх ĕшнене васкать. Йывăççем айне сцена тунă. Икĕ еннелле тăсăлакан анлă стендсем хуçалăх çитĕнĕвĕсемпе паллаштараççĕ. Унтах — хисеплĕ колхозник ятне панисен, чи лайăх çынсен, Хисеп хăми çине кĕртнисен, орден е медаль илнисен сăнĕсене вырнаçтарнă. Кӳршĕри «Çăлтăр» колхоз çыннисем те йышлă пухăннă.

— Пирĕн хăта пуль вăл çав? — куçлăхне хывса пăхрĕ Тымарти лутака арçын, Тан Ваçли текенскер. — Çавă. Карчăк, пăх-ха, пăх. Арăмĕ тата, Укахви, епле çиççе ларать, палласшăн та мар пире, маймар, упăшкипе юнашар Хисеп хăмине лекнĕ те... Курсанах хăлхинчен пăрап-ха. Шыраса тупар хăйсене. Вă-ăн унта, саркаланса тăраççĕ. Тан вĕт эпĕр, пĕр вартан.

Тымарти тăванĕсемпе тĕл пулнăшăн Мулла Микушĕпе Укахвийĕ питĕ хĕпĕртерĕç, хăнасене хăмаран çапса тунă вăрăм сĕтел хушшине кĕртсе лартрĕç. Юнашарах авă икĕ сăра хуранĕпе шӳрпе пĕçереçĕ. Шӳрпе çинĕ хыççăн круççель ярăнса илчĕç. Микуш икĕ пăт пуканĕ çĕклесе пăхрĕ.

Çур аки паттăрĕсем, выльăх-чĕрлĕх пăхакан çĕнтерӳçĕсем преми-парне илме сцена çине хăпараççĕ. Хумма Петĕрĕ те унтан кулкаласа анчĕ, çут хут ăшне чикнĕ кĕпе кĕтессипе Микуша çара хулĕнчен сĕртĕнтерсе илчĕ.

— Ну, Фомич, ку кĕпепе эс манăн чуна кăштах шăйăрттартăн. Парни çеç мар, Мухтав хучĕ те пур-çке унта. Акара иртсе кайрăн, вырмара каллех ăмăртăпăрха: сан та, ман та комбайнсем çĕнĕ. Пар ална, — терĕ куç айĕн пăхса Микуш.

Петĕр концерт курасшăн. Муллинсем те унпала килĕшрĕç.

Трахвин Йăванч Шмыков ака туйне нихçанхинчен чаплă хатĕрленнĕ. Пултарать вăл клубра. Ăна пулах ял

«артисчĕсем» радио ҫине те ҫырăнчĕҫ, телевиденипе те ташласа-юрласа пачĕҫ. Паян та авă операторсем килнĕ, икĕ енчен те ăмăртмаллах ӳкереҫҫĕ. Ватă ҫынсен хорĕ «Тулли телей куратпăр» юрра шăрантарать:

Пурăнмашкăн пурнăҫ тулăх,
Юрлама та пит аван,
Чăвашсен ҫĕршывĕ тăрăх
Кайтăр юрă,
Юрă кайтăр ян та янн...

Хура, сарă, шурă сухалсем, хăпартланнă мăнкăмăллăхпа чиперленнĕ карчăксем — авалхи чăваш тумĕпе капăрланнă ял «артисчĕсем» халăх ыйтнипе тата тепĕр юрă шăрантарса пачĕҫ. Хор салансан сцена ҫине акă Салакайăк Карачăмĕ пĕр-пĕччен тăрса юлчĕ. Мучи акатуй халăхне шăпăр кĕввипе тыткăнларĕ. Ăн-на, ăнна, ăнна-на!.. мĕкĕрттерет вăкăр хăмпинчен тухакан тĕлĕнмелле сасă.

Сцена ҫинче — ҫĕнĕ номер. Аккордеонне Шмыков калать, юрлаканĕ — Венера Воробьева. Сарă ҫӳҫлĕ, ҫӳллĕ, тӳп-тӳрĕ кĕлеткеллĕ Шмыков аккордеонне ҫăмăллăн тăсать. Венера пĕрре ун ҫине, тепре халăх енне пăхса ҫинҫерех уҫă сассипе Анаткас каччи ҫинчен юрлать:

Ах, пĕлесчĕ, ма пăхать-ши
Вăрттăн пирĕн кантăкран?
Мĕншĕн купăс макăрать-ши,
Эп кĕрсессĕн вăйăран?

Уҫланкă варринче тăлăххăн ӳсекен ҫăка хӳттинче Крахвине тăрать. Мĕн ҫинчен шухăшлать-ши вăл ашшĕпе хĕрĕ юрă шăрантарнă вăхăтра?

Тельман амăшĕ Нинук та унран инҫех мар. Хушăран вăл тантăшĕ ҫине пăхкаласа илет. Крахвинен сылтăм питне хĕвел ҫутатать, сулахаййи — ҫăка сулхăнĕнче. Тĕлĕнмелле, ҫынна ҫурмаран пайланă пекех. Нинук ҫак курăнăва темшĕн Крахвинен пурнăҫĕпе танлаштарса

пăхрĕ. Сылтăмра — çутă. Вăл енчех сцена. Унта Шмыковпа Венера юрă юрлаççĕ. Унта — Крахвинен юратăвĕпе юратнă хĕрĕ. Унта — хĕвел. Сулахайра — пĕччен çăка мĕлки, йывăç сулхăнĕ. Ку енче — вăрман çулĕ. Унтан Салакайăк Йăванĕ тус-юлташĕсемпе ытакланса тухать, «бродяга Байкал переехал» тесе юрлать. Унта — Крахвинен салтака кайичченхи тĕтреллĕ юратăвĕ. Унта — тĕттĕм...

Нинук пуç тӳпенкине хĕрсем пек чăлт çыхса янă çӳхе тутăрне ерипен майласа илет. Унăн пичĕ-куçĕнче халĕ йывăрлăха тӳссе, чăтса ирттернĕ хыççăнхи çамрăклăх палли вылять, ăшри хăпартлану ăна пуçа çӳлерех те çӳлерех каçăрттарать. Нинук, хăйĕн юратнă Хветутне вăрçăран кĕтсе илеймен пулин те, ял çине япăх сăмах кăларман, пĕчченлĕхе çĕнтерсе, йывăр хуйха-суйха парăнмасăр тĕрĕслĕх çулĕпе утнă, пурпĕрех хăйне телейлĕ туйнă, упăшки пекех правур, кăмăллă Тельмана ӳстернĕ.

Юрă-ташă вĕçленсенех амăшĕ патне Тельман пырса тăчĕ. Крахвине çумне Венера та çыпçăнчĕ. Тантăшсемпе ачисем пĕр вăхăт пĕр-пĕрин çине тăрăшсах пăхса илчĕç, вара пурте тымарсен концертне курма пикенчĕç.

Тельман Волковпа Максăм Крутов çак ака туйĕнче пĕрле туй кĕрлеттеретпĕр тенĕччĕ те çав... Хĕрĕ те вун-вун ик утăмра çеç тăрать те... Венерăпа килĕшсе те татăлнăччĕ ĕнтĕ вăл пĕрлешес пирки. Каçхи вăтам шкултан вĕренсе тухнă тата машинăпа чупма ирĕк илнĕ хĕрпе ун чухне ирчченех туй ыйтăвĕпе çĕтнĕччĕ. Тельман çакăн хыççăн амăшĕпе каласса пăхма шутланăччĕ. Ывăлĕ авланасси çинчен пĕлсен Нинук ун умне пырса ларчĕ те куçне тутăр вĕçĕпе шăлса: «Эх, ывлăм, ывлăм, аçу çулне çитрĕн, авланма вăхăтлах, авлантармаллах пуль, анчах кин кĕртиччен, тен, малтан çĕн пӳрт туса кĕрер», — терĕ. «Анне, лартăпăр çĕнĕ пӳрт, лартăпăр. Тăрăшсах, анчах виççĕн, пĕрле, лартăпăр, Венерăпа пĕрле...» —

тенӗччӗ вӑтаннипе аяккалла пӑхса Тельман. «Венерӑпа тетӗн? Крахвине хӗрӗпе-и? — аллисене пӗҫ ҫумне шарт! ҫапнӑччӗ Нинук. — Венерӑпа апла?.. Маншӑн япӑх мар та вӑл, хӑв та юрататӑн пуль, ҫапах кӗрт хӗрне киле кӗртес килмест. Амӑшӗ те, ашшӗ те пӗрешкел. Намӑса ҫухатнӑскерсем. Улми йывӑҫҫинчен аякка ӳкмест теҫҫӗ те... Ҫавӑ хӑратать. Асту. Эй, Турӑ усала сиртӗр». Тельман ун чухне тем пек тарӑхрӗ пулин те амӑшне хирӗҫ усал сӑмах каламарӗ, кӳрентерес килмерӗ ӑна, ахаль те «аҫу ҫулне ҫитрӗн» тенипех кусҫулӗ шӑрҫаланчӗ те унӑн. Каччӑ ҫакна ҫеҫ ӑнланчӗ: кӑҫал вӗсен туй пулмасть.

Макҫӑм Крутовӑн та юрату пӑтӑрмахӗ сиксе тухрӗ. Вӑрманкаса кайсан вӑл Линӑна курчӗ. Лина ҫав Тит Миловпах ҫӳрет-мӗн. Пӗрлешме пӗрлешеймен-ха. Районти культура керменӗ умӗнчи паркра чылайччен ларчӗҫ вӗсем.

— Эх, Макҫӑм, Макҫӑм, ма тата маларах тӗл пулман-ши эпӗ сана? Ӑшӑм ҫунать. Пуҫӑм ҫаврӑнать. Куҫӑм тӗтреленет. Тем тумалла? — терӗ Лина.

— Вӗлтрен пӗҫертрӗ ҫав ман юратӑва, Кирилловсен пӳрчӗ умӗнчи пӗчӗк пахчара такамран пытанса ларнӑ чухнех. Ҫавӑнпа тӗл пулма пӑрахмалла пуль, — кӳренмерӗ Макҫӑм.

— Эпӗ сана пурпӗрех юрататӑп, Макҫӑм, качча тухма вара... — ҫак пылак та йӳҫӗ сӑмахсене парнелесе хӑварчӗ юлашкинчен хӗр ӑна.

## 15

Ака туй хыҫҫӑн халӑх каллех хӗрӳ ӗҫе пикенчӗ. Утӑ ҫулса пӗтерне-пӗтермен тырӑ пулса ҫитрӗ. Комбайнсене кӑҫал та ушкӑнпа ӗҫлеттерчӗҫ. Шоферсене те икӗ смена ҫине куҫарнӑччӗ. Венера Воробьева та ҫӗрле автомашинӑпа тырӑ турттарчӗ. Хумма Петӗрӗпе Мулла Микушӗ пуҫарнӑ хыҫҫӑн комбайнерсем пурте ӑмӑртса

ĕçleme хут çине çырсах килĕшӳ турĕç. Крутов звеносенче партгруппăсем йĕркелерĕ. Партком ларăвĕсене те вăл машинăпа трактор паркĕнче ирттерчĕ. Механизаторсен сĕнĕвĕсем малашнехи ĕçре нумай пулăшрĕç. Ĕçе лайăх йĕркелени, мала тухакансене хавхалантарса пыни çĕр ĕçченĕн çĕнтерĕвне çывхартрĕ.

Юлашки паккуссене çапса пĕтернĕ хир карапĕсем акă парка таврăнаççĕ: Хурăнвар енчен — Хумма Петĕррин звени, Тарăнвар уйĕнчен — Мулла Микушĕн. Тăхăршар пин центнер тырă вырса çапнă Воробьевпа Муллин. Хĕлип Çинахванĕн — сакăр пин çурă пулнă. Çавăнпа комбайн бункерĕсем çинче вĕсен тăхăршар çăлтăр. Çинахван «Çăлтăр» илейменшĕн кулянать. Кусса çӳрекен вымпел икĕ звено хушшинче çу каçипех вăйă вылянă пек вылярĕ. Халĕ вăл Хумма Петĕрĕн комбайнĕ çинче вĕлкĕшет.

Петĕр моторне сӳнтернĕ тĕле парка Кириллов машини çитсе кĕчĕ. Газикран Александр Семеновичпа партком секретарĕ Крутов анчĕç.

— Ĕçсем мĕнлерех-ха сан, Фомич? — сывлăх сунса аллине çӳлелле çĕклерĕ председатель.

— Аван, Александр Семенович, пирĕн хăçан япăх пулнă, — таса çĕтĕкпе аллисене шăлчĕ комбайнер. Хăй çав вăхăтрах унччен ĕçленĕ кивĕ «карапĕ» çине пăхса илчĕ. — Халĕ мăлатукпа хăмсармастăп ĕнтĕ. Ун чух чăтаймарăм. Ытла тăвăллăччĕ чун. Тракторпа туртса ĕçлекен «Сталинец-6» комбайнпа нушалантарнăшăн.

— Иртнине ан аса ил, Фомич. Пирĕн ĕçре тем те пулĕ. Акă хаçатра мĕн çырнине вула, — тесе Кириллов ăна «Коммунизм ялавĕ» тыттарчĕ.

«... Тыр-пул пухса кĕртнĕ вăхăтра паттăрлăх кăтартнăшăн... «Шурăмпуç» колхоз комбайнерне Воробьев Петр Фомича Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăлас...» — вуларĕ

хаҫатра пичетленнĕ указа Петĕр. Вуларĕ те председательпе парторг куҫĕнчен чăрр пăхса ыйтрĕ: — «Микуша тата мĕн пană? Ман звенори ытти комбайнерсене? Партгрупорга?.. Эпир ушкăнпа ĕҫленĕ, ушкăнпа ăмăртнă. Ма мана ҫеҫ?..

— Тăхта эс, Фомич, — чарчĕ ăна председатель. — Ялан ҫапла хĕрсе каян. Мала тухнисене никама та ахаль хăвармастпăр. Ăмăрту условийĕсене хăвах лайăх пĕлетĕн вĕт?

Ку таранччен сăмах чĕнмесĕр тăнă парторг хаҫат ҫине тĕллесе кăтартрĕ:

— Авă Муллинпа Филиппов пирки те пур кунта. Вĕсене парти обкомĕпе республика Министрсен Совечĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Ҫакăн хыҫҫăн тин лăпланчĕ Хумма Петĕрĕ. Калаҫу вĕҫĕнче вăл хăйĕн тахҫанхи ĕмĕтне пĕлтерчĕ:

— Итлĕр-ха эсир мана иксĕр те. Ман Ҫĕрпĕве, ял хуҫалăх техникумне, вĕренме кĕресчĕ. Направлени кирлĕ пулать. Паратăр-и?

Председатель хирĕҫ мар, ун ыйтăвне правлени ларăвĕнче татса пама пулчĕ. Калаҫу ҫул ҫине тухсан та Хумма Петĕрĕ пиркиех тăсăлчĕ. Партком секретарĕ те унран лайăх механик тухасса шанать.

Крутов машинăран йĕтем ҫине анса юлчĕ, кахал апачĕ иртсен тин Хурăнвара таврăнчĕ. Лавкка умĕпе иртнĕ чухне вăл автомашина кузовĕнче чакак пек чакăлтатакан хĕрарăмсен ушкăнне курнипе тăпах чарăнчĕ. Сиссе те юлаймарĕ, ăна тахăшĕ пиншак ҫухавинчен яп! ярса илчĕ. «Юрататпăр сана, парторг, лайăх ҫын эс, халĕ хамăртан ниҫта та уйăрмастпăр», — тесе тăрăшсах туртма пуҫларĕҫ. Крутовăн ирĕксĕрех кузова хăпарма тиврĕ. Ҫав вăхăтра машина тапранчĕ те кайрĕ. Ҫатăрласа тытнă та ăна хĕрарăмсем, ĕмĕрте те вĕҫертес ҫук. Тĕлĕнсе пырать вăл ытамра. Автомашина вăрманти

ёшнене çитсе чарăнсан тин хăй мĕнле мыскарана лекнине тавçăрса илчĕ Крутов. Çерем çинче тепĕр ушкăн хĕрарăм хур акăш пек каркаланать. Варринче Салакайăк Карачăмĕ шăпăр каласа ларать.

Кабинăран Салакайăк Ваççукĕ хура пуçне вăрттăн кăларса пăхрĕ. Каскăнланнăшăн ăна Крутов ятласшăн пулчĕ, анчах пĕр инке чарчĕ.

— Шофер айăплă мар кунта. Эпĕр хамăр айăплă. Пирĕнпе калаç эс, кăмиссар. Итле, — терĕ вăл саркаланса. — Эпир паян, кăшман кăларса пĕтернĕ ятпа, упăшкасенчен вăрттăн ĕçкĕ пекки туса савăнма шутларăмăр. Мĕншĕн вĕсем ялан кампани тăваççĕ? Эпĕр мĕнтен катăк вĕсенчен? Уншăн пире ан ятла эс. Ĕçлемелле чух ĕçлетпĕр эпĕр, савăнмалла чух — савăнатпăр. Ак çакна тытса пар та çавăрса хур. Вăт çапла. Ак халь сана купăс, кала, ташлаттар ĕç хĕрарăмĕсене. Ак, ме, тыт хăвăртрах. Эпĕр кунта канма килнĕ. Уншăн ним те пулмасть сана. Халăхпа пĕрле эс. Халăхран, унран, ан хăра, ан тар. Кала, кала. Ташлаттар. И-их!

Килĕшмеллех пулчĕ Максим Максимовичăн.

— Ыллăм, айта ăмăртмалла калар, — парторг çумне юнашар пырса ларчĕ Карачăм мучи.

Купăспа шăпăр кĕрлерĕç вара ёшнере. Хĕрарăмсем сӳрĕç ташша. Унтан пурте вĕсем тавра вырнаçса ларчĕç, юмаха ячĕç. Макçăма паçăр хулран тытнă хĕрарăм чунтанах юптарать:

— Пĕлетĕр-и, хĕрсем? Хайхи çав ула тикрă-тикăрсем вĕсем Мускавран Çĕпĕрелле каякан пуйăсран сиксе юлнă тет. Куçса çӳрекен çверинецран, читлĕхрен, вăньт! кăна тухса тарнă тет. Ĕненместĕр-и? Ара Вăрманкасри кумма хам куçпа хам куртăм тет. Пĕччен çӳреме те, ача-пăчана кăларма та хăрушă...

— Эй, Турă, тем курса ларăпăр, ваçка. Пустуй сăмах мар пуль çав...

Хăяккăн выртакан Карачăм мучи çапла павракан хĕрарăмсем çине куç айĕн пăхса лăх-лăх кулчĕ те:

— Эсир те çав, инке-минкесем, çын сăмаххипе пакăлтатакансем, тикрă çверне хăвăр курман... Эпĕ вăт чĕпчĕрĕ тикрăпа тĕл пулса калаçнă, — тесе тĕлĕнтерчĕ пăрахрĕ.

— Чăнах-и? Суян пуль кăна. Чĕр тикăр çисе ямаллах вăл сана, — куçне-пуçне чарса пăрахрĕç хĕрарăмсем.

— Сухаллă эп, инке-минкесем, сухаллă, çампа çимен мана тикрă. Ăнлантăр-и?

— Эпир те сухаллă та... — йăх-йăх турĕ хайхи паçăр Крутова хулран тытса пăчăртаканни. — Апла, хĕрсем, хăрамалли çук, тикăр пире те тĕкĕнместь...

Карачăм мучи инкене итлесе пĕтермесĕрех хăйĕн юмахне калама пуçларĕ:

— Выртатăп хайхи каланча айĕнче. Пăшала пĕç хушшине хупнă, çӳл тӳпене сăнатăп. Пы-ысăк пĕлĕт варрипе уйăх пăхать ман çине. Тĕрĕссипе, уйăхĕ хăй мар ĕнтĕ, кĕвентеллĕ хĕрĕ пăхать, паллах, çавна кирлĕ вĕт эп. Пăхать те кулать хĕр йăмшакрах кулăпа. Мутри сана, тетĕп, ытлашши ан ирĕл ман умра, çитетĕп сан пата, вĕçетĕп те çитетĕп ак. Кĕвентеллĕ хĕр вĕçĕмсĕр кулать... Çав хĕр куллиех мана асамланă пуль çав, хам та сисмен, тĕлĕрнĕ те кайнă. Тĕлĕкре те унпах аташса выртнă. «Карачăм, илтетĕн-и, Карачăмçăм, эс шыв ĕçес теттĕнччĕ-çке ман витреренен, акă ĕç тăраниччен. Сана валли юри ăсса килтĕм, сан валли çеç,ĕç, ĕç хăвăртрах, Карачăмçăм», — тет ачашшăн. Алла тăсрăм çеç витреннелле, сăмсаран тем шакканипе шартах вăранса кайрăм. Пăшал ӳкнĕ иккен, тӳперен çумăр шăпăртатать, уйăх çинчи кĕвентеллĕ хĕр вырăнне умра хайхи тикрă çверĕ мăшлатса тăрать, янах айĕ хăйĕн ак çапла усăнса аннă, чисти вăкăрăнни пек, сирĕн хырăмсем арçынна çунтарнă пек ман хырăма пĕçертет ваçка. Унччен те пулмарĕ, пуçне сулларĕ те ăрр! ăррп! турĕ.

Туйрăм, хушамата калать: «Вăрăпьĕв ĕнтĕ». Ара тискер кайăк-çке вăл, пирнешкел уççăн калаçаймасть. Эрр! Асс! — илтĕнчĕ унтан. Ку сначăт: «Керасим». Ята та пĕлет мур илесшĕ тесе шухăшлатăп. Хы-ыв! Хулл! — илтрĕм тепĕр сăмах. «Вăррăпьĕв Керасим, сывă юл», — тесе алă парса хăварчĕ çапла мана тикрă. Сăмса çине ӳкнĕ пăшала çĕклесе кăрслаттарас пĕрре теп, Анука тикрă тирĕнчен çĕлетсе ула ăш кĕрĕк те тăхăнтартас шухăш пур... анчах, патшалăх чĕр чунĕ пулни аса килет те алăсем лăштăрах кайрĕç. Юрĕ-çке, çӳретĕр-и ирĕкре кулять туса терĕм те, куçа мăч хупрăм... Кĕвентел...

— Кĕвентеллĕ хĕр мар, карчăккунтан кĕвенте лекет пуль-ха аяккалла пăхнăшăн, — кулса ячĕ пĕри.

— Суятăн кăна, — ĕненмерĕç хĕрарăмсем.

— Турăшăн, хĕвелшĕн те суймастăп, — хĕрес хуранçи турĕ вăл. — Çакăнтах аçа çаптăр мана суяп пулсан. Вăт çапла, инке-минкесем, паян вăрманта çывăрса юлсан эсир те тикрă çверне тĕл пулма пултаратăр, хы-ыв! тесен пĕрре...

Хĕрарăмсем Карачăм мучие хулран ярса илчĕç те ахăра-ахăрах хăйсем тавра çавăрма пуçларĕç.

Кĕр типĕ килчĕ, çумăр çумарĕ. Çул та пăсăлмарĕ. Çуллахи пекех тусан вĕçет. Çамрăксен ертӳçи Тельман Волков ирĕклĕ вăхăтпа усă курса юлма шутларĕ. Стадион тăвас пирки вĕсем, партком секретарĕпе, унчченех тапăçатчĕç-ха. Кириллов çĕр уйăрса памасăр хăшкăлтарнăччĕ. Волковпа Крутов та парăнмарĕç, Александр Семеновича ташлаттарчĕç.

— Сире тем тума та ирĕк паратăп, чупма-сикме вара тырă анине кастармастăп. Çамрăк пуçăрпа шухăшлăрха: тырă ӳсет унта, çăкăр пиçет. Ахаль те стройка валли мĕн чухлĕ çĕр кирлĕ. Куртăр пуль выльăх-чĕрлĕх комплексĕн планне? Кашни пусăм çĕр катăлни чуна ыраттарать.

Çук, ирĕк памастăп! — миçе хутчен каламан пуль Кириллов çак сăмахсене.

Украинăна, Черкас облаçĕнчи Золотоноша районне, хăйсемпе ăмăртакансем патне, кайса килсен тин кăмăлĕ çаврăнчĕ Кирилловăн. Унтан таврăннă хыççăн вăл самай хавасланса çӳрерĕ, мал ĕмĕтлĕ калаçрĕ. Шăпах çавăн чухне ăна Волков комсомолецсен пухăвне чĕннĕччĕ. Александр Семенович украинецсем, уйрăмах чăваш «шурăмпуçĕсемпе» ăмăртма килĕшӳ тунă «Коммунист» колхоз пуçлăхĕсем ял культуришĕн хытă тăрăшни çинчен каласа пачĕ, хăнасем кунта курма киличчен çамрăксене стадион туса пĕтерме хушрĕ.

— Çĕрĕ ăçта, Александр Семенович? — ыйтрĕ мăшкăлларах Тельман.

— Шкул хыçĕнче, ак çак лаптăк, — пысăк хут тĕркине сарса кăтартрĕ Кириллов. — Колхозăн тĕп планĕпе шăпах килĕшӳллĕ вырăн. Çитес пухура çирĕплетететпĕр те çакна... Футболистсен камантине лайăх тумлантаратпăр... Хахулсем умĕнче намăс куратпăр-и?

Ял хуçалăх институтне вĕренме кĕнĕ Воробьева та, канмалли куна яла таврăнсан, стадион тума тухрĕ. Каçпа хĕрне мотоциклпа станцие ăсатнă хыççăн Тельман тусĕ патне пычĕ. Макçăм тăпра çинчен вĕрентекен кĕнекерен хăйне кирлине çырса илме пуçланăччĕ. Ульки акка çăм çипрен чăлха çыхать. Тельман килнипе иккĕшĕ те харăсах ĕç пăрахрĕç. Кил хуçи ăна тĕпелелле иртсе ларма сĕнсе пукан пачĕ, унтан кăмака умнелле кĕрсе çухалчĕ.

— Тăрăшсах вĕренен? — ыйтрĕ Тельман Макçăмран.

— Вăхăт тупăннă чух ларкалатăп. Вуламалли нумай-ха, сесси çывхарса килет. Юрать малтан вĕренни кăштах пулăшать.

— Эпĕ те аспирантурăна кĕресшĕнччĕ те... Хĕр хыççăн чупсах вăхăт иртет. Авланса янă пулсанах...

— Ун чухне Венера вӗренме каяймастчӗ, — куҫран пӑхса каларӗ Макҫӑм. — Халь вӑл Шупашкарта чухне шӑпах вӗренме лайӑх. Унпа кашни каҫ тӗл пулаймастӑн, ирӗксӗрех хӗр вырӑнне кӗнеке ыталамалла пулать. Манашкал...

— Апла иксӗмӗр те пӗр урапа ҫинчех эпир, — терӗ тунсӑхлӑн Тельман. — Чӑтма тиветех.

Ульки акка, каччӑсен калаҫӑвне итленӗ май, иккӗшне те хӗрхенчӗ, хӑйӗн ҫамрӑклӑхне аса илчӗ. Хӗр чухне вӑл та вӗренесшӗнччӗ — ӗмӗт тулмарӗ. Макҫӑм аслашшӗне, Кӑра Матвине, саватчӗ — Салакайӑк Мӗтри арӑмӗ пулмалла пулчӗ. Унпа та, кунпа та ӑнмарӗ, пурнӑҫра пӗччен тӑрса юлчӗ. Юрать-ха ҫак ача хваттере кӗчӗ. Уншӑн та пулин чунтанах савӑнать вӑл.

16

Хӗле кӗрес умӗн Кирилловӑн сывлӑхӗ начарланнӑҫем начарланса пычӗ. Украина хӑнисене кӗтсе илме те тухаймарӗ. Вӗсемпе колхоз председателӗн заместителӗ Волков ҫӳрерӗ. Ҫӗнӗ стадионта спорт вӑййисем ирттерчӗҫ.

Йывӑр чире пула Александр Семенович тек ӗҫе тытӑнаймарӗ, вӑхӑтсӑр вилсе кайрӗ. Кириллова пытарсан эрнерен Мургаевсем Вӑрманкасран каллех ҫӗнӗ ҫын илсе килчӗҫ, райпотребсоюзра ӗҫлекен Тит Милова президиума кӗртсе лартрӗҫ. Акӑ вӑл, хӑнчӑр куҫлӑ йӑрӑ яштак, ял халӑхне ыйтуллӑн сӑнать. Унӑн хура ҫӳҫ пайӑрки сулахай куҫӗ ҫинерех усӑнса аннӑ, хӑрӑмпа сӑрланӑ пек мӑйӑхӗ, курпунтарах сӑмси... Шупашкарти кафе чӳречинчен курнӑ чухнехи пекех туйӑнса кайрӗ Крутова ҫак путсӗр ҫын. «Нивушлӗ йышӑнӗҫ ӑна ҫакӑнта? Нивушлӗ Лина председатель арӑмӗ пулӗ? Нивушлӗ пӗрле ӗҫлесе чун-чӗрене вутра ҫунтармалла пулса тухӗ?..» — ҫак шухӑшсемпе айланса вӑхӑт иртни те сисӗнмерӗ, акӑ суйлав ыйтӑвӗ те кун йӗркине куҫрӗ.

— Эпир райкомра урлă-пирлĕ шухăшласа пăхрăмăр та, — терĕ пĕрремĕш секретарь, — çапла йышăнтăмăр: «Шурăмпуç» колхоз председателĕ пулма Милов юлташа сĕнес. Ют çын мар вăл сирĕншĕн, кӳршĕсемех, Тымартан, аслă пĕлӳ илнĕ, халăхпа ĕçлеме пĕлет, район калăпăшĕпе çавăрттарма пултараканскершĕн пĕр хуçалăха ертсе пырасси мĕнех-ши? Эпир тата эсир пулăшса пырсан Милов юлташ колхоза малтисен шайне çитерессе шансах тăратпăр. Хăй мĕн калать тата, итлесе пăхар.

«Ах, çав аслă хуçасен хăнăхнă йăли-çке, колхозниксен пухăвне те райком бюровĕпе пленумне ертсе пынă пек ертсе пыма тытăнчĕ вĕт», — тарăхуллă шухăш вĕлтлетсе илчĕ Крутов пуçĕнче.

Вăрманкассене итленĕ хыççăн халăх шавласа кайрĕ:

— Çитет пире хĕсĕрлесе! Ялан «Эпир çапла йышăннă та эпир çапла шутлатпăр» сирĕн. Хăçан пире итлеме тытăнатăр?!

— Кам вăл? — хăлхине зал еннелле туса çиллессĕн ыйтрĕ Мургаев.

— Воробьев, Салакайăк Хуммин ывăлĕ Павăл, трактор бригадин бригадирĕ, — ăнлантарчĕç ăна.

— А-а, Салакайăк, салакайăк — ял кайăкĕ, чĕвĕлтеттĕри çак, — лăх-лăх кулса илчĕ Мургаев.

— Эсир урлă-пирлĕ кăна шухăшласа пăхнă пуль, пĕлместпĕр, анчах та эпир хамăр эртелпе тĕплĕн пуç тавра шухăшласа хутăмăр та... Кашкăр Хĕветучĕн ачи уй-хир пуянлăхне ӳстерес тесе тăрăшнă пек, ейпух, ку таранччен пирĕн колхозра никамах та çине тăман. Çын ăшне кĕрсе тухма, ăна хавхалантарма, пулăшма пултаракан çĕр хуçи вăл Тельман Волков. Шăпах хальхи пурнăç ыйтăвĕсене тивĕçтерекен хуçа пулма кирлĕ вăл. Нихçан пĕлмен, курман-илтмен интеллигентпа сутуилӳ тăвиччен, секретарь юлташ, итлесе пăхăр пĕрре пире, килĕшĕр пирĕн хакпа. Эпир сирĕн тавара мар,

хамăр çĕр çинче шăтса ӳснĕ, пиçсе çитнĕ хастарах илесшĕн пуçлăха. Шанатпăр эпир ăна! — терĕ Хумма Петĕрĕ.

Утар хуралçи Кавăрле Нухратов çеç иккĕленсе каласрĕ:

— Ытла çамрăк, амăшĕн чĕрçи çинчен тин çеç ансăскерне мăн хуçалăх ăçтан шанса паран?

Уполномоченнăйсен пухăвĕ вара çамрăк агронома колхоз тилхепине хăюллăнах тыттарчĕ.

— Салакайăкĕ çеç мар, кашкăрĕ те пур иккен сирĕн кунта... — шӳтлекелесе илчĕ райком секретарĕ хулăн ĕнсине хыççа.

— Тилли те пур, — хушса хучĕ тахăшĕ, — час-часрах тухса çӳресен пирĕн хушша пурне те куратăр.

Пăрахăçланă йӳн таварпа ялтан тухса кайма ай мĕн тери намăс пулчĕ Мургаева, ăшра тулхăрнине шӳтпе те витереймерĕ, юлашкинчен те пулин партком секретарьне хăтăрса хăварчĕ:

— Райком йĕрне тытса пыраймастăн, мĕн хушнине пурнăçлаймастăн! Эсĕ — пирĕн салтак. Салтакăн командир хушнине тумалла. «Шурăмпуç» коммунисчĕсен те бюро йышăнăвне итлесе ял халăхне хамăр майлă çавăрмаллаччĕ. Паян кун пек пулĕ, ыран... Асту!

Крутова ку ытлах шиклентермерĕ. Волков вара хăраса ӳкнĕ иккен, райком секретарĕнчен мар, хăйне колхозниксем пит шанчăклăн председателе суйланăшăн.

— Йывăр тиесен лаша мар, машина-трактор та чăхăмлать те... — терĕ пĕррехинче Тельман Макçăма. — Пысăк хуçалăх ĕнсе çине тиенни те çавнашкалах пек, ытла йывăр ĕçлеме.

— Пуçна устарам сана акă, — пӳрнипе юнарĕ ăна Крутов. — Лаша та, машина-трактор та мар эсĕ. Этем эсĕ — коммунист тата. Чăтмаллах, тем пек йывăр килсе тухсассăн та чăхăмлама ирĕк çук сан. Çак лава, ăна, пĕр пăркаланмасăр малалла — тăвалла — илсе хăпартмалла.

Чарăнса тăма, тепĕр хут калатăп, тапăртатса тăма тивĕç çук пирĕн, тусăмçăм.

— Ăнланатăп-ха сана, Макçăм, тӳрех ан ятла. Итле, темшĕн-çке сехре хăпать. Ниепле те хама хам алла илейместĕп.

— Ман та пулнă унашкалли, — çурăмĕнчен лăпкарĕ ăна парторг. — Секретаре суйласан, мĕн, мана çăмăлччĕ-им? Санран та ытларах йывăрччĕ. Ют ялта, ют çĕрте ют кăмăл ăшне кĕрсе çывăхлан-ха эс. Хăнăхатăн. Иртсе каять вăл хавшак самант. Хăрасан та ĕçне алă тăвать. Хăюлăхпа çĕнтерĕпĕр пурне те. Ялшăн, халăхшăн мĕн тума пултарнине ĕçре кăтартса парса. Ăçтаччĕ-ха пирĕн пурнăç урхамахĕ?

Çапла, çăмăлах пулмарĕ Тельман Волкова та коллективлă хуçалăх пуçĕнче тăма. Халăхпа ĕçлесси кăткăс та йывăр ĕç. Кашни çын кăмăлнех тивĕçтерейместĕн. Хирĕçлерĕн — ырă пулаймарăн, ятларăн — эсĕ усал. Унашкаллисем шăл хăйраса çӳреççĕ, пĕр ушкăна пухăнаççĕ.

Хуçалăх расчечĕ çине куçма пуçланă чухне пулчĕ-ха ку ĕç. Кашни бригадăрах çынсене тырă тухăçлăхĕ тăрăх тӳлеме йышăннăччĕ. Çапла хурăнварсене тупăш тарăнварсенчен сахалтарах лекрĕ. Пуçланчĕ çакăн хыççăн усăсăр калаçу-тавлашу. Колхоз уйрăлас патнех çитрĕ.

Тельман Федотовичпа Максим Максимович хăйсем мĕнле пысăк йăнăш тунине тин туйрĕç. Çĕнни хыççăн хăваласа вĕсем колхозниксене хуçалăх расчечĕн уссийĕ çинчен тĕплĕн ăнлантарса параймарĕç. Халĕ çав йăнăшпа Нухрат Кавăрлисем усă кураççĕ. Йыт пулли шыва пăтрататать, усал чĕлхе йыша пăтрататать, тенĕ пек вĕсен ушкăнĕ пухăва пăтратса ячĕ-ячех.

— Тарăнварсенчен эпир мĕнтен катăк? — хĕремесленчĕ Нухратов. — Уйра тырă начар пулнăшăн

колхозниксем мар, правлени, председатель айăплă. Тарăнварта ĕне ферми пур, пахалăхлă тислĕк нумай. Хуçалăх расчечĕ тетĕр пулсан, навусне те кашни яла пĕр пек валеçмелле. Апла тумастăр тăк, пурăнмастпăр эпир сирĕнпе урăх. Уйрăлатпăр!

— Уйрăлатпăр! Кирлĕ мар пире Тарăнвар! — пĕри те тепри çухăрать ваçка.

Сцена çине хăпарса тăнă Хумма Петĕрĕ çеç лăплантарчĕ халăха.

— Шăпланнă пултăр йăхтăр-яхтăр! — кăшкăрчĕ вăл пĕтĕм вăйран. — Итлĕр, сирĕнпеле ялти рабочи класс калаçать! Ăçталла сулăнатăр эсир, юлташсем? Кама итлетĕр? Нухрат Кавăрлине-и? Кам хыççăн каятăр? Кам вăл? Камсем унăн ушкăнĕнче? Колхоза малалла кайма чăрмантаракан сӳпĕлтисем вĕсем. Уйрăлас пирки сăмах та пулма пултараймасть кунта. Вун пилĕк çул каялла пĕрлешсе çирĕпленнĕ хыççăн тепĕр хут вакланмалла-и? Çук, пулмасть ку. Мана механизаторсем тухса калаçма хушнă. Эпир нумайăн — çĕр çын ытла. Парти те механизаторсене пысăка хурса хаклать, ялти тĕп ĕçчен тет. Итлĕр апла пулсассăн тĕп ĕçчене! Правленипе ревизи комиссийĕн отчечĕсене çирĕплетмелле те, килсене саланмалла. Ыран каллех ĕç май таран.

Ырă кăмăллă сăмах çуркуннехи кун пек теççĕ халăхра. Ятлă-сумлă çыннăн сăмахĕ те витĕмлĕ, ăшă пулчĕ. Урăх хирĕçлекен-çуйхашакан пулмарĕ. Пуху ăнăçлах иртрĕ.

Волковпа Крутов пурнăçĕнчи пĕр кăткăс урок вĕçленчĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсем хуçалăха тĕреклетме тата ĕç хуравлăхне ӳстерме пулăшакан çĕнĕ йĕрке çинчен çынсене тĕплĕнрех ăнлантарса пама шутларĕç. Партком членĕсене кашнине бригада е ферма çирĕплетсе пачĕç. Семинарта ятарласа вĕрентнĕ агитаторсем халăх хушшине саланчĕç. Çĕнĕрен йĕркеленĕ экономика канашне председатель хăй ертсе пыма шутларĕ. Шут-хисеп

ĕçĕнчи йĕркене те улăштарчĕç, çĕнетнĕ ĕç нормисене коммунистсемпе колхозниксен пухăвĕсенче сӳтсе яврĕç. Ял хуçалăх университетĕнче те хуçалăх расчетне тарăнрах вĕренмелле пулчĕ.

Райком секретарĕ Мургаев калană пек, хуçалăхри çурăка сарăлма памарĕç ялти коммунистсем, тимĕр кăшăлпа темиçе хут кăшăлларĕç, çивчĕ те ĕненӳллĕ сăмахпа, ăнланулăх туйăмĕпе хытарчĕç ăна. Нухрат Кавăрлисен савăлĕ каялла тапса сирпĕнчĕ, хăйсенех çамкаран çапса пусăрăнтарчĕ. Тĕрĕс çулран пăрса яраймарĕç вĕсем халăха.

Ял çыннин ăс-тăнĕ улшăнса пынишĕн Макçăм Крутов савăнмаллипех савăнать. Хăй вăхăтĕнче пĕлӳ илеймен çамрăксем тăрăшсах вĕренеççĕ. Каçхи шкул пĕтернисенчен хăшĕ-пĕри институтсемпе техникумсен алăкĕсене уçса кĕчĕ. Вĕсене валли колхоз укçа тупрĕ. Вĕсен шутĕнче Салакайăк Йăванĕннех икĕ ачи. Венера хыççăн Ваççук та ăс-хакăл вăйне виçме пуçларĕ, хăй тĕллĕн инженера вĕренет. Хумма Петĕрĕ те Çĕрпӳ ĕмĕтне пурнăçларĕ. Чаплă мастерской туса пĕтернĕ тĕле училищĕсенче слесарь, токарь, фрезеровщик, сварщик вĕрентсе хатĕрлерĕç.

Çамрăксем вĕреннĕ вăхăтра Карачăм мучи те килте кĕрĕк арки йăваласа лармарĕ.

— Пурте пуç çĕнетеççĕ халь, карчăк. Мана та типлум тенине пачĕç вĕт. Кур-ха, вула, — шăлавар кĕсйинчен хыт хуплашка кăларса тыттарчĕ Карачăм Анукне.

— Ан мăшкăлла, ахаль те куç шывланать, начар курать, ăçтан вулап эп унта çырнине, ху вуласа пар, — каялла пачĕ хуплашкана карчăкĕ.

— Итле апла, — терĕ мăн кăмăллăн старикĕ. — Тăнла. Воробьев Герасим Филиппович... «Шурăмпуç» колхозри

ял хуҫалӑх университетне вӗренсе пӗтернӗ... Ӑнлантӑн-и? Вӗренсе пӗтернӗ тенӗ унта.

— Юрать, юрать, вилсен тупӑка пӗрле хурса ярӑп, тен, лере ыйтӗҫ те... Тем тума кирлӗ ӗнтӗ вӑл сана, тӑм писмене, — мӑкӑртатрӗ Анук.

— Университет типлумӗпе кайма та намӑс мар унта, леш тӗнчене, анчах, шалишь, эпӗ пурпӗрех халех вилместӗп. Уйӑх ҫине вӗҫсе кайса килмесӗрех шутламастпӑрха ун ҫинчен. Шалишь! Антриян мӑнукӑмпа вӗҫетпӗр.

Карчӑкӗ ҫаплах чарӑнмарӗ. Карачӑм, кунпа палкаса ним тулкки те пулас ҫуккине туйса, хыт хута хӗрлӗ татӑкпа тирпейлӗ чӗркесе тур кӗтессине хучӗ те кӑмака умӗнче тӑмпа хӑтланма пуҫларӗ.

Шӑхлич тума пит ӑста вӑл. Тепӗр чухне, еккине ярсан, Санар тӑвайккине тӑм кайса илет те тӑрмашать вара, ӗҫлет, ӗҫлет, вӑрҫтарать карчӑкне. Кӗсйинче унӑн яланах запас шӑхлич пур. Камӑн та пулин ачи макӑрать е кутӑнлашать, Карачӑм мучи шӑхличе кӑларать те кӗтӳҫӗ юрри шӑрантарма пуҫлать. Тунӑ пек шӑхличне йӑлтах шӗвӗрккесене парса пӗтерет.

Шӑхлич вӑл шӑхличех ӗнтӗ. Ӑна вара пӗр ыйту канӑҫ памасть. Ӗлӗкрех пасарта тем тӗрлӗ тӑм куршук, чашӑк, тирӗк туянма пулатчӗ. Авӑрлӑ, тӑрна мӑйӗ пек вӑрӑм мӑйлӑ чӳлмекрен сивӗ сӗт ӗҫни асрах-ха. Ҫав япаласене ун чухне ялта тунӑскер, халь тума пулмасть-ши? Туршӑн та, тӑрӑшсан, ӑсталама пулать Санар тӑвайккинчи тӑмран. Пиҫӗ, таткаланман тӑм. Малтанах вӑл ҫак ӗҫе килӗнче тӗрӗслесе пӑхма шутларӗ. Чашӑк, куршук тӑвать те ӗнтӗ, хӗртет, сӑрлать вӗсене, кайран савӑт-сапана е Кашкӑр Тельманне, е Крутов текеннине кайса кӑтартать. Ҫав шухӑш-ӗмӗтпе ватӑ ҫын ирех вӑлашкана тӑм ярса кӑмака умне ҫемҫелме лартнӑччӗ.

Ваҫҫук мӑнукӗн ачи, Андриян, хушӑран вӗсен патӗнче пурӑнать. Ашшӗ-амӑшӗ, хӑйсем ерҫменнине

пула, килсе яраççĕ-ха ăна. Ача садне туса пĕтерсессĕнех чăрмантармастпăр-ха сире тесе кашнинчех лайăхмарланать кинĕ. Мăн асламăшĕ ăна-кăна шутламасăрах пăхать Андриян «космонавта». Пĕчĕк ача пӳрт ăшчиккинче ниçта алă чиксе пăхманни, хыпашламанни хăвармасть, йăлтах айăн-çийĕн çавăрттарать. Карачăм паян кăнтăрлаччен клуба кайса килчĕ. Мăн асламăшĕ выльăхсене апат пама тухнă. Çав вăхăтпа усă курса юлнă «сăмса шывĕ». Кравать çине хăпарса стена çумĕнчи çакăнса тăракан сăран сумкăран çакăннă, унтан пăшал патронĕ илнĕ те çĕре анса выляма тытăннă. Кăмака умĕнче шăрпăк тупса вăл гильзăри тара чакаласа кăларнă, ăна тăм валашкине силленĕ, мăн аслашшĕ пекех патакпа пăтратнă. Анук пӳрте кĕрсен ача аллинчи гильзăна асăрханă-ха, анчах вăл пуш-пушах пулнине курнă та унпа мăнукне выляма чарман, ача выляса йăлăхсан ăна сентре çине илсе хунă.

Карачăм нумаях пулмасть кӳршĕ ял çыннинчен чашăк-тирĕк ăсталамалли хатĕр туянса килнĕччĕ. Аппалансан-аппалансан вăл пурпĕрех тăма парăнтарчĕ: виçĕ куршук, икĕ чашăк турĕ. Типсе çитнĕ хыççăн вĕсене вĕри кăмакана калитлеме лартрĕ. Карчăкĕ кӳрше каçнăччĕ. Хăй те кăшт канма тесе сак çине таяннăччĕ, сисмен те, тĕлĕрсех кайнă. Нумай çывăрнă-ши вăл, сахал-ши, тĕлĕкпе аташма вара ĕлкĕрнĕ. Вăрçăра пек, Колчак тăшманĕ енчен вĕçсе килеççĕ пек темле хăрушă çаврашкасем, пĕри çамка умĕнчех çурăлса каять: кĕрст! Куçа уçать те вăл хăлхана кăнн тăрататать. Кĕрст! кĕрст! тăвать кăмакара. Мучи сиксе тăрса чупса çитет... Кăмака ани ишĕлсе аннă çав, шалта — тăм ванчăкĕ çеç.

Карчăкĕ киле таврăннă-таврăнман Карачăм вăшт çеç тухса шурĕ, тӳрех Ваççук мăнукĕ патне уттарчĕ.

— Итле-ха, Ваççук, — терĕ вăл унта çитсенех, — эс вĕренекен çын, инженер пулап тен, каласа пар-ха

мана, ахаль тăм вěри кăмакара сирпěнме пултарать-и? Тěрěссипе çапла пулса тухрě. Эп куршук-чашăк туса кăмакана хěртме тесе лартнăччě. Ман вěсем пурте ванчěç, çитменнине тата кăмакана та ишěлтерчěç. Унччен шăхлич çав тăмранах тунă, ним те пулман. Мěн амакě, айта-ха кайса пăхар?

Ашшěнчен Андриян та юласшăнах пулмарě. Мăнукěсене курсан Анук Карачăма нимěн те шарламарě-ха, лешсем сисиччен юнаса çеç илчě.

Ваççукпа аслашшě пупленě хушăра Андриян каллех сумкăран патрон туртса кăларчě те шăрпăкпа чавалама пикенчě.

— Асатте, кур-ха, аллинче мěн ун? Тем тесен те çавăн ěçě. Гильзăран тар чакаласа кăларса тăм валашкине яма пултарнă вăл.

Тин пуçа пырса кěчě Карачăмăн, вара вăл тӳрех сумкинчи патронсене шутласа пăхрě. Иккěшě чăнах та çук. Карчăкě сентре çинчен пушă гильза илсе пачě те тарăхса:

— Ача айăплă мар, ху, ват супнă, айăплă. Ан хур япалана алă айне. Юса халь кăмакана, — терě. — Ун чухнех чун усала сисрě.

Тепěр кунне Салакайăк Карачăмě колхоз правленине «вашнăй супщенипе» пычě, хуçасемпе хушма хуçалăх пирки вăрахчен калаçса ларчě.

Ватă çын пуçарăвěн усси пулчě. Каярахпа чăнах та «Шурăмпуçěнче» савăт-сапа мастерскойě уçнăччě. Унта тунă тăм чашăк, чӳлмек ěлěкхи пекех таврари ялсене саланчě. Карачăм мучи пěр вăхăт хăй те унта ěçлерě.

17

Райком инструкторě Оманов «Шурăмпуçне» Максим Максимович партком секретарěнче ěçлеме пуçланăранпа та иккě-виççěрен ытла килсе кайманччě пуль.

Телефонпа информаци ыйтса хăшкăлтарсах çитернĕччĕ вăл ăна. Хальхинче Крутов чăтаймарĕ, хытах каласа хучĕ:

— Сана эп, Панхристоф, телефонпа урăх нимĕн те пĕлтерместĕп. Уру пур, куçу пур. Тухса ут та шыраса туп пире. Ялта ырă сунсах кĕтетпĕр.

Оманов секретаре хăтăрса тăкасшăнччĕ пулас, анчах кукăр кĕпçере пиклетнĕ сасă илтĕнчĕ. Кăнтăрла иртсен вĕçтерсе çитрĕ вăл Тарăнвара. Райпотребсоюз пуçлăхĕ Тит Милов автолавкăпа леçтернĕ ăна. Крутов шăпах инструктора хирĕç правленирен тухатчĕ.

— Этем мар пуль эс, Крутов, — тарăхса алă пачĕ секретаре Оманов. — Пире те хисеплеми пултăн. Юрать тĕнчере ырă çынсем пур. Тит Нилович пĕртте сан пек мар, эх, епле кăмăллă. Кăмăла хирĕç кăмăл тет çав. Хăвăр кунта председателе йышăнмасăр намăслантарнăшăн хуйхăрмарăмăр эпир, уйăхранах ăна тепĕр председатель пӳлĕмне тĕртсе кĕртсе ятăмăр. Çапла вăл пĕтĕм власть хамăр алра чухне. Алла алă çăвать. Чăн та, кăмăлĕ уçă. Çав кăмăлах ытараймарĕ ĕнтĕ сан Лину та. Ăçта лайăх, ăçта ăшă — çавăнталла йăпшăнать çав вăл, хĕр тени, кушак пекех ачаш. Çут пăр çинех тăратса хăварчĕ авă вăл сана. Ытла тӳрккес пулас эпир иксĕмĕр. Хĕр те юратмасть те пире...

— Юрĕ, юрĕ, эс хăв хĕр тупса çӳре-ха лайăхрах. Линăпа сан нимĕн ĕç те çук. Кирлĕ-кирлĕ мар çĕре пустуй сăмсуна ан чик, асту, — чăмăртанă чышкипе юнарĕ ăна Крутов. — Кала, мĕн ыйтупа килтĕн? Мĕн лайăххине кăтартас?

— Тем кăтартсан та, чышкă-муклашкă ан кăтартах. Хăратăп эп санран. Атя-ха фермăсене çитсе курар. Агитмассăллă ĕç мĕнле шайра пырать-ха сан унта?

— Ман Миловăнни пек карета çуккă çав, шуç чуман çеç. Çурранах утма тивет, — тĕртсе илчĕ ăна Крутов.

— Юрĕ ĕнтĕ, хăçан та пулин райком секретарьне ларсан ак хам лартса чуптарăп, «Волгăпа», хурипе, — мухтанса пычĕ Оманов.

Фермăра Пантелеймон Христофорович йĕпленмелли нимех те тупаймарĕ, Ĕç хыççăн çăвăнма, тасалма тесе чăваш мунчи лартса панăччĕ. Общежитире канмалли, апатланмалли, çывăрмалли пӳлĕмсем пур. Сысна пăхакансен малашнехи тĕллевĕсем паллă. Кам мĕнле ĕçленине, кама мĕнпе хисеп тунине çырса хунă. Эртелĕн кун-çулĕ тĕкĕр çинчи пекех курăнать. Боевой листок ĕнер çеç кăларса çапнă. Куçса çӳрекен библиотека йĕркеллех. Телевизор кăтартать, радио калаçать...

— Çынсемшĕн тăрăшни курăнать-ха, ĕçлеме, канма, пурăнма майĕсем çителĕклех, анчах мана урăххи интереслентерет, — хĕрлĕ кĕтесе кĕнĕ çынсене сăнавлăн пăхса илчĕ Оманов. — Калăр- ха, тархасшăн, сирĕн патра калаçусем, лекцисем, политинформацисем час-часах пулаççĕ-и? Мĕнпе савăнтараççĕ колхоз пуçлăхĕсем?

Малта тăракан Мулла Укахвийĕ вăтанмасăрах хăюллăн сăмахларĕ:

— Ай-ай ытла нумай пĕлесшĕн тата ку çын. Курăрха, епле шахвăртать? Пирĕнтен япăх сăмах вăлтса илтсе Максим Максимовичсене ятласшăн пать? Çук, сутмастпăр эпир хамăрăн ырă çынсене. Ылтăн вĕсем пирĕн, Кашкăр Хветучĕн ачипе иккĕшĕ, ылтăнран та ылтăн. Лекци-и, инхвормаци-и — пĕлместĕп, мĕнле калăплаттăр эсир вăл калаçусене, пирĕншĕн пурпĕрех. Пирĕншĕн калаçаканăн чĕлхи тутлă пултăр. Тăрантартăр вăл пире тутă сăмаххипе. Эпир çавна çеç кĕтетпĕр. Çав тутă сăмахпа калаçаççĕ те пирĕн патра, фермăра, ак çак çынсем: Максим Максимович, Тельман Федотович. Пĕррехинче Максим Максимович ай калаçрĕ манпа, тăрăшсах пуплерĕ, çырмаран йăтса хăпаракан мăшăр витрене çитерсе парасшăн пулчĕ. Эпĕ унпа килĕшмерĕм.

«Эсĕ, ырă çыннăм, терĕм, Числов пек пуш сăмах ан çаптар, чăн-чăн парторгах пулсан, пире водопровод, автопоилка туса пама пулăш».

— Пултарчĕ-и вара çав ĕçе тума? — шанмантарах кăмăлпа ыйтрĕ Оманов.

— Хă, каларăр та çав. Максим Максимович вăл... — хумханнипе халат аркисене варкăштарчĕ Муллина. — Председателе тепĕр куннех сыснана хăлхаран çавăтнă пек илсе килчĕ, эпир мĕнле çăрăлчăкра ашнине, мĕнле нушаллă ĕçленине кăтартрĕ Кириллова. Шыва та, апата та алăпа йăтмастпăр ĕнтĕ çавăн хыççăн. Хул-çурăм тинех канленчĕ. Вăт, çавăн йышши калаçусем пулаççĕ те пирĕн пĕрмай. Лекци-ши е инхвормаци — пĕлместĕп. Ячĕ-шывĕ тĕп пултăр. Пире ĕçлĕ калаçу пултăр — тутлă калаçу. Астăватăп сире те, виçĕм çул хывăх вĕçтернине те хальхи пек астăватăп. Сирĕнтен эпир мĕн ыйтнăччĕ-ха?

Оманов çак хĕрарăм тăрук панă ыйту çине хуравлаймасăр тăчĕ, ним калайманнипе: «Ун чухнехи блокнота уçса пăхмалла-ха», — терĕ. — Хут карçинккине пемен пулсан, райкомрах пулма кирлĕ.

— Пире сирĕн хут купиййĕ кирлĕ мар, пире эсир Мускава, Пысăк театра илсе кайăр. Вăт мĕн пирки пулăшма ыйтнăччĕ сиртен сысна пăхакансем. Эсир мăшкăлласа: «Кăнтăрлах ан тĕлленсе тăрăр-ха», — тесе ахăлтатрăр. Пулăшатăр-и е пулăшмастăр, унсăрăн Шупашкара çырса яратпăр. Пирĕн ферма миçе хутчен республикăра мала тухрĕ...

— Райком секретарĕпе калаçса пăхăпăр. Мургаев мĕн калĕ.

— Мура кайтăр-и сирĕн Мургаеву? Пире калаçни мар, эсир пулăшни кирлĕ. Пустуй павраса çӳрекенсем кирлĕ мар... — шавлама пуçларĕç сысна пăхакансем.

— Таçта аяккалла чăтлăха ан чăмăр-ха эсир! — чарасшăн пулчĕ вĕсене Оманов. — Партком секретарĕпе

председательсĕр пуҫне ытти агитаторсем пулаҫҫĕ-и сирĕн патра? Ҫакăн ҫинчен те пĕлесшĕн эпĕ.

Хĕрарăмсем пушшех кĕрлесе кайрĕҫ. Каллех Мулла Укахвийĕ эртелшĕн евитлерĕ:

— Мĕн агитаторĕ кирлĕ пире урăх вĕсен ĕҫлĕ калаҫăвĕ хыҫҫăн? Ырă сăмах тутлă апатран та хаклă.

Крутов аяккалла пăхнă самантра Оманов сарлака блокночĕ ҫине «Сысна ферминче агитаторсем калаҫу ирттермеҫҫĕ» тесе ҫырса хучĕ. Унпа вăл тепĕр ҫĕрте усă куратех, Максим Максимовича е райкомри планеркăра, е пĕр-пĕр канашлура-семинарта намăслантарма тăрăшатех. Вăрттăн ҫыртасси пĕтмест унăн.

Сысна ферми ҫумĕнчех — колхоз кĕлечĕсем. Кунта механизациленĕ йĕтем те пур ĕнтĕ, ҫапах вăрҫăченхи ҫулсенче ял ҫыннисенчен куҫарса килнĕ йывăҫ кĕлетсем шăн-шăн лараҫҫĕ. Крутовпа Оманов, ферма ҫыннисемпе сыв пуллашса, унталла утрĕҫ. Каланча ҫумĕнчи трактор хыҫĕнчен сиксе тухнă Карачăм мучи сулахай аллине ҫамки ҫине тытса тĕсесе пăхрĕ те тумтирне йăпăр-япăр турткаласа майларĕ.

— Сывă-и, Герасим Филиппович? — хуралҫа алă пырса тытрĕ partком секретарĕ.

Оманов та вătă ҫыннăн кушăрханă аллине ирĕксĕррĕн тытнă пекки турĕ, ун хыҫҫăн ывăҫ тупанне вĕрсе илчĕ.

— Ан хăра, тасах, — кулкаласа сухалне шăлчĕ Карачăм мучи. — Ку алла, ачамккă, тивизи начальникĕ те, Совет кăмиссарĕ те, Шупашкар министрĕ те, темле чаплă ҫын та тытнă пуль. Анчах, тытнă хыҫҫăн аллине санашкал вĕрсе тасатнине никама та астумастăп. Мĕнле «йĕнтелликент» сĕтĕрсе килтĕн эс кунта, Макҫăм Макҫăмч?

Крутов кула-кулах мучие евитлерĕ:

— Оманов теҫҫĕ ăна, Пантелеймон Христофорович. Райком инструкторĕ пулать вăл. Пропагандăпа

агитаци пайӗнче ӗҫлет. Совпартшкулта эпир унпа пӗрле вӗреннӗччӗ.

— Ан калаҫ. Чăнах-и? Апла вăл санран аслăрах ҫынҫке, санран ăслăрах та пуль. Ыйтас-ха, тахҫанах пӗр шухăш канăҫ памасть мана... Районти начальствă килнӗ пек чух пӗлсе юлас.

Пуҫа ăйăрла ухса тăракан Оманов, хырăмне шăлса, тата каҫăрăларах пачӗ, мучи еннелле пăхмасăрах ыйтрӗ:

— Мӗнле вак-тӗвекпе чăрмантарасшăн-ха ку старик мана?

Вăл вăхăтра ушкăна трактористсем, йӗтем ҫинче ӗҫлекенсем, лаша пăхакансем хутшăнчӗҫ.

Мучи сухала мăнаҫлăн каҫăртса икӗ аллине пилӗке тытрӗ, хӗвел ҫине пăхса илчӗ те, каларӗ:

— Ак ҫак вак-тӗвек япала ҫывăрма памасть мана, ырă ҫыннăм. Ялсувет ял урамӗсене ят хурса тухрӗ. Пирӗн урама Чапай ятне пачӗҫ. Пӳртсем ҫине те хулари пекех нумӗрсем ҫапрӗҫ. Ку таранччен пурăннă, анчах хамăр кил уничерен миҫемӗш пулнине шутламан. Вун виҫҫӗмӗш иккен. Пӗрене пуҫӗ ҫине ҫав нумӗре чиперех ҫапса лартрăм. Ăна-кăна шутламан та. «Карачăм, — тет карчăк, — пирӗн пӳрт нумӗрӗ — телейсӗр нумӗр, куммасен леш Мускавра вӗренекен ачи анкăлчансен вун виҫҫӗмӗш нумӗрлӗ ҫурт сувҫем ҫуккă тет. Ялсуветрисене кала: улăштарччӗр». «Мӗншӗн телейсӗр ҫак?» — ыйтатăп. «Калаҫҫӗ сана телейсӗр тесе — снашăт, телейсӗр. Ҫав ача сăмаххи хыҫҫăн халь пуҫа пырса кӗчӗ, ӗлӗк те ҫакăнта вун виҫӗ кил ларнă тет те, вун виҫҫӗшӗ те пӗр каҫ харăс ҫунса кайнă тет. Пирӗн те, старик, темле...» «Ку таранччен ҫунманнине халь ҫунмăпăр-ха», — лăплантаратăп ăна. «Унччен ҫуртсене нумӗрлеменччӗ. Халӗ... халӗ тӗлӗкре те пушар куракан пултăм». «Мӗн, ялсувечӗ пӳртне нумӗрленӗ хыҫҫăн сана аҫа ҫапать-им?» — тарăхсах кайрăм. «Ҫапасси те, ҫунса каясси те пулӗ.

Улăштарттар нумĕре», — тесе чиперех нĕшĕклетет. Аптранипе ялсуветне çитрĕм. Апла-капла, çапла-çапла тетĕп тăрăшсах. Тăнласа та итлемерĕç, кулчĕç те пĕр кана, унтан тем ăнлантарнă пекки тукаларĕç. Вĕсем каланине пуçа хываймарăм. Çула май шкула кĕтĕм, аслă учитлăран, Числов Петĕрĕнчен, ыйтса пĕлес терĕм, вăл ерçмерĕ. Халь те пулин пĕлесчĕ. Ахалĕн мана карчăк яшка та пĕçерсе памĕ, кĕпе-йĕм те çуса тăхăнтартмĕ, киле те кĕртмĕ. Нумĕрне те илсе переп тет.

Хăшĕ кулкаларĕ, хăшĕ тĕлĕнсе пуçа пăркаларĕ, Оманов çеç, păван çыртнă пек кăртах сиксе, тăнсăр çамкине лапшака аллипе хупларĕ, вара, тем аса илнĕн, хăй мĕн пултарнă таран наука ăнланăвĕллĕ сăмахсемпе перкелешме пуçларĕ.

— Павра çыннăн арманĕ урăлла та пушăлла çеç авăрать тет, ачам, тем, çăнăхĕ юхмасть сан, — алă сулчĕ Карачăм мучи.

Аптăраса ӳкнĕ Оманов Крутов хăлхинчен пăшăлтатрĕ:

— Эсĕ, Макçăм, пĕлен пуль. Шупашкартах атеизмпа хытă интереслентĕн. Тархасшăн, çăл ку лачакаран тухма.

Крутов яланхилле аллисене хускаткаласа пуçне пăркаларĕ, вара хăй мĕн пĕлнине пурне те каласа пачĕ:

— Пирĕн ĕмĕрчченхи çĕршер çул каялла тĕнчере Вавилон текен вăйлă патшалăх пулнă. Унта пурăнакансемшĕн чи лайăх число вун иккĕ шутланнă. Мĕншĕн тесен, хăвăрах пĕлме тивĕç, вун иккĕ шутлама меллĕçке. Вăл иккĕ, виççĕ, тăваттă, улттă çине юлашкисĕр пайланать. Унпа, паллах, виçме те, шутлама та пит аван. Астрономсем те, çăлтăрсемпе планетăсем пулса кайнине тата тытăнса тăнине тĕпчекенсем, унпала анлăн усă курнă. Вавилон ученăйĕсем хĕвелĕн тӳпере курăнакан çулне тĕпчесе пĕлнĕ, шыв тата хăйăр сехетсемпе

вăхăт виçме вĕреннĕ. Вавилон çыннисем талăка çирĕм тăватă сехете тата вун икĕ йĕкĕр сехете пайланă. Кашни сехете утмăл минута, е вун икшер минутăн пилĕк пая, уйăрнă. Çулталăкра вĕсен вун икĕ уйăх пулнă. Вун иккĕпе юнашар тăракан вун виççĕ текен хисеп вара вĕсене унтан урăхларах туйăннă. Çитменнине тата вăл хăйсĕр пуçне пĕр хисепе те пайланман. Çавăнпа ăна пулса çитмен е телейсĕр хисеп тенĕ те ĕнтĕ.

Ăна ĕненесси, авă, хальхи вăхăтах çитнĕ, Карачăм мучипе мăшăрне те нушалантарать. Ĕлĕкхи хутпĕлменлĕх çак тĕшмĕше аталанма пушшех пулăшнă çав. Христос тĕнĕ ăна тăрăшсах сарнă. Акă, Евангелире каланă тăрăх, вăрттăн пухăва вун виççĕн, Христос тата унăн вун икĕ вĕренекенĕ пухăннă: Симон, Андрей, Иоанн, Иаков, Филипп, Варфоломей, Матфей, Фома, Иаков Алфеев, Фаддей, Симон Кананит тата Иуда Аскариод. Пурте вĕсем ытти çынсенчен уйрăлсах тăман, анчах та Турă вĕсене Турă ывăлĕн Иисус Христосăн шанчăклă, ăслă вĕренекенĕсем пулмашкăн ырлăх панă. Христос, вĕсем пулăшнипе, çынсемшĕн нумай мухтавлă ĕç тунă. Вĕсенчен пĕри, Иуда, Иерусалимра ăна вăтăр кĕмĕл укçалла сутнă. Çакăн хыççăн Христоса вĕлермелле суд тунă, вара хĕрес çине пăталанă, кайран çĕре пытарнă. Кунта та вун виççĕ телейсĕр, хăрушă хисеп пулнă.

Симун куммун ачи, акăлчан чĕлхине вĕренекенскер, тĕрĕсех каланă. Англире кăна мар, ытти хăш-пĕр çĕршывра та вун виççĕмĕш хисеплĕ çуртсем çук. Пуйăссемпе автобуссенче тата самолетсем çинче те вун виççĕмĕш вырăн тупаймăн. Вун виççĕмĕшĕнче çуралнă çынсене те вĕсем телейсĕр тесе шутлаççĕ. «Вун виççĕ» хисеп пĕлтерĕшĕ пустуй шухăшласа кăларнă юмах кăна пулнине эпир вара хамăрах аван пĕлетпĕр. Никама та вăл сиен кӳмен. Пустуй çеç тĕшмĕшленетпĕр.

Çакă çеç. Çапла вăл пирĕн Пантелеймон Христофорович, кунашкал вак-тĕвек ыйтусемпе аппаланса пуçа çĕмĕрмест, çавăнпа маннах ăнлантарса пама тиврĕ. Ĕненсен — ĕненĕр. Ĕненмесен...

Çăвара карса итлекен Карачăм мучи каска çинчен ялт! сиксе тăчĕ, шĕвĕр пӳрнине Крутов сăмси умĕнчех силлерĕ:

— Ĕненме те пулать, иккĕленме те юрать. Эпĕ хам та утă уйăхĕн вун виççĕмĕшĕнче çуралнă, анчах телейсĕр тесе шутламастăп хамăн пурнăçа. Çут тĕнче кăтартнăшăн анне-аттене кăвапа таран пĕшкĕнсех тав тăватăп.

— Эпĕ те сирĕн яла чи малтан килнĕ кун июлĕн вун виççĕмĕшĕччĕ, — пӳлчĕ ăна Крутов. — Петрав эрни кĕрлетчĕ.

— Вăт-вăт, ыллăм, эсĕ вăл кун пирĕн яла Телей çулĕпе килтĕн. Телей ачи эс, ыллăм. Кăна ĕненме пулать. Паянхине çеç... Паян та, ачамсем, тур панă пекех, вун виççĕмĕшĕ-çке, авăн уйăхĕн вун виççĕмĕш кунĕ. Макçăм Макçăмч, паян вара эсĕ телейсĕр кун парнелерĕн пире. Хайхи эс, каланă халапри Иутă Аскаритă Христуса сутса янă пекех пирĕн çвинаркăсене те улталанă хура çынна, хырăмне пуш сăмахпа шӳтерсе янă ак çак этеме илсе килсе. Курăр-ха, катемпи вырăнĕнче тăрать вĕт. Ытлашши нумай вĕреннĕ пулмалла, пирĕнпе акатемĕк чĕлхипе калаçасшăн пулчĕ — калаçаймарĕ. Пирĕн пуçа савăл çапаймарĕ, сăмах савăлне кĕртмелли вырăнне тупаймарĕ. Эх, ырă çыннăм, ĕçлемелле сан, çĕр чавмалла, навус хырмалла, вăрман касмалла — пирĕнпе юнашар тăрса тар тăкмалла. Вырăн йышăнса лармалла мар пуль райкумра. Авă епле мăйăр шĕкĕлчесе панă пек шĕкĕлчесе пачĕ ман ыйтăва Макçăм Макçăмч. Карчăка ăнлантарса ӳкĕте кĕртме те пултаратăп халь. Санпа... çулу такăр пултăр.

Кĕлетсем патĕнчен правление çитиччен те сăмах хушмарĕ Оманов, хĕрелнĕ питне сăтăра-сăтăра мăшлатса пычĕ. Автолавка кабинине кĕрсе ларсан асăрхаттарса хăварчĕ:

— Агитаторсене ытларах ĕçлеттер!

Машина курăнми пулсан Крутов çапла шухăшларĕ: «Авă епле çул кăтартса ăсатать иккен халăх «пиçмен пашалусене». Омановсем хыççăн тух вара унта халăх хушшине. Пуçа кĕмелле, асра юлмалла ăнлантармалла çав кашни çынна. Нимпе çыхăнман сăмах кукри вылятни пирĕн ĕçĕн тĕп хакне пĕтерсе хурать. Ăслă та кирлĕ сăмах шухăша аталантарать, хăй вăхăтĕнче çунă ăшă çумăр çут çанталăка пурнăç сăнĕ кĕртнĕ евĕр халăха усă парать. Омановсен сапаланчăк, пархатарсăр сăмахĕ халăха пăтрататать çеç, çыннăн аталанма пуçланă шухăшне те сирсе, типĕтсе ярать, вăйлă капланса килнĕ пĕлĕтрен ÿксе юлнă çумăр пĕрчи пек çеç туххăмрах пăсланса çухалать. Вăт вăл пирĕн сăмах, чĕлхе витĕмлĕхĕ. Начар ĕçлетпĕр-ха, çынсем çине çÿлтен пăхатпăр, парти ĕçлевçин пултаруллă тивĕçлĕхне чакаратпăр, халăх умĕнче райком, парти сумне-ятне тĕксĕмлететпĕр. Тем тесен те Оманов пирĕн ĕçе ăнсăртран лекнĕ çын. Пĕлĕвĕ те çитмест пулас ун. Теори ыйтăвĕпе тавлашу-мĕн пуçлансан ялан аяккалла пăрăнать. Эх, пире вĕрентет тата...»

Çакăн хыççăн Омановăн «Шурăмпуçне» урăх килесси-тăвасси пулмарĕ. Анчах кĕвĕçÿ чирĕ унăн вăйланса кайрĕ. «Çав усал старик вăлтине çакланса халăх умĕнче намăс куртăм. Крутов пит ăслăн çавăрттарса хучĕ. Эх, мĕншĕн пĕлместĕп-ши эпĕ ун чухлĕ. Шутласан, пуçĕ те манăннинчен пĕчĕкрех ĕнтĕ, пурпĕрех темле ыйту çине те майлă хурав тупăнать унăн. Çук, тек пĕрле çÿреместĕп унпа», — тесе пăтранса ларчĕ Оманов райкомра. Пĕрремĕш секретарĕн доклачĕ валли справка хатĕрленĕ чухне вара «Шурăмпуç» колхозра агитмассăллă ĕç выльăх-чĕрлĕх фермисенче юлашки вăхăтра палăрмаллах хавшанă» тенине хаваспах кĕртсе ячĕ. Çавăнпа та пулин япăхрах кăтартма хăтланчĕ вăл Крутов ĕçне.

Секретарь çак сăмахсене пленумра вуласа панине Максим Максимович тĕлĕнсе итлерĕ. Чăтăмлăх çитмерĕ унăн, тухса каланă чухне Омановăн икĕ питлĕхне тăрă шыв çине кăларчĕ.

18

Макçăм Крутов «юрату урхамахне» çăварлăхланăччĕ. Вăрманкасри тĕл пулу хыççăн Линăна манатăпах тенĕччĕ. Çук, пулмарĕ хăтăласси тăнран яракан шухăшран. Вĕлтрен пĕçертнĕ юрату суранĕ çĕнĕрен сурма тытăнчĕ.

Тарăнвара Линăпа амăшĕ хăнана килнĕччĕ. Линăпа Макçăм клубра тĕл пулчĕç. Кино курнă хыççăн вĕсем ытакланса анаталла утрĕç. Лина чăтаймарĕ, калаçăва хăй пуçарчĕ.

— Каçаратăн-и эс мана, Макçăм? — каччă питне вĕри тутипе çунтарса илчĕ Лина.

— Мĕн айăпа кĕнĕ вара эсĕ ман умра? Ман арăм пулман эс...

— Апла паллă, каçаратăн. Эс ыр кăмăллă çын, Титок пек путсĕр мар. Тит улталарĕ мана. Улталарĕ. Качча илетĕп тесе ахалех суеçтерчĕ. Пĕчченех тăратса хăварчĕ. Хуйхăрса та ывăнтăм. Паян, сана курнипе, ирĕлтĕм, çунатăм та тепĕр хут хушăнчĕ. Вĕçес килет халĕ ман санпа пĕрле çӳл тӳпене çитиех. Ух, вĕçес килет!

— Эс капла каллех вĕçсе тарăн та манран, унччен çунаттусене хатĕрлемелле пуль, — тесе Макçăм шӳтлĕн ыталарĕ ăна.

Кăтра пĕлĕтсем хыçĕнчен сиксе тухнă тулли уйăх ăшшăн пăхса илчĕ те вĕсем çине йăпăшт пытанчĕ.

Тепрехинче çуллаччĕ. Максим Максимович Кайривартан таврăнать. Хăш чухне петрав эрнинче тырă вырма тухаканччĕ. Кăçал ку вăхăта çитсе те ыраш пучаххисем кăшт кăна саралма пуçланă. Кĕтмен çĕртен ун умне тырă пуссинчи сукмакран Лина сиксе тухрĕ. Велосипечĕ çинчен сиксе анчĕ те вăл Макçăма алă пачĕ:

— Сывă-и, мĕнле пурăнатăн, Макçăм?

— Эс капла ăçтан? — тĕлĕнсе ыйтрĕ Макçăм.

— Канма, сана курма, сана... — велосипедне çерем çине пăрахрĕ те вăл Макçăм мăйĕнчен уртăнчĕ. — Пурпĕрех сана ăçта та пулин шыраса тупатăп тесе ярăнса çӳреттĕмччĕ. Вăрманкасран çитни те нумаях пулмасть-ха Кирилловсем патне, апат çимесĕрех тухса вĕçрĕм. Анне те килнĕ, вăл кӳренсе юлчĕ.

Утнă май Лина Санар улăхне сăнать. Вăл практикăра ĕçленĕ чухнехи пек типĕ кăткă тĕми кураймăн, ун вырăнне — шăкăри утă купи. Санар юхан шывне Кайривар тĕлĕнче пĕвеленĕ, тем тăршшĕ теплицăсем, пахча çимĕç уйĕсем. Мĕн чухлĕ улшăну.

— Çил вăйланчĕ, çумăр килет пулмалла, — терĕ Лина. Астăватăн-и аслатиллĕ çумăра?

— Манман ăна, Лина, манман. Килтĕр, çутăр. Эпĕ кăна мар, пĕтĕм тавралăх кĕтет халĕ ăна.

Санар тăвайккинчи юман кати те Линăна урăхларах кашланăн туйăнчĕ. Унтан вĕрекен çил сулахай çыр хĕррипе ӳсекен çамрăк йывăççене ачашлать. Лина çилпе çĕкленекен кĕпине те чĕркуççи тĕлĕнче тытса чарма васкамасть, велосипед тĕртсе пыракан каччă куçĕнчен ытарлăн пăхать те кулать, пăхать те кулать.

— Макçăм, эпĕ питĕ савăнăçлă, манăн паян çуралнă кун-çке!

Çакна илтсенех каччă велосипедне утă купи çумне сĕвентерчĕ, ыраш ани пуçĕнче утмăл турат пуçтарма тытăнчĕ. Лина каччă парнине кăкăрĕ çумне пăчăртарĕ те пĕр вырăнта çаврăнса илчĕ:

— Ах, тутлă-çке çĕр сĕткенĕн шăрши! Юрататăп çав эпĕ те уй-хире. Тавтапуç кăмăлушăн, ырă кăмăлушăн. Ман пĕрмаях санпа çапла çӳрес килет, Макçăм.

Кушак çури пек ачашланса кайнăскере вăл вăшт! çĕклерĕ те шырлан урлă сикрĕ, ун хăлхинчен пăшăлтатрĕ:

— Çак çыхăри чечексен кашнин утмăл турат пулсан миçе çул пурăнма ырă сунас-ха ман сана, Лина?

— Виличчен пурăн... — аран-аран çавăрса ячĕ каччи чăмăртанипе Лина. — Хăлхара хăмăшсен юрри илтĕнми пуличчен. Каçпа пĕве хĕрне тухатăп. Пыр, Макçăм, кĕтетĕп.

Раща енчен вĕрекен вичкĕн çил хĕрĕн çĕрелле усăнса аннă утмăл турат чечеклĕ кĕпипе вылять, улăх тăрăх йĕпе пăрçасем шапăртатса чупса саланаççĕ. Нурăс енче аслати сасси илтĕнет.

Хĕртен уйрăлсан Крутов сĕт-çу фермине кĕчĕ, вите тăвакансемпе калаçрĕ. Нумай пулмасть-ха строительсен яланхи бригадине йĕркеленĕччĕ. Салакайăк Йăванĕ те унта ĕçлеме кăмăл турĕ. СМУ çыннисем пĕрмай улшăнса тăни питĕ чăрмав кӳретчĕ. Парткомпа правлени вара строительствăпа монтаж управленийĕн начальникĕпе çапла килĕшрĕç: çыннисем — пирĕн, укçи — сирĕн. Колхозниксем халĕ ялтах ĕçлеççĕ, çав вăхăтрах Вăрманкасри хăйсен кантурĕнче шутланса тăраççĕ. Вырăнти çын — вырăнтиех, ĕçне те урăхларах, урăх кăмăлпарах тăвать. Хушăран унăн колхоз ĕçне хутшăнма те вăхăт тупăнать. Акă хальхинче те вĕсем парторга тӳрех каларĕç: цемент çук, утă патне каймалла пуль... Крутов туйрĕ, капла май килмест, строительсене стройка çăкăрриех кирлĕ, вĕсен витенех туса пĕтермелле, кăçалах унта ĕне выльăх самăртма хупмалла. Çапла шухăшласа вăл тӳрех общежитие васкарĕ, телефонпа шăнкăравласа кирлĕ çынсене тупрĕ. Вăрманкасран цемент тиесе яма шантарчĕç, анчах... автомашина ыйтаççĕ. Ку ыйтупа автопарка çитмелле пулчĕ. Юрать-ха паркĕ фермăпа юнашарах. Строительсен ыйтăвне ăнăçлă татса панăшăн Крутов хăй те савăнчĕ. Хуçалăх ĕçне вăхăтра тума пулăшни парти ĕçĕн витĕмлĕхне ӳстерет çеç ун шучĕпе.

Çавăнпа вăл председательпе нихçан та ĕç пайласа лармасть. Хуçалăх ĕçне сăмсуна чикетĕн тесе малтанхи пуçлăх Кириллов чăкрашланса та пăхнăччĕ, каярахпа тин çăмăллăха туйса илчĕ, «Эсĕ, Крутов, ăна ту-ха, кăна ту», — тесе ыйтма пуçларĕ. Волков ăна хирĕçлемест, хăйне хуçалăхра улпут вырăнĕнче тытмасть.

Каçалапа паркра партгруппа пухăвĕ пулчĕ. Пуху вĕçленнĕ тĕле тĕттĕмленнĕччĕ ĕнтĕ. Крутов çырма тăрăх сукмакпа тĕл пулу вырăнне васкарĕ.

Акă вăл Кирилловсен анкарти хыçĕнчи асамлă пĕве. Хăçантанпа пулман Макçăм кунта! Хăмăшсем те унтанпа пĕве хӳринчен чылай шаларах сарăлнă, çӳллĕрех ӳснĕ, çавăнпах сасси те хулăнланнă пулас, ха, епле шавлаççĕ: чăшăл-чăшăл! чăшăл-чăшăл! Кĕпе çумалли кĕпер çинче Лина çара урисемпе лĕп шыва шăмпăлтаттарса ларать. Ун çумĕнчен саланакан вĕтĕ-вĕтĕ хумсем шыв тĕпĕнчен кулса пăхакан уйăха ава-ава илеççĕ, çăлтăрсене пытанмалла выляттараççĕ.

— Хăмăшсем епле чуна килентермелле выляççĕ, Макçăм, итле-ха, итле, — ура çине чалтах сиксе тăчĕ Лина. — Çуралнă кун ячĕпе вĕсем мана саламланăнах туйăнать.

Макçăм Линăна тутлă шăршлă нӳрĕрех çӳçĕнчен ачашлать, ăшă сăмахсем калать:

— Манăн утмăл туратăм... Колхоза килнĕ малтанхи кунах тĕл пултăн та, ниепле те куçран çухалмастăн. Утмăл турат та çĕр çинче ӳсет, эсĕ те... Иксĕр те хитре чечексем, тĕнчене илем кӳме ӳснĕскерсем. Чечеке те хитрине чи малтан татаççĕ те, хĕрсене те чиперрисене суйлаççĕ. Мана çеç...

Лина ăна каласа пĕтерме памарĕ, алă тупанĕпе тутине хупларĕ.

— Кирлĕ мар калама, кирлĕ мар, ăнлантăм эс мĕн калассине, ăнлантăм. «Мана çеç çын юлашки лекрĕ», — тесшĕнччĕ вĕт. Çапла-и?

— Çаплах пулсан вара мĕн? Чуна уçса памаллах-çке. Мĕншĕн суймалла, улталамалла пирĕн пĕрне-пĕри? Айта куçран куçăн калаçар.

— Пакăлтатма пакăлтататăп та эпĕ, анчах мĕн тери йывăр мана, — шывланнă куçне çанă вĕçĕнчи сăмса тутрине кăларса шăлчĕ вăл. — Пĕлесчĕ сан. Телейсĕр пулчĕ манăн пурнăç. Тин ăнланма пуçларăм эпĕ ăна. Малтанхи юрату картлашкинченех такăнтăм. Итле, «хĕр чух — хĕрĕх» теме юрататтăн эсĕ. Чăн та çаплах пуль çав. Ман та сана тĕл пуличчен каччăсем пулман мар, пулнă. Шкулта вĕреннĕ чухнех эпир хамăр ялти Тан Ваçли ачипе, Славикпа, çыру çӳрететтĕмĕр. Вăл Каргинсен усрав хĕрĕпе, Маруçпа, çӳресшĕнччĕ. Эпĕ Славика хытах юратнă пулмалла çав, ухмах, Çĕлен улăхĕнчи авăра сикес патнех çитнĕччĕ. Маруç ăна çăмăлттайшăн пăрахрăм терĕ. Славик çар училищине вĕренме кайрĕ, эпĕ — ял хуçалăх институтне. Маруçсем килĕнче начартарах пурăнатчĕç те, вăл колхозрах ĕçлеме юлчĕ, каярахпа пединститута кĕнĕччĕ-ха, кĕçех пĕтерсе тухать пулмалла. Пĕлен, пирĕн унта, вăрманта, çăтмах пурнăçĕ. Вăрманкасран яла пырсан хăвах курнă тавралăх илемне. Çулла киле те кĕрес килместчĕ. Кунĕн-çĕрĕн тенĕ пекех пĕрле çӳреттĕмĕр Славикпа. Çавăн чухне такăнтăм та ĕнтĕ эпĕ юрату картлашкинчен. Ăна-кăна сиссен Славик: «Пире училищĕре вĕреннĕ чухне пĕрлешме ирĕк памаççĕ», — терĕ. Ман вара ирĕксĕрех... Унтан хайхи Тит Милов çыпçăнчĕ. Уншăн сана та Шупашкарта кӳрентермелле пулчĕ. Ĕнер Славик яла курма килчĕ, мана Чулхулана пĕрле илсе каясшăн. Тем тумалла. Малтанхи юрату-çке вăл манăн, малтанхи...

Уйăх çутинче Линăн шывланнă куçĕсем йăлтăртатаççĕ. Вăл нĕш-нĕш туса илнинчен те паллă: кĕç-вĕç йĕрсе ярать. Каччă ăна хĕрхенсе унăн пит çăмартийĕсем çинчи куççуль тумламĕсене аллипе шăла-шăла илчĕ.

— Пĕтĕмпех хăвăнтан килет, Лина. Хăв мĕн тăвас тетĕн, çавна тума пултаратăн. Пурнăçна офицерпа çыхăнтарас килсен — манран ирĕк. Эпĕ сана иртнинче те, Шупашкарта чухне, тытса чараймарăм — Тит патнех тартăн кафене.

— Пĕлетĕп, тахçанах пĕлетĕп, мана Тельман хĕрĕ Венера та каланăччĕ. «Макçăм пуçне пустуй ан та çавăр, ан яр ун ятне, санпа пĕрлешес пулсан эпир унпа калаçмастпăр та», — тенĕччĕ. Эсĕ мана пурпĕрех хăвăн арăму тăвас çук. Тĕрĕсех вĕт? Кала?

— Хăвах эсĕ мана хĕрсемпе калаçма пĕлместĕн тесе сивлерĕн-çке, райпо пуçлăхĕн çăтмах пахчинче ырă курса савăнасса хапсăнтăн, унта кĕреймерĕн те, халĕ офицер арăмĕ пулма ĕмĕтленетĕн. Манпа, ĕç çинчен те, ял çыннисем çинчен калаçакан каччăпа, мĕн тăватăн çак эс...

— Эх, райпотребсоюз-пĕтерепсоюз, пĕтерчĕ ман пурнăça та... Урăх ан калаç, чарăн. Хăть тем тесен те пурпĕрех эпĕ сана кӳренместĕп. Ытала мана. Юлашки хут ытала-ха, чунăмçăм, юлашки хут, качча кайиччен хыытă ытала, чĕре патне çитиччен... Ĕмĕр манми... А-аа-ааахх!..

Чарусăр çил таçтан муртан вĕçсе килчĕ те хăмăшсене çине-çине юрлаттарчĕ: чăшăл-чăшăлл! чăшăл-чăшăлл!.. Карачăм мучи чанĕ иккĕ çапрĕ, унтан — виççĕ.

## 19

Крутов ирпе правление чирлĕ çын пек сулланса пырса кĕчĕ. Сĕтелĕ хушшине кĕрсе ларчĕ те вăл сунтăхран сăн ӳкерчĕк кăларчĕ, Линăн пит-куçĕнчи кашни йĕре палăртса çак хут çинчипе чăн-чăн курнине танлаштарчĕ. Студентка чухнехинчен нумай улшăннă вăл. Куçĕсем çеç çаплах вичкĕн, каччă чĕрине халĕ те çунтарасла хавшатрĕç. Алăк уçăлнă сасса илтсе Крутов шартах сикрĕ, сăн ӳкерчĕке тепĕр майлă çавăрса хучĕ, тăрса Волкова алă тытрĕ.

— Ан пытар, Макçăм. Кампа йăпанса ларнине пурпĕрех пĕлетĕп. Юлташла каласан, тем, ухмах сутти туса çӳреместĕн-и-ха эсĕ. Вăрманкасра райпо председательне Милова качча тухнă тет вĕт вăл, сан «хĕрӳ». Усал сăмах утпа çӳрет тет. Ман хăлхана та кĕчĕ авă. Халăх мĕн калĕ? Чĕрĕл, чĕрĕл ку чиртен. Капла эпир ĕç çинчен те манса кайăпăр. Мургаев телефонпа тин кăна сĕт планĕ пирки тĕпĕртеттерчĕ. Çуллахи лагерьте çирĕп йĕрке туса çитереймерĕмĕр пулас. Кăнтăрлахи сăвăма çитсе курар-ха паян, — терĕ председатель.

Ку ыйтăва Максим Максимович хăй те партком ларăвне лартас тесе шутланăччĕ-ха. Яков Сидорович темшĕн-çке кулленхи ĕç пирки председательтен, ĕçне япăхлатсан, бюрора-мĕнре чи малтан парторгран ыйтать? Юрать, халĕ те кая юлман сĕт ыйтăвне татса памашкăн. Сĕнӳпе килĕшни çинчен пĕлтерчĕ те Крутов хайхи сăн ӳкерчĕке вакла-вакла урнăна пăрахрĕ.

— Çакăнпа вĕçленчĕ ман ăнăçсăр юрату, тусăм. Чĕрене малашне чул пекех хытарăпăр, халăхра хамăр çинчен усал ят кăларма сăлтавне тупса памăпăр. Ĕнер Кайривартан таврăннă чухне тĕл пултăм ăна, ĕнер ĕмĕрлĕхех сыв пуллашрăм унпа. Чăн та, тур пулăшнипе татса панă пекех пулчĕ ку ыйтăва. Ĕçри ыйтусене çеç кам пулăшнипе татса парăпăр-ши?

— Пин ыйту та пулĕ ман пуçра... Хăшин пирки калан эс?

— Парткомра иртнинче йышăннă пирки. Мĕншĕн тухса тартăн-ха ун чухне ларуран? Мĕн кăтартса тĕлĕнтертĕн-ха? Е эп председатель те — хуça тесшĕн пултăн-и? Кăтартăп ак сана пĕрре «хуçа». Куратăн-и çак чышка? Сан правлени пур. Эртелпе канашла. Эс партком членĕ. Çавăнпа сан та, пирĕн те пĕрле татса памалла ку ыйтăва.

Парторга хирĕç Волков чалтах сиксе тăчĕ, сăмаххисене сĕререх кăларчĕ:

— Хă, партком... Хă, партком секретарĕ... Председатель пуçĕ тăрринче ташласшăн, мана пăхăнтарасшăн...

— Çаплах, тусăм, — майĕпен лăпланса пычĕ Крутов, — партком пур, партком пуçĕнче Крутов пур. Парторганизаци пур. Партийĕ ертсе пыраканни тĕк, хальлĕхе шăла çыртсах пăхăнас пулать — сана килĕшсен-килĕшмесен те. Шутла-ха, кам ертсе пырать тата ĕçе, енчен те эпир ертсе пымасан? Мĕн, тĕрĕс мар-им? Ларуран юнтарса тухса кайнипе хăрататăп терĕн пуль. Çук, никама та хăратаймарăн. «Çамрăкрах-ха, тăн кĕрсе çитеймен, пурнăç хăех вĕрентет», — тесе юлчĕç партком членĕсем. Сансăрах йышăнтăмăр эпир мĕн-мĕн йышăнмаллине, сасă çитрĕ. Культура керменĕ тумалла пирĕн — тумалла! Ыйтăва колхозниксен пухăвĕнче татса памалла. Йышăнăвне санăннах пурнăçламалла. Партин тĕп принципĕсенчен эсĕ те, эпĕ те иртеймĕпĕр. Тем пек хирĕçлесен те, тем пек тапаçлансан та. Сахалрах пайĕ яланах ытларахăшне пăхăнать. Ан ман çакна, тусăм!

Тельман, çиллине irттерсе ярсан, аллине Максăм хул пуççийĕ çине хучĕ те:

— Лăплан, — терĕ. — Пурнăçлатăп. Партком йышăнăвне пурнăçлатăпах. Анчах çапах та малтан выльăх-чĕрлĕх витисем тăвар-ха. Вăй çитерсен вара керменне те çавăрса лартăпăр. Хурăнварти сысна вити мĕнлине хăвах пĕлетĕн. Сысна вити тумалла чи малтан — сысна вити!..

Итленĕ май Крутов куçĕ умĕнчен çĕртме уйăхĕнчи ӳкерчĕксем вĕлтлетсе иртрĕç. Колхоз акатуйĕ вĕçленнĕ хыççăн вĕсем вăрмантан савăнсах таврăнатчĕç. Çырма пуçĕнчи сысна ферми патне çитерехпе такам хушнă пекех утасне хулленлетрĕç, сылтăмра ларакан лутака, кивĕ витене пурте тĕлĕнсе пăхрĕç. Çамрăксем чарăнсан, Тельман амăшĕ, Нинук, ассăн сывласа каларĕ:

— Сирĕншĕн вите чăннипех те кулăшла пек пуль. Пирĕншĕн вара, ачамсем, çак ӳкерчĕк колхоз пурнă-

çĕн тĕкĕрĕ евĕрех туйăнать. Ку витене, Тельман, вăрçăччен аçу, председатель чухне, тутарма пуçланăччĕ. Йывăçне кăларттарчĕ, пурине пураттарчĕ, анчах ĕçневĕçне пĕтерейменрĕç — вăрçа тухса кайрĕç. Кĕлте улăмĕпе шăтăр-шăтăр витнĕччĕ. Вăрçă хыççăн ăна, выльăх апачĕ валли сĕве-сĕве, виççĕ те çĕнĕрен витрĕмĕр. Аллăмĕш çулччен, тарăнварсемпе пĕрлешиччен, çуррине улăмран тасатса аран-аран чуспа хуплакаларăмăр. Пĕрлешсессĕн аталанма мар, пĕр хушă кутăн чакса лартăмăр. Чухăн кӳршĕсем çыпçăнчĕç-çке ун чухне пирĕн çумма. Çавăнпа йывăр пулчĕ. Кириллов председателе ларсан хуртарчĕ çав шифер ретне. Вите пуçне çил-тăвăл тустарса кайнă хыççăн такамран тупса килчĕ. Хăш çынсем каланă тăрăх, хăйĕн пӳрчĕ тăррине витнĕ шифер юлашки тет-и — пĕлме çук. Çав хĕç тимĕрне, ăна, Карачăм мучу ыватрĕ унта. Вăрманкасран тимĕр черепица турттарса килеттĕмччĕ. Хуралтан таврăнаканскер, вăл, лава вите тĕлĕнче хуса çитрĕ те: «Ну, Нинук кин, ывăлна колхоз пуçлăхне лартнă ятпа телей сунса пултăр», — тесе пĕр черепицине шифер тăрне персе ячĕ. Витене хĕç тимĕрпе виттерес шухăшпа шӳтлерĕ те ĕнтĕ ват ăсчах... Эсĕ, ывлăм, çĕнетейĕн-ши аçу витине?..

— Çĕнететпĕр, анне, çĕнететпĕр, — хаваспах шантарчĕ Тельман. — Атте витине пăсса ун вырăнне кĕçех çĕннине лартатпăр. Кирпĕчрен, чулран. Тăррине нихçан тутăхман хĕç тимĕр витетпĕр. Йăлтах улăштаратпăр фермăри ĕç-пуçа.

— Ашшĕне асăнса лартнă пурнăç палăкĕ пекех пулĕçха малашне çакăнти çуртсем. Пуçларăмăр ĕнтĕ пĕрле ĕçлеме — алла-аллăн тытăнса ĕçлеме, — хулран çавăтса уттарчĕ вĕсене Крутов.

Акă халĕ, çав хумхануллă саманта аса илнĕ хыççăн, вăл чӳрече умĕнче чĕнмесĕр тăракан юлташĕ çумне пырса тăчĕ.

— Çапах та йăнăшатăн эс, Тельман, — терĕ вăл хуллен. — Асту-ха, аçу сан витипе клубне пĕр харă-

сах тутарма пуçланă. Фермăри сысна сассине итленĕ хушăрах ял керменĕнче те концерт итлес тесе ĕмĕтленнĕ вăл. Малашлăх ĕмĕчĕ унăн ывăлĕннинчен пуянрах пулнă курăнать.

— Пулĕ, пулĕ, йăнăшасси такамăн та пулĕ, йăнăшран тĕрĕслĕх, çирĕплĕх патне куçса пырасчĕ. Эс капла председателе авлантарас пирки те парткомра йышăнса хăварас тейĕн, шăпăрлан? Çитĕ тавлашса, айта хам пата.

Волков тусне çавăтсах хăй пӳлĕмне туртса кайрĕ, сĕтел сунтăхĕнчен сăн ӳкерчĕк туртса кăларчĕ.

— Хитре, ашшĕне, Шмыкова хывнă. Пĕр кашăк шывпах çăтса яма пулать. Асту, çаклатса каяççĕ-ха институтран вĕренсе тухиччен, — шӳтлерĕ Крутов.

— Ку шухăш хама та канăç памасть. Хĕре ăна шанса пурăн-ха. Авă Лина санпа мĕн туса хучĕ. Çапах та, астăватăн пуль, яла хула сăнĕ кĕртмесĕр авланмастăп тесе сăмах патăм-çке...

— Шухăшламасăр сăмах пама юрамасть. Сăмахна пурнăçа кĕртетĕн-и е кĕртместĕн, анчах строительствăна хăвăртлатма тăрăш. Çăкăрпа танах кирлĕ вăл кермен. Вăрманкасри музыка шкулĕн директорĕ килсе кайнăччĕ, филиал уçасшăн.

— Авланасси-качки те пулать, те пулмасть, тусăм, иксĕмĕртен, çапах культура керменĕшĕн те, вăтам шкулпа ача сачĕшĕн те, пекарьнăшăн та хамăрăннах çанă тавăрса ĕçлеме тивет. Вĕсемшĕн, ху каланă пекех: кĕрешмелле, шырамалла, тупмалла та парăнмалла мар. Çавăн пек вĕт пирĕн тĕп шухăш?

— Тĕрĕс, Тельман.

— Музыка шкулне Хурăнвар клубĕн пĕчĕк залĕнче уçăпăр, кайран уйрăм çурт лартса парăпăр. Хамăр ачасем те вĕренĕç...

Иккĕшин хушшинче кунашкал калаçусем час-часах пулса иртеçĕ. Тепĕр чухне вĕсем пĕр-пĕринпе

хĕремесленсех тавлашаççĕ, çапах та юлташлăхпа туслăх туйăмĕсене тĕкĕнмеççĕ. Йăлтах ĕçшĕн, хуçалăх ӳсĕмĕшĕн, ял çыннисен телейĕшĕн кĕрешсе пĕр çулпа, çĕнтерӳ çулĕпе утаççĕ çак икĕ хĕрӳ каччă.

20

Колхоз Тарăнварпа Хурăнвар хушшине çуртсем лартать. Малтанхи вунă пӳрчĕ хатĕр ĕнтĕ. Туслăх урамĕнчи хваттерсене механизаторсемпе тата выльăх-чĕрлĕх пăхакансемпе пĕрлех вăрçă инваличĕсене, салтак арăмĕсене пама йышăнчĕç. Кашкăр Хĕветучĕн арăмĕ те çак чыса тивĕçлĕ пулчĕ. Тельманĕ уншăн хирĕçлесе те пăхрĕ, анчах правленире ăна итлемерĕç, хваттере эпир сире мар, паттăр фронтовик арăмне, аннӳне, паратпăр терĕç. Çĕнĕ çĕре пурăнма куçсан амăшĕ пĕрре савăнса ӳкрĕ, тепре хăраса кайрĕ.

— Тельман, кил-ха хам патарах, — чĕнчĕ Нинук ывăлне. — Калаçар.

Ачи амăшĕн пĕркеленнĕ пит çăмартийĕсем çине хĕрхенсе пăхрĕ, ăна шуралнă çӳçĕнчен ачашларĕ.

— Шухăшла-шухăшла пуç та пăтранать. Ку тăлăх пурнăçра йĕрсе те, ĕçлесе те, сана ура çине тăратассишĕн ăнтăлса та ывăнтăм. Вăй пĕтекен пулчĕ. Ку пӳлĕмсене эп тасатса-тирпейлесе те çитерееc çук. Ун чух авланма чартăм сана, каçар. Халь авланатăн пуль, ывлăм. Венеруна илме те чармастăп. Килтĕр, пурăнтăр савăнса. Текех хăвăрăн ирĕкӳ, — терĕ вăл ассăн сывласа.

Тельман хĕпĕртенипе амăшне тытса ыталарĕ, çав каçах хĕрне пысăкран та пысăк хыпар пĕлтерчĕ. Венера хавасах. Хĕрӳ ĕç çиччен Волковăн туй пулать!

Макçăм Крутов кунта килнĕренпех çамрăксен пурнăçне интереслĕрех, савăнăçлăрах тăвассишĕн çунать. Çавна май комсомол комитетне те, культура

учрежденийĕсенче ĕçлекенсене канăç памасть. Хурăнвар клубĕнче мĕн тĕрлĕ ĕç тумарĕç-ши çавăнтанпа? Вăтам шкул директорĕ Числов пĕррехинче Крутовпа ятарласах калаçрĕ.

— Пĕтеретĕр капла эсир ман çамрăк учительсене, Максим Максимович, — сывăрма та, канма та памастăр. Уроксене хатĕрленсе килейми пулчĕç вĕт. Клубра ташă ташлама вĕрентмелле - пирĕн учитель. Комсомолла туй irттермелле — каллех пирĕн çын. Драмкружокĕ, хорĕ, спорт секцийĕ... пурне те асăнса та пĕтереес çук. Ытла янтти çине шанмастăр-ши?

Директора кӳренмерĕ вăл, кĕскен çапла тавăрса ларĕ çеç:

— Сирĕн учительсене эпĕ, Петр Петрович, ял культурине çĕклеме пулăшнăшăн колхозниксен ячĕпе тав тăватăп. Яланах пĕр урапа çинче пĕр юрă юрласа пырар.

Числов ахалех турткалашать. Учительсемсĕр те çук мар вĕсен ял культуришĕн тăрăшакансем. Шмыковах илес. Чунне парса ĕçлет вăл клубра. Пĕрмай вулакан, нумай пĕлекен çын. Трахвин Йăванчăн яланах мĕн те пулин çĕнни тупăнать. Партком секретарĕ клуба кĕрсенех вăл халĕ те туйсем пирки калаçу пуçарчĕ. Ăна комсомолла туйсем кăмăла кайсах пĕтмеççĕ.

— Эпĕ хам та шухăшланă-ха ун пирки, — килĕшрĕ Шмыковпа парторг. — Хĕрпе каччă çăмăл автомашинăпа ларса пыраççĕ те клуба, сцена çинче çырăнаççĕ. Çамрăк мăшăра пехиллеççĕ, парнесем параççĕ. Унтан тухсан каллех автомашинăпа çамрăк мăшăр килне вĕçтерет, вара яланхилле арăш-пирĕш ĕçкĕ пуçланать.

— Çапла çав, ячĕшĕн çеç тунă пек туйăнать туйсене. Унта пирĕн чăвашлăх курăнмасть. Ытти республикăсенчи йăласенех илсе пăхар-ха. Вĕсем хăйне евĕр илемлĕ, халăхăн авалхи йăлисене хальхи пурнăç сăнĕ кĕртсе епле савăнăçлă курăмпа кăтартма пĕлеççĕ. Айтăр-ха эпир те

çĕнетер туйсене. Шутласан, параппансăр, туй юррисĕр туй-и вăл? Ахалех пăрахăçлатпăр эпир хамăрăн авалхи йăла-йĕркесене. Тельман Федотович авланать тенине илтнĕччĕ. Чăнах пулсан, председателĕн туйне çĕнĕлле тăвар пуль. Эпĕ хам та калаçăп, эсир те калаçса пăхăр. Хирĕçес çук пек туйăнать вăл уншăн.

Клуб заведующийĕпе партком секретарĕ ку ыйтупа тĕплĕн калаçса татăлчĕç. Трахвин Йăванч патĕнчен Крутов кăмăллă туйăмпа тухрĕ, ял витĕр сысна фермине кайрĕ. Унта председателе тĕл пулсан туй ыйтăвне вăрттăн хускатса пăхма шутларĕ. Каккуй унта, кăмăлсăррăн алă сулчĕ Волков:

— Сан сикес шухăш. Ман кунта хăть çурăлса кай. Мургаев ĕнер мĕн тенине мантăн-им?

— Манман-ха. Астăватăп, ĕнер райком секретарĕ канашлу пухнăччĕ. Районăн аш-какай планĕ çунма пуçланă-çке. «Шурăмпуçне» тата пилĕк тонна хушса суттарасшăн вăл. Волковăн суту виçиллĕ выльăх урăх çуккă. Ăна итлемеççĕ, сĕтеле чышкăпа çапсах паян-ыранах сутма хушаççĕ. Вăл килĕшмест. Эпир кая юлнă ытти колхозсемшĕн виçесĕр сысна сутса тăкак курса ларасшăн мар. Çакăн çинчен пуль эс?

— Çавăн çинчен. Сутасшăн мар çав. Сутмастпăр та! Пушали хăратчăр. Хăрамастпăр! Ыранхи çинчен шухăшламалла. Хăйне те паян, тĕрĕслеме килсен, çаплах каларăм. Ятлаççах кайрăмăр. Ниепле те хама хам лăплантараймастăп çавăн хыççăн. Каккуй авланас, каккуй туй тăвас шухăш халь ман.

Çитĕнсе çитмен сыснасене, паллах, райком тем пек хĕтĕртсен те патшалăха сутмарĕç вĕсем, çителĕклĕ таран тăрантарса самăртрĕç, хуçалăха нумай тупăш кӳчĕç. Хӳрери хуçалăхсемшĕн вĕсем айăплă мар. Вĕсене ура çине тăратассишĕн район пуçлăхĕсем çунчăр. Шурăмпуçсем кунта те çĕнтерчĕç.

Ыраш вырма тухиччен колхоз председателĕ авланчĕ. Туй юрри те янăрарĕ, туй шилĕкĕ те пулчĕ. Виçĕ параппан виçĕ тĕрлĕ сасăпа ял халăхне Салакайăк Йăванĕсен умне пуçтарчĕ. Çĕнĕ хапха тунăччĕ ĕнтĕ вăл, пӳртне те юсаттарнăччĕ.

Венерăпа Тельман виçĕ урхамах кӳлнĕ капăр тăрантас çинче шăнкăрав сассипе киленсе пыраççĕ. Акă вĕсем клуб умне çитрĕç. Чăваш кавирĕ тăрăх утса пысăк зала кĕчĕç. Шалта халăх лăк тулли. Туй юрри янăрать, параппан тӳнклетет.

Çамрăксен пĕрлешнин çырăну йĕрки вĕçленнĕ хыççăн çынсем урама тухрĕç, клуб умĕнче карталанса ташлама пуçларĕç. Çĕнĕ мăшăр акă каллех çатан урапа çинче. Шăнкăрав сасси ян та ян! каять. Параппан тӳнклетет те тӳнклетет. Урапа çинче тăрса пыракан туй арăмĕсем авăна-авăна юрлаççĕ. Çĕнĕ туй çĕнĕ урама кĕрлесе çитрĕ.

Мăнукĕ качча кайнă çĕре Карачăм мучи хăйĕн яланхи «парат хурмине» тăхăнса пынă, шăпăрне те манса хăварман. Халĕ вăл председателĕн уçă машинипе ял тăрăх мăнаçлăн ярăнса иртет.

— Хăвала, Кĕркури! — шофер хăлхинчен кăшкăрать мучи. — Юлашки вăйĕ тухиччен хăвала! Паян пысăк уяв. Ял хуçи авланать. Ман мăнук качча каять!

Карачăм мучин кĕреçе сухалĕ икĕ еннелле вăркăшать, карчăкĕн питне сĕртĕнтерсе кăтăклантарать.

— Ват супнă, пуçтар сухална, — айккинчен кăт тĕкет Анукĕ.

Ватти те, вĕтти те савăнăçлă. Туй кĕрлет! Венера амăшĕн çеç чунĕ кӳтнĕ. Крахвине Нинуксем патне пымарĕ, кĕрӳшĕ тепĕр хут машина ярсан та килĕнчи сĕтелĕ хушшинчен тухмарĕ.

— Шмыковсăр килместĕп тет, — шӳтлесе пĕлтерчĕ Кĕркури Афанасьев.

Юнашар ларакан Трахвин Йӑванч шофер хӑйӗнчен мӑшкӑлланӑшӑн хӑнк та тумарӗ, тӑсрӗ те тӑсрӗ аккордеонне чун килениччен. Ун сасси ҫумне Карачӑм мучин шӑпӑрӗ ӑнналатса хушӑнчӗ, параппан тӳнклетсе хӑлхана хупларӗ.

Туя Мургаев та килнӗ. Сӗтел хушшинче вӑл пӗр вӑхӑтра Карачӑм мучипе тем ҫинчен питӗ тӑрӑшса каласса ларчӗ, хушӑран, аллисемпе хӑлаҫланса, ахӑлтатсах кулчӗ. Ахӑртнех, старик райком секретарьне пӗрпӗр кулӑшла истори каласа парать. Чӑн та ҫаплах.

— «Йӳҫӗ!» тесе кӑшкӑрнӑ чух хамӑн та карчӑк еннелле тута тӑсӑлать вӗт, Якку Ҫитӑрч, тахҫан ҫав чупчупшӑнах вӑл питрен ҫутӑлтарса янине аса илетӗп те...

Анукӗ, ӑна итлесе, упӑшкине юнать. Карачӑм хавасланса сах калаҫать:

— Пирӗн кӑлхус махра нумай лартнине эсир, ырӑ ҫынсем, хӑвӑрах манран лайӑх пӗлетӗр. Халь аллӑ гектартан та ирттӗр пулмалла. Вӑрҫӑ хыҫҫӑн саксунски тапак ӳстерме хӑтланса пӑхнӑччӗ. Махра-тапак патӗнче кам ӗҫлет? Паллах, хӗрарӑм. Эп хуралтаччӗ. Каласа ларап ҫапла шӑпӑр каланчан иккӗмӗш хутӗнче. Хӗрарӑмсем юнашарах тапак тӑрри татаҫҫӗ. Куратӑп-ха хӑрах куҫ хӳрипе: йӑран пуҫне тухнӑ йыт пуллисем пӑшӑл-пӑшӑл туса илчӗҫ. Кӗҫ Ултутти текенни, вӑрҫӑри парламентер пек шур тутӑр сулласа, ман паталла йӑкӑртатрӗ. Ҫитрӗ те каланча умне, кӑшкӑрать: «Карачӑм, эй, Карачӑм! Ҫитет сана вӑкӑр хӑмпи вӗрсе, айта пирӗнпе шапа хырӑмӗ вӗрсе хӑпартма! Чӑм кунта!» Вӑл вӑхӑтра ӑс-тӑн ҫивӗчрех, хам та япшартарах ҫав, Ултутти сӑмаххисем пырса ҫапӑннипех сухал та чӑшӑлах хускалчӗ. Юриех: «Мӗн?» — тетӗп. «Ан мӑшкӑлла, часрах ан! Атту туртса антарап: хӑвна та, йӗмна та. Ан?! Вӑрмана васкатпӑр. Шӑпӑрна ил!» — ҫухӑрмаллипех ҫухӑрать хусах матка. Картлашкаран ҫӗре пусиччене ярса илчӗ мана Ултут-

ти, ытакласах хĕрарăмсен ушкăнне çавăтса çитерчĕ. Махра-тапак каманти, ĕç вĕçленнĕ ятпа, канма хатĕрленнĕ-мĕн. Как рас сăпасчĕ. Тур пулăшнă пекех тата мана хуралта улăштарма Уксах Минька çитрĕ. Тешурствăна чин-чинăм парса хăвартăм ăна. Вăрманĕ пирĕн авă çывăхрах. Уçланки те тăпăлкка. Хĕрарăмсем хутаççисенчен, пуракĕсенчен апат-çимĕç, пан улми туртса кăларчĕç. Апат анать уçă сывлăшра. Ман йыт пуллисем карталанса ташлаççĕ, хĕрсех кайрĕç. «Тавай, Карачăм, ăшала!» — теççĕ. Эпĕ те вăкăр хăмпине вĕрсе хăпартатăп та... шăпăр ман уçланка çурать. Эх, тĕвеççĕ инкесем, эх, тĕвеççĕ. Ташă варринче, типнĕ кăткă тĕми çинче, патша пек саркаланса ларатăп. Эх, çаврăнаççĕ ман тавра такмакласа: «Хамăр пулсан тĕнчере...»

Туй сăрине ĕçсе панă хыççăн кăххăмлатса илчĕ те вăл, итлекенсем çине чеен пăхса, юмахне малалла çаптарчĕ:

— Хĕрарăм ĕнтĕ вăл, пĕр хĕрсе кайсан, çĕре те тепĕр майлă çавăрса лартма хатĕр, сиксе пĕлĕте те йăтса антарма пултарĕ. Ытакланчĕç те хайхискерсем мана тавралла карса илчĕç. «Тăр, Карачăм!» — тесе сухалран кăрт туртрĕУлтутти. Каллех ура тапса кăрнлаттаратăп. Юрласа та, ташласа та йăлăхрĕç пулас, «Тавай шăпăрçа черетпе тав тăвас!» — теме тытăнчĕç. Чун шии! турĕ кăна илтсен. Вун виç хусах матка вун виççĕ ыталасан пĕтрĕ пуç тетĕп.Ултутти çав самантрах ячĕ илчĕ мана măйран, ай пăчăртать, ай пăчăртать. Кăкăрĕ пĕçертнипе чĕркуççи вăйĕ лăштăрах кайрĕ. Чуп тăва-чуп тăва темиçе сухал пĕрчине кăкласах илчĕ. Ну, шутлатăп, пурте Ултутти пек кăшлама пуçласан миçе пĕрчĕ юлĕ-ши карчăк валли? Унччен те пулмасть, тепри ыталаса илет. Пĕри теринчен çуллăрах та вĕрирех вĕт. Вун виççĕмĕшĕ, çамрăкраххи, эртелпе тĕксен те пымасть ман пата. «Тав ту шăпăрçа!» — пусахлаççĕ пурте. «Телейсĕр эп, çуралма та

вун виççĕмĕш майра çуралнă та, качча та вун виççĕмĕш майра тухрăм та, упăшкана та вун виççĕмĕш куннех çухатрăм та, кунта та вун виççĕмĕш пултăм та...» — тесе лĕрр йĕрсе ячĕ. «Ара сана мĕн телейĕ кирлĕ паян кунта?» — чана ушкăнĕ пек янраççĕ хĕрарăмсем. Вĕри тута пырса тĕкĕнессе кĕтсе куçа канлĕн хупрăм. Сисетĕп-ха, такам сухалран туртать. Хавасланнипе явакласа илтĕм те умри хĕрарăма, аташса хамах чуп тума пикентĕм. Питрен такам чанклаттарса янипе куç-пуç чариех уçăлчĕ. Пăхатăп — умра махра-тапак хусахĕ вырăнне юратнă карчăкăм тăра парать. Тур пӳрниех пулчĕ-иç вун виççĕмĕшĕ тетĕп ăшра. Сухалран çавăртсах илсе кайрĕ карчăк савăк ушкăнран. Ултутти шăла йĕрсе юлчĕ: «Эй, Карачăм, шапа хырăмĕ вĕрсе хăпартма хăçан пыран?»

Мучие хăлха тăратса итлекенсем ахăлтатса кулса ячĕç, «Йӳçĕ! Йӳçĕ!» тенипе хавасланнăскерсем, пĕрре çамрăк мăшăр çине, тепре ваттисем çине пăхрĕç.

Мургаев туй саланиччченех киле кайма тухрĕ. Максим Максимович секретаре ăсатса ярсан хваттерне таврăнчĕ. Ульки акка унран туй пирки чылайччен ыйтса ларчĕ. Каччă хуйхăрнинe сисрĕ вăл, çавăнпа ăна лăплантарчĕ:

— Ан хуçăл, ывăлăм, эпир те акă, вăхăчĕ çитсен, туй кĕрлеттерĕпĕр-ха. Тĕнче хĕсĕр мар. Хамăр пек лайăххиех тупăнĕ-ха.

Ульки акка сăмахĕсем пурпĕрех Макçăмăн кӳтнĕ чунне уçăлтараймарĕç. Вăл тĕлĕкĕнче ирчченех Линăпа аташса выртрĕ.

## 21

Сасартăк алăка шаккарĕç те самантрах пӳрте клуб техничики Лютти тата палламан арçынпа хĕрарăм кĕрсе тăчĕç. Ульки акка пурне те малалла иртме сĕнчĕ.

— Артистсем илсе килтĕм сан пата, Ульки акка. Йышăнатăн-и? — ыйтрĕ техничка. — Песплат концерт куратăн.

— Макçăм хирĕçлемесен мана çавах, — терĕ кил хуçи.

Крутов ухутах пулчĕ, Лютти тухса кайсан артистсемпе паллашрĕ. Кусем арăмĕпе упăшки, Антонина Ивановнапа Михаил Степанович Керженевсем пулчĕç иккен. Ульки акка тĕпелте аппаланнă вăхăтра Максим Максимович Чулхула çыннисене кунти пурнăçпа, чăвашсен йăли-йĕркипе кĕскен паллаштарчĕ, хăй унта вĕренме кайма хатĕрленекенскер, юнашарти хула çинчен ыйтса пĕлчĕ. Антонина Ивановна арçынсен калаçăвне хутшăнмарĕ, стенаран çакса янă рамăсен умĕнче сăн ӳкерчĕксене тимлесе пăхса тăчĕ. Вырăнтан хускалмасăр сăнарĕ вăл пĕчĕк ача тытнă çамрăк арçынпа хĕрарăма. Крутов çакна асăрхарĕ те васкасах ăнлантарма пуçларĕ:

— Кусем пирĕн кил хуçин, Ульки аккан, ачипе кинĕ, аллинчи — мăнукĕ. Вăрçăччен ӳкерттернĕскерех, сарăхма та пуçланă авă. Ывăлĕ, Ваççук ятлăскер, иртнĕ вăрçăра вилнĕ тет. Кинĕпе ачи ăçтине халĕ те пĕлмест вăл. Мана Ульки акка ялан калать: «Эс каснă-лартнă ман Ваççук пек», — тет. Чăнах та, хама та ун пекех туйăнать. Пĕр пекрех çын сахал-им тĕнчере? Çапла вĕт?

— Пулма пултарать, — унпа килĕшсе пуçне сĕлтрĕ Керженев.

Максим Максимович сăмахĕсем Антонина Ивановнашăн çурмаран каснă пекех пулчĕç. Вăл пĕрре ача тытса ларакан Ваççук çине, тепре хăйне ăнлантаракан Крутов çине пăхрĕ те чĕрине ярса илчĕ.

— Чăнах та, пулать ун пекки, пĕр евĕрлĕ çын нумай тĕнчере. Миша, йывăр мана, ĕшентĕм çул çинче, сумкăран таблетка кăларса пар-ха... — ахлата-ахлата пукан çине сĕвенчĕ хĕрарăм.

— Чĕрепе аптăрать, — ăнлантарчĕ упăшки, — каларăм килтех юл тесе, итлемерĕ, каяппах Шупашкара тет. Хăй вăл Чăваш Енрен-çке.

Клуба Крутовсем Ульки аккана та илсе кайрĕç, малти ретех кĕртсе лартрĕç. Антонина Ивановна вырăс юррисемпе пĕрле чăвашсен «Вĕç-вĕç куккукне» шăрантарса парсан халăх тăвăллăн алă çупрĕ.

— Вăт майра те эс ăна, пăх-халĕ мĕнле юрлать, — тĕлĕнсе ларчĕ Ульки акка. — Ман кин те чĕкеç пекехчĕ те çав, мĕн тăвăн ăна, пурнăçа, халь пĕччен эп, тăлăх тунката пек пĕччен. Татах юрлать-ши чăвашла, ыйтса пăх-ха, Максăм?

Крутов сцена çине хут çырса пачĕ. Кĕçех Антонина Ивановна «Хваттер хуçи Ульки акка ыйтнипе «Вун ик кăшăллă» юрă юрлатăп», — тесе пĕлтерчĕ. Баянисчĕ кĕввине пĕлмест, артистка унсăрах шăрантарчĕ хăна юррине. Ял халăхĕ тăвăллăн алă çупрĕ. Савăннипе Ульки акка ура çинех сиксе тăчĕ.

Ытти артистсен номерĕсем хыççăн сцена çине каллех Антонина Ивановна тухрĕ, куракансене шĕвĕр туя вĕçĕнче тарелкăсем çавăрса тĕлĕнтерчĕ.

Тепĕр кунне Керженевсем Ульки аккапа сыв пуллашрĕç.

Антонина Ивановна автобусра Вăрманкаса çитичченех никампа калаçмасăр шăла çыртса пычĕ, хăйне кам та пулин сăмах хушсан та пуçĕпе сĕлтсе евитлерĕ çеç. Ун ăшĕнче тăвăл кĕрлерĕ: вăрçăчченхи пурнăç, вăрçă вăхăтĕнчи асаплăх тата савăнăç пĕр-пĕринпе кĕрешрĕç. Куç умĕнчен çĕр тĕрлĕ ӳкерчĕк вĕлтлетсе иртрĕ пуль.

«Максим Максимович» тет тата, — калаçрĕ вăл хăй ăшĕнче. — Нимле Максим та мар эсĕ, манăн ывăлăм Владик, Владик Васильевич Воробьев. Мĕнле майпа лекнĕха эсĕ аслапу патне? Çын пулнă, партком секретарьне

çитнĕ. Ун чухне... Ун чухне хаяр вăрçă пыратчĕ, тин çеç пуçланнăччĕ-ха вăл, хăçан вĕçленесси те паллă марччĕ...»

Йĕркипе аса илме пуçларĕ Антонина Ивановна хăйĕн çамрăклăхне.

Тоня Шупашкарта артиста вĕреннĕ чухнех Михаил Степановичпа паллашнăччĕ. Керженев Чулхуларан чăвашсен тĕп хулине театра пулăшма килсе каятчĕ. Атăл илемĕпе киленнĕ вăхăтрах вăл ăна хăйпе пыма илĕртетчĕ. Тоня унăн арăмĕнчен хăратчĕ. Керженев «эпĕ унран уйрăлатăп» тесе ĕнентернине чăваш хĕрĕ суя вырăнне çеç хуратчĕ. Вĕренсе пĕтерсен Тоньăна Вăрманкасри колхоз театрне ĕçлеме янăччĕ. Хурăнварта спектакль кăтартнă чухне вăл Вася ятлă çамрăк учителе килĕштернĕччĕ, каярахпа ăна качча тухрĕ, унпа ывăл çуратрĕ.

Унтан вăрçă пуçланчĕ. Тоня ялта питĕ тунсăхлатчĕ, упăшкинчен вилнĕ хут килсен пушшех ниçта кайса кĕреймесĕр тăвăлатчĕ. Çавăн чухне вăл Михаил Степановичран çыру илчĕ: «Эпĕ халь Шупашкара вăхăтлăх куçса килтĕм. Арăмпа йăлтах ыйту татăлнă, эпĕ — пĕччен. Кĕтетĕп. Кайран ак Горькие, ман пата пурăнма куçăпăр», — çапла çырнăччĕ еркĕнĕ.

Хунямăшне, Ульки аккана, тăлăх арăм Шупашкара ĕçлеме каятăп тесе тыттарса хăварчĕ, чĕчĕ ачине силлесе станцăналла утрĕ. Икĕ талăка яхăн иртрĕ Шупашкар çулĕ. Михаил Степанович ăна, «Атăл» ятлă хăна çуртĕнче пурăнаканскер, малтан савăнсах кĕтсе илчĕ, каярахпа çын улшăнчĕ, чылайччен силлерĕ вăл çамрăк хĕрарăмăн чунне, юлашкинчен уççăнах каларĕ: «Хăвна илсе кайăп, ачуна хăть те ăçта хур. Унсăрăн... Шупашкартан арăм та, ача та тупса килнĕ тесе манран юлташсем кулса вилĕç. Шухăшла: е эпĕ, е ачу».

Çакăн хыççăн Тоня ухмаха тухнă пек пулса кайрĕ, пуçĕнче тĕрлĕ шухăш пăтранчĕ. Акă ун умĕнче — пурнăç çулĕ. Утать вăл ун тăрăх, утать, утать-утать те çул юп-

пине ҫитет. Хăш еннелле каймалла-ши? Сылтăм енне ачапа ҫеҫ кĕртеҫҫĕ ăна. Ывăнсассăн те унта канма памаҫҫĕ тет. Алăсем хытса лариччен, кăкăрти сĕт типиччен пепкене ĕмĕртсе, урари вăй юлмиччен малалла утмалла, халран кайсассăн та ача хавалĕпе, унăн ҫăлтăрла ҫиҫекен куҫ ҫутипе каймалла тет. Ачана хăвăн кĕлеткӳпе хӳтĕлесе аякран тапăнакан чир-чĕртен сыхламалла, ăна ура ҫине тăратмалла, юнашар уттармалла, анлă ҫул ҫине кăлармалла тет. Сулахаялла пĕчченех кĕртеҫҫĕ. Ку енче ҫулĕ те такăртарах, алăсем те ирĕк. Утнă май умра пысăк хула ĕмĕлки ҫывхарса килет. Алăсем те ирĕк, ирĕк... Ларса канмалли те, выртса ҫывăрмалли те пур ку енче. Умра Михаил Степанович шăл йĕрсе тăрать.

Хăш ҫулĕпе каймалла-ха унăн? Сылтăммипе е сулахаййипе утмалла? Алăсем те ирĕк, аха, алăсем... Сулахаййи, сулахаййи ҫăмăлрах. Унта ларса канмалли те, выртса ҫывăрмалли те пур. Унта Михаил Степанович, унта Чулхула кĕтет. Сулахаялли... Пĕчĕк Владик шари! ҫухăрса янипе Тоня шартах сикет, ачине чĕчĕ хыптарать те хăрах аллипе сумкине пуҫтарма тытăнать.

«Миша, чунăмҫăм, эпĕ ачана леҫме каятăп, кĕҫех таврăнатăп. Кĕт. Чуп туса, санăн юратакан Тоню» тесе ҫырнă хута минтер ҫине хурать те Тоня, ывăлне йăтса каллех ҫула тухать. Вăрманкас поселокĕнче ача ҫурчĕ пуррине илтнĕччĕ вăл. Театрта хăйсемпе пĕрле ĕҫлекенскер хĕрле ҫуратнă ачине ҫавăнта панине те астăвать.

Акă ҫĕр ҫумне лăпчăнса ларнă пек курăнакан станци ҫурчĕ умĕнче пăравус хăшлатса чарăнчĕ. Тоня вакунран палламан ҫынсемпе перрон ҫине сиксе анчĕ. Вокзалта халăх туллиех, такам та пур кунта: ҫар ҫынни те, кутамкаллă хĕрарăмсемпе мучисем те, ачи-пăчи те. Пĕчĕк ача йăтнă Тоня ҫине никамах та тĕсесе пăхакан пулмарĕ, унсăрах кашниййĕн хуйхи-суйхи вĕт. Поселок тăрăх утса ҫӳренĕ май вăл ача ҫурчĕ ăҫтине тупса па-

лăртрĕ, каялла вокзала таврăнсан вырăн тупкаласа тĕлĕрсе ларчĕ, унтан тулалла тухрĕ.

Утать, утать Тоня Вăрманкас урамĕпе, утать-утать те кĕтессе çитет. Ăçталла каймалла? Сылтăмалла-и? Сулахаялла-и? Сылтăмалла утма ытла та йывăр. Унта... Сулахаялла кайсан... Ларса канмалли те пур, выртса çывăрмалли те пур. Унта — пулас упăшка, Чулхула. Акă сулахаялла пăрăнмалла та, темиçе утăм тумалла та, ăшă ыйхăпа тĕлĕрекен ача çурчĕ патне çитмелле те... Алăсем вара тинех ирĕкленеççĕ, сулахаялла çеç пăрăнмалла, темиçе утăм çеç тумалла... Тоня ачине чуп туса алăк умне хурать те каялла çаврăнса пăхмасăр чупать. Чупать, сулахай енчи çулпа чупать вăл, ăна хирĕç Михаил Степанович чупнă пек, Чулхула çутисем çуталнă пек туйăнать. Чукун çул çумĕнчи вăрманта тин тăна кĕрет хĕрарăм. Юнашарах пуйăс кĕрлесе иртет.

Чулхуларан килнĕ хулăн çырăва Крутов правленире уçрĕ. Ăна Антонина Ивановна янă. Вулать-вулать те вăл ĕнсине хыçать, пĕрре тĕлĕнет, тепре хăраса каять, çан-çурăмĕ сăрăлтататать.

«Эпĕ сана пӳрте кĕрсессĕнех палларăм, çавăнпа тĕпелелле иртеймесĕр тăтăм, Михаил Степанович хыççăран тытнипе çеç кайса ӳкмерĕм пулас. Сăн ӳкерчĕк çине пăхнипе чĕре пушшех касса кайрĕ. Эсĕ каснă-лартнă аçу пек. Сассу та Ваççукăнни пекех илтĕнчĕ. Сана вăрттăн сăнаса, сан сассуна илтсе савăнтăм.

Сана вăрçă тухнă çул Вăрманкасри ача çуртне парса хăварнăшăн эп хама хам нихçан та каçармастăп. Эпĕ кайран сан шăпуна пĕлнĕччĕ, кам пăхса ӳстернипе те интересленнĕччĕ. Мĕн чухлĕ шухăшламан пулĕ эпĕ сан çинчен. Михаил Степанович сана пĕрле илсе кайма килĕшменниех пĕтерчĕ. Хăвах ăнлан, мана ун чухне питĕ йывăрччĕ. Халĕ вăл та, эсĕ камне пĕлсен, шутсăр

хěпěртерě. Сана питě кăмăллана вăл. Пирěн хěр ача пурччě те, вăл качча тухрě, халě иксěмěрех пурăнатпăр. Кăмăл туртсан кил Чулхулана пурăнма. Мěн пур çав Вăрманкас таврашěнче? Ял — ялах вăл.

Эсě — Владик ятлă, Владислав Васильевич Воробьев. Çакна яланах асту. Ку таранччен эпě сан пурнăçна пăлхатас мар тенěччě, çавăнпа чăн-чăн аннӳпе аçу кам пулнине пěлтермерěм, чуна хытарсах чăтрăм. Хурăнварта сана курсан чăтаймарăм, виличчен каласа хăварас терěм. Мана, ухмахланнăшăн, каçар. Ěмěр эпě сан умра парăмра. Аслапуна пысăк салам кала. Санăн юратнă аннӳ», — тенě çак тěлěнмелле çырура.

«Санăн юратнă аннӳ, — темиçе хут вуларě çак сăмахсене. — Юратнă аннӳ, юратнă аннӳ...» Ăçтан юратнă çын пулма пултаратăн-ха эсě маншăн, ăнсăртран тупăннă тěлěнмелле хěрарăм? Ăçтан? Нимле Владик та мар эпě: Макçăм, Максим Максимович Крутов. Манăн анне Чулхулара мар, кунта — Вăрманкасра. Манăн анне арçын хыççăн çапкаланса çӳремен. Манăн анне, атте вăрçа кайсассăн, унăн машини çине ларса вăрман турттарнă, атте аманса килсессěн те баранкăна çавăрма пăрахман, çěнтерӳччен, çěнтерӳ хыççăн та, пенсие тухичченех вăрман турттарнă. Бензин шăршиллě, кушăрханă, ывăннипе чěтрекен пулнă аллисемпе ачашласа ӳстернě вăл мана. Ěçе юратма, пурнăçа, çут çанталăка юратма, улталпа тата тěрěсмарлăхпа кěрешме вěреннě эпě Крутовсен çемйинче. Мана сирěн Чулхула хваттерě кирлě мар. Манăн сирěнтен те пысăк, чаплă хваттер пур, вăл — тăван Чăваш çěршывě. Манăн сирěнтен çирěп, хăватлă çемье пур, вăл — тăван чăваш халăхě».

Çак шухăшпа Максим Максимович чăвашла çыру çырчě. Хăйне сив чир чěтретнě пек чěтретсе пăрахнă кěтмен хыпара вăл хальлěхе никама та пěлтерме васка-

марӗ. «Чӗрӗ эпӗ, пурӑнатӑп, ҫуралнӑ тӑван килтех, санпах, юратнӑ аслапай», — тесе ыталаса чӑмӑртас килчӗ унӑн Ульки аккана, анчах хӑйне «юратнӑ амӑшӗ» текен хӗрарӑмпа тепӗр хут тӗл пулса калаҫиччен тӑхтас терӗ. Чулхулара вӑл ӑна куратех.

## 22

Нумай ӗҫ турӗҫ Крутовсемпе Волковсем иртнӗ ҫак пилӗк ҫул хушшинче. Йывӑр лава тапратрӗҫ-тапратрӗҫех вӗсем, майӗпенех малалла, тӑвалла илсе кайрӗҫ ӑна. Хӗрӳлӗхӗпе, ӑсталӑхӗпе, ӗҫе йӗркелеме пултарнипе палӑрчӗҫ иккӗшӗ те халӑхра. Утмӑлмӗш ҫулсен варринче парти ял ҫийӗн хӗрӳ хӗвел ҫутрӗ пулсан, ҫак коммунистсем ҫав ҫутӑпа усӑ курма пӗлчӗҫ. Ахальтен-и «Шурӑмпуҫ» колхоз та ҫав хӗвел ӑшшинче ҫурхи симӗс курӑк пек чӑшӑлах ҫӗкленчӗ.

Ҫуллахи ял вӑранӑвӗ кашниншӗн хӑйне май уйрӑм. Унӑн тӗлӗнмелле илемлӗхне кашни ҫын тӗрлӗрен куҫпа курать, тӗрлӗрен чӗрепе туять. Ачаранах юратать Тельман Федотович ялти ирпе киленме. Уншӑн вӑл — чун уҫҫи.

Никама систермесӗр хуллен-хуллен, майӗпен сӑрхӑнса кӗрет чӳречерен ирхи шуҫӑм, Тельман пит ҫӑмартийӗсем ҫинчи ҫӗрлехи тӗксӗме кӑвакрах ҫутӑ тӗспе сӑрлать. Ҫав ҫепӗҫ туйӑмпа вӑранать вӑл, вӑранать те тутлӑ ыйхӑпа ҫывӑракан арӑмӗ ҫине пӑхса тӑраймасть. Пит-куҫа тулти уҫӑ сывлӑш хупӑрлать. Кил картинче Тельман пӗр вӑхӑт ял сассине тӑнласа итлет. Автансем ӑмӑртмалла авӑтаҫҫӗ. Йӑмра ҫулҫисем хушшинче акӑ хӗвел ташша ячӗ.

Председатель ирхи апатчен ҫывӑхри уйсене пӑхса ҫаврӑнчӗ. Ыраш пиҫнӗ, паянах вырма юрать. Пӑрҫа та хытать. Сада кӗрсе пӑхрӗ. Тӑмпуҫ ҫырми таврашӗнче — тӑршши-тӑршшипе улма-ҫырла йывӑҫҫи. Кириллов

йывăçпа çĕре сая ярасшăн марччĕ. Волков тӳрех сад тутарчĕ, çĕнĕ пĕве пĕвелеттерчĕ.

Тарăнварпа Хурăнвар ывăç тупанĕ çинчи пек курăнаççĕ. «Уйăрасшăнччĕ вĕт колхоза хăш-пĕр путсĕрсем», — тахçанхине аса илчĕ Волков, — анчах ĕç тухмарĕ. Пурнăç урапине, ăна, кам тытса чарма, каялла çавăрма пултартăр-ха? Никам та. Авă епле çирĕп çыхăпа çыхăнать хуçалăх — Туслăх урамĕпе. Çавăнпа ялĕсем те халĕ пĕр пекех курăнаççĕ. Макçăм Крутов хăçантанпа ĕнтĕ вĕсене Шурăмпуç ялĕ тет. Халăхра та сарăлать çав ят, ăçтан тесен Тарăнвартан е Хурăнвартан темеççĕ, Шурăмпуçĕнчен теççĕ икĕ ял çыннисем те.

Çын пысăк ĕçре чухне яланах хăйне асăрхаса çитереймест çав, çавна пула вăл сисмесĕрех мăн кăмăллăх чирĕпе чирлет. Тусне çав чир ан ертĕр тесе Крутов председатель тахçан партком ларăвĕнчен хаяррăн тухса кайнă хыççăнах çине тăма пуçланăччĕ.Пăсăлса кайиччен юлташла асăрхаттарсах пычĕ. Çапах та...

Амăшĕ Тельмана сăмах май çапла каларĕ:

— Эсĕ, ачам, кăштах мăн кăмăллантăн пулмалла. Çынсемпе хыттăнрах калаçма пуçларăн тем? «Председатель улшăнчĕ, малтанхи кăмăлĕ мар халь» тенине пĕрре кăна мар илтрĕм. Халăх хушшинче çирĕп пулни, хуçалăхра йĕрке тытни лайăх. Анчах та тĕлли-паллисĕр нихçан та ан кăшкăр çын çине. Лăпкăрах пулма тăрăш. Ахаль сăмахпах ăнланаççĕ вĕсем. Çухăрнипе эс çынна, тен, ĕçлеттерме пултарăн, юсама вара — юсаймастăн. Кутăнлашса çеç ларать вăл ун пек чухне. Ĕçне те чун хавалĕпе мар, ячĕшĕн çеç тăвать.

— Анне, ан хăра маншăн, — пуçĕнчен лăпкарĕ ывăлĕ амăшне, — нихçан та çынсемпе усал пулма шутламастăп. Ăçтан тупса кăларнă эс ăна?

— Макçăм тусу та хушăран аса илтерсех тăрать-çке сана ун çинчен, тата манпа килĕшесшĕн мар. Аçу ятне

яр-ха сана. Хĕветут та пирĕн председательте ĕҫленĕ, нихҫан ҫын япăх калаҫнине илтмен ун пирки.

— Каварлашнă пуль пирĕн парторгпа эс, анне.

— Хăвăр калаҫни-тавлашни ман хăлхана кĕмест тетĕн пуль. Кĕрет. Халăх ярса иличчен лăплан. Мухтав хыҫҫăн чупса ан такăнах пурнăҫра. Хаҫачĕ те, радиопа телевизорĕ те сан хушаматна час-часах асăнаҫҫĕ те... хăратăп. Тем тесен те ытлашши мухтаҫҫĕ унта. Вĕсене итлетĕп те эсĕ темле урăхла ҫын пек туйăнатăн, сăрласа тунă паттăр пек курăнатăн. Пĕртте хам ача пек мар, — хаш сывларĕ Нинук.

— Ан кулян, анне, ахаль ҫеҫ ҫавăн пек туйăнать вăл сана. Ывăлу сан йăх ятне, Кашкăр Хĕветучĕн ятне, ял ятне ямĕ-ха. Йĕркеллех пулĕ.

— Юрĕ эппин, урăх калаҫмăпăр ун пирки, — сĕтел пуҫтарма тытăнчĕ амăшĕ. — Мухтанмаллах пуль санпа, ывлăм. Итлерĕн, вĕрентĕн, ҫын пултăн. Лайăх кин тупса патăн мана. Мăнукăм та пур. Ашшĕ килнине туймасăрах ҫывăрать-ха. Амăшĕ фермăна йăпăрт кайса килетĕп терĕ те ҫитеймерĕ-ха. Ĕҫ ҫапла ҫав вăл, йăпăртах пулмасть. Эс ҫи-ха, ывлăм, кин вăл тахҫан ерҫет.

Тельман апатланнă-апатланман правление васкарĕ. Ывăлĕ ҫĕн урампа ярăнса утнине Нинук чӳречерен хăпартланса пăхса юлчĕ.

Каҫалапа Крутов ҫула май председатель хваттерне кĕчĕ. Тельман Федотович урайĕнче ачипе вылять. Пĕчĕк Петĕр ашшĕ тăрăх упаленет, ăна хăлхинчен, сăмсинчен ярса илсе ҫухăра-ҫухăра туртать. Венера кухньăран тухрĕ.

— Каясах терĕн апла партшкула вĕренме, — ачине амăшне тыттарнă май ыйтрĕ Волков. — Пăрахса хăваратăн пире. Шел, шел...

— Икĕ ҫул нумай мар, вĕренсе тухсан каллех кунта килетĕп, — терĕ Крутов.

— Ненай, кунта ярассăнах туйăнмасть. Шанмастăп. Райкома илеççĕ пуль сана, — ура çине тăчĕ Волков.

— Унта ĕçлемешкĕн те хирĕç мар. Партком секретарĕнче ĕмĕрпе ларнă çын пулман пуль те, малашне те пулмĕ тетĕп. Пурнăçра тем кĕтет сана унта... Çапах... çапах та мана кунтах лайăх. Хăнăхрăм эпĕ сирĕн ялсене, çак çулсенче ытла та çывăхланса кайрăм пулмалла. Хальлĕхе пĕрлех ĕçлер-ха, пĕрлех çĕмĕрттерер. Украинăна çитсе килнĕ хыççăн мĕн тума шутланăччĕха эпир иксĕмĕр, асту-ха?

Председатель хăйсем мĕнле çĕнĕлĕх палăртнине аса илчĕ:

— Правлени умне колхоз çитĕнĕвĕсене çырса çапма, ĕç паттăрĕсен сăнĕсене вырнаçтарма, ун варринче ăмăртура çĕнтерекенсен ячĕпе Хĕрлĕ ялав çĕклеме палăртнăччĕ.

— Ку — çаплах. Шупашкарта эпĕ художниксемпе килĕшсе татăлтăм. Ушкăнпа килме пулчĕç. Ĕç паттăрĕсене мухтаса ӳкересшĕн. Эсĕ хирĕç пулас çуккине пĕлсе пĕчченех килĕшрĕм.

— Ан тĕлĕнтер-ха эс, Макçăм, эпĕ вара ун пирки мĕн хирĕçлесе тăрап. Унчченех калаçса татăлнăччĕ вĕт. Килччĕр, ĕçлеччĕр. Пирĕн паттăрсем нумай. Вăрçă ветеранĕсене те, хисеплĕ колхозниксене те ӳкерттерсе юласчĕ. Художникĕсен вăхăчĕ темле çитĕ. Килсен — калаçăпăр. Ĕçлеме майсем туса парăпăр. Акă хайхи хăв тахçан ĕмĕтленни те пурнăçланĕ.

— Мĕн пирки эс? — ăнланаймасăр ыйтрĕ Крутов.

— Ялти «Третьяковка» пирки.

— Ĕмĕте вĕçнех çитересчĕ. Ял халăхĕ пурнăçа хĕрӳ ĕçпе илемлетет пулсан, чунне те илемлетме пултартăр. Вĕренме каясси-мĕнĕ... Эй, эп кайнăшăн мĕн кулянмалли çак. Иксĕмĕр вăрçа-вăрçа пĕрне-пĕри йăлăхтарса çитермерĕмĕр-им? Тепĕр парторгпа ĕçлесе пăх тата...

Тельман тусне сĕтел хушшине кĕртсе лартса каларĕ:

— Итле, ĕçре вăрçмасан нимĕн те пулмасть. Килĕшсе ларар та: мана та лайăх, сана та. Лавĕ çеç малалла каймасть. Эпир, иксĕмĕр, вăрçсан та хирĕçмен, ĕçшĕн тытăçнă. Пĕрне-пĕри çывăрса кайма паман. Хĕрӳ çын эс, таса чунлă çын, хĕвĕнте нихçан та чул тытмастăн. Çавăншăн юрататăп эпĕ сана, çавăншăн ярас килмест сана колхозран... Анчах... нимĕн те тăваймастăн. Вĕренӳре ăнăçу çеç сунатăп.

23

Вĕренме каяс умĕн Крутов юлташĕсене пухрĕ. Ульки аккан хыпăнмалли тупăнчĕ, алăкăн-тĕпелĕн ăшталанса çӳрет. Хăйĕн ачи пекех пăхса пурăнчĕ-çке вăл ăна. Халĕ акă сыв пуллашма тивет. Ăна ăсатма Тельманпа Венера машинăпа пычĕç.

— Кĕркури пичче, — йăлăнсах ыйтрĕ Венера шофертан, — вăрман хĕрне çитиччен те пулин тыттарăр-ха рульне. Ан хăрăр, хытă хăваламăп, çавăрса çапмăп. Максим Максимовича манăн ямшăк пулса ăсатас килет.

Шофер ăна хăй ырăнне лартрĕ. Газик мĕкĕрттерсе Хурăнвар çумĕнчи кĕлетсем патне тухрĕ. Каланча çумĕпе иртнĕ чухне Крутов Венерăран машинăна вăхăтлăха чарма ыйтрĕ.

— Карачăм мучипе сыв пуллашас, — терĕ вăл.

Мотор сассине илтнипе пĕчĕк пӳртрен хуралçă хăех сиксе тухрĕ.

— Герасим Филиппович, — алă тытрĕ старике Крутов, — лайăх юлăр, ан ятлăр, вĕренме каятăп, Чулхулана. Эпĕ таврăниччен сывă пурăнăр.

Ĕненмесĕр мучи унран тепĕр хут ыйтрĕ, унтан тин Крутова ыталаса чуп турĕ:

— Чăнахах пулсан, апла, яра пар. Пуçна тата мăнлат. Çулу тап-такăр, телейлĕ пултăр. Сывлăхлă пул. Пире ан ман. Хамăн ачана ăсатнă чухнехи пек чун кӳтсе килчĕ капла. Эх!..

Газик тусан мăкăрлантарса çырма пуçĕнчен пăрăнсанах Карачăм мучи пӳртрен пăшал йăтса тухрĕ те çӳлелле иккĕ харăс кĕрĕслеттерчĕ. Пăшал сассипе вăраннă кураксем пĕлĕте хупларĕç. Каланча патне çынсем чупса пычĕç.

— Мĕн пулнă? — тĕлĕнсе ыйтрĕ Роман Фомич.

— Пулнă çав, — пăшалне кĕтессе тăратрĕ Карачăм мучи. — Пулнă. Кайрĕ. Лайăх çын кайрĕ. Ылтăнран ытларах хаклаттăм эпĕ ăна.

— Кам кайрĕ? Мĕнле çын? — пурте тĕпчеççĕ мучие.

— Сирĕн, кăмунистсен, чи асли кайрĕ. Чулхулана, вĕренме, — вăрман хĕрнелле çывхаракан машинăна тĕллесе кăтартрĕ вăл.

— Тĕрĕсех калатăн эсĕ, асатте, — тесе унталла алă сулса илчĕ Роман Фомич. — Çынна ăнланма, ун чунне туйма, ăна пулăшма, кирлĕ чухне çирĕп хурав тыттарма та пултараканскер вăл, Максим Максимович. Ĕçлеме çăмăлччĕ унпа. Вĕрентĕр, ăслăлантăр. Шăпах çавнашкал таса чунлă, çирĕп чĕреллĕ çынсем кирлĕ те, ман шутпа, ертсе пынă çĕрте. Питĕ кирлĕ.

Максим Максимович вăл вăхăтра машина алăкне уçрĕ те çаврăнса пăхрĕ. Йăмрасем çийĕн курак ушкăнĕ явăнать. Каланча тăрринче хĕрлĕ ялав хĕвел шевлипе йăлкăшать.

# ИККĔМĔШ ПАЙĔ

1

Макçăм Крутов Чулхулара иккĕмĕш хут ĕнтĕ. Чăн малтан вăл партин аслă шкулĕнче калаçура пулчĕ. Комиссире ларакансем панă тĕрлĕ енлĕ ыйтусем çине хăюллăн та курăмлăн хуравларĕ. Çавăнпах пуль ăна хирĕçлесе никам та иккĕленӳллĕ сăмах хускатакан пулмарĕ. Унтан таврăннă хыççăн обкомран савăнăçлă хыпар пĕлтерсен вăл авалхи хулана вĕренме кайма хаваспах хатĕрленчĕ.

Халĕ кунта икĕ çуллăх пурăнма куçса килчĕ. Максим Максимович вырнаçнă общежити Арзамас çулĕ çинче, Лядов хутлăхĕнчен пуçланакан Гагарин ячĕллĕ аслă урамра. Шкулĕ те инçех мар, çав çулран Бекетов урамне пăрăнса кĕнĕ çĕрте, кĕтесре, Спорт керменне хирĕç сарăлса ларать. Ока çыранĕнчи çак илемлĕ кермене ял хуçалăх институчĕ валли туса лартнă теççĕ. Парти патшисем хăйсен салтакĕсене вĕрентме çĕнĕ шкулсем йышлă уçма тытăнсан Чулхула та меллĕ тĕле лекнĕ. Пурне те çирĕп алăра тытма хăнăхнă çӳлти вăй пĕр чăрмавсăрах хăйĕн ытамне çавăрса илнĕ кермене. Çапла хул-çурăм вăйĕн керменĕпе юнашар ăс-тăн вăййин керменĕ тымарланнă.

Каллĕ-маллĕ вĕçĕмсĕр йăшăлтатакан машина кĕрлевĕ талăкĕпе чарăнмасăр хăлхара нăйлать. Общежитире те, шкулта та — пĕрешкел çав сасă. Бензин çунăкĕн сĕрĕмĕ сăмсапа çăвара хуплать, кăкăра пӳлĕнтерет. Çакă кранран юхакан шывĕ те пусăри шыв пек мар, темле тутлăскер, хлорка хутăштарнăскер, ăша йĕклентерет. Ял шăплăхне, уй-хир сĕткенĕн техĕмлĕ шăршине хăнăхнăскершĕн малтанхи кунсенче хула пурнăçĕ тамăкри майлах туйăнчĕ. Питĕ вăраххăн хăнăхрĕ вăл çак улшăнăва.

Пĕрле пурăнмалли пӳлĕме лутака кĕлеткеллĕ, лапчăкрах питлĕ, сĕререх калаçакан Владимир Петров

мари, Чулхула облаçĕнчи Шатки ачи Валентин Винокуров вырăс — пуринчен те çӳллĕскер, йăм хура çӳçлĕскер, шĕвĕркке чăсмак сăмсаллăскер тата çивĕч куçлă, сарă сăнлă, кук тĕрриллĕ, вăтам пӳллĕ Яков Васькин măкшă лекрĕ. Туслăх урапине вĕсем тăваттăн çавăрма пуçларĕç, вĕренӳре те, йăла-йĕркере те пĕрне-пĕри яланах пулăшма килĕшрĕç. Çакăн хыççăн пурте аласене тытса чăмăртарĕç, ирĕклĕ вăхăтра кинона, театра, музейсене кайма пулчĕç. Кам та кам çак сăмаха тытаймасть — çавă пӳлĕмре пĕрле пурăнаймасть. Çапла йышăнса хăварчĕ туслăх канашĕ.

Çирĕм республикăпа облаçран тĕрлĕ халăх çынни ăсланать кунта. Еврейсем çеç çук. Вырăс хушамачĕпе витĕнсе пытанса пурăнакансем шăвăнса кĕнĕ пулсан çеç. Вĕренекенсенчен ытларахăшĕ — партипе комсомол тата Советсен ĕçĕнче пулнă çамрăксем. Слушательсене ушкăнăн-ушкăнăн пайланă, кашнинче çирĕм çын, вăл шутра — ик-виç хĕрарăм.

Партшкула киличчен, паллах, кашни вĕренекенех хăй вырăнĕнче «пĕчĕк хуçа» пекки шутланнă. Кунта вара — пурте пĕр тан, пĕр правиллă, пурин те дисциплинăна пăхăнмалла, пĕр йĕрке тăрăх пурăнмалла. Кун пирки вĕсене вĕренӳ çулĕн малтанхи кунĕнчех питĕ евĕклĕн аса илтернĕччĕ.

Крутов ăна-кăна ăнланакан çирĕп çын-ха. Ахальтен килĕшнĕ-и вăл çакăнта килме? Партин аслă шкулĕ нумай енлĕ, тарăн пĕлӳ парать тенине вăл тахçанах илтнĕ. Марксизм-ленинизм теорине совпартшкултинчен те, ял хуçалăх институтĕнчинчен те тĕплĕнрех вĕренме май пурришĕн Максим Максимович хĕпĕртерĕ. Вĕренсен вăл унпа ĕçре пĕлсе усă курĕ. Çĕнĕ пурнăç тунă чухнехи кăткăс ыйтусене лайăх пĕлсен, массăсене ертсе пырас ĕçĕн меслечĕсене çирĕпрех алла илсен, малашне ĕçлеме те çăмăлрах пулĕ.

Вĕренĕве Крутов хавас кăмăлпах, ăнтăлсах тытăнчĕ. Лекцисене сиктермесĕр çӳрерĕ. Шкулти вулав залĕнче марксизм-ленинизм классикĕсен кĕнекисене ытларах тытса ларчĕ, хăйне мĕн кирлине вĕсенчен çыра-çыра илчĕ. Библиотеки кунта питĕ пуян. Халиччен куçпа курман, алăпа тытса пăхман сайра хутра тĕл пулакан кĕнекесенчен вăл уйрăлма пĕлмерĕ. Общежитие таврăнсан хĕрлĕ кĕтесе улăхать, учебниксенче мĕн çырнине пуçа хывать, лекци конспекчĕсене тепĕр хут пăхса тухать. Ыранхи-виçминехи занятисене хатĕрленсе çитнĕ хыççăн та унăн ирĕклĕ вăхăт тата юлать.

Семинарсемпе коллоквиумсене пушă пуçпа пырса ларакансене Крутов чăтма пултараймасть. Вĕренӳ çине хуравсăрла пăхнине мĕнпе те пулин витерес тесе унашкаллисем ялан çĕр тĕрлĕ сăлтав шыраççĕ, хăйсем хаклă вăхăта кирлĕ-кирлĕ мар çĕрте пустуй çунтараççĕ. Эрех кӳллинче путакансем те, савăк ытамĕнче шанакансем те пур. Шкулта чăваш ачисем те чылайăн, кашни районпа хуларанах. Тахçантан пыракан йăла тăрăх, кĕркунне чăвашсем пĕрле пухăнаççĕ. Çав пухăва вĕсем шӳтлесе «сьезд» теççĕ. Юлашки курсра вĕренекенсем унта партшкул алăкне тин уçса кĕнисене тăрăшса вĕренме, хулара йĕркеллĕ пурăнма ырă сунаççĕ, чăваш ятне çӳлте тытма хушаççĕ.

Кăçал «съезд» хула таврашĕнчи Щелоково вăрманĕнче пулчĕ. Пулă яшки пĕçерчĕç. Таврара сарă мăйăр пуçтарчĕç. Макçăм Крутов купăс каларĕ. Тĕл пулура куккукĕ те чăрăш тăрне ларса канчĕ. Линкка-линкка авкаланма юман хăма та кирлĕ пулчĕ. Чăваш юрри-ташши каçченех янăрарĕ таврара.

Çула май вĕсем музее кĕрсе курчĕç. Ку тăрăхри вырăссен авалхи тата хальхи вăхăтри йăлипе культурине сăнласа паракан экспонатсемпе паллашнă май Макçăм Крутов çил арманĕ патĕнче шухăша кайса тăчĕ,

Хурӑнварти каланча ҫумӗнче Карачӑм мучи каланине аса илчӗ. Мучи ӑна колхозӑн пилӗк ҫил арманӗнчен пӗрне историшӗн сыхласа хӑварма ыйтнӑччӗ. Яла электричество кӗртсен пӑсма тытӑннӑччӗ-ҫке вӗсене. Тен... халӗ пурне те пӑсса тӑкнӑ пуль?

Арман ыйтӑвӗ пирки вӑл общежитие ҫитсенех Волков патне ҫыру ҫырчӗ. Хуравӗ тусӗнчен часах ҫитрӗ. Манман иккен председатель ҫав калаҫӑва. Колхоз музейӗ валли арман сыхласа хӑвараҫҫех вӗсем. Тельман ӑна ҫитес вӑхӑтрах яла чӗнет. Питӗ кирлӗшӗн. Мӗншӗнне... пӗлтермен.

Шухӑшласа ҫӳрерӗ-ҫӳрерӗ те вӑл, ыйтса ҫырса, декан патне кӗчӗ. Декан хута вуласа ҫавӑркаласа пӑхрӗ, шаклаланма пуҫланӑ пуҫне ывӑҫӗпе шӑлса йӑлл! кулчӗ:

— Ҫемье ыйтӑвӗсемпе, апла, Крутов юлташ. Лайӑх, лайӑх. Куҫунтанах паллӑ суйни. Тӗрӗссине калӑр, вара яма та пултаратӑп.

Максим Максимович ултавшӑн каҫару ыйтрӗ, колхоз председателӗ питӗ васкавлӑ чӗнни ҫинчен тӗрӗссине пӗлтерчӗ.

— Капла ӗненмеллерех, — декан, куҫлӑхне тӑхӑнса, тепӗр хут пӑхрӗ ун ҫине. — Заявление ҫӗнӗрен ҫырӑр. Пӗр кун вырӑнне иккӗ лартӑр. Мӗншӗн тесен, пурпӗрех ӗлкӗрейместӗр. Справка илсе килмелле пулать. Ман кунта, ак ҫак папкӑра, мӗн тӗрлӗ кӑна справка, телеграмма ҫук-ши? Вӗсене ӗненес пулсан хӑшӗ-пӗри тахҫанах тӑлӑха тӑрса юлнӑ. Аслашшӗпе асламӑшӗ те, ашшӗпе амӑшӗ те, ачи-пӑчи те «вилме патне ҫитнӗ е леш тӗнчене ӑсаннӑ» вӗсен. Справкӑсӑр тавӑнма тӑрӑшӑр, Крутов юлташ. Чирлесен те ветеринари справки илсе ан килӗр. Темле те улталасшӑн, уйрӑмах тутарсем маҫтӑр ку енӗпе.

Декан патӗнчен вӑл палан пекех хӗрелсе тухрӗ. Занятисем вӗҫленсен ҫирӗм улттӑмӗш автобуспа чукун ҫул вокзалне кӗрлеттерчӗ.

2

«Чулхула — Хусан» пуйăсĕнчен Макçăм ирпе Вăрманкас станцийĕнче анса юлчĕ. Малтан килне, ашшĕ-амăшĕ патне те, каяс килчĕ унăн, анчах чун «Шурăмпуçнеллех» туртать. Вокзал перронĕн картлашкипе хăпарма тытăннăччĕ çеç, председатель шоферĕ Кĕркури хирĕç пулчĕ.

Çула май вăл ăна колхоз хыпарĕсемпе паллаштарчĕ. Монтажниксен айăпне пула иртнĕ хĕлле сĕт-çу ферминчи ăшăтмалли пăрăхсем шăнса çурăлнăччĕ, халĕ системăна çĕнĕрен тăваççĕ-мĕн. Тельман Федотович Мускавра минераллă удобрени нумай «хăйпăтса илнĕ» тата тепĕр грузовик «тупнă» иккен. Пыл вăрланăшăн Нухрат Кавĕрлине утар хуралĕнчен кăларнă пулать. Вăтам шкула çамрăк учительницăсем кĕтӳпех килнĕ...

Кĕркури Афанасьев машинине хытă хăваламасть, майĕпен илсе пырать. Сăмах-юмахпа çул кĕскелчĕ. Акă, правлени патĕнчен иртсе Шурăмпуç урамне кĕрсен вăл машинине Волковсен умĕнче тăратрĕ, моторне сӳнтерсе Крутов еннелле пăхрĕ. Максим Максимович тĕлĕнсе ыйтрĕ:

— Мĕншĕн кунта чарăнтăмăр?

— Ман приказ пур, — терĕ шофер тутине чăмăртаса. — Хамăр Максим Максимовича ăнсăртран вокзалта тĕл пулас пулсассăн тӳрех ман пата лартса кил — çапла хушса янă мана хуçа. Ульки акка халĕ сире темле, те кĕтет, те кĕтмест. Хваттер санятă. Вăл кин кĕртнĕ...

— Мĕнле кин тата? Ăнланмастăп.

— Тельман Федотович каласа парать.

Шофера урăх тĕпчесе тăмарĕ вăл, вара машинăран тухрĕ. Чӳречерен Венера кăшкăрать:

— Салам, Макçăм! Хăвăртрах кĕрĕр!

Волковсем пурте килтех иккен. Тельман Чулхула каччине тытса чăмăртарĕ, Венера апат хатĕрлеме пуçларĕ, Нинук пӳлĕмрен мăнукне йăтса тухрĕ.

— Мĕн пулнă, Тельман, кала-ха? — хыпăнса ыйтрĕ Крутов. — Пĕрле ĕçленĕ чухне, тем, йăнăш япала тунине астумастăп. Мĕншĕн питваскавлă чĕнтĕн?

Тусĕ çăвăнса сĕтел хушшине ларсан тин Тельман кулса ячĕ:

— Нимĕн те пулман, Макçăм, хэ-хэ. Пурте йĕркеллех. Чĕнме вара сана, хэ-хэ, калама çук пысăк ĕç пирки чĕнтĕмĕр. Акă, арăмпа пĕрле канашласах.

— Кала-ха хăвăртрах, пуçа ан пăтрат, — сиксе тăчĕ Макçăм.

— Хĕр пăхма чĕннĕ сана, ват хусаха. Апат çиетпĕр те, халех пĕрле каятпăр.

— Ăçта?

— Ульки акка патне. Унăн халĕ пĕлетĕн-и, мĕнле чиперкке пур? «Куна хамăн Макçăм валлиех пăхса усрасчĕ-ха», — тет пĕркун урамра тĕл пулсан. Кахал йытта вилĕ мулкач тенĕ евĕрех пулса тухать санăн, тусăм. Хăвăнтан тупасси, темле, шанмастăп. Ку хĕрĕ вара, каларĕ тейĕн, турă çырниех пуль. Çапла вĕт, Венера?

— Хамăр урамран иртсе çӳренине эпĕ ăна кашни кун сăнатăп. Эх, чиперккескер. Утти уçăмлă. Чĕлхи-çăварĕ япшар, пĕртте мăн кăмăллă пек туйăнмасть. Ăна кашнинче курмассерен сана аса илетĕп. Çавăнпа, урăх каччă ярса иличчен, Макçăма чĕнсе килер, терĕм. Эс пире каçар ĕнтĕ... — Крутов çумне ларчĕ Венера.

— Мĕн тăвăн ĕнтĕ халь... — хаш сывларĕ Крутов. — Айтăр апла Ульки акка патне. Кĕркури те «вăл кин кĕртнĕ» тесе шăлне йĕрчĕ те, тĕрĕсех иккен. Ульки аккапа калаçас та, хĕрне курас та — каялла вĕçтерес.

Ку таранччен чĕнмесĕр тăнă Нинук та сăмах хушрĕ:

— Лăплан эс, Макçăм, тен, йĕркеллех пулĕ-ха. Эпĕ хам та хисеплеп унашкал вăр-вар хĕрсене, хам кин пекех туйăнса каять вăл мана. Виçĕм кун çеç-ха çак пепкене

амбулатори патӗнчен киле ҫитиччен йӑтса килсе пачӗ. «Ах, юрататӑп-ҫке пӗчӗк ачасене», — тет. Пурӑнма эс пирӗн патра пурӑн халь. Миҫе кунлӑха килтӗн-ха?

— Икӗ кунлӑха ҫеҫ ҫав, — хуравларӗ Макҫӑм.

Апатланнӑ хыҫҫӑн Волков ӑна Ульки аккасем патне илсе кайрӗ. Ульки акка пӗчченех, хваттер хӗрӗ шкулта. Ватӑ ҫын ӑшталанса ӳкрӗ, тӳрех апат сӗнчӗ, хырӑм туттине пӗлсен, каҫпа ӑҫта ҫывратасси пирки калаҫрӗ. Вӑл ӑна хӑй пӳлӗмне вырттарать. Тельман тусне хӑйсем патӗнче усратӑп тенине илтсен Ульки акка кӳреннӗ пек пулчӗ. Хӗре ку та ырласа-мухтаса ҫеҫ пӗтерчӗ. Макҫӑма пӳлӗме илсе кӗртсе вӑрттӑн систерчӗ:

— Ку, леш, Лексантӑр Ҫимунчсем патне килекен явкаланчӑк мар, суҫҫем урӑх йышши хӗр. Кайиччен паллаштарӑп-ха. Темшӗн, сана вӑл кӑмӑла каяссӑн туйӑнать. Эп вара мӗн тери хӗпӗртемелле, ывлӑм...

Ульки акка патӗнчен тухсан вӗсем уйсем тӑрӑх курса ҫӳрерӗҫ, ӗҫсемпе паллашрӗҫ. Халӑх хӗрсех ҫӗр улми кӑларать, хӑмла татать, выльӑх апачӗ хатӗрлет...

— Патшалӑха ҫӗр улми парса татрӑмӑр-ха, ӗнерех, татах тепӗр план чухлӗ сутасшӑн, вара пӗтеретпӗр, — терӗ председатель.

— Виҫҫӗр центнер те тухать пуль апла гектартан? — интересленчӗ Крутов. — Хӑҫантанпа ӗмӗтленеттӗмӗр унашкал тухӑҫ илессе?

— Пурнӑҫланчӗ ӗмӗт, Максим Максимович, пурнӑҫланчӗ. Уншӑн иксӗмӗрӗн пайтах картлантарма тиврӗ ҫамка тирне. Виҫҫӗртен те иртет. Тырри те вӑтӑр урлӑ каҫрӗ. Хуратул кӑшт чакарчӗ. Аптрамастпӑр кӑҫал. Салат хывмалӑх тырри пур, сӑра тумалӑх хӑмли пур, сӗтел ҫине лартмалӑх аш-пӑш пур. Савӑнмалла, туй тумалла ҫеҫ, Максим Максимович. Хӗрпе паллашмалла та...

Шофертан вӑтаннипе Крутов юлташне хӗр пирки калаҫма чарчӗ.

Вěсем уйран çаврăнса килнě çěре Тельман амăшě мунча хутнă. Каçпа виççěшě культура керменне концерт курма кайрěç. Зал умěнчи пӳлěме çамрăк учительницăсем шавласа кěрсенех Волковсем Макçăма икě айккинчен те кăлт тěкрěç. Зала вěсем хěр ушкăнě хыççăнах кěчěç. Пěр хěр çумěнчи çемçе пукан пушшине асăрханă Венера качча унталла тěртсех васкатрě. Макçăм ун-кун пăхкаласах, ыйтса, хěрпе юнашар вырнаçрě. Венера тепěр хут каялла çаврăнса пăхрě те, кăмăллăн кулса, упăшки патнелле утрě.

Крутов йěп çинчи пек ларчě. Венерăпа Тельмана тарăхса та илчě вăл, унтан, кăшт вăхăт иртсен, хěр енне вăрттăн пăха-пăха майěпен чунне лăплантарчě.

Хěр те çумри палламан çын çине пěр-икě хутчен тěсесе пăхрě. Çавăн чухне Макçăм куçě унăн сырă куçěпе самантлăха тěл пулса йăлкăшса илчě. Çиçěмле туйăма сиссе иккěшě те пуçěсене часрах аяккалла пăрчěç. Хěр пуçне шупка тутăр çыхнă. Тутăрě айěнчен хулăнах мар çырă çӳç пайăрки кукăрăлса тухса тăрать. Нимěнле сăрă таврашě курăнман тап-таса пит-куç. Çӳхе кулăллă тути, вăр çаврака пит çăмартийěсем тата тӳрě сăмси килěшӳллěн хускалса илеççě, шап-шурă вěтě шăлěсем илемлěн курăнаççě. Хěр сцена çине хавас кăмăлпа пăхать. Çак сăн качча темшěн кăмăла кайрě. Хěре унăн татах култарас килчě, анчах концерт номерě улшăнчě. Макçăм ăна вăрттăн сăнама пăрахмарě. Мăйě çинче хěрěн тур палли пур, кěтеслěхсемпе тăваткалсем ӳкернě чеченклě кěпи йăлтах хуплаймасть те, ăна каччă лайăхах курать. Кěпе çийěн вăл хура тěслě пиншак тăхăннă. Пиншак лацканě çинче ромбик пур. Уринче — пуçěсем çуталарах панă сарă пушмак. Ку хěр тумпа аташманни е аташма пултарайманни тӳрех курăнать.

Макçăм концерт вěçлениччен те хěре пěр сăмах хушаймарě, чаршав хупăнсан тин вăл унран ыйтрě:

— Сирĕн хăш еннелле каймалла?

— Хурăнваралла, — çемçен хуравларĕ хĕр. — Эсир хăвăр ăçталла çул тытатăр тата?

— Эпĕ те сирĕн çулпах, — вăтанса пуçне чикрĕ Макçăм.

— Апла пĕрлех кайăпăр, — сĕнчĕ хĕр.

— Юрать.

Учительсем пурăнакан тăватă хваттерлĕ çурт тĕлне çитиччен вĕсем хĕрсемпех пычĕç. Лешсем ахăркаласа кĕрсе юлчĕç те, малалла иккĕшĕнех утмалла пулчĕ.

— Айтăр, паллашар, — сĕнчĕ Макçăм.

— Эп хаваспах, — тăп чарăнчĕ хĕр.

— Эпĕ — Макçăм, Максим Максимович Крутов, кунта партком секретарĕнче ĕçленĕччĕ, халĕ...

— Эсир-и вара вăл? Халĕ тин, хăвăра курсан, аса илтĕм: эсир камне те, кам патĕнче пурăннине те, ăçта вĕреннине те, хăш ялта çуралнине те, — савăнса ӳкрĕ пике. — Мана Маруся тесе чĕнеççĕ, Мария Николаевна, ачасене акăлчан чĕлхи вĕрентетĕп, сирĕн хваттерте, Улькки акка патĕнче, пурăнатăп. Ульки акка мана сирĕн çинчен кашни кун мĕн те пулин ыррине каласа парать. Эпĕ ĕнтĕ хăвăрпа паллашиччченех сирĕн йĕркепе пурăнатăп. Вăл мана яланах «Пирĕн Макçăм çапларах калатчĕ те, пирĕн Макçăм ĕçе çапла йăпăрт тытса тăватчĕ те», — тесе çеç тăрать. Эпĕ те вара кашнинчех ку мĕнле питĕ тĕлĕнмелле çын-ши, курасчĕ куна пĕрре, тесе шутлаттăм. Эсир пулнă-иç? Юнашар ларнă чухнех темскер ăш вăркама пуçларĕ çав. Председательсемпе пĕрле килнинченех кăшт туйрăм, анчах хăвăр çавар та уçмарăр та, эпĕ те пуçарса шарлас темерĕм. Эпĕ хам та Вăрманкас районĕнченех. Тымартан.

Крутов чĕри «Тымар» сăмаха илтнипе кăрт турĕ. «Лина тантăшĕ мар-ши ку?» — текен шухăш вĕлтлетсе иртрĕ пуçра. Маруç калаçнипе ку шухăш таçта кайса çухалчĕ.

— Акă, çитрĕмĕр те, — Ульки аккасен хапхи умĕнче чарăнчĕ хĕр. — Эсир кĕретĕр-и?

— Эпĕ председательсем патĕнче çывăратăп, сире ăсатма çеç килтĕм, Маруç. Кăшт тăхтăр-ха, — çапла каласа Макçăм карта урлă вăшт сикрĕ те пĕчĕк пахчара чечек пуçтарчĕ, çыхă туса ăна хĕре тыттарчĕ. — Ку чечексене эпĕ хам акса çу каçипе пăхса ӳстернĕ. Кĕрхи чечексем çирĕп вĕсем, час шанмаççĕ. Эсир Хурăнвара килнĕ ятпа, сирĕнпе паян паллашнă ятпа пултăр ĕнтĕ çак парне.

Хĕр именерех кулса илчĕ те качча тав турĕ. Тӳпери тулли уйăхпа, вылянчăк çăлтăрсен вăййипе пĕр вăхăт киленсе тăнă хыççăн вĕсем уйрăлчĕç.

Маруç пӳрте чечек çыххи йăтса кĕнине курсан Ульки акка майĕпен ыйтрĕ:

— Хĕрĕм, паллашрăр апла пирĕн Макçăмпа?

— Ăçтан пĕлетĕр, Ульки акка? — вăтанса ыйтрĕ Маруç.

— Ват çын куçĕпе хăлхи вăл... Ара, чечекне палларăмçке. Макçăмне те карта урлă сикнине асăрхарăм. Лайăх ача. Туслашма та юрать унпа, юратма та юрать ăна. Кӳр, чечекне чӳлмеке лартам, — хĕре пуçĕнчен çепĕççĕн ачашларĕ ватă çын.

Вăл вăхăтра Макçăм Волковсем патне çитнĕччĕ. Венерăпа Тельман ăна хăюллăрах пулмашкăн тăн кĕртеççĕ.

— Чăмласа панине те çăтса яма пĕлмесен сана, Макçăм, юлташ тесе те шутламастпăр, — тет Венера вырăн сарнă май. — Ман мар кăпкалатмалла çак минтере, арăмун. Халĕ çывăр та, тĕлĕкре Мария Николаевнăна кур та... Ырă каç пултăр.

Макçăмăн тепĕр кунне каймалли вăхăт çитрĕ те. Шкулта уроксем пĕтнĕ хыççăн Маруç тӳрех хваттерне таврăнчĕ. Ăна Ульки акка патĕнче каччă кĕтсе ларатчĕ. Калаçмаллăх вăхăт та пурччĕ. Çапах калаçу пĕтĕмĕшле ыйтусенчен шаларах кĕреймерĕ. Кĕç Кĕркури машинипе çитсе ларчĕ. Ăсатма

Ульки аккапа Маруç урамах тухрĕç. Хапха алăкĕ çумĕнче тăракан ватă карчăкпа çамрăк хĕре Крутов машинăн хыçалти чӳречинчен кукăра çитичченех сăнарĕ.

3

Тымар хĕрĕн сăнарĕ Макçăм куçĕ умĕнче çĕрĕпех, Чулхулана çитичченех, мĕлтлетсе пычĕ. Шавлă хула ăна вăхăтлăха ун çинчен шухăшлама чăрмантарчĕ. Вокзал патĕнчен автобус е трамвай çине ларса каясси темрен те хĕнтерех. Васкамалла-çке, занятие ĕлкĕрмелле. Общежитие кĕрсе тăмасăрах вăл шкул патĕнче автобусран анса юлчĕ.

Коридорта шăпах тата деканпа тĕл пулчĕ. Декан сывлăх сунчĕ те кулкаласа çăмăллăн иртсе кайрĕ. Вăл киле кайса килнĕ вăхăтра группăра та, пӳлĕмре те нимле паллă улшăнăвах та пулман. Крутова макарон фабрикине пропагандиста яма çеç йышăннă. Парти поручениине пурнăçламаллах ĕнтĕ. Çавăнпа Максим Максимович, общежитие таврăннă чухне, çула май унта кĕчĕ, парторганизаци секретарĕпе тĕл пулса калаçрĕ.

Чылайранпа хĕрпе чун каниччен пуплемен каччăн чĕри тепĕр хут юрату хĕмĕпе ялкăшма пуçларĕ. Уншăн çут çанталăк та çĕнĕрен чĕрĕлнĕ пекех халĕ. Юлташĕн хаваслă туйăмне пĕрле пурăнакансем сиснĕ. Ирпе, Пушкин ячĕпе хисепленекен парка эртелпе чупса кайсан, Винокуров унран кулса илчĕ:

— Хĕрсемпе инкесем тутлă кукăль çитерсе янă пулас сана, Макçăм, тута хĕрринче çăвĕ халĕ те типмест. Семинарта шыва путмалла ан пултăр.

— Маншăн хăрамалли çук, Валентин, — терĕ вăл. — Хĕр-хĕрарăмшăн пуçа пĕтĕмпех çухатакан марччĕ-ха. Пĕринпе вара, паллашрăм, ку чăнах. Анчах... чуп туса та курайман-ха. Вăтантăм-ши, хăю çитмерĕ-ши, пĕлеймерĕм. Пуçран тухмасть халь ун сăнарĕ.

Чупнă хыççăн пурте хул-çурăма çемĕçтерме пуçларĕç. Общежитие çитсен, душра çăвăнчĕç. Çан-çурăм уçăлчĕ, çăмăлланчĕ. Пуç та лайăх ĕçлет ун пек чухне. Спорт йĕркипе пурăнма хăнăхни, паллах, пуриншĕн те лайăх.

Чăтаймарĕ Макçăм, ирĕклĕ вăхăт тупса Маруç патне çыру çырма ларчĕ. Унччен хĕрсем ячĕпе кунашкал хавхаланса çырнине астумасть вăл. Сăмаххисем ăçтан тупăнма пĕлчĕç, пуç миминчен чĕлхе çине йĕрки-йĕркипе юхса анаççĕ:

«Кĕркунне çулçăсем сараласçĕ. Маншăн вĕсем кăçал саралма мар, пушшех симĕсленнĕн туйăнчĕç. Туйăнчĕç те мар, анчах папка кăларса сарăлнă пек пулса тăчĕç. Сентябрь çилĕ манăн пит-куçа чарусăррăн çупăрларĕ, хĕве кĕрсе пытанчĕ, вăйланса-вăйланса унта тăвăл чĕртрĕ. Чĕрене юрлаттарчĕ.

Чĕре юрри... Пĕлетĕр-и вăл мĕнле хăватлине, янравлине? Эсир илтетĕр пуль ăна, тен, туятăр. Тĕнче илтĕнмеллех янăрать пулин те çав юрă, пĕр эсир çеç илтетĕр, пĕр эсир çеç итлеме пĕлетĕр пек туйăнать мана, Мария Николаевна!

Пурнăç çулĕ çинче эпир ăнсăртран тĕл пултăмăр. Эсир маншăн телей сачĕ пулса тăтăр. Вăл яланах ешертĕр, çĕнĕ хунав ятăр, чечеклентĕр. Ăнсăртран кăна мар, юри ятарласах тĕл пултăмăр пулас эпир, Мария Николаевна. Шанчăклăн малалла утма, çирĕп утăмсемпе тĕп тĕллев патне талпăнма. Ун патне пĕччен çитме йывăр. Иккĕн çеç пурнăçлама пулать ăна. Апла пулсассăн, алăсене çирĕп чăмăртамалла пирĕн, çирĕп юрату туптамалла, çирĕп çемье тумалла. Акă мĕншĕн тĕл пулнă эпир. Акă мĕншĕн пĕр-пĕрин чĕри таппине итлерĕмĕр çав уйăхлă каç. Акă мĕншĕн шухăшлатпăр, хумханатпăр, çĕр çывраймастпăр (тен, эпĕ çеç) уйрăлнă хыççăн.

Юратун миçе юрă, тесе ыйтсассăн, тӳрех калатăп: пин юрă. Анчах кашни юратун пĕр юрă — чĕре юрри!»

Конверта почта ещёкне ярсан тин хăраса ӳкрĕ Макçăм. «Çăмăлттай, пуш сăмах хултăрчи, кунашкал каччă кирлĕ мар тесе каласан ĕнтĕ... Линăпа çӳренине пĕлсен тата?.. Пĕтрĕ ман пурнăç, каллех çунать юрату», — пуçа çĕмĕрсе каллĕ-маллĕ утрĕ вăл урам тăрăх.

Кунĕн-çĕрĕн кĕтнĕ сăмах каччă патне çур уйăхран çитрĕ. Макарон фабрикинче политзаняти ирттернипе кая юлса килнĕ Крутов пӳлĕм алăкĕнчен кĕме ĕлкĕрчĕ кăна, вырăс ачи Винокуров «ташла!» тесе конверта çӳлелле çĕклесе кăтартрĕ. Ирĕксĕрех тапăртатса илмелле пулчĕ. Çырăва каччă плащне хывичченех вуласа тухрĕ, йăлл кулса ячĕ. Пăлханни кăлăхах пулчĕ иккен унăн. Маруç унпа çыхăну тытма килĕшет. Анчах хĕре пĕр япала иккĕлентернĕ. «Пĕрлешес, çемье чăмăртас пирки ытла хыпăнса ĕмĕтленетĕр-çке эсир, Максим Максимович? Тахçантанпа палланă çын пекех хăтланатăр. Пĕлместĕр вĕт эсир мана? Тен, эпĕ сире юрăхлă хĕр мар? Тен, манăн каччă пур? Шухăшлама, ĕмĕтленме никама та никам та чараймĕ. Эсир те шухăшлăр, ĕмĕтленĕр. Ыррине кĕтни питĕ аван, октябрь праçникне килсен, тĕл пулăпăр. Унччен пурăнар-ха. Пурăнма кунта лайăх. Мана та, ытти хĕрсене те килĕшет. Эпĕ малтан хамăрăн Тымар шăтăкне лекнĕ пек упа шăтăкне лекетĕп пулĕ тесе хăранăччĕ. Кăлăхах иккен. Колхозĕ пуян, ялĕсем типтерлĕ, халăхĕ кăмăллă, Волковсемпе Ульки акка хăйсемех мĕне тăраççĕ, эпир мĕн ыйтнине пурне те пурнăçлама тăрăшаççĕ. Эпир халĕ Ульки аккапа икĕ сысна çури ӳстеретпĕр. Тельман Федотович арăмĕ, Венера, манран уйрăлма та пĕлмест. Ĕнер каç, кубинецсен концертĕнче, хăйсемпе пĕрлех лартрĕç. Çыру çине час хуравламаншăн каçарăр. Кăштах шухăшласа çӳренипе пулчĕ ку. Çыру кĕтетĕп».

Çыру хыççăн çыру вĕçрĕ çапла Хурăнварпа Чулхула хушшинче. Крутов Октябрь уявне пурпĕрех малтан

Вăрманкаса кайрĕ, килĕнче кăшт пурăннă хыççăн, ашшĕ-амăшне евитлесех, Хурăнвара вĕçтерчĕ. Тинех вĕсен чун уçса калаçмалли вăхăт çитрĕ. Маруç уншăн тунсăхласа çитни сисĕнчĕ. Юлашки каç ăна вăл ырă хыпар пĕлтерчĕ:

— Манăн сире пĕрмай курас килет, Максим Максимович. Сана «Макçăм» тесе те калас килет. Атя малашне пĕрне-пĕри эсĕ тесе чĕнме пуçлар. Эсĕ тени çывăхраххăн илтĕннĕ пек туйăнать.

— Эпĕ хавасах, Маруç, хам та тахçанах шухăшлаттăмччĕ ун пирки, — хĕре çӳçĕнчен ачашларĕ каччă. — Эпĕ, Маруç, сана...

— Кирлĕ мар ăнлантарма, — аллинчен тытса утрĕ хĕр. — Пĕлетĕп эс мĕн каласса. Çавăнпах ĕнтĕ эпĕ хамăн унчченхи качча та сивĕтрĕм. Суймастăп, пурччĕ ман Шупашкарта чухне пĕрскер, канăç паманскер. Манран маларах агронома вĕренсе тухрĕ, тĕп хуларах юлчĕ. «Санран хула майри тăватăп» тесе сĕнкĕлтетсе çӳрерĕ-çӳрерĕ ман хыççăн, мухтанчăкĕпех телейне çухатрĕ, урăххин аллине, сан аллуна, тартрĕ. Эпĕ çавăнпа, санран çыру илсен, малтанах нумай шухăшларăм, ăна-кăна тараса çинчи пек виççе пăхрăм... Вара ун çырăвĕсем çине хуравлама пăрахрăм, телефонпа чĕнтерсен те калаçма пымарăм, сан пата хут ятăм. Юратмастăп эп вĕçкĕне.

Ульки акка савăннипе çамрăклансах кайрĕ пулас, хăйне çывăх каччăпа хĕр çине пăхса тăранаймасть, ĕçленĕ вăхăтра та ĕлĕкхи улах юррисене çурма сасăпа юрлакаласа илет. Çунат хушăннă, тейĕн.

Курнăçу вăхăчĕ ытла та кĕске-çке, уйрăлу саманчĕ ытла та хăвăрт çитет-çке. Уяв кунĕсем вĕлтлетсе çеç иртсе кайрĕç. Маруçăн ĕç пуçланчĕ. Макçăмăн — вĕренӳ.

Вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш пайĕ вĕçленсе пырать ĕнтĕ. Шкулти партком членне суйланă хыççăн Крутовăн ирĕклĕ вăхăт тата сахалланчĕ. Вăхăтлăх хушусем хутшăнчĕç.

Çапах кун йӗркине пӗртте пăсмарӗ вăл, вӗренӳре лайăх ӗлкӗрсе пычӗ. Промышленность, строительство, ял хуçалăх ыйтăвӗсене вӗреннӗ май вӗсене заводсене, стройкăсене, колхозсемпе совхозсене илсе кайса кăтартрӗç.

Парти ӗçне мӗнле йӗркелемелли çинчен вӗрентекен предмета Крутов пуринчен те ытларах юрататъ. Парти строительствин кафедрине те шкул директорӗ Лизунов хăй ертсе пыратъ. Учебникне те хăй çырнă.

Ӗнентерӳллӗ, витӗмлӗ ăнлантаракан профессор сăнарӗ, чăн-чăн ӗçлевçӗ пулма вӗрентекен сăнарӗ Крутов асӗнче ӗмӗрлӗхех юлчӗ. Петр Михайлович алăкран кӗрсенех лекцисен анлă пӳлӗмӗ куç пăвнă пек шăпланатъ. Кафедра умӗн каллӗ-маллӗ хутлатъ те вăл итлекенсем çине тӳрремӗн, уççăн пăхса хуллен калама тытăнатъ, майӗпен сассине хăпартса пыратъ. Сцена çинче пултаруллă артист вылянă пекех туйăнатъ хушăран. Лекцийӗсенче теори ыйтăвӗсем çумне ӗненмелле çивчӗ тӗслӗхсем хушса пыратъ. Тӗслӗхӗсем ӗнтӗ ытларахăшӗ хăйӗн пурнăçӗнчен илнӗскерсем. Вăрçă хыççăнхи çулсенче Чулхулари райкомсене ертсе пынăскерӗн, Арзамас обкомӗн секретарӗнче ӗçленӗскерӗн, çамрăксене вӗрентмелли, паллах, сахал мар. Ытти чухне Крутов улттăмӗш сехет тӗлне ывăнса çитетчӗ, Петр Михайловича итлеме тытăнсан, пуçра çивчӗ шухăшсем çуралаççӗ, чун çӗкленсе каятъ, ӗçе ытларах юратас кăмăл çӗкленет.

Лизунов Мургаевпа пӗр вăхăтри, утмăлалла çывхаракан çын. Иккӗшӗ те вăрçăра пулнă. Петр Михайловичăн сылтăм алли вырăнне пластмассăран тунă протез çакăнса тăратъ. Çавăнпа вăл пӗр-пӗр шухăша татса калана чухне, сулахай аллине çӗклесе илет. Яков Сидорович суран мӗнне пӗлмест, çапăçусенче пулса курман. Иккӗшӗ те, вăрçă чарăнсан, Мускавра партин аслă шкулӗнче вӗреннӗ.

Слушательсемпе ялан уççăн калаçма юратакан директор пĕррехинче чăвашсен ушкăнне лекрĕ.

— Эпĕ сире, сăмах май, çакна каласшăн, — терĕ вăл. — Пирĕн шкулти ырă пурнăçра та тăрăшса вĕренмесен, намăсах пулать. Темиçе çула чăтса ирттерĕр, эпир мĕн пама пултарнине илĕр, пуçа хывăр. Мимене лекнĕ пĕлӳ сирĕнтен час уйрăлмасть. Вăл пĕлĕве кайран пуянлатма та, тарăнлатма та, анлăлатма та çăмăл. «Виççĕпе» вĕреннине вара эпĕ хам нихçан та пĕлӳшĕн вĕренни вырăнне хуман. Çавăнпа сире, юлташсем, тата тепĕр хут аса илтеретĕп: хальхи вăхăтра уйрăмах тăрăшса вĕренмелле. Тарăн пĕлӳсĕр çын, темле талантлă йĕркелӳçĕ пулсан та, паян та, ыран пушшех çунаттисене сараймасть, сарсан та — нумаях, инçенех вĕçеймест. Пĕлӳ çитмен пуçлăхсене пурнăç пăчăртать, хĕстерет, аяккалла илсе сирпĕтет. Пурнăç юххине хăвăртлатма сире тарăн пĕлӳ кирлĕ те. Ан ӳркенĕр. Кайран та, ĕçлеме тытăнсан, хăвăрах курăр-ха. Сире, чăвашсене, яланах шанатпăр, — çурăмран лăпкасах ăс пачĕ вĕсене шкул хуçи. — Астăватăп сирĕн енчи пĕр юлташа, Яша Мургаева. Мускавра пĕрле вĕренеттĕмĕрччĕ. Пур-и пĕлекен ăна кам та пулин?

Макçăм Крутов тӳрех персе ячĕ:

— Пĕлмесĕр ара, пирĕн секретарь вăл, пĕрремĕш...

Петр Михайлович куçĕ çине усăнса аннă çӳç пайăркине сулахай аллипе хыçалалла çавăрса хучĕ те, малалла каларĕ:

— Япăх çын тесшĕн мар эп Мургаева. Кăмăллăскер. Хăюллăхĕ те пур пек. Анчах ун чухнех пĕр çитменлĕх пурччĕ унăн: юратмастчĕ вăл ытлашши вуласа ларма, лекцисемпех, учебниксемпех çырлахатчĕ. Тарăн пĕлӳ илеймерĕ вăл: вăтам пуçпа пырса кĕчĕ те Мускава, вăтам пуçпах тухса кайрĕ Чăваш Ене. Пĕлтĕр кунта уйăхлăх курсра пулчĕ. Семинарта юриех тĕрĕслесе пăхас-ха,

терĕм. Пĕлмест нимĕн те. Кайран, иксĕмĕр хамăн пӳлĕмре ларнă чухне, куçранах каларăм: «Сана, Яша тусăм, партшкулта, тăвата çул вĕренекенсен ушкăнĕнче, тепĕр хут тар кăларттарсан та çылăх пулмасть». «Вăт, мĕн тăвăн, ĕç, пĕрмаях сĕт те аш, тырă та çĕр улми, стройка та вăрман тата пин ыйту... Алла кĕнеке тытма-и унта? Арăмпа та лайăххăн ятлаçаймастăн», — текелесе шӳтпе ирттерсе ячĕ. Шел, çавăн пек хавшак пуçлăхсем пур-ха пирĕн. Чир вăл — парти чирĕ. Çавă КПСС тĕрекне вăйсăрлатать. Халăх ĕненми пулса пырать вĕсене — Мургаев пек пуш пучахсене. Мĕнле ертсе пырать-ши Мургаев хăйĕн районне? Ыйтаймарăм. Каласа парăр-ха, тархасшăн, Крутов юлташ?

Ентешне, хăйĕн пуçлăхĕ пулнă чăваша сутма та аван мар та ĕнтĕ, Максим Максимович çапах та суйма пĕлмерĕ, тĕрĕссинех каларĕ:

— Вăл пуç пулнăранпа тем, хамăр район ним енĕпе те палăрнине астумастăп. Пурнăç юххинчен уйрăммăн татăлса юлмастпăр та... тапаçланатпăр майĕпен, — терĕ салхуллăн, хĕрелнĕ питне сăтăрса, Крутов.

— Çакна ăнланăр, çамрăк тусăмсем, — терĕ директор.— Ан ӳркенĕр, вĕренĕр, партие хĕне кайма парас марччĕ. Унăн вăйне хавшатса çĕршыва аркатас, халăхсен туслăх тĕрекне шалтан шĕкĕ пек çисе ваклас, çынсен ăс-тăнне минретсе ярас текенсем хытă ĕçлеççĕ чикĕ леш енче. Мускав лекторĕ те паян сире ун пирки уççăнах каларĕ, авă. Хăрушă çил-тăвăл çывхарать пек туйăнать. Пурнăç юххипе ан кайăр, пушăпа хăваласса ан кĕтĕр, пуçпа ĕçлеме хăнăхăр, ман Яша Мургаев юлташ пек ан пулăр. Çакăнта тăрăшса вĕренни вăл сире пулас ĕçре кăна мар, пурнăçри пур ĕçре те яланах пулăшĕ, хисеплĕ ачамсем.

Хăйне яланах çирĕп тытма хăнăхтарнă Крутов çак калаçăва нихçан та манмĕ. Шкулта вăл «пушăпа хăваламасăрах» вĕренет, хĕрлĕ диплом илме ĕмĕтленет.

Çĕнĕ çул кĕтсе илме Маруç Чулхулана килчĕ. Общежити коменданчĕ ăна хĕрсен пӳлĕмне вырнаçтарчĕ. Шкулти актовăй залра бал-маскарад пулчĕ. Ирчченех юрласа-ташласа, вăйăсем выляса савăнчĕç вĕсем. Кăнтăрла Спорт керменне кайрĕç. Мускавсемпе чулхуласен хоккей вăййипе киленчĕç. Хĕр качча нумай чăрмантармарĕ, каçпа сыв пуллашрĕ те.

— Хулара çывăрмасăрах каятăн-и вара? — тĕлĕнсе ыйтрĕ Макçăм.

— Çул çинче, Вăрманкас станцине çитичченех çывăратăп, — тамбуртан алă сулчĕ Маруç.

Крутовăн хăйĕн те вăхăт сахалтарахчĕ, виçмине парти историйĕпе экзаменччĕ. Мария Николаевнăн январĕн виççĕмĕшĕнче ĕçе çитмеллеччĕ.

Хĕллехи каникулта вара иккĕшĕ те уйрăлмасăр тенĕ пекех çӳрерĕç. Макçăм Маруçа хăнăхса пычĕ. Маруç хăй те ун çумнерех çыпçăннăçемĕн çыпçăнчĕ. Пĕр-пĕрне юратнине, пĕр-пĕринсĕр пурăнма пултарайманнине вĕсем кунран-кун вăйлăрах туйса пычĕç.

4

Ленин çуралнăранпа çĕр çул çитнĕ кун Чулхулара çул пуçăн палăкне уçма хатĕрленни çинчен Крутов савнийĕ патне малтанах çырса пĕлтернĕччĕ. Ялта ачасене каникула янă ыççăн Мария Николаевна каччи патне васкарĕ. Çут çанталăк хĕл ыйхине сирсе этем кăмăл-туйăмне çĕнĕлле чĕртнĕ, хĕвел ăшшинче çĕр сĕткенĕ сывлăша çĕкленнĕ, тавралăха çурхи шăршă çапнă вăхăтра тĕл пулчĕç вĕсем.

Мĕн тери асран кайми савăнăç кунĕ пулчĕ паян Маруçпа Макçăмшăн. Иккĕшин хушшинче çурхи хĕвел ăшшиллĕ туйăм вылять. Вĕсем Ока Атăла юхса кĕнĕ тĕле, чăнкă çыран хĕрне, пырса тăчĕç. Çӳлтен тавралăх ывăç тупанĕ çинчи пек курăнать: Канавино, Сормово, Автозавод районĕ, Атăлăн сулахай çыранĕнчи улăхсем,

вĕтлĕх вăрмансем, кӳлĕсем, Бор хули... Ир килнĕ çуркунне хулана тахçанах юртан тасатнă. Окапа Атăл та пăр юхтарса пĕтернĕ. Маруç каччине сылтăм хулĕнчен çавăрса тытрĕ те сулахай аллинчи чечекпе питĕнчен, сăмсинчен çепĕççĕн тĕккелет. Макçăм чечеке çыртса илесшĕн çăварне кап та кап тутарать. Хĕрĕ те карт! туртать те чечеке, каччи вара сывлăш çăтса юлать.

— Эх, эсĕ, ман чечек сачĕ, — тет те Макçăм, иртен-çӳренрен вăтанмасăрах Маруçа ыталаса хăй тавра çавăрать. Хĕр ăна чечекпе çара ĕнсинчен кăтăклать.

— Хăвăн чечек çыххине аса илтĕн-им? — ыйтуллăн пăхрĕ Маруç ун куçĕнчен. — Сан аллунтан чи пирвай илнĕ çав чечек çыххине эпĕ манмарăм, сыхласа усрарăм, кунтах, сан патнах, илсе килтĕм, тĕрĕс-тĕкелех. Ăна эпĕ никама та тыттарман, сан валли, ĕмĕрĕпе асăнса пурăнмалăх упрарăм. Хăв шухăшланă пекех савăк пулĕ сад пахчинче. Яланах хип-хитре чечексем ешерĕç унта... Эпир вĕсене пĕрле ӳстерĕпĕр, вĕсем çине пăхса пĕрле савăнăпăр.

— Ак çапла-и? — тесе Макçăм алă çинчи хĕрне чарăнма пĕлмесĕр çавăрать те çавăрать, кĕпе арки питĕнчен сăртăнса кăтăклантарнипе пусне ухать, тапăртатать те тапăртатаь. — Ак çапла-и? Ак çапла-и?..

— Ӳкеретăн вĕт, вĕçтерсе яратăн, Макçăм.

— Ӳкерместĕп те, вĕçтерсе те ямастăп пĕччен. Вĕçес пулсан та, иккĕн вĕçетпĕр, пĕрле, юнашар. Авă, çав чарлансенчен пĕрин çине ларатпăр та, Атăл тăрăх Шупашкаралла ярăнатпăр, — хашка-хашка калаçать Макçăм.

— Эх, эсĕ те çав, фантазер. Пуш ĕмĕт мар-и ку сан? — питĕнчен ачашласа илет ăна савнийĕ.

— Çук, унашкал мар. Çак чапа тухнă Атăл хысакĕ вăл шухă шухăшлăх вырăнĕ. Çавăнпа вĕçес килет, — аллисене сарса хăлаçланчĕ Крутов. — Йӳçĕ Макçăм та

çакăнта утса пайтах çĕнĕ шухăш çуратнă пуль. Маяковский, Шевченко, Шаляпин, Пушкин... Кам кăна утман-тăр Атăл хысакĕпе. Ленин та пулнă кунта...

— Макçăм Крутов та хĕрĕпе савăнать, тӳрех çӳлтен чарлан çине сиксе ларма ĕмĕтленет, — хушса хучĕ Маруç. — Эй, чарлансем! Хăшĕ вăйлăрах сирĕнтен? Хатĕрленĕр! Макçăм текен этем сирĕн çунатусем çинче Чăваш çĕршывне вĕçсе çитме хатĕрленет. Эй!

Йĕкĕт хĕрне çĕре антарса тăратрĕ, алăран çавăтса хысак тăрăх чуптарчĕ. Маруç ун çумĕнче аран-аран ĕлкĕрсе пырать. Тарăн çырма урлă хывнă тимĕр кĕпер пуçне çитсен иккĕшĕ те чарăнчĕç. Хĕрĕ аялалла пăхса çӳçеннине сиссенех вăл ăна алă çине çĕклесшĕнччĕ, анчах лешĕ хирĕçлерĕ.

Ансăр, вăрăм кĕпер урлă каçсан вĕсем, «Синтетика» ятлă магазин çумĕпе авалхи пĕчĕк урамалла пăрăнса кĕчĕç.

— Ăçта илсе каятăн эсĕ мана? — тĕлĕнчĕ Маруç.

— Макçăм патне. Санăн çуралнă кун ячĕпе хулари паллă вырăнсене курса çӳрер.

«Каширин çуртĕнче» пулнă хыççăн Свердлов урамне тухрĕç. Тăвалла утнă май Макçăм хĕрĕн çӳхе кĕпи çине плащне уртса ячĕ. Ак, вĕсем Максим Горький тăваткалне çитрĕç. Питĕ илемлĕ кунта: симĕс тум тăхăннă скверĕ те, чечек клумбисем те, таврари нумай хутлă çурчĕсем те, çичĕ енчен уçлăха тухакан урамĕсем те, çыннисем те, палăкĕ те. Алексей Максимович аллисене хыçалалла тытнă, пуçне кăшт каçăртарах, чалăштарарах панă, çиле хирĕç хули çине мăнаçлăн пăхать.

— Кур-ха эс, кур, Маруç! Çын алли тунă вĕт çак тĕлĕнтермĕше. Революци тăвăлçин чăн-чăн сăнарне пит витĕмлĕ кăтартса пама пултарнă скульптор.

— Кам тунăччĕ -ха палăкне, Макçăм? — ыйтрĕ Маруç.

— Мухина. Астăватăн-и, леш, рабочипе хресчен палăкĕн авторĕ. Мускавра пулнă чухне Халăх çитĕнĕвĕсен

выставкинче курнă пуль? Çавă тунă. Палăкне кунта 1952 çулта уçнă. Пăх-ха эс ун çине тĕсерех. Çӳлĕ чул хысакĕ çинчи бронза кĕлеткере çынлăх сăнарĕ те, лăпкăлăх туйăмĕ те курăнать. Малалла ыткăнакан хĕрӳ чĕреллĕ çамрăк самантлăха чарăнса тăнă пекех...

— Чăнах та çавнашкалах, — пуçне каçăртсах сăнарĕ Маруç. — Сывă-и, Алексей Максимович? Паллашар: ман каччă Макçăм. Сирĕн хулара пурăнать, вĕренет. Сирĕн тăвăлçă майлах. Сирĕн пекех хăюллă, харсăр, ăслă. Акă, алă тытăр пĕр-пĕрне, икĕ Максимыч. Паллашрăр-и? Питĕ лайăх. Халĕ сире çакă чечек çыххине парса хăваратпăр. Сывă пулăр, Горький юлташ.

Общежитие çамрăксем тĕттĕм пуларахпа тин çаврăнса çитрĕç. Вахтер, ватăла пуçланă Люба инке, Макçăм хĕрне çуралнă кун ячĕпе саламларĕ.

Пӳлĕмре Макçăм хĕрĕн йăлкăшакан куçĕнчен шăтарасла пăхрĕ те, шăппăн ыйтрĕ:

— Ман валли çеç упрарăм терĕн-и-ха пурнăç чечекне, юратнă Маруçăм.

Хĕр каччă мăйĕнчен çавăрса тытрĕ, ăна хыттăн-хыттăн чуп турĕ.

## 5

Тепĕр кунне вĕсем Ленин палăкне уçнă çĕре кайрĕç. Уяв урамĕпе утнă май Крутов Маруçăн ирхи хĕвел шевлипе çиçекен кулăллă пит-куçне ăмсануллăн сăнарĕ. Маяковский урамĕнче, кĕпер çумĕнче, Атăл хысакĕн илемĕпе киленчĕ, ĕнерхи телейлĕ саманта аса илчĕ. Колонна кĕперпе пырать. Ока çийĕн хăватлă юрă шăранать: «Ленин ялан пирĕнпе...» Пĕр ретри юлташĕсемпе Макçăмпа Маруç та юрласа Ленин хутлăхне харăссăн утса кĕреççĕ.

Акă, шап-шурă çивитти уçăлса шуса анать те халăх тинĕсĕ варрине Владимир Ильич кĕлетки тухса тăрать.

Совет Союзĕн гимнĕ янăрать. Хăй çĕр çул тултарнине Ленин çурхи тумпа, çара пуçăн хĕвеле хирĕç кĕтсе илет. Сулахай аллине вăл кăкăрĕ çумне тытнă, сылтăммине кăшт аяккарах сарса çĕкленĕ, йăлт малалла талпăннă.

Митинг вĕçленсен вĕсем халăх хушшипе хĕсĕнкелесе Ока çыранне тухрĕç. Маруç тӳпере çунса сӳнекен ракетăсем еннелле тĕллесе кăтартрĕ:

— Пăх-ха, Макçăм, пăхсам! Епле илемлĕ! Миçе пин-ши унта, миçе тĕс-ши? Пуçласа куратăп фейерверк. Эх, савăнăç! Пурнăçра сайра-хутра тĕл пулакан телей кунĕ паян пирĕн. Каллех ракетăсем чечек пулса саланчĕç. Пăхсам ĕнтĕ...

Çамрăк тирек çумĕнче тăракан Макçăм çӳлелле пăхса илнĕ хыççăн куç тĕлне пулнă тепĕр тĕлĕнмелле ӳкерчĕке сăнама пуçларĕ. Ак тамаша! Çыранран Линăпа çар капитанĕ, упăшки пулас, аташа-аташа мекеçленсе хăпараççĕ. Лина йăрăс кĕлетки çине çӳхе плащ çакса янă, шап-шурă пушмакпа. Урлă-пирлĕ пускаланипе урисем хушăран-хушăран çӳлеллех çуталса каяççĕ, чăп-чăмăр тăпăлкка пĕççисем аялти кĕпин кĕрен тĕслĕ чĕнтĕрĕпе выляççĕ. Маруç çаплах пĕлĕтри чечек кăшăлне сăнать-ха.

— Маруç! Максим Максимович! Мĕн măшкăлласа пăхса тăратăр? Пулăшăр-ха!

Лина сассине илтнипе-ши, Маруç кăртах сикрĕ. Пĕрле ӳснĕ, пĕрле шкулта вĕреннĕ тантăшĕсене çакăнта курасса кĕтмен-çке. Макçăм Линăн сулахай аллинчен ярса тытрĕ, ăна çӳлелле туртрĕ. Лина алли хĕрнĕ тимĕр пек пĕçертет. Макçăмăн сылтăм аллинчен Маруç тытнă. Унăн алли те чĕре таппине вăйлатать, çан-çурăма хĕртет. Икĕ енчен икĕ вут-çулăм — икĕ хĕрарăм çунтарать. «Хăшĕ вĕрирех-ха, хăшĕ вăйлăрах? Хăшĕ? Кала-ха, чĕрем?» — пуçра шухăш вĕлтлетсе илчĕ. Хăлхара асамлă сасă илтĕнчĕ: «Лина-мина хĕрӳрех те хӳререх, иртнĕ

юрату хĕрĕвĕ çеç. Вăл саншăн ӳснĕ чечек пулман. Яр çав алла хăвăртрах, пăчăрта хытăрах Маруç аллине. Ку хĕр саншăн çеç çуралса ӳснĕ».

Капитана виççĕн туртса хăпартрĕç-хăпартрĕçех. Вăйĕ пĕтнипе хашкакана ернĕ Лина аран-аран сывлăш çавăрса ячĕ, аллисене пĕç çумне шарт та шарт çапрĕ:

— Ак тĕнче, мĕнле тĕлĕнмелле тĕл пулу, шутламан-туман çĕртен. Ăçтан сиксе тухрăр эсир? Хăçан кунта килнĕ вара? Ак тĕнче! Максим Максимович, ман тантăша ăçта тупма пĕлнĕ çак эсĕ?

— Шурăм пуç çăлтăрĕ вăл ман, Хурăнвара вĕçсе килнĕ хĕр, — кулчĕ Крутов. — Эпĕ партшкулта вĕренетĕп. Мария Николаевна хула курма килнĕ.

Линăпа Славик вĕсене хăнана чĕнчĕç. Офицер Крутова хулран тытса вокзал еннелле çавăрчĕ, Лина Маруçпа шăкăл-шăкăл калаçса утрĕ.

Сормовăна автобуспа ларса кайрĕç. Тымарти Тан Ваçли ачи вĕçкĕнрех пулас, паллашнă-паллашман çарти ĕççем çинчен мухтанса илчĕ, хваттерне, арăмне ырласа пĕтерейменрĕ, малашнехи карьерине те аса илме манмарĕ. Автобусра е трамвайра пустуй пакăлтатма юратман Макçăм «аха, лайăх» текелесе пычĕ.

Васильевсем виççĕмĕш хутра, икĕ пӳлĕмлĕ хваттерте пурăнаççĕ. Çурчĕ çулран аякра. Тавраллах йывăç. Уçă чӳречерен çурхи чечекленӳ шăрши капланса кĕрет. Макçăмпа Маруç кил хуçшинелле пăхса тăраççĕ. Акă, çăка вулли тăрăх пакша сирпĕнтерсе хăпарса тарчĕ. Икĕ пĕчĕк ача ăна анмашкăн чĕнсе кăчăк туртаççĕ. Лина юнашар чӳречерен кăшкăрчĕ:

— Максимка! Пӳрте!

— Хăшĕ сирĕн ывăл? — Линăран ыйтрĕ Маруç. — Юрататăп-çке пĕчĕк ачасене.

— Авă, кунталла çаврăнса пăхаканни, — терĕ Лина. — Пĕрлешсессĕн, сисместĕр те, акă, кĕçех хăвăрăн та сиксе

тухать унашкал каскӑн. Маруҫ, сана эп апат хатӗрлеме чӗнесшӗн. Сан унта, старик, запас сахалтарах. Хамӑра ҫитӗ те, капитансем килетпӗр тенӗччӗ. Ҫавӑн ҫинчен ан ман.

Лина упӑшки тухса кайсан Макҫӑм та кухньӑна кӗчӗ, хӗрарӑмсене пулӑшма шутларӗ. «Эпир кунта хамӑрах», — терӗ те Лина ӑна черккесем, вилкӑсем тыттарчӗ. Макҫӑм тулли тарелкӑсем, апат-ҫимӗҫ зала йӑтрӗ.

Капитансем нумай кӗттермерӗҫ, пӗр ҫуртрах пурӑнаҫҫӗ пулас, шавласа ҫитсе кӗчӗҫ. Виҫҫӗн, хӑйпе — тӑваттӑн. Икӗ хӗрарӑм пур. Тепри хусах-ши? Линӑпа Маруҫ кухньӑран тухсан праҫник пуҫланчӗ. Пӗр-пӗринпе паллашрӗҫ, калаҫу хӗрсех пычӗ.Пулас мӑшӑра «йӳҫӗтсе» пылаклатрӗҫ. Капитансем пит интереслӗскерсем, савӑнӑҫлӑскерсем пулчӗҫ, никама та тунсӑхлама памаҫҫӗ, ташӑ юратаҫҫӗ. Тултан мӑйласа кӗнӗ Максимкӑна Маруҫ алла илчӗ. Тыттарманшӑн, пакша ҫине кӳреннӗ-мӗн. Ют хӗрарӑма ача часах хӑнӑхрӗ. Маруҫ, эрех ӗҫменскер, унпа выляса ларчӗ. Капитансем хӑйсен ӗҫӗ пирки пит хӗрсе тавлашма пуҫларӗҫ.

Максим Максимович тем тума кӗрсеччӗ кухньӑна. Лина та вараланчӑк тарелккӑсем йӑтса ҫитрӗ. Никам та курманнине сиссе вӑл Макҫӑма мӑйӗнчен ыталаса илчӗ, тӗлли-паллисӗр хы-ытӑ чуп турӗ. Аптӑраса ӳкнӗ Макҫӑм хӑранипе часрах вӗри хӗрарӑмӑн аллисене вӗҫертрӗ, йӗпеннӗ тутине пӳрне тӳртӗшӗпе шӑлса типӗтрӗ, ӳсӗрлерех панӑскерне лӑплантарма тӑрӑшрӗ:

— Мӗн хӑтланатӑн эс, Лина? Ҫунтаран вӗт: мана та, хӑвна та.

— Эп тахҫанах ҫунса кайнӑ. Ҫавӑнпа хӑрамастӑп. Никамран та. Паян эп тӗнче уҫлӑхне вӗҫнӗ пекех вӗҫетӗп. Паян эп ҫунатлӑ. Паян эп телейлӗ. Паян эс ман ҫумра, ман алра, ман ытамра, ман... Эх, Макҫӑм...

Кухньӑна кӗрекен-тӑвакан пулсан темскер ан шутлаччӑр тесе Максим Максимович Линӑран уйрӑлса

сётел тепĕр енне кайса тăчĕ. Лина, вăхăт сахаллине сиссеши, ăшра тулнине хăвăртрах çиеле кăларма васкарĕ пулас, чарăнмасăр калаçрĕ:

— Астăватăн-и, Макçăм, хăмăшсен юррине? Хăмăш пĕвине? Ман çуралнă куна? Анкарти хыçĕнчен пĕрле пӳрте вăрттăн кĕнине? Ун чухнех каланăччĕ сана, малтанхи упăшкаран ача çуратмастăп тесе. Юратман çын ачи мана кирлĕ мар. Эпĕ хама юратакан, хам кăмăллакан арçынпа çеç хитре ача çуратма тĕллев лартнăччĕ. Эпĕ ăна пурнăçларăм. Вăл пур халь, хитре ача, Максимка. Сан ятлах. Сан кăмăллах. Сăнĕ çеç хамăн. Ун чухнехи савăк каç маншăн ĕмĕрте пĕрре пулнă. Унашкал савăк саманта эпĕ малтанхи упăшкапа та, кайранхипе те курман. Санпа çеç. Эсĕ маншăн чи вăйлă, чи юратнă, чи тутлă арçын. Мĕншĕн ĕмĕр тăршшипех тăсăлмастьши çав самант? Мĕншĕн телейсĕр шăпа-ши манăн? Ача пуласса эпĕ туйрăм. Пĕлетпĕр эпир, хĕрарăмсем, хамăрăн кĕлеткери улшăнусене. Эсĕ мана качча илес çуккине те малтанах ăнланнă. Çавăнпа, хырăм юлсан, çыпçăнма та, тархаслама та шутламан. Хамăн малтанхи, çапçамрăк чухнехи каччă отпуска килсен ăна часрах качча тухрăм. Вăхăт нумай иртсе ан кайтăр терĕм. Сакăр уйăхчен çуратрăм. Унашкалли пулать хĕрарăмсен. Упăшка ăнланмарĕ те, пĕлмерĕ те — ан та пĕлтĕр. Иксĕмĕр хушăри вăрттăнлăх пултăр. Сана асра тытмалăх Максимка тес терĕм. Упăшкана ӳкĕте кĕртрĕм. Чулхулара çуралнă ачана Максимка ят пани питĕ чаплă тесе килĕшрĕ. Вăт сан, Макçăм, авланман пулин те, виçĕ çулхи пысăк ывăл пур — Пысăк Максимка, Максим Максимович. Йăху малалла куçса пырать. Максимкăна арăму та епле юратать. Кам ачине пĕлмесĕрех йăпанать унпа. Мана каçар. Эпĕ айăплă мар. Мана хама кирлĕ пулнă. Хам кĕçеннĕ, хамах чĕннĕ, пулас упăшка умĕнче хамах çылăха кĕнĕ. Юрать-ха ăна, ухмаха, малтан мана

улталаса хăварнăшăн. Халь эп те тавăртăм. Эп те ĕмĕрлĕх улталарăм, ӳстертĕр ют çын ачине. Эс мар айăпли. Эс каччă пулнă. Эс хĕрарăм тутине курман-пĕлмен каччă пулнă. Эх, Макçăм, чун савăнать, чун ыратать. Пакăлтатрăм ӳсĕрпе. Тепре ыталам-ха сана, тепре...

Максим Максимович вĕри хĕрарăмран уйрăлса сĕтел пуçне кайса тăма çеç ĕлкĕрчĕ, кухня алăкĕ уçăлчĕ те Лина упăшки курăнчĕ. Капитан самаях хĕрнĕ, пӳрнипе юнать:

— Акă ăçта вĕсем, шельмăсем, тарса пытаннă. Ташлама ахаль хĕрарăм çитмест. Мутри сана, Максим Максимович, ман Линăпа йăпан тӳлĕк! Пирĕн хусах капитан пур. Тухса пăх-ха, епле çавăрттарать хĕрна? Хусах капитан вырăнне хусах слушатель пулса юлатăн, ак.

— Эй, çакна, тулăксăра, — Лина упăшкине коньяк кĕленчи тыттарчĕ, — тем сӳтĕрлет, ялти çинчен виç сăмах ыйтса пĕлме памасть. Ăçта сан культура? Айта, айта, ман гварди капитанăм, хамăн та пит ташлас килет. Айтăр, тухăр кухньăран. Халăхпа пĕрле пулар. Савăнар пĕрех хут. Унтан вăл, упăшкине çавăрса илсе, ташша кĕчĕ.

Маруç ирĕк марччĕ. Чăнах та хусах капитанпа çаврăнать, хуçкаланать, каччи çине вăрттăн пăхса кулать. Макçăм валли ташлама никам та юлман. Пĕр Максимка çеç пластинкăсем пăтратса тăрать, «а нам вселавно, а нам вселавно» юрă ĕнĕрлет. Пĕччен тăрса юлнă шĕвĕрккене çĕклерĕ те Максим Максимович, ташша ячĕ. Ашшĕпе ывăлĕ, икĕ Макçăм, пĕр-пĕрин çине ăшшăн пăхса, кăмăллăн кулкаласа çаврăнчĕç те çаврăнчĕç. Çав вăхăтра Крутова Çĕр хăйĕн хăвăртлăхĕнчен те хăвăртрах çаврăннă пек, мăйĕнчен ыталаса илнĕ ывăлĕ ӳкесрен сехĕрленсе хытăрах та хытăрах пăчăртанă пек, Лина «линкка-линкка авкаланма юман хăма кирлĕ, тата юман, тата юман, тата юман кирлĕ» тесе ĕмĕтленсе юрланă пек, Маруç унпа хăй ташлайманшăн кĕвĕçнĕ

пек, Тан Васли ачи, Славик, хăй малтан ялта юратма тапаçланса пăхнă Маруç пирки шухăшланă пек туйăнчĕ. «Чăнах та ман ачах-ши вара эсĕ, Максимка? Сăну аннӳн, сăмсу... каçăртарах, туту хĕррисем хулăнрах, çамку сарлака та çӳллĕ... Манни пекех. Манăн, манăн ывлăм вĕт эсĕ! Аçу эп санăн! Аçу! Пĕлетĕн-и, эпĕ сан чăн-чăн аçу, аннӳпе ташлаканни «аçу» мар, эпĕ!» — ăшра каласрĕ, кăшкăрчĕ Крутов. Никам та илтмерĕ-ши тесе хăранипе шăлне çыртса лартрĕ, амăшĕ еннелле туртăнакан ачан айăпсăр куçĕнчен шеллесе пăхса илчĕ те Маруç патнеллеваскарĕ, Славик магнитофон кĕрлеттерме тытăнсан, хĕрĕпе ташша тухрĕ.

Общежитие таврăнсан Маруç Макçăма икĕ хăлхинчен те çулса тытрĕ, куçĕнчен шăтарасла пăхса, йĕре-йĕре тĕпчеме пуçларĕ:

— Кала тӳрех! Суймастăн-и?

— Мĕн калас. Суймастăп.

— Эсĕ Линăпа çӳренĕ?

— Çӳренĕ, вара мĕн...

— Ун пирки пĕлетĕп. Иксĕмĕр паллашнă хыççăнах шкулта каласа панăччĕ мана сан хĕрӳ кам тата мĕнлескер пулнине. Ялта унта пытараймастăн. Лина тата çитменнине Хурăнварта ытармалла мар каччă тупрăм тесе ман умра тахçанах чанкăлтатса ларнăччĕ. Пĕлнĕ эпĕ сирĕн çинчен. Шарламан çеç.

— Апла пулсан, мĕн тума ыйтатăн?

— Кала, пулнă-и сирĕн хушăра мĕн те пулин?

— Мĕн, ара?

— Мĕн те мĕн тет. Эппин, хĕрпе каччă пĕрлешсен мĕн пуласси..

— Пулнă пулсан, вара мĕн тăвасшăн? Ай, хытă ан турт-ха?

— Тата хытăрах туртатăп, малашне ан пултăр тесе. Никампа та ан пултăр тесе. Аванс. Эсир, арçынсем,

ирĕклĕ вăл енчен. Сире, мĕн? Эп уншăн пурпĕрех ытлашши кӳренместĕп. Мана куриччен, мана качча иличчен кампа мĕн пулнине каçаратăп, урăх аса илместĕп. Ăнлантăм эп сире паян. Ока хĕрринчех асăрхарăм иксĕрĕн куçусене. Хăйсем патĕнче те. Кухньăра çухалсан та. Туйрăм вăрттăнлăха. Шарлас, систерес темерĕм малтанхи юрату хуçисене. Тулĕк ĕнерхи кăмăл хуçăлчĕ. Каяс та теменччĕ унта. Эс ытлашши хирĕçлесе тăмарăн та. Сан кăмăлна ытараймарăм. Юрĕ ĕнтĕ, халь тин мĕн пулнине урăхлатаймăпăр. Халь каллех иксĕмĕр пĕрле. Тулĕк çак сăмаха ан ман. Куртăн-и хăлха хуçи мĕнле хаяррине? Пулас арăму мĕнлине? Кĕвĕçме, ятлаçма пултарнине?

— Куртăм. Ăнлантăм. Ай! Урăх ан турт! Сана-и? Сана эп çиччас пиçиххи вĕçертсе илем! Пулать! — Макçăм хĕрне çĕклерĕ те вырăн çине хуллен лартрĕ. — Ан кулян, пĕртен-пĕр юратăвăм пулăн эс.

— Темшĕн хăрамастăп эпĕ санран. Пĕртте хама улталать тесе шухăшламастăп. Çавăнпах килĕшрĕм пуль санпа çӳреме. Ан васка, туйччен кĕтсе пурăнар-ха, чунăмçăм...

## 6

Кам патне те пулин тăван е пĕлĕш-хурăнташ килсен вĕсен пӳлĕм яланах ирĕкленет. Пĕр-пĕринпе калаçса татăлмасăрах вăшт та вăшт тухса çухалаççĕ юлташĕсем. Макçăм кам ăçтине лайăх пĕлет. Валентин Винокуров виçĕ кунлăх килне, арăмĕ патне кайрĕ, хĕр ачи валли чаплă пукане туяннăччĕ. Владимир Петров Мокшан районĕнчи ентешĕн пӳлĕмĕнче çывăрса тăрать. Яков Васькинăн хулара куккăшĕ пур, çавăнтан шăнкăравларĕ. Макçăма хăйне те Шупашкар ачи иккĕмĕш хута «хваттере ячĕ».

Крутов пынă çĕре Маруç тăрса тумланма ĕлкĕрнĕччĕ.

— Лайăх мар-çке капла, Максим Максимович, эпĕ килтĕм те сирĕн пурнăç йĕркине пăсса ятăм. Сан

юлташусем кӳренеҫҫӗ пуль. Сана пула унта-кунта ҫывӑрса ҫӳреме тивет те. Ху та эс нушаланатӑн, — ҫӗрелле пӑхса каларӗ Маруҫ.

Каччӑ хӗр аллисене тытса хӑйӗн кӑкӑрӗ ҫумне пӑчӑртарӗ.

— Ман юлташсемшӗн кулянма кирлӗ мар. Парти салтакӗсем вӗсем, революционерсем пекех, чӑтуллӑ, ӑнлануллӑ ҫынсем. Нушаланасса вара... Ҫӗр каҫ тӗлӗк курнӑ. Ялта пек. Туй кӗрлет пек. Тельман Федотовичпа Герасим Филиппович пире кула-кулах колхозӑн пыл кӗлетне хупаҫҫӗ пек. «Карачӑм мучи, таврара шӑвшав ан пултӑр, лайӑх хуралла, — тесе шӑлне йӗрет Волковӗ. — Иккӗн выртса виҫҫӗн тӑмалла пултӑр — кӗлетрен виҫҫӗн тухмалла пултӑр».

Итленӗ май хӗр каччӑн ҫурхи хӗвел пек ҫиҫекен куҫӗнчен пӑха-пӑха илсе йӑл кулать, питне ҫумарах, ҫумарах ҫывхартать.

— Иртерех пуль-ха, Максим Максимович, кӗлет пирки шухӑшлама, унччен пурӑнмалла-ха. Ман кӗҫех каймалли вӑхӑт ҫитет. Каллех уйрӑлмалла пулать...

— Юрӗ, тӗлӗк асӑмрах юлтӑр, паян пирӗн иксӗмӗрӗн пӗр ҫӗре ҫитмелле. Занятисем вӗҫленсенех каятпӑр. Эсӗ унччен хула тӑрӑх ҫӳре.

— Пӗлме юрать-и?

— Камит курма.

— Мӗн ятлискер камичӗ?

— «Пур-ҫук анне».

— Юрӗ, эпӗ хавасах. Хулана килнӗ ятпа театрта та пулас.

Калама каларӗ те ку сӑмахсене Крутов, тӑрук шухӑшларӗ: «Чулхулана килнӗренпе сакӑр уйӑх ӗнтӗ паян каятӑп та ыран каятӑп тесе чӑтӑмлӑн кӗтсе пурӑнтӑм, халӗ пӗччен те мар, Маруҫпа пырса кӗретӗп унта, тӗрӗсех тӑватӑп-ши капла хӑтланса. Ӗнер пӗр мыскара кӑтартрӑм ӑна, паян — тепӗр мыскара. Ытла кулӑшла пулса тухмасть-ши? Тен, тӑхтас?»

Партшкул столовăйĕнче апатланнă хыççăн Максим Максимович хĕрне ăçта ăçтан мĕнпе çитмеллисене ăнлантарчĕ те занятине васкарĕ, шухăшне улăштармарĕ: вĕсем паян Керженевсем патне каяççех.

Хăйне çуратнă текен хĕрарăмпа тĕл пулас шухăшĕмĕт Крутов ăшĕнче пĕрре амаланать, тепре тамалать. Хурăнварта курса калаçнăранпа çав çынна ниепле те манаймасть, чĕре йăшкаса тăрать. Унăн унпала тĕл пулмаллах, калаçмаллах. Унсăрăн ăш-чик çунать.

Маруç театра кайма тесе ятарласа кĕпе туяннă, Макçăм шкултан таврăннă çĕре тумланнă, питне-куçне сăрлама хатĕрленсе тăрать.

— Ялта пулсан сăрлас çукчĕ, хула майрисем хушшинче намăс пуль терĕм те, — тĕкĕр умĕнчен уйрăлчĕ вăл.

— Пустуй сăрланса ӳтна та ан пăс, эс унсăрах хитре, — терĕ те Крутов шифоньертан çĕнĕ костюм кăларчĕ. — Ман та чаплăрах тумланас-ха. Кĕпӳ сан чăнах та çыпăçуллă, виççе çĕлетнĕ пекех, тĕсĕ те пит килĕшет.

Урама тухсан Мария Николаевна тĕпчеме пуçларĕ:

— Итле-ха, Макçăм, хулара çӳренĕ чухне афишăсем вуларăм та, «Пур-çук анне» текен спектакле нихăш театр репертуарĕнче те асăрхаймарăм-çке. Хăшинче пулать?

Ассăн сывласа илчĕ те Крутов кулançи турĕ, вăрттăнлăхне çапах уçса памарĕ.

— Килти театрти премьера вăл, Маруç, çавăнпа пĕлтерӳ çапман, эпир вара чĕннипе каятпăр, авă, çитрĕмĕр те, — Максим Максимович Свердлов урамĕнчи авалхи пилĕк хутлă хитре çурт умĕнче чарăнчĕ. — Кил хушшипе çаврăнса кĕмелле пулас, тĕрĕсех пыратпăр, акă вăл вĕсен подьезчĕ, вуннăмĕш хваттер...

Чĕри кăртти-кăртти тапать Крутовăн, пӳрне электрошăнкăрав тӳммине пусаймасть...

— Мĕн пулчĕ сана, Макçăм? — сехĕрленнипе куçне-пуçне чарса пăрахрĕ Маруç. — Сăну улшăнчĕ.

— Нимех те мар, иртсе каять, — тесе вăл вăрăммăн шăнкăртаттарчĕ.

Шалта шăкăр-шакăр турĕ те, алăк ерипен уçăлма пуçларĕ.

— Камсем пултăр эсир? Çук, çук, хваттер пушă мар ман, иртнĕ эрнере çеç ятăм, — илтĕнчĕ хушăкран Крутов паллакан чĕтревлĕрех уçă сасă.

— Эпĕ ку, Хурăнвартан, Максим Максимович...

Сăнчăр çаклашкинчен ирĕкленнĕ алăк яри уçăлса кайрĕ те вĕсем умне пуç çиййĕн ăшă тутăр уртнă, вăрăм халат тăхăннă Антонина Ивановна тухса тăчĕ, аллисене çĕклесе:

— Эй, турă каçартăр, эсĕ-и ку, Владик? Мĕнле килме пĕлтĕн? Хăçантанпа кĕтетĕп. Эй, ку урмăш пурнăçа, — терĕ те Макçăма ыталаса илчĕ, ĕсĕклесех йĕрсе ячĕ.

Нимĕн те ăнланман Маруç ун-кун пăхкаларĕ, палламан хĕрарăм унăн Макçăмне Владик тенинчен пушшех тĕлĕнчĕ. Антонина Ивановна хăйсене шалалла çавăтса кĕрсен, вăл Макçăмран вăрттăн ыйтрĕ:

— Эс мĕн ятлă вара? Ултавçă мар-и? Вăт ку чăнах та камит.

— Хуллентерех эс, кĕçех йăлтах пĕлĕн, ак, унччен итле. Макçăм та, Владик та эпĕ, Максим Максимович та çав вăхăтрах Владислав Васильевич та. Ăнланмалла-и?

— Çук.

Кил хуçи хĕрарăмĕ шалти пӳлĕмрен тум улăштарса тухрĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл йăлтах урăхла сăн-питлĕ курăнать. Çӳçне-пуçне майланă, шупка-кĕрен тĕслĕ кĕпепе, ун çиййĕн кĕске çанăллă кофта тăхăннă, духипе сапăнма ĕлкĕрнĕ.

— Иртĕр, иртĕр тĕпелелле, ачамсем, ларăр, чей ĕçĕпĕр, — алăк умĕнче нимлемарланса тăракан Крутовпа Мария Николаевнăна чĕнчĕ вăл. — Пуçра

йăлтах арпашăнса кайрĕ сире курнипе. Эх, Владик, ывлăм, чĕрем çурăлать. Пĕчченех тăрса юлтăм вĕт эпĕ, пĕчченех. Михаил Степановича хĕлле пытартăм. Питĕ кĕтетчĕ вăл сана, Владик. Эс ăна Хурăнварта çав тери кăмăла кайнă. Вилес умĕн те асăнчĕ, çав ачана пĕрле Чулхулана илсе килме килĕшмесĕр ун умĕнче эпĕ мĕн тери пысăк айăпра пулса юлтăм, çылăхăма пĕрлех илсе каятăп ĕнтĕ леш тĕнчене, ман ятран халĕ те пулин каçару ыйт, терĕ. Эх, мана, ухмаха... Владик, ку кам пулать-ха сан?

Крутов хĕрне диван çине лартрĕ те хăй ун çумне вырнаçрĕ, вара паллаштарчĕ:

— Мария Николаевна, Тарăнвар шкулĕнче ĕçлет, пирĕн патра хваттерте пурăнать, кăмăлĕ пăсăлмасан, унтах юлма та пултарать.

— Çураçнă хĕрӳ апла. Питĕ лайăх. Кăмăллатăп. Эпĕ, Мария Николаевна, Владикăн амăшĕ пулатăп — Антонина Ивановна. Тӳрех туйрăм, эсĕ, Владик, хăвăн пурнăçупа йăлтах паллаштарман пулас ăна, халĕ ĕнтĕ хамах каласа парăп. Йывăр та кун пирки çăвар уçма, çапах тĕрĕссине пĕлтермеллех пулать пуль пулас кине. Ман шăпана никамăн та курмалла ан пултăрччĕ. Ашшĕсĕр ача — çур тăлăх, амăшĕсĕр ача — хăр-тăлăх тенине эпĕ ватăларах парсан тин пуçа хыврăм çав. Çамрăк чухне шухăш вылявĕ ытла та шухă пулнă. Çав шухăлăх пĕрре сана, Владик, пĕтерчĕ, тепре хама халĕ, ватлăхра, çапса хуçрĕ. Ачаллă пулма ăс кирлĕ мар, ача пăхма ăс кирлĕ, теççĕ те, ман халĕ çапла шутлас килет: ачаллă пулма та ăс кирлĕ, ача пăхма тата нумайрах ăс кирлĕ. Каçар эс мана, ывлăм. Эпĕ сан умăнта парăмра, сана пăхса çитĕнтерме шутламаншăн турă умĕнче пысăк çылăхра.

Антонина Ивановна шывланнă куçĕпе ывăлĕ тата унăн çураçнă хĕрĕ çине пăхса вĕçĕмсĕр калаçрĕ. Маруç камит мар, траги-камит курчĕ. Хурланмалли те,

кулмалли те пӗрлех. Унӑн ҫак вӑхӑтра юнашар пуҫа чиксе ларакан икӗ ятлӑ юратнӑ ҫыннине хӗрхенес, кавир тӑрӑх ута-ута калаҫакан икӗ питлӗ хӗрарӑма тарӑхас килсе кайрӗ. Епле хӑять-ха вӑл ӑна ман ывлӑм теме?

— Саншӑн эпӗ савӑнатӑп, Владик, эс нумай вӗреннӗшӗн, ӑслӑ пулнӑшӑн мухтанатӑп. Авлан та, куҫӑр кунта пурӑнма. Чулхула, ҫапах та, пысӑк культурӑллӑ хула. Хваттер нуши ҫук. Укҫа-тенкӗ енчен те... Кӑмӑлӑр пулсан, кӗтетӗп.

Сӑмах-юмах хушшинче чей ҫинчен те манса кайрӗҫ. Хӑнасем кайма хатӗрленсен тин хыпӑнса ӳкрӗ кил хуҫи.

— Антонина Ивановна, — терӗ Крутов. — Чӑрманма кирлӗ мар. Эпир тутӑ.

— Эх, Владик, Владик, мӗншӗн апла каланине ӑнланатӑп. Тутӑ, тутӑ... Урӑххипе тутӑ тесе аса илтересшӗн ӗнтӗ эсӗ. Юрӗ, ятла мана, вӑрҫ, анчах анне тесе калаха пӗрре те пулин. Хам ҫуратнӑ ача ҫӑварӗнчен илтес килет ман ҫав сӑмаха. Эх, Владик, Владик, хытӑ чунлӑ иккен эсӗ. Ҫапах та сире апат ҫитермесӗр кӑларса ямастӑп. Атьӑр, пӗрле хатӗрлӗпӗр, — чарчӗ вӑл вӗсене.

Итлемех тиврӗ. Апат сӗтелӗ хушшинче сӑмах-юмах тата ытларах юхрӗ. Ҫапах Антонина Ивановна хӑй кӗтекен ӑшӑ та ҫепӗҫ сӑмаха ывӑлӗнчен илтеймерӗ. Хурлӑхлӑ, тунсӑхлӑ туйӑмпа тӑрса юлчӗ вӑл алӑк патӗнче, ывӑлӗпе пулас кинӗ каялла ҫаврӑнса алӑ сулсан, пӗркеленнӗ пичӗ тӑрӑх шӑпӑртатса юхса аннӑ куҫҫуль тумламӗсене шӑлма та вӑй ҫитерeймерӗ. Тӑварлӑ куҫҫуль ҫӑвара икӗ енчен те сӑрхӑнса кӗчӗ, ҫав йӳҫӗке ҫӑтаҫӑта йӗчӗ, пуҫа чиксе пушӑ хваттерне кӗчӗ.

Хулран-хул тытӑннӑ Макҫӑмпа Маруҫ сӑмах чӗнмесӗр Атӑл ҫыранне анчӗҫ. Чкалов палӑкӗ патне ҫитсен тин хӗрӗ калаҫма пуҫларӗ:

— Епле уҫӑ сывлӑш. Авӑ, чарлансем кунталлах вӗҫсе хӑпараҫҫӗ, пире кӗтнӗ пекех ҫуйхашаҫҫӗ.

— Валерий Павлович çине пăхнă май тăвăл йыхравçисен вĕçевĕ романтикăллă шухăш-туйăм çуратать, çак мухтавлă летчик хастарлăхĕпе çунатланса халех Хурăнвара, аслапай патне вĕçсе каяс килет, ватă çынна савăнтарас килет, çавăнпа ыран санпа пĕрлех пырас тетĕп. Ыйтатăп та деканран...

Маруç ку хыпаршăн хĕпĕртерĕ çеç, çула май ăна каччи Свердлов урамĕнчи драма театрне илсе кĕчĕ. Александр Афиногеновăн «Ачисен амăшĕ» пьеси тăрăх лартнă спектакль пырать. Пуçланманччĕ. Билечĕсем те тупăнчĕç.

— Ку — эс шухăшласа кăларнă «Пур-çук анне» траги-камитрен нумай вăйлăрах истори. Амăшĕн туйăмĕ тем пек йывăр самантра та вилмест, яланах тăван юн хĕрӳлĕхĕпе тапса тăрать, — терĕ Маруç чаршав хупăннă хыççăн. — Антонина Ивановнан та ача туйăмĕ пур, çапах та çав туйăм ватлăхра пĕччен юлнă хыççăн çуралнă туйăм пек, темле артистларах курăнать. Эсĕ туя чĕнессе те кĕтрĕ вăл, сисрĕм эп, анчах шарлас мар терĕм, сирĕн калаçăва хутшăнас килмерĕ. Хă, вилес умĕн тин хăйне пăхтарма кирлĕ пулнă ăна ывăл...

— Чĕнес килмерĕ. Туйра, хисеплĕ вырăнта, ман икĕ анне хушшинче ларас-и? Ай, çук, ман çут тĕнчере пĕр аннене çеç курас килет. Калаçар мар Маруç урăх кун пирки.

Çапла Крутов хăй кам ачине тата хăйне кам пăхса çитĕнтернине Маруçне пĕлтерчĕ.

Макçăм хĕрĕнчен юлмарĕ, Хурăнварах пычĕ пĕрле.

Ульки акка вĕсене питĕ хаваспах кĕтсе илчĕ. Максим Максимович ватă çыннăн шывланарах панă чĕрĕ куçĕнчен пăхрĕ те:

— Асанне, сывах-и? — терĕ хĕпĕртӳллĕн.

— Сывлăхлă пул, ывлăм, тавах сана ват çынна манманшăн, — тесе карчăк шурă çӳçлĕ пуçне ун еннелле сĕлтрĕ. — Асанне, терĕн-и?

— Асанне, — ыталаса илчӗ ӑна Макҫӑм, — асанне, эпӗ тупрӑм сана, эсӗ манӑн чӑн-чӑн асанне пулатӑн. Акӑ, пӑхӑр Маруҫпа иксӗр те ҫак сӑн ӳкерчӗк ҫине. Ҫак пӗчӗк ачи вӑл — эпӗ, пӗлетӗн-и, асанне, — эпӗ. Ку — ман атте, унпа юнашарри...

Кӗтмен хыпарпа хыпӑнса ӳкнӗ Ульки аккана вара вӑл пӗлтӗр Чулхуларан килсе кайнӑ «хӑнасем» камсем пулнине, Антонина Ивановна ҫыру ҫырса янине, виҫӗм кун хӑйсем ун хваттерӗнче пулнине йӗркипе каласа кӑтартрӗ:

— Ҫакӑн хыҫҫӑн-и?.. Ҫакӑн хыҫҫӑн эпӗ кине хӗрарӑм мар, этем тесе те шутламастӑп, — куҫҫульне шӑла-шӑла илчӗ Ульки акка. — Сӑн ӳкерчӗкне те ҫурса пӑрахӑттӑм ун ҫине тарӑхнипе, анчах хамӑн Ваҫҫук юнашар ларать те... тата эсӗ пур. Унта та вӑл ачине хӑй тытман, явӑл пуҫӗ. Кай, ҫапла аскӑнчӑк пулмалла-ши, чӗрӗ ачана пӑрахса телей хыҫҫӑн чупмалла-ши? Парса хӑварнӑ пулсан, хам та ӳстереттӗмччӗ сана, Вӑлатик. Юрӗ, сӑмах тутине те пӗтерер мар ун пирки калаҫса. Макҫӑм, халь эп сан ятусене те пӑтратса ятӑм ӗнтӗ. Вӑлатик, Вӑрманкасри аҫу-аннӳне, куккусене ан ман.

Калаҫса ларнӑ вӑхӑтра Крутова сӑн ӳкерчӗк чӗрӗлнӗ пекех туйӑнчӗ. Акӑ, ача тытни, арҫынӗ, ун умне утса пырса ӑна ыталать, «Телейлӗ пул, тутлӑ пурнӑҫ ан шыра», тет. Кӗҫ аллинчи ачи ҫухалнине сисет те хӑрушшӑн кӑшкӑрса ярать: «Владик, ӑҫта эсӗ?! Ывлӑм!» Унтан вӑл хӑй умӗнчи ӳссе ҫитӗннӗ ачине курнипе тӗлӗнсе каfive. «Атте, кунта-ҫке эпӗ, паллаймарӑн-им?» — ун куҫӗнчен пӑхать Макҫӑм, — Эпӗ халӗ, куратӑн-и, мӗн пысӑкӑш. Асаннепе сана хӑнана чӗнтӗмӗр». Ашшӗ хӑй вырӑнне, хура рама ӑшне, кӑмӑллӑн кӗрсе ларать. «Владик! — таҫтан аякран илтӗнет Антонина Ивановна сасси. — Эсӗ, ывлӑм, мана мӗншӗн хӑнана чӗнмесӗр хӑвартӑн? Эпӗ сана ҫуратнӑ вӗт, эпӗ — санӑн аннӳ. Ан

ман çакна». «Çук, манăн анне мар эсĕ, — ăшĕнче ăна хирĕç тавăрса калать Макçăм. — Манăн анне Вăрманкасра, юнашарах, авă епле савăнать вăл ывăлĕпе. Хăть те мĕн чухлĕ пăхса ларсассăн та эсĕ мана çине, пурпĕрех санăн савăнăçу мар ку килте, асаннен, Салакайăк йăхĕсен, Крутовсен, ман, куккисен савăнăçĕ. Вĕсем — чăн-чăн çынсем. Сана эпĕ, каçар та, çапах анне тесе калама пултараймастăп — хама çуратнă пулин те. Çуратнă ачана пăхса ӳстереççĕ, йытă çурине кăларса пăрахнă пек пăрахмаççĕ».

Тахçан Владик ятлă пулнă Макçăмшăн анне тени Вăрманкасра ача çуртне лекнĕ чухнех вилнĕ. Çав хурлăхлă та телейлĕ ир, хăйне картлашка çинчен çамрăк хĕр пӳрте йăтса кĕнĕ ир, фронтран аманса таврăннă Кăра Макçăмĕ ача çурчĕ умĕнчен иртсе пынă чухнехи хĕвеллĕ ир уншăн иккĕмĕш амăшĕ çуралнă. Кăра Макçăмĕсем патĕнче хĕвел курнă Макçăм ашшĕ-амăшĕн ăшшинчех ӳснĕ.

7

Маруç хăйĕн кун-çулĕпе Макçăма Хурăнварта чухнех паллаштарнăччĕ. Çăмăлах пулман унăн пурнăçĕ. Ашшĕ унăн вăрçăра пуçне хунă. Фронтран йывăр аманса таврăнсан вăл пĕр хушă килтех сывалнă, анчах ял Совет председателĕ Тан Ваçли, военкоматра майлаштарса, ăна хăй вырăнне вут-çулăма тĕртсе кĕртсе янă пулнă. Унтан урăх таврăнайман салтак. Ашшĕне Маруç вуçех астумасть. Амăшĕ унăн фермăра ĕçленĕ, ĕне суса чапа тухнă, çамрăклах чирлесе, вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. Тăлăха юлнă Маруçа вара кӳршĕри Каргинсем пăхса ӳстернĕ. Моисей Семенович Хурăнварти Ульки аккан шăллĕн ачи пулать. Хăйсен çичĕ ачипе пĕр танах юратнă Маруçа вĕсем: сĕтел çинче мĕн пуррине çитернĕ, килте мĕн япала çитнипе тумлантарнă. Çирĕплĕхе тата тĕрĕслĕхе ялан мала хума вĕрентнĕ сумлă, ырă кăмăллă çак

çынсене Маруç пысăка хурса хаклать. Уншăн Моисей Семенович пушшех курăмлă. Хĕр ачашăн Каргин чăннипех ашшĕ вырăнĕнчех пулнă çав. Маруç халĕ, хăй ĕçлеме тытăнсан, Каргинсен пысăк çемйине май килнĕ таран пулăшма тăрăшать.

Моисей Семенович пĕрмай чирпе нушаланатчĕ. Çăва тухсан вăл пушшех аптăраса ӳкрĕ, вара ăна Вăрманкас пульницине хучĕç, уйăхран Шупашкара куçарчĕç. Унтан сывалса тухсан тепĕр виçĕ уйăхлăх санаторие ямалла, тетчĕç.

Вăл вăхăталла Максăм Крутов пĕрремĕш курсшăн экзаменсем парса пĕтерсе яла таврăнчĕ. Маруç ăна кĕтсе илме вокзала тухнăччĕ, каччине тĕл пулсанах вăл Моисей Семеновичăн сывлăхĕ начарри çинчен пĕлтерчĕ.

— Эпĕ сана хамăр яла илсе кайса атте-аннепе паллаштарасшăнччĕ те... пулмасть пуль, — пăшăрханса ӳкрĕ Маруç.

— Хамăн та шухăш пурччĕ Тымарта пулмашкăн, — терĕ Максăм, — халĕ вара, мĕн тăвăн, тăхтама тивет. Моисей Семенович сываличчен туй пирки шухăшламалли те çук. Вăл пульницара ахлатса выртать те, эпир кунта ташласа çĕр çĕмĕрĕпĕр-и? Çук, ытла хисеплемен пек пулать. Пĕчĕкрен атте тесе юратса пурăннă çын вĕт вăл санăн. Юрĕ, Маруç, атя, хамăр пата каяр.

Акă вĕсем Вăрманкас поселокĕн сарлака урамĕ тăрăх çырманалла анчĕç. Çулĕ икĕ енĕпе те шап-шурă хурăн ӳсет. Йывăç кĕпер урлă каçсан сулахаялла пăрăнчĕç те тăвалла, пахчасем çумĕпе, чылай хăпарчĕç, тăкăрлăка пăрăнса кĕрсе шатрун тăраллăултă кĕтеслĕ пӳрт умĕнче чарăнчĕç.

— Акă пирĕн кил, — пĕлтерчĕ Максăм.

Вырăсла хапха алăкĕнчен çамрăксене хирĕç Кăра Максăмăн арăмĕ, Урине, тухрĕ. Çийĕнче унăн кăвак тĕслĕ комбинезон, пуçне кепка лартса янă, урине кирзă атă тăхăннă. Ывăлĕпе хăнана ĕç тумĕпе кĕтсе илнĕшĕн вăтанса-ши, вăл хăй тăрăх пăхса илчĕ те хыпăнса ӳкрĕ:

— Эй, турă каçартăрах мана, тирпейсĕре. Эсир пĕрле килессе пĕлнĕ пулсан-и, тупата, килĕшместĕмччĕ ĕçлеме каймашкăн. Ĕнер пĕр шоферĕ правине турттарса илтернĕ те, уншăн ман, ват çыннăн, кутĕрленмелле. Çав эрехпех пуçĕсене çиеççĕ те ĕнтĕ... Килсе ӳкĕтлерĕç те, чун чăтмарĕ, ытараймарăм çын кăмăлне. Эсĕр, атьăр, кĕрĕр пӳрте. Апатне хăвăрах тупкаласа çийĕр. Аçу та хуралтан кĕçех килмелле. Ку Макçăм, Карăк Ульки калакан хĕр, хамăр ял Ириш хĕрĕ, пуль-ха. Петрава кайсан, илтнĕччĕ. Маруç ятлăччĕ-и-ха?

— Çавă, анне, — ăнлантарчĕ Макçăм.

— Юрĕ, юрĕ, пит лайăх. Ĕçрен таврăнсан калаçăпăрха ыттине. Халĕ эпĕ, ачамсем, каям, питваскатăп, — çаврăна-çаврăна пăхса çирĕп утăмсемпе вашлаттарчĕ Урине вăрманпромхоз еннелле.

Пӳрчĕ-çурчĕ тирпейлĕ, алăк умĕпе кил хушшийĕ тап-таса пулнинченех Маруç унта хуçалăха йĕркеллĕ тытма пĕлекен çынсем пурăннине ăнланчĕ. Вĕсем пахчана кĕрсе лаç умĕнче çăвăнчĕç те, улма-çырла йывăççисем хушшинче  уткаласа çӳрерĕç, çĕр çырли тутанса пăхрĕç. Акă, ашшĕ те çитрĕ. Кăра Макçăмĕ туя çине таянса протезне йывăррăн куçара-куçара утать. Карттусне хывса карта хăми çине çакрĕ те вăл шаклаланма пуçланă пуçне шăлса типĕтрĕ, Макçăмсене асăрхаса сывлăх сунчĕ. Макçăмпа Маруç ун патне чупсах çитрĕç, ума тăчĕç те ним калама аптăрарĕç.

— Хĕрӳ пуль-ха ку, Макçăм? — ыйтрĕ ашшĕ. — Экзаменсене йĕркеллех тытрăн-и тата?

Макçăм ашшĕне кĕскен хăйĕн хулари пурнăçĕ çинчен ăнлантарса пачĕ. Виççĕшĕ те майĕпен пӳртелле утрĕç.

— Йывăрланса пыратăп пулмалла, ывлăм, тем, картлашка тăрăх хăпарнă чух та сывлăш пӳлĕнет. Çак йывăç купташки пур тата ман, тахçанах вутта пăрахса çунтарса ямаллискер, пĕрмай çумра çапкаланса çӳрет.

Ашшĕне Макçăм хулран çĕклесе алăк урати урлă каçма пулăшасшăнччĕ, лешĕ хирĕçлерĕ, хăйĕн хăнăхнă йăлипе чиперех майланкаласа кĕчĕ.

Кăнтăрла иртсен амăшĕ те таврăнчĕ. Мĕн сĕм çĕрлечченех шăкăлтатса калаçса ларчĕç вĕсем, туй ыйтăвне те хускатрĕç. Кăра Макçăмĕпе арăмĕ ывăлне çак çура авлантарма та хирĕç мар, анчах, вăйлă туй кĕрлеттерме тахçантанпах ĕмĕтленсе пурăнаканскерсем, Маруç ашшĕ чирлĕ пирки, Макçăм вĕренсе тухиччен тăхтама хушрĕç, çамрăксем тем каласа пĕтерейменнине сиссен тин, «хăвăрăнне хăвăр пĕлĕр ĕнтĕ», терĕç.

Тепĕр темиçе кунран Макçăмпа Маруç Шупашкара тухса кайрĕç, Моисей Семеновичăн арăмĕпе кĕçĕн ывăлĕ те пынăччĕ, хăйсен кăткăс ыйтăвне пульницарах хускатас терĕç.

— Маруç, хĕрĕм, кил-ха çывăхарах, лар хам çумма, — хăйăлтатса тухакан сасăпа хуллен чĕнчĕ Каргин. — Сана эпир, арăмпа иксĕмĕр, хамăр ачасене мĕнле юрататпăр, çавăн пекех юрататпăр. Çавăнпа чĕререн ырă сунса калатăп: хăвна юрăхлă лайăх çын тупрăн тăк, ăна ан çухат, качча тух. Упăшкуна итлемелле чух — итле, пулăшмалла чух — пулăш. Усалпа аçу-аннӳ ятне ан яр, пирĕн сăмаха та ан ман. Эсĕ те, Макçăм, арăмна нихçан та пустуйран ан кӳрентер, çав вăхăтрах иртĕхтерсе те ан яр. Пĕр-пĕрне савса телейлĕ, тату пурнăçпа пурăнмалла пултăр. Мана та, карчăка та ан пăрахăр. Туй тăвас тетĕр пулсан — тăвăр. Çамрăклăхăн унăн хăйĕн ылтăн вăхăчĕ пур.

Каргин арăмĕ Маруçа ыталаса йĕрсе ячĕ, пусĕнчен ачашла-ачашла пил сăмахĕсем каларĕ.

Килĕшӳ патне çитрĕç-çитрĕçех юлашкинчен.

Туя Тымартан Каргин арăмĕпе ачисем, Маруç амăшĕн хурăнташĕсем килчĕç. Кăра Макçăмĕсем хĕр

илме Вăрманкасран икĕ автобус тытсах çитрĕç. Ульки аккан пӳрчĕ хăна-вĕрлепе тулчĕ. Эх, мĕн тери савăнăçлă вăл. Хăйĕн мăнукĕпе шăллĕсен усрав хĕрĕ пĕрлешнĕшĕн хĕпĕртет. Хушăран ывăлĕн сăн ӳкерчĕкĕ çине пăхса илет те Макçăма тинкерет. Ăшĕнче вăл ывăлĕ Ваççук авланнине, кинĕ ывăл çуратса панине аса илет те, чунĕ кӳтнипе хурланать, унтан шăрçаланнă куççуль тумламĕсене чечеклĕ тутăр вĕçĕпе шăла-шăла çамрăк мăшăра телей курма ырă сунать.

Культура керменне халăх питĕ йышлă пухăннă. Кĕçех туй кунта кĕрлесе çитрĕ. Салам сăмахĕсем, туй юррисемпе ташшисем чылайччен янăрарĕç анлă залра. Ун хыççăн хăйматлăхĕ, Тельман Федотович, килĕнче йышăну ирттерчĕ.

Вăрманкассем те хурăнварсенчен ӳксе юлма шутламан, чăваш йăли-йĕркипех ирттерчĕç туя. Салакайăк Карачăмĕ шилĕк умĕнче чип-чиперех шăпăр каласа ларатчĕ. Ун умĕнче Тымарти Хурăн Ульянĕ такмак каласах ташша сĕветчĕ. Таçтан çитсе тухрĕ-çке Анукĕ, стариккине ярса илчĕ те шур сухалран... Юратьха Ульки акка чарма ĕлкĕрчĕ ăна.

— Ухмахсене сире, ан намăс кăтартăр! — пĕчĕк чышкипе юнарĕ вăл иккĕшне те. — Ха вĕсем, ват супнăсем, мĕн хăтланаççĕ. Ара, ман туй пулни халь аллă çул иртрĕ те... эс, Анук тăхлач, çаплах манса кайман-и çав салакайăк мыскарине? Çитет кĕвĕççе. Ан тулхăр пустуй. Лăплан. Виличчен ташлаттарса юлтăр-и çак тата хăта ман туйра тупнă хăйĕн авалхи еркĕнне... Халь тин... çăпата пуçĕ йĕпенме тытăнсан... Атя пӳрте, атя, атя!

Карчăкĕ курăнми пулсанах Карачăм мучи сухалне шăлса якатрĕ те шăпăр хăмпине тепĕр хут мекĕрленсех вĕрсе хăпартрĕ. Тăпăлкка капăр карчăк каллех туй картине тăпăртатса кĕчĕ.

Туй шавӗ лӑплансан Крутовсем ҫул ҫӳреве тухса кайрӗҫ, пӑрахутпа Атӑл тӑрӑх Аҫтӑрхана ҫитсе килчӗҫ. Кану вӑхӑчӗн юлнӑ кунӗсенче Макҫӑм ашшӗсем валли вутӑ хатӗрлерӗ, Хурӑнварти асламӑшне пӳрт тӑрри ҫӗнӗрен витме пулӑшрӗ.

Систермесӗр ӗрӗхекен вӑхӑт чуппи ҫамрӑк мӑшӑра кӗҫех Вӑрманкас вокзалне илсе ҫитерчӗ. Иккӗшӗ те каллех вӑрӑм кунсемпе ҫӗрсене чӑтӑмсӑррӑн шутлама пуҫларӗҫ.

8

Крутов шкултан хӑйӗн юлташӗсемпе пӗрлех тухрӗ. Ҫула май киоскра «Огонек» туянчӗ. Максим Максимович художниксен журналта пичетленекен нумай тӗслӗ ӳкерчӗкӗсене пухма юратать. Акӑ, хальхинче те вӑл шала уҫса пӑхрӗ. Пӗр ӳкерчӗкри ҫынсене Крутов сӑнран тӳрех палласа илчӗ. Общежитине кӗрсен те вӗсем ҫине вӑрахчен пӑхса ларчӗ, ҫав самантра «Шурӑмпуҫӗнчи» хӗрӳ кунсене аса илчӗ. Ун чухне комбайнсем тулӑ выратчӗҫ, йӗтем ҫинче ҫамрӑксем тырӑ аласа тасататчӗҫ, патшалӑха яма автомашинӑсем ҫине тулли михӗсем тиетчӗҫ. Акӑ ӗнтӗ куҫ умӗнчех вӗсем: ҫирӗп кӗлеткеллӗ каччӑсемпе хӗрсем, вӗсен вӑйлӑ аллисем, савӑнӑҫпа ҫиҫекен пичӗсем-куҫӗсем...

«Шурӑмпуҫ» паттӑрӗсемпе унӑн пӳлӗмри юлташӗсене ҫеҫ мар, кӗҫех партшкулта ӗҫлекенсемпе вӗренекенсене те паллаштарма тӳр килчӗ. Чӑваш художникӗсен Николай Карачарсков ертсе пыракан «Ял шуҫӑмӗ» ятлӑ ушкӑнӗ Атӑл тӑрӑхӗнчи халӑхсен пултарулӑх выставкине хутшӑннӑ-мӗн. Ҫав выставка Чулхулана куҫса ҫитнӗ. Ӳкерчӗксене партшкулта та кӑтартрӗҫ.

Ха, епле мӑнаҫлӑн пӑхать Хумма Петӗрӗ ҫӗнӗ комбайнӗ ҫумӗнчен вӗҫсӗр-хӗрсӗр тырӑ уйӗ ҫине! Сапсарӑ тулӑ хумӗ хастар ҫынна хӗрӳ кӗрешӗве чӗнет, тейӗн. Тепӗр ӳкерчӗкӗнче — Мулла Микушӗн арӑмӗ Укахви.

Сысна çурисем хушшинче вăл саркаланса кула-кула çаврăнать. Хурăнвар бригадирне, Роман Фомича, художник тăрантас çинче ӳкерсе илнĕ. Карачăм мучи хăйĕн «парат хурмипе» каланча çумĕнче тăрать. Çурăмĕ хыçĕнче пăшал. Сухалне кăштах çил тăрмаланă. Пуçне çӳлерех тытнă, вичкĕн те чее куçĕпе вăрман çийĕн вĕçсе иртекен кăтра пĕлĕтсем енне тинкернĕ. Кĕç-вĕç вăл кунталла çаврăнса çут çанталăк тĕлĕнтермĕшĕсем пирки кулăшла сăмах хускатассăнах туйăнать. Тельман Волков çил арманĕ патĕнчен хула сăнĕ çапма пуçланă ялсене сăнать. Председатель пит-куçĕнче малашлăх туйăмĕ çиçет. Вăрçă паттăрĕсен, ĕçре чапа тухнă колхозниксен сăнĕсем... Кашнин пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе мĕн пĕлнĕ чухлĕ паллаштарма тăрăшрĕ куракансене Максим Максимович.

Выставкăра «Чăвашстанри «Шурăмпуç» колхоз парторгĕ Крутов фермăри коммунистсем хушшинче» ятлă ӳкерчĕк те пур. Хăйĕн сăнĕ умĕнче тăма ăна аванах пулмарĕ. Çапах та вăл куракансен ыйтăвĕсем çине хуравларĕ:

— Ку хĕрсем — хура ĕçре пиçнĕ хĕрӳ те таса пикесем. Чăннипех ял илем пикисем теме те юрать вĕсене. Ултташĕ те çĕнтерӳ паттăрĕ. Варринчи — зоотехник, председатель арăмĕ, Венера Ивановна. Партгруппа пухăвĕ пыратчĕ фермăра. Художник, авă, мана та пĕрле ӳкерсе хунă.

— Питĕ тĕрĕс тунă, — сасартăк çурăм хыçĕнче илтĕнчĕ директорăн уçă сасси. — Парти ĕçлевçисене, халăхшăн чунне паракансене, уçăмлăн кăтартмалла. Уй-хирти, фермăри, цехри, стройкăри çĕнтерӳ, юлташсем, сиртен те нумай килет. Хамăр шкулта вĕренекенĕн сăнĕ Атăл тăрăхĕпех саланнăшăн пирĕн мухтанмаллах. Мускав выставкинче кăтартма та юрамалла ку илемлĕ те тарăн шухăшлă ӳкерчĕксене.

Хĕллехи каникулран таврăнсан нумаях та пурăнаймарĕ Крутов, Вăрманкасран телеграмма килчĕ. Нарăсăн 23-мĕшĕнче Маруç ывăл çуратнă! Ку хыпар Макçăмшăн çеç мар, пĕтĕм пӳлĕмшĕн праçник пекех пулчĕ.

Тепĕр кунне Крутов декан патне кĕчĕ. Декан телеграммăна васкамасăр вуласа тухрĕ, хута çавăркала-çавăркала тĕплĕн тишкерчĕ, унтан: — Саламлатăп, Максим Максимович, анчах киле яма пултараймастăп, ан кулянăр, шур халатлă çынсен аллинче шанчăклах пурăнĕç вĕсем, — терĕ лăпкăн.

Крутовăн телеграмма çаптарасси тата çыру çырасси çеç юлчĕ. Çырăвĕнче вăл малтан калаçса татăлнă пекех ывăлне Борис ятлă хума сĕнчĕ.

9

Парти ĕçне заводсемпе стройкăсенче тата колхозсемпе совхозсенче мĕнле йĕркеленине тарăнрах тишкерме вĕренекенсене тĕрлĕ вырăна ячĕç. Яша Васькин Автозавод районĕнчи строительсен çĕнĕлĕхне вĕренме кайрĕ. Валентин Винокуров килĕ çывăхнерех, Арзамас хулакомне лекрĕ. Володя Петровпа Макçăм Крутов Семенов районне çул тытрĕç.

Чулхуларан çитмĕл çухрăмра ларакан тăпăлкка та илемлĕ, пысăках мар ватă хулана вĕсем электричкăпа часах çитрĕç. Вĕренекенсене райком секретарĕ йышăнчĕ, вĕсене вăл хула историйĕпе тата ял пурнăçĕпе кĕскен паллаштарчĕ, вĕсем ăçтисем пулнине ыйтса пĕлсен, тӳрех Чăвашьенне ырăпа асăнма пуçларĕ. Семеновпа Çĕмĕрле хушшинче  аталанакан туслă çыхăну пирки Крутов çакăнта пуçласа илтрĕ-çке. Тĕлĕнмелле, хамăр халăхăн ăсталăх пуянлăхĕ ĕмĕртенпех тĕнчене сарăлнă пулин те, ал ĕç маçтăрлăхне вырăссенчен курса çĕнетеççĕ. Хальхи саманара техника хатĕрĕсемпе тата наука çитĕнĕвĕсемпе тĕплĕнрех усă курма вĕренни,

хӑнӑхни кирлех пуль ҫав ал ӑсти ӗҫӗнче те. Кӳршӗллӗ вырӑс ҫыннисем чӑвашсене, чӑвашсем вырӑссене ӗмӗр-ӗмӗр пулӑшса пынине мӗн ҫиттӗр-ха ӗнтӗ. Хуҫана итленӗ хушӑра Макҫӑмӑн куҫӗ умне анлӑ ӳкерчӗк тухса тӑчӗ. Вырӑс паттӑрӗ Куҫма Минин халӑха вӑрҫа чӗнет: Мускава тӑшмансенчен хӑтармалла! Ҫав хӗҫ-пӑшаллӑ ҫарта чӑвашсене те курать вӑл. Партшкулта, иккӗмӗш хута хӑпарнӑ ҫӗрте, пӗтӗм стенана йышӑнать аваллӑх чӗрӗлӗхӗн асамӗ. Ҫӳлелле картлашка шутласа улӑхнӑ май вӑл кашнинчех ҫак ҫулӑмлӑ картинӑран вӑйланса тухакан сывлӑш хумне — юратнӑ ҫӗрӗм-шывӑмшӑн, тӑван халӑхшӑн пурне те хатӗр пулма кирлине аса илтерсе чун-чӗрене хӑват хушакан имлӗх хумне — пит-куҫа уҫӑлтаракан асамлӑх пек туять. Сӑнарлӑх паянхи пурнӑҫ сӑнӗнче хӗвел ури пек йӑлкӑшни ӑна хӗпӗртететтерчӗ. Ҫут тӗнче ӑна Ҫӗрӗн ҫак кӗтессине мӗншӗн илсе ҫитерни ҫинчен шухӑшлаттарчӗ.

Ҫав кунах вӗсем Семенов хулинчен ытти группӑсенчи ачасемпе пӗрле пурте хуҫалӑхсене саланчӗҫ. Чулхуларан Киров хулине каякан мӑн ҫул шалкӑм вӑрман витӗр иртет. Вӗҫӗмсӗр юманлӑх тӑсӑлать. Уҫӑ ҫӗре тухсан, Кершӗн шывӗ ҫӗлен пек авкаланса выртни курӑнать. Ҫыранри хӑвасемпе ҫирӗксем хӗл ыйхинчен вӑранма пуҫланӑ ӗнтӗ. Ҫут ҫанталӑк илемӗпе киленсе пыракан Крутов «Хӗрлӗ тухӑҫ» колхоза ҫитнине те сисмерӗ, автобус чарӑнсан, Юманлӑх ятлӑ ял варрине анса юлчӗ.

Правлени ӑҫтарах вырнаҫнине ҫынсенчен ыйтса пӗлнӗ хыҫҫӑн вӑл тӑрӑсӑр чиркӳ патӗнчен пӑрӑнса анаталла утрӗ, ҫырма урлӑ каҫса ӗне витисем ҫумӗнчен иртрӗ, тепӗртак кайсан, тӑрӑхла йывӑҫ ҫурт умӗнче чарӑнчӗ. Алӑк тӑрне мӗн ҫырса ҫапнине вуласан пӗлчӗ: тӗрӗсех килнӗ иккен.

Бухгалтерирен сиксе тухнӑ ҫамрӑк хӗр ӑна коммунистсен пуҫлӑхӗ ӑҫта пулма пултарнине аллипе тӗллесе кӑтартрӗ. Алӑка шаккаса уҫрӗ те Крутов, ансӑр пӳлӗм вӗҫӗнче,

чӳрече çумӗнче, хӗрӗхсенчи вӑтам пӳллӗ арçынна курчӗ. Сӗтел çумне таянса чӗлӗм мӑкӑрлантараканскер, çӳлелле вӗрсе тӗтӗм кӑларса ячӗ те вӑл, вырӑнтан ирӗксӗррӗн хускалса, Крутова алӑ тытрӗ:

— Салам пултӑр, ырӑ çыннӑм. Эсир партшкул практиканчӗ Крутов юлташ пулма кирлӗ. Йӑнӑшмастӑп пулсан... Сирӗн пирки райкомран анчахрах шӑнкӑравларӗç. Çавӑнпа сире кӗтсе тӑратӑп. Паллашӑпӑр: Керженев, Меркурий Михайлович, колхоз экономисчӗ.

— Эпӗ Максим Максимович пулатӑп. Сире чӑрмантарма килнӗскер...

— Каккуй чӑрмантарасси, пулӑшма пуль, — терӗ Керженев килнӗ çынна пукан çине ларма сӗнсе. — Ӗçӗ ак çапла, мӑй таран. Хуçалӑх расчечӗпе аппаланма тытӑннӑ-çке. Çӗнӗ ӗç те, пӑтранасси те час-часах пулать...

Максим Максимовичӑн пуçӗнче миме йӑшӑлтатнӑнах туйӑнчӗ. Амӑшӗн еркӗнӗ Михаил Степанович Керженев... Ку тата Меркурий Михайлович Керженев... «Шурӑмпуçӗнчи» хуçалӑх расчечӗн пӑтӑрмахӗ... Свердлов урамӗнчи Керженевсен хваттерӗнчи калаçу... Ульки акканасламӑшӗн куççулӗ...

— Ман йӑлтах якатмалла, — калаçать пӳлӗм хуçи. — Çитменнине тата иртнӗ кӗркунне хӑратса пусахласах çакӑнта тӗксе лартрӗç. Партине те эп, тӗрӗссипе илсен, шут шӑрçи чиксе çӳрекен кутамккуна Кершӗне илсе перетпӗр тенӗ хыççӑн çеç хӑраса кӗнӗччӗ те çав... Ку маншӑн пушшех шӑл хушшине хурса курман хытӑ япала... Аптранӑ кӑвакал кутӑн чӑмнӑ тет те, пирӗн çеç ни кутӑн, ни пуçӑн чӑмма юрамасть. Ирӗксӗрех вара чӗлӗм паклаттаратпӑр, хамӑр тӑвакан ӗç тени сывлӑша мӗнле саланнине сӑнатпӑр. Чуна уçатпӑр...

Сӑмах ваклама юратакан Меркурий Михайлович туххӑмрах ӑна хӑйсен пурнӑçӗпе паллаштарчӗ. Хуçалӑх

пысăк, вун икĕ ялтан тăрать. Вĕсенче сакăр çĕр кил. Ĕçлекен пин те пилĕк çĕр çын. Уй-хир бригадисем тăххăр, комплекслисем — виççĕ, унсăр пуçне трактор бригади иккĕ пур. Сĕт-çу фермисем ултă ялта. Сыснасемпе сурăхсем йышлă ĕрчетеççĕ. Вунă пин гектар çĕртен çуррипе ял хуçалăхĕнче усă кураççĕ. Улăх-çаран, кĕтӳ çӳретмелли вырăн нумай.

— Парторганизаци çеç пирĕн пĕчĕк, хĕрĕх икĕ çынран тăрать, алла çитерейместпĕр, çавăнпа эпĕ — бесплатнăй секретарь на общественных началах. Фермăсенче коммунистсем сахал. Ниепле те çитейместĕп çамрăксем патне. Пĕлетĕп, пур-ха унта партире пулма тивĕçлĕ каччăсемпе хĕрсем. Иксĕмĕр пĕрле калаçайăпăр-и ĕнтĕ вĕсемпе, çак правлени çăрăлчăкĕнчех путса вилес пать. Килĕшетĕр пуль пулăшма, Максим Максимович? — хыпăнсах калаçрĕ вăл.

— Мана мĕн, эпĕ халех хуть те хăш фермине те сирĕнпе пĕрле кайма пултаратăп.

— Ĕçе ырантан пуçăнăпăр, — хулĕнчен тытса алăк патнелле уттарчĕ ăна Керженев. — Малтан хырăма тăрантарар, унтан тин... ăçта паппа тумаллине палăртар. Сире эпĕ хамăр пата чĕнетĕп. Пирĕн килте пуш вырăн çителĕклех.

Керженевсем автобус чарăнакан вырăнтан инçех мар пурăнаççĕ. Паçăр Крутов эрешлесе пĕтернĕ хитре пӳрт çине тĕлĕнсе пăхса иртнĕччĕ. Халĕ вĕсем шăпах ун умне çитсе тăчĕç. Меркурий Михайловичăн арăмĕ килте çук, фермăра. Пӳртре ывăлĕпе хĕрĕ çеç. Аслă амăшĕ мунча хутма тухнă-мĕн. Ашшĕ ачисене шыв кӳме ячĕ. Мунчисем Юманлăхра пурин те тенĕ пекех тĕп кил-çуртран аякра, анкарти хыçĕнчи çырма хĕрринче лараççĕ.

Ӳт çине милĕк хурса курманни чылай пулатчĕ-ха Макçăмăн, çавăнпа вăл лапка тăррине улăхма ухутах

пулчĕ. Меркурий Михайлович ăшшине хĕрхенмест, вĕри çапăнма юрататъ иккен. Мунчаран сиксе тухать те вăл ахлата-ахлата юрпа çăвăнать. Пыл кăвасĕ ĕçнĕ хыççăн çан-çурăм пушшех уçăлса, çемçелсе кайрĕ Максăмăн. Вĕсем пӳрте чупса кĕнĕ çĕре Меркурий Михайловичăн ĕçрен таврăннă арăмĕ сĕтел çине апат-çимĕç лартма пуçланăччĕ.

Ют çын яланах пӳрт ăшчиккине сăнать. Крутов та çаплах, ăна-кăна пăхкаланă хушăра, тĕкĕр çумĕнчи пысăклатнă сăн ӳкерчĕке курах кайрĕ. Вăрăм тăрăллă сарлака шлепке, сылтăмалла тӳмеленĕ йăрăмлă костюм, шĕвĕр пуçлă пушмак тăхăннă Керженев майралла тумланнă, кăтралатнă кăпка çӳçлĕ, кулăпа çиçекен Антонина Ивановнана çинçе пилĕкĕнчен ыталаса тăра парать. Унăн амăшĕ... Çук-çук, амăшĕ мар... чун çухатмăшĕ. «Çук, ман çине пăхмасть вăл, хитре вырăса çунтарать куçĕпе...»

Сăн ӳкерчĕке питĕ тĕсесе пăхнине асăрханă кил хуçи ун çумне пырса тăчĕ, сылтăм аллине Крутов хул пуççийĕ çине хучĕ.

— Ман атте ку, — ассăн сывласа илчĕ вăл. — Çамрăк чухне ӳкерттернĕскер. Ак ку — унăн çамрăк арăмĕ. Тулĕк, ман анне мар. Атте вăрçă вăхăтĕнче Шупашкара ĕçпе çӳренĕ. Вăйлă режиссер пулнă вăл, чăваш театрне пулăшма янă ăна. Çавăнта пĕр шеплешке артисткăпа паллашнă та... пире аннепе иксĕмĕре кукаçи килне, Юманлăха ăсатрĕ, хăй явкаланчăкраххине çаклатса килчĕ Шупашкартан. Аттене пытарма кайсан Горькирен илсе килтĕм ку сăн ӳкерчĕке. Килте урăх нимли те сыхланса юлман та, юрĕ терĕм. Çапах атте вĕт. Унăн çĕнĕ арăмĕ пире усал туман, чăвашсен кăмăлĕ лайăх пулмалла, хăш-пĕр чух пулăшать те. Пĕрлешсен, мана йăмăк тупса пачĕç. Лариса пĕчĕккĕ чухне яла та канма килетчĕç. Анне тарăхатчĕ те, кĕвĕçетчĕ те пуль, анчах ирĕксĕр юраттараймастăн вĕт хăвна, лăпланатчĕ майĕпен, пĕр сĕтел хушшинчех ларатăмăр. Консерваторирен

вĕренсе тухсан Лариса Мускав профессорнех каччи кайрĕ, хăйне вĕрентекенскерне. Кивĕ Арбатра пурăнаççĕ. Антонина Ивановна халĕ пĕчченех, пĕр хусах çамрăка хваттере янă. Хулана кайсан, кĕркелесе тухап. Вăт çапла ман пурнăç, атте пур çинчех аттесĕр ӳссе, экономиста вĕренсе тухиччен миçе вакун-баржă пушатмарăм-ши? Тава тивĕçлĕ грузчик ятне илме те тивĕçрĕмĕр пуль тус-студентсемпе. Эп нумай пакăлтатса кайрăм, калăр-ха, эсир хăвăр ăçтисем пулатăр-çак, тӳрех паллашса пĕтерейммерĕмĕр те...

— Кӳршĕренех-ха эпĕ, — амăшĕ текен чиперкке куçĕнчен пăхса сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ Макçăм. — Чăваш енрен эпĕ, Мускав чукун çулĕ çумĕнчи ялтан.

— Чăваш пикине хурласарах калаçса сире кӳрентермерĕм пуль те?.. — лайăхмарланчĕ Меркурий Михайлович.

— Мĕн калаçмалли, — алă сулчĕ хăна. — Пĕр шеплешке явкаланчăк мĕн пур чăваш хĕрарăмне варалайман пуль-ха. Сăпайлă, чипер пирĕн хĕрарăмсем. Артистсем вĕсем яланах çĕнĕрен-çĕнĕ роль выляма хăнăхнă та...

— Çапла çав, — ĕнсине кăтăрт-кăтăрт хыçрĕ Меркурий Михайлович. — Ман та атте çĕнĕ спектакль лартса пурнăç трагедине кăтартрĕ пире. Йывăр тăпру çăмăл пултăр ĕнтĕ... Çапах та... сана атте тесех калаçма пуçланă эпĕ.

«Калаçма пуçланă вăхăтра манăн та малтанхи сăмахсем «атте» тата «анне» пулнă, — шухăшларĕ Макçăм. — Анчах эпĕ хамăн чăн аттепе чăн аннене ун чухне курман, туйман. Ултав йăпанăвĕ, юратăвĕ ырă кăмăллă ют арçынпа хĕрарăма савăнтарнă, вĕсен ăшă ытамĕнче ачашланса ӳссе вăй илнĕ, çын ретне тăнă. Çак артистсен юратăвĕпе çыхăнăвĕнче Меркурипе иксĕмĕрĕн чун-чĕре ыратăвĕ те пĕрешкелех, пĕрлех».

Меркури, паллах, хӑй кама киле илсе килнине, кам ывӑлне хӑналанине пӗлме те пултараймасть-ха, хушӑран сӑн ӳкерчӗк ҫине пӑха-пӑха илет те, «пит ҫӑмартийӗсем ку чӑваш ачин ман атте еркӗнӗн майлах-ҫке» тесе шухӑшлать-ши, пӗлме ҫук, пакӑлтата-пакӑлтата хӑнана сӑра курки сӗнет:

— Атте чӑваш сӑрине пит юратап, тетчӗ. Уйрӑличчен, яла килсен, аннене чӑваш сӑри мӗнле тумаллине вӗрентрӗ, хӑй Шупашкарта камран вӗреннӗ ҫав ӑсталӑха, эпир пӗлмен, ӗҫер-ха, мӗнле ҫӑра вӑл, урпа салатӗнчен юхтарнӑскер. Аннесем мунчаран тухиччен эпир иксӗмӗр ҫиччас выльӑхсене хупса кӗретпӗр.

Кил картине тухса ӗне выльӑха, сурӑхсене, сыснасене хӑйсен пӳлӗмӗсене вырнаҫтарнӑ хыҫҫӑн вӗсем каллех пӳрте кӗчӗҫ. Кайран хӗрарӑмсемпе пӗрле сӗм ҫӗрлечченех калаҫса ларчӗҫ: Крутов чӑвашсен пурнӑҫӗпе паллаштарчӗ, Керженевсем — хӑйсеннипе. «Шурӑмпуҫпе» «Хӗрлӗ тухӑҫ» кӑтартӑвӗсем арҫынсене хушӑран тавлашу шайнех ҫитерчӗҫ.

Ыйхӑ килмерӗ Максӑмӑн. Хӑй камне мӗншӗн пӗлтермерӗм-ха тесе ӳпкелешрӗ. Меркури амӑшне курса унпа паллашнӑ хыҫҫӑн, кӗлетке вылявне сыхласа хӑварнӑ, сӑн-пит илемне ватлӑхра та ҫухатман, тӑп-тӑп утакан ҫак савӑк вырӑс хӗрарӑмне Керженев мӗншӗн чӑваш пикипе улӑштарнин тупсӑмне шырарӗ. Йӑмӑкне курас ӗмӗт ҫуралчӗ тата.

Тӗлӗкре вӑл Антонина Ивановнана курчӗ. «Эсӗ манӑн ывӑлӑм, Владик» текен чӑваш хӗрарӑмӗ ун умне пӗшкӗнчӗ те, кӗпе тӳмисене вӗҫертсе кӑкӑрне уҫрӗ, ӑна чӗчӗ хыптарчӗ, пуҫӗнчен, кутӗнчен ачашласа сӑпка юрри юрласа ячӗ: «Ачине, пепкине...» Тапса сирнӗ утиялӗпе уҫӑ ҫурӑмне хупларӗ. Минтер ҫумне ҫӑмламас упа ҫури тӑратрӗ. Чӗчӗ ӗмсе тӑрансан, ачине кӗпе-йӗм тӑхӑнтартса пӗчӗк утиялпа чӗркерӗ, ҫиелтен чечеклӗ,

чĕнтĕрлĕ виткĕçпе çавăрса çыхрĕ те, Юманлăхран тухса вăрман çулĕпе Чулхула еннелле танкăшрĕ. Хыççăн Меркури чупать, «Мана та атте патне илсе кай! Ман аттепе лашалла выляс килет!» — тесе кăшкăрать.

Макçăм чăнах та хăрушă сасăпа вăранса кайрĕ. Кăмака çумĕнчи кравать çинче Меркурий Михайлович çӳçне-пуçне тăрмаласа ларать.

— Фу! Лаша çине утланса чупнă тĕлĕкре. Аттене шыраса çӳл тӳпенех улăхма пуçланă. «Атте!» тесе вăранса кайнине çеç астăватăп, — мăкăртатса илчĕ вăл. — Пуç майлах мар, мухмăр чĕртмелле пуль...

Максим Максимович та хăй тĕлĕкре тем те курса пĕтни çинчен каларĕ, кил хуçи сĕннĕ черккене аллипе сирсе çеç ячĕ:

— Ирхине юрамасть. Хăнăхман эп аташма.

Тепĕр темиçе кунтан, колхоз аталанăвĕн кăтартăвĕсене тĕплĕн тишкернĕ май, Крутов тӳрех ăнланчĕ: юманлăхсем хушма хуçалăх укçипе кăна саплашăнкаласа пурăнаççĕ-мĕн. Пĕлтĕр илнĕ тупăшран çуррийĕ, авă, йывăç кашăк туса сутнипе пырса кĕнĕ. Выльăх-чĕрлĕх фермисем çав вăхăтрах пĕтĕмпе те унăн вуннăмĕш пайĕ чухлĕ кăна тупăш панă. Сăлтавĕсем те майĕпенех куç умне тухса пычĕç. Вак фермăсенчи йывăр ĕçсене çăмăллатман, апат хакла ларать, ĕçшĕн малтан палăртнинчен ытларах тӳлеççĕ. Çавăнпа сĕт е аш туса илме палăртни кашни фермăрах пурнăçланмасть. Хуçалăх расчечĕн тăкак-тупăш-услам йĕрки ячĕшĕн çеç пулса юлать. Керженев хăй те питĕ тĕплĕн пĕлет вĕсене, çапах... хуçаран ниепле те иртеймест. Хуçа пĕрмай хушма хуçалăха хушса пырать, тупăш илмелли пĕтĕмĕшле плана пурпĕрех тултарать.

Шутласан, хушма хуçалăхĕ вăл питĕ кирлĕ! Çапах та тĕп хуçалăхĕ тĕпре пулмалла-çке!

Хăйĕн тĕпчев ĕçне вĕçленĕ хыççăн Крутов Меркурий Михайловичпа, хăй шутланă пек тăванлах, чунне уççах калаçрĕ.

— Уйри çум курăк иртен-çӳрене ытларах курăнать çав вăл, — чĕлĕмне мăкăрлантарать Керженев. — Пирĕн çитменлĕхсене те эсир тĕп-тĕрĕс палăртрăр. Пулăшма та пулăшрăр мана. Хуçалăхăн экономика тишкерĕвне çĕнĕ куçпа пăхса туса патăр мана. Çывăхлантăмăр иксĕмĕр. Чун туртать темĕнле ырă туйăмпа сирĕн пата. Çывăрма выртсассăн та пуçа урăхларах шухăшсем кĕме пуçларĕç. Калăр-ха, пирĕн пата пынă малтанхи кун эсир мĕншĕн питĕ пăлхануллă туйăмпа пăхса тăтăр аттепе унăн çамрăк арăмĕ çине?

— Паллакан артистка вăл — çавăнпа, — тутине пăркаласа илчĕ Крутов. — Хамăр ентеш. Чулхула вырăсĕпе телей тупнă-ши вăл тесе шухăшларăм.

— Çын телейне çунтарса телей тупакана, тем, пĕлместĕп, — чĕлĕмне сӳнтерчĕ Керженев. — Вĕсен хăйсен вăрттăнлăхĕ пуль вăл...

— Пирĕн те хамăрăн вăрттăнлăх пур, — Меркурий Михайлович куçĕнчен чеен пăхрĕ Крутов.

— Пулĕ, пулĕ, кашни çыннăн хăйĕн вăрттăнлăхĕ хăйпех, — тесе хучĕсене майласа хучĕ парторг-экономист. — Ман та нумай та... Вун икĕ яла çыхăнтаракан йĕплĕ пралук тутăхса çĕрнине те куратăп та, вĕсем майĕпенех ирĕклĕхе тухса хăйсем майлă чечекленессе те сăмсапа сисетĕп те... Райкомра та тахçанах каланăччĕ те çав эп колхоз кĕçех хушма хуçалăх айне пулать тесе... Çук, итлемеççĕ манашкаллисене, чараймаççĕ пирĕн хуçана. Тĕрĕссипе, ăна юри ĕрĕхтереççĕ вĕсем çав çулпа, мĕншĕн тесен пирĕн хуçалăхри кашăк цехĕ район пуçлăхĕсене мăн кашăк тытма пулăшать-çке. Пуçа халь чăрсăр шухăш пырса кĕчĕ. Пухура сире тĕп калаçу пуçарттарас пуль. Материал хатĕр. Çыннисене пĕлетĕр.

Урăх мĕн кирлĕ? Хушмаллине хамăр хушăпăр, камран мĕн ыйтмаллине хамăрах пĕлĕпĕр.

Пухăвĕ питĕ шавлă иртрĕ. Крутов шухăшĕпе нумайăшĕ килĕшрĕ, çавăнпа ĕнтĕ унăн сĕнĕвĕсенчен чылайăшне йышăнăвах кĕртсе хăварчĕç. Вĕсем çаксемччĕ: тупăш-услам ыйтăвне виçĕ уйăхра мар, час-часрах пăхса тухмалла, фермăсене пысăклатмалла, выльăхсен ăратлăхне лайăхлатмалла, ĕçе çăмăллатмалла... Хушма хуçалăх ыйтăвне хуçалăх пуçлăхĕ пурпĕрех мала кăларттарчĕ.

Чулхулана таврăнсан Крутов «Хĕрлĕ тухăç» пурнăçĕ çинчен тĕплĕн çырса облаç хаçатне ярса пачĕ. Редакцирен çыру килсен вăл тĕлĕнчĕ, чĕннĕ çĕре, Фигнер урамне, çав кунах кайрĕ. Ял хуçалăх пайĕнче ĕçлекен унпа питĕ тиркевлĕн калаçрĕ, хушма хуçалăх тата выльăх-чĕрлĕх аталанăвĕ Юманлăхра мĕнле шайра пулса пынипе уйрăмах кăсăкланчĕ. Хăйне мĕн кирлине ыйтса тĕпчесе пĕтерсен, вăл çапла савăнтарчĕ: Сирĕн статьяна, Максим Максимович, редакци йышăнчĕ, кĕçех хатĕрлесе çитеретĕп те редактора паратăп. Пĕтĕм облаçпа сӳтсе явмалли хĕрӳ ыйту ку. Пур-ха ылтăн кашăк хуçисем, ял хуçалăхĕн тĕп ыйтăвĕсенчен сехĕрленсе аякалла пăрăнакансем. Ятне те «Ылтăн кашăк хуçисем» тейĕпĕр. Килĕшмелле-и?

— Эпĕ унта шăпах çавăн çинчен çырнăччĕ, ятне тупма çеç ăнкараймарăм, — килĕшрĕ журналистпа Крутов.

Хаçатра çав статья çапăнса тухнă кун Крутова шкулта канăç памарĕç: хăшĕ мухтать, тепри хушма хуçалăха симĕс çутă памалла тесе тавлашать. Шкул директорĕ Лизунов, коридорта тĕл пулсан, чарăнса алă пачĕ те «Маттур!» тесе хăварчĕ.

Кĕç хаçатра ку ыйтупа халăх калаçăвĕ пуçланчĕ. Юлашкинчен редакци пĕтĕмлетӳ турĕ. Вăл вăхăталла партшкулта вĕренекенсемпе тĕл пулма Чулхула обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Катушев пынăччĕ. Анкарти пек пӳлĕме

вĕренекенсемпе вĕрентекенсем лăк тулли пухăннă. Сăмах май секретарь Максим Максимовича та аса илчĕ.

— Ял хуçалăхĕнче пирĕн те çитменлĕхсем сахал марха, — терĕ вăл. — Вĕсенчен пĕрне шăпах сирĕн вĕренекен Крутов юлташ тĕпчесе халăха пĕлтерчĕ. Асăннă тĕп ыйтусене тата статьяна сӳтсе явнă чухне пухăннă сĕнӳсене ĕнер кăна обком бюровĕнче тараса çинчи пекех тĕплĕн виçсе пăхрăмăр. Чăнах та, хушма хуçалăх — хуçалăх та, тупăшне те самаях парать те, анчах, Крутов çырнă пек «... ылтăн кашăк хатĕрличчен малтан сĕтел çине ури авăнмалăх тутлă апат-çимĕç лартмалла». Сирĕн хушăра Крутовсем пурришĕн шкулта ĕçлекенсен хĕпĕртемелле çеç. Эпĕ ăна, сирĕн вырăнта пулсан, Петр Михайлович, халех чи лайăх паллă лартса памалла, хам пата ĕçе илмелле. Тӳлĕк кӳршĕсем, шупашкарсем, парас çуках унашкал ăслă-тăнлă пуçлă ĕçлевçе.

Шкултан таврăнсан Крутов пӳлĕмре шухăша кайса ларчĕ: «Вăтăрмĕш çулсенче Чулхула вырăсĕсем пире промышленноçа аталантарма, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем йĕркелеме, ялсене техника никĕсĕ çинче çĕклеме пулăшнă пулсан, халĕ эпир хамăр та вĕсене пулăшма пултаратпăр. Авă епле чапланса кайрĕ чăваш!»

Пĕррехинче Макçăм патне Юманлăх хăни килчĕ. Меркурий Михайлович общежитире пĕрлех çывăрчĕ. Ирĕклĕ вырăн пурччĕ. Валентин Винокурова «арăму вилме патне çитнĕ» тесе телеграмма çаптарнă та, унщăн савăннипе çурхи ăйăр пек кукалеме пуçланă Шатки йĕкĕчĕ парнесем (хĕрачи валли çĕнĕ пукане!) туянса Арзамас çулĕпе тапăртаттарчĕ кăна.

Володя Петровăн пĕрремĕш секретарĕ ăс пухса пуç пысăклатма килнĕччĕ, вăл марисемпе хула урамĕсене такăрлатчĕ. Яша Васькин эрех заводне калыма кайнăччĕ.

Куншăн ĕнтĕ тĕлĕнмелли çукчĕ-ха. Партшкул слушателĕ, çапах та, сăмса шывне тин çеç шăлма вĕренекен студент мар-çке, — çемьеллĕ, ача-пăчаллă. Чулхулана киличчен тӳленĕ ĕç укçинчен кая мар илет пулин те вăл стипендине, пурпĕрех кĕсйи — шăтăк çула çитнĕ çыннăн. Çулталăкра иккĕ обком та кăштах пăрахса парать парти енчĕкĕнчен — ятарласа уйăрнă ылтăн купинчен. Пулăшăвĕ çеç питĕ кулăшла пулса тухать. Ыйтнă чухне пурте тенĕ пекех: «Çемье чухăнлăха кĕрсе ӳкнине пула, пулăшма май тупăр, тархасшăн», — тесе çыраççĕ. Укçи вара «çемйи нушаланнă» çĕре мар, слушатель ячĕпе шкула вĕççе çитет. Çав сумран камăн та пулин çемье тĕрекĕшĕн тăкакланнине Крутов пĕлмест. Хусах пурнăç хупах канăçĕ мар-и?

Кĕсье çӳхелнине сиссе вара слушательсем те ирĕклĕ вăхăтра грузчика тухаççĕ. Яша Васькин та çав урапа çинех ларнă.

Çамрăк арçыннăн хул-çурăм çирĕп — пăхаттир. Пĕр-пĕр холодильникре сысна, ĕне тушкисене çавăрттарма, Африка пылак парнисене вакунран пушатма тата ытти япалана йăтса майлама хăнăхса çитнĕ-çке. Вăл вĕсемшĕн вăй виçнĕ пек кăна. Чи йывăр ĕç вара — хĕрлĕ эрех заводĕнче. Кавказ е Мăлтаван енчен кусса килнĕ мăн пичкесене расс! кăшкăрса хăй вырăнне çиччас вырнаçтарса лартма ним те мар. Эрех кӳлли хумсăр-мĕнсĕр чӳхенет, эрех турри Пахус шыва кĕме илĕртет. Унта ишсе çăвăнакансем те, чăмса тухайманнисем те пулчĕç çав. Пысăк сумкăсемпе, чăматансемпе «вермут», «портвейн» бомбисене хăйсем ушкăнпа пурăнакан общежитине тата хулари «сулахай житине» сĕтĕрме пуçланă-мĕн хăш-пĕр çăткăнсем. Бомба çурăлса сирпĕнчĕ çав. Обăхăэс вăрăсене алăран ярса тытнă. Тĕнче шăв-шавĕ пуçланчĕ. Тĕрĕслӳ, харкашу, тавлашу, вăрçу. Ахаль пĕр пуху та кама та пулин ятран ятласа-çунтарнипе

иртмест, хальхинче виçĕ «персоналкă» пухса хатĕрлерĕç «хура хуплашкасене». Сан малашлăх шăпу çав хăрушă хутсенче. Бомба сасси аякка сарăлчĕ. Эрех пухăвĕ шавласа иртнĕ хыççăн виç ачана хăйсен обкомĕ каялла чĕнсе илчĕ. Лизунов вĕсене слушательсен шутĕнчен кăларни çинчен приказ кăларса çаптарчĕ.

Унашкал приказсем час-часах çуралнинчен Максим Максимович тĕлĕнме те пăрахрĕ ĕнтĕ. Этем сăн-сăпатне çухатнă, çамрăклах каппайланса кайнă вĕçкĕнсем тата çӳлерех вĕçме ĕмĕтленсе килнĕ-çке партин аслă шкулне. Вĕсем пысăк пуçлăх пуласшăн! Вĕсем халăх пуçĕ çине хăпарса ларасшăн! Курать вĕсене Крутов. Пурнăç али унашкаллисене хывăха тăратса хăварасшăн та, анчах вĕсем хывăхран та ылтăн тĕшĕ пулса тăма пултараççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсен хăйсен ылтăн тетелĕ пур. Тетелне тытакан ылтăн алăсем пур. Унта лексе вĕсем сисмесĕрех ылтăн пулă пулса тăраççĕ. Çав суя «ылтăнсем» ĕнтĕ парти кил картине вараласçĕ, халăхра парти ĕçлевçин ятне яраççĕ, партин никĕсне хышаклаһа хăйăрлатса хăвараççĕ. Никĕс пĕтсен...

Люба инкерен вăтанса Яша Васькина каллех чӳречерен сĕтĕрсе кĕртмелле пулать-ши кĕçĕр те? Ушкăнпа пурăнмалли капăр çурт хуралçинчен ытла та намăс. Ахаль пĕрмай кулать вăл вĕренекенсенчен: «Çак палăка тĕрĕсех лартнă вара аялти хутри канмалли пулĕме, — тет. — Ильич, авă, сылтăм аллине тăссах урам леш енчи эрех лавккине тĕрĕс çул кăтартса ярать. Чăн-чăн «ленинецсемех» иккен эсир — чăматанĕ-чăматанĕпе «бомба» йăтакансем, вăрттăнлăх, конспираци тетĕр-и-ха, çав енĕпе вара учитлăран юлатăр. Ĕçкĕ ăшне путса мăн хырăмлă шӳме вара Ильичран мар, хальхи лăтăр-лăтăр лидерсенчен вĕренетĕр пулас. Кулас та килет сиртен, хĕрхенес те килет сире. Хăвăр патри халăх, тăван-пĕтенӳ, çемйӳ эсир кунта мĕн хăтланнине

пĕлес пулсан-и, çук, пĕр чĕптĕм те ĕненмĕç сире, суя революционерсене. Тутлă тĕшĕллĕ мăйăр ытла сахал сирĕн «вăрманта», йăлт çиçĕм çисе янă. Курланки кăна нумай пек курăнать».

Яша Васькин та эрех заводĕнчен ялан упаленсе таврăнать, вĕренмест, аран-аран ĕлкĕркелесе пырать. Хулари çамрăксен ертӳçи пулнă вĕт вăл хăй вăхăтĕнче. Патшалăх гербĕ ӳкернĕ хыт хуплашкапа тăван çĕршывне таврăнсан хăйне тата пысăкрах вырăн пама шантарни пирки сасăпах мухтанать.

Ăшран хăлтăкланнă, пуç мимине минретнĕ «салтаксем» парти ретне малашне епле суллантарасса курса ăнланма пуçларĕ Крутов. Ĕçре усалран е меммерен мĕнле те пулин хăтăлас тесе партшкула тĕкнĕ анра сухрасем тата мĕн чухлĕ кунта! Партин чи çӳлти сийĕ ултавлă тĕспе йăлкăшать. Максим Максимович шучĕпе тем, çав тĕсе хура халăх куçĕ шăтарнă пăнчĕсем çисе ярассăн туйăнать. Халăх çав тĕсе курми-курайми пулас пекех.

Çак шухăшсем ăна, чун-чĕререн вĕренме, ăс-тăна пуянлатма, шухăш вĕçевне çунатлантарма тесе Чулхулана ăнтăлса килнĕскерне, хумхантармаллипех хумхантарать. Ăшри пăлхану кăнтăрла та, каç та тамалмасть. Пуçри тепĕр тăвăл тата лăпланма пĕлмест. Керженевсен хваттерĕнчи калаçу, Юманлăхри кĕтмен тĕл пулу, амăшĕпе çыхăнтаракан туртăм асаплăхĕ канăç памасть халĕ ăна.

Пушă пӳлĕмре Меркурий Михайловичпа чуна уçса пуплешме тинех май килчĕ, вара вăл ăна хăйĕн пурнăçĕ çинчен тĕппи-йĕрĕпех каласа пачĕ.

— Мда, — ура çине сиксе тăчĕ Керженев. — Турă кăтартнă çулпах çитнĕ иккен эсĕ, Максимка тăванăм, пирĕн яла, — аннӳ йĕр тунă çĕре. Тĕл пулмаллах пулнăмĕн иксĕмĕрĕн. Пуçра мĕн тĕрлĕ шухăш явăнмасть, çапăçмасть пулĕ. Эпĕ сан пата ахаль килменччĕ. Туя чĕнме, унта пĕрле кайма тесе кĕнĕччĕ.

— Кам туйне? Хăвăрăн тăвансенне-и? — типнĕ тута хĕррисене чĕлхипе йĕпетрĕ Крутов.

— Аннӳн туйне пулса тухать халь сан юмахна итленĕ хыççăн...

— Мĕн, мĕн? Мĕнле анне туйне? — куçне-пуçне чарса пăрахрĕ Макçăм.

— Антонина Ивановна качча каять.

— Кама?

— Хваттер каччине. Хăйĕнчен вăтăр çул кĕçĕнрех ват хусаха. Хула хваттерĕ, атте килĕ, пĕтрĕ пирĕншĕн. Хамăн аслине, çул çитсенех, хăй патне вырнаçтарма сăмах панăччĕ вăл. Халĕ ĕнтĕ... каллех ман ĕмĕте çунтарчĕ. Иртнĕ эрнере шăнкăравларĕ те... Пĕр кун куртăн-çке сыснасене пирĕнне? Пĕрне пусса туй валли ăсатрăм. Анне те хирĕçлемерĕ те. Эпир пурăннă — пурнатпăр терĕ те... Чаплă хупахра, «Чулхулайкăра» пулать терĕ туйне. Пĕлетĕн пуль, хăйсенчен виç утăмра кăна. Эс мĕн шутлан кун пирки?

Вырăн çине лап! выртрĕ те Макçăм, тем хушăран чалт! сиксе тăчĕ.

— Чĕнмен хăна тутартан та усал, теме хăнăхнă пирĕн чăваш халăхĕ мĕн авалтан, — терĕ вăл Меркурие ыталаса. — Атя иксĕмĕр хула тăрăх утса çӳрер, чуна кантарар. Юрататăп эп Чулхулана. Кашни кив урамра, кашни кĕтесре аваллăх палли, ĕмĕр палăкĕ. Шухăша ярать. Пурăнас килсе каять вара вĕсене курса, вĕсемпе калаçса.

— Килĕшетĕп, — тумланма пуçларĕ Керженев. — Шăпа иксĕмĕре юнашар тăратрĕ тĕк, юнашарах, пĕрлех утар. Тен, çак парнесене çула май парса та хăварăпăр «çамрăк мăшăра». Сан ятран та илтĕм эп. Акă. Тен, Лариса та килнĕ. Ăна питĕ курас килекен пулчĕ.

— Куç курĕ. Пуç мĕн тума хушĕ.

Ҫӳресен-ҫӳресен, ҫулӗ ӑнах та иккӗшне пӗр ҫӗрех илсе ҫитерчӗ. «Чулхулайка» хупах кӗрлет. Вӗсене пушӑ вырӑн тупса лартрӗҫ.

Капӑр тумланнӑ мӑшӑр тӑснӑ сӗтел пуҫӗнче йӑлкӑшса ларать. Акӑ, Меркурипе Макҫӑм ура ҫине тӑчӗҫ те, парнисене йӑтса, унталла ҫывхарчӗҫ.

Антонина Ивановнан кулли таҫта кайса кӗчӗ, сӑнӗ-пуҫӗ улшӑнчӗ, вӑл хӑй сисмесӗрех пулас ай! тесе илчӗ, ҫӗнӗ упӑшкин ытамӗнчен уйӑрӑлса ура ҫине аран-аран тӑчӗ, шӑрҫаланнӑ куҫӗсене алӑ тӳртӗшӗпе шӑлчӗ, парнесене йышӑнчӗ те вӗсене пукан ҫине хучӗ, тав туса малтан Меркурие ыталарӗ, унтан — Макҫӑма.

— Ывӑлӑм, Владикӗм, — йӗрсех ячӗ ватӑ хӗрарӑм-ҫамрӑк арӑм.— Килтӗн-ха апла. Меркурине те таҫтан тупнӑ. Тавах сана, манманшӑн. Туй халӑхне сирӗнпе иксӗрпе те паллаштармасан та юрӗ. Тем калакан пулӗ. Туй юххине те пӑсас мар, упӑшкан кӑмӑлне те хуҫас мар. Хӗрӗм, Лариса, килеймерӗ, Испанире, гастрольте. Хӑналанӑр, ачамсем.

«Ҫамрӑк арӑм» упӑшки ҫумне йӑлкӑшса кӗрсе ларчӗ. Шӑв-шав хушшинче никам та нимех те ӑнланса юлаймарӗ. Антонина Ивановна пӑрахнӑ ачипе Михаил Степановичӑн килтен кӑларса янӑ ачи вара каялла ҫаврӑнса хупахран тухрӗҫ. Урампа вӗсем сӑмах чӗнмесӗр, шухӑша путса тӑвалла утрӗҫ.

— Ҫитес канмалли кун ман менелник пулать. Хӗрӗх тултаратӑп. Ман ҫав уява санпа пӗрле ирттерес килет, — пӗлтерчӗ Керженев.

— Пыратӑп. Хаваспах, — ыталаса илчӗ ӑна Макҫӑм. — Тавтапуҫ сана, Меркурий пиччем.

10

Макҫӑмсен юлашки сесси пуҫланчӗ. Канмасӑрах тӳрех патшалӑх экзаменӗсем патне ҫитрӗҫ. Акӑ, кӗтнӗ йывӑр кун. Ӑна ӑнӑҫлӑ вӗҫлеме икӗ ҫул хушши тӗплӗн хатӗрленчӗ Крутов.

Ирпе-ирех вăл чӳречерен пăхакан хĕвеле хирĕç йăл кулчĕ те аллине чечек çыххи тытрĕ. Ăна, малтанхи ушкăна лекнĕскерне, группăри хĕрсем чечек илсе пыма хушнăччĕ.

Общежити алăкне уçсанах Крутова çуллахи ир ыталаса илчĕ. Уçă та лĕп сывлăш хумĕ пырса çапнипе питне аллипе шăлчĕ те вăл ассăн сывларĕ, вара тротуар çине тухса Гагарин урамĕпе шкулалла уттарчĕ. Паян Макçăм çак çулпа юлашки хуть каять, марксизм-ленинизм философине хăй мĕн таран пĕлнине патшалăх комиссийĕ умĕнче кăтартса парать. Чăн та çак хĕвеллĕ ир, хĕвеллĕ кун уншăн пурнăçра ĕмĕрлĕхех асра юлĕ.

Вырсарни кун урамра халăх ытлах йăшăлтатмасть. Капăр тумланнă, аллине чечек çыххи тытнă, хаваслăхпа çиçсе пыракан çамрăк арçын çине хирĕç пулакансем ăмсанса пăхаççĕ. Макарон фабрики тĕлне çитнĕччĕ çеç вăл, аякран паллана сасă илтрĕ. Линăпа Славик тăра параççĕ. Çавăрса илчĕç те ăна, калаçаççĕ те калаçаççĕ. Каçпа ку таврара хăнара пулнă иккен вĕсем, халĕ хваттерне каяççĕ. Лина Макçăм аллинчи чечексене сиркелесех тем шырать.

— Акă, тинех тупрăм, утмăл турат. Ун шăршине шăршлас.

Крутов çыхăри чечеке асăрханса туртса кăларчĕ те Линăна тыттарчĕ:

— Чулхулара юлашки хут тĕл пулнă ятпа ку сире, çемйипех, хамăрьялсем. Паян ман юлашки экзамен. Юлашки... Хусан пуйăсĕпе хальччен Маруççем те çитмелле. Кĕтсе илме çеç каяймастăп.

Лина Макçăма çамкинчен чăп чуп туса вĕри кĕлеме çапрĕ — куçа курăнман, пуçа çĕмĕрекен кĕлеме. Автобус çитсе чарăнсан капитан Макçăма ăнăçу сунса ыталарĕ те арăмĕпе ачине çавăтса чупрĕ. Лина куç умĕнче тепĕр хут сӳннĕ çăлтăр евĕр çиçсе çухалчĕ.

Предмета ăста пĕлекен Крутов экзамена «пиллĕк» паллăпа тытрĕ. Шкулта нумай тытăнса тăмарĕ, общежитие автобуспах ларса кайрĕ. Пӳлĕмре ăна арăмĕпе ачи кĕтсе илчĕç. Борис вырăн çинче кулкаласа выртать. Маруç ун майĕнчен уртăнчĕ, упăшкине чуп тăва-чуп тăва саламларĕ.

Вĕсене диплом панă çĕре Маруç та ывăлĕпех пычĕ. Ăсату каçне те хутшăнчĕ. Бориса упăшкине тыттарса пĕр-икĕ ташă та ташларĕ.

Кĕтесре кĕпĕрленсе тăракансем патне шкул директорĕ пычĕ. Ăна çийĕнчех варрине хупрĕç. Калаçу пуçланчĕ.

— Мĕнле пек, юлташсем, пирĕн патра икĕ çул пурăнни усăллах пулчĕ-и? — куç айĕн тинкерсе ыйтрĕ Лизунов.

Унпа юнашар тăракан Крутов пуриншĕн те хуравларĕ:

— Усăллă пулмасăр ара, нумай ăс хушрăмăр, тарăн пĕлӳ илтĕмĕр шкулта. Пурнăç экзаменне малашне тата çирĕпрех тытма вĕрентнĕшĕн тавтапуçах сире пурне те.

Директор ун еннелле çаврăнса каларĕ:

— Ырă сăмахшăн хăвăра спасибо. Эсир пурнăç экзаменне мĕнле тытнине тепĕр темиçе çултан пĕлĕпĕр.

Вальс кĕвви янăраса кайрĕ — шкул вальсĕн кĕвви.

## ВИÇÇĔМĔШ ПАЙĔ

### 1

— Мейĕр! Йăлтах илсе кайăр! Эпĕр пурăннă ку таранччен — пурнатпăр та! Тĕппипех тасатăр. Куçăм ан куртăр. Мейĕр!

Пăлтăр умĕнчен вĕçсе анакан пысăках мар тулли миххе çĕре ӳкерес мар тесе хырăм çумне хĕстерме ĕлкĕрнĕ Крутов чалăшса кайрĕ, шыв кӳлленчĕкне сылтăм урипе шамплаттарчĕ те, чĕркуççи таранах кĕрсе ларчĕ. Сĕлкĕш чартлатса пит тăрăх сирпĕнчĕ. Колхоз председателĕ Маминов ним пулман пекех ун аллинчи миххе çулса илсе самосвал кузовне силлерĕ, унтан тин вăл картлашка çинче çухăрса тăракан хĕрарăма самăр чышкипе юнарĕ:

— Хуп çăварна! Лапăртатать пустуй, снашăтă. Пырăнха машина патне, тархаслăн-ха, снашăтă.

Картлашка çине ларса аттине хывакан Крутов хăй ăçта путнине тин асăрхарĕ. Машинăсем пӳрт çуммипе ан чупчăр тесе чавса хунă шăтăк пулнă иккен. Çӳре халĕ йĕпе урапа ял тăрăх. Хĕрарăмĕ те тарăхнипе урса кайрĕ пулас, çунтарать те çунтарать:

— Эс мана-и? Мана машинпа хăратасшăн-и? Эй, турă çырлахтăрах. Ара, хăвăн-им вăл?! Сан мар машина-трактор — колхозăн! Колхозăн пулсан апла — пирĕн, хамăрăн. Çу-ук, хăратаймăн. Пусмăрлаймăр ĕмĕрĕпех. Çитет мăшкăллаттарса. Панă эпĕр хамăр тӳпене. Тахçанах татнă патшалăх умĕнчи тивĕçе. Тата ертсе килетха районтисене. «Анюта çемçешке, хирĕçлеймест», — терĕн пуль. Йăнăшатăн! Ман та хамăн кăмăл. Ман та чикки пур. Ха, ятлаçма пăхать тата сăпаççипă калас вырăнне. Авă, Тан Ваçлисем анкартинчен пилĕк лав кăларчĕç, çапах пĕр умма та памарĕç. Пит кирлех пулсан, ма илместĕр вĕсенчен? «Çăвар хуп» кăтартам, ак, сире. Кукаçи?!

Пăлтăрта хăлтăр-халтăр, тăнкки-танкки туни илтĕнчĕ. Унтан алăк уçăлчĕ те Анютапа юнашар кăвапа таран ӳстернĕ шап-шурă сухаллă, пĕркеленчĕк питлĕ, шалпар шăлаварпа пир кĕпе тăхăннă, аллине ухват тытнă мучи тухса тăчĕ.

— Кам çăвар хуптарасшăн пире унта?! Five Ять!..

Малалла тăснă ухватне сасартăк лăнчăр усрĕ старик, каласа пĕтермен сăмахне çăтса ячĕ, картлашка тăрăх аялалла пусрĕ те:

— Турран килесшĕ! Тĕлĕкре-и эп е кун çутинчех? Ара, Макçăм Макçăмч вĕт ку? Хăçантанпа курман сана, ырă çыннăм, — терĕ.

Мучие палласа илнĕ Крутов та сиксе тăрса ăна кăмăллăн алă пачĕ, вара меллĕн ыталаса чăмăртарĕ:

— Сывах-и, Герасим Филиппович? Вăт тĕл пулу та тĕл пулу вара ку. Ман ума кĕтмен-туман çĕртен юмахри асамçă пек сиксе тухрăр. Хурăнвартан мĕнле майпа лекнĕ-ха эсир кунта? Тĕлĕнмелле!

Карачăм мучи, ватăлнă çаран çинчи сывлăм пек шăрçаланнă куççульне çанă вĕçĕпе шăлса илчĕ те Анюта еннелле çаврăнса, каларĕ:

— Чарăн-ха эс те пулин. Намăс ан кур ыр çын умĕнче. Эх, ачам, мăнукăм, курман пуль-ха эс унашкал кăмăллă этем. Çакă ĕнтĕ вăл пирĕн ялти кăмунистсен чи асли пулни. Сана эп нумай юмахласа панăччĕ-çке унти пирки? Эс пур, вăрçан...

«Ман хырăм выçать» тесе пылчăклă урампа анаталла лаплаттарса утса кайнă председателе шурă куçпа пăхса ăсатнă хыççăн тин Анютан сасси çемçелчĕ:

— Эп ăна мар, кукаçи, Çерки Тимахвича ятларăм вĕт. Эй, ахрат, пуçлăх пулать-и çав хăй кил-кил тăрăх умма пухса çӳрекенскертен. Халăха итлеттерейсен катемпи. Пĕр хĕрарăмсемпе çапăçма пĕлет ĕнтĕ. Урăх унран нимĕн те пиçмест. Апата мар, таçта пырне чӳхеме ярăнчĕ-ха.

Крутов пӳрте кӗрсе вӗсене чӑрмантарасшӑн марччӗ. Вӑхӑчӗ те сахалтарахчӗ. Ахаль те кӗр кунӗ кӗске. Ҫумӑрлӑ ҫанталӑкра тата хӑвӑртрах тӗттӗм пулать. Иртенпе те пӗртен-пӗр кузов тултараймарӗҫ, пухрӗҫ-пухрӗҫ... Малтан ҫӗр улми тиекенсем виҫҫӗн тан тупӑннӑччӗ, михӗ йӑтма кӗреҫҫӗ те кам патне те пулин, унтан ӳсӗр тайкаланса тухаҫҫӗ. Вӗсем пӗрерӗн-пӗрерӗнех ҫухалса пӗтрӗҫ. Аптӑранӑ енне Крутов председателе хӑйне шыраса тупрӗ. Халӗ, авӑ, вӑл та пӑрахса утрӗ.

Карачӑм мучи Крутов ҫумне ҫилӗм пек ҫыпҫӑнчӗ. «Уруна шӑнтса пӑсан» тесе хӑтӑрсах ӑна пӳртелле туртать. Парӑнмах тиврӗ, ҫапла вӑл алӑк урати урлӑ хӑюсӑррӑн ярса пусрӗ. Пӳрчӗ ҫӗнӗ. Пӗренесем хушшинчи мӑкӗ те симӗсех-ха. Мӑкне ҫиелтен сӳспе тултса пӗтермен вырӑнсем пур. Утнӑ май хӑмисем кӑмака хыҫӗнчи шӑрчӑк сассипе юрлаҫҫӗ.

Мучи, Крутова тӳрех тавӑрса калайманскер, кунта хӑй мӗнле майпа лекни ҫинчен ӑнлантарма пуҫларӗ:

— Пурнӑҫӗ-качки ӗнтӗ, кӑштӑртаткалатпӑр хурткӑпшанкӑлла. Карчӑксӑр тӑрса юлтӑм-ҫке, Макҫӑм Макҫӑмч, Ануксӑр юлтӑм. Вӑн вара ирӗксӗрех ку яла, Тымара, куҫса килтӗм. Сӑлтавӗ-мӗнӗ... Пирӗн кунта кӗҫӗн ача, Марье качча тухнӑччӗ. Тем, чир-чӗртен сывалаймарӗ вӑл, вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗчӗ. Ку унӑн пӗртен-пӗр хӗрӗ, Анюта, ман мӑнукӑм пулать. Пӗлтӗр ҫулла кӗрӗве уйра тракторпа ӗҫленӗ чухнех аҫа ҫапса вӗлерчӗ те, виҫ ачапа упӑшкасӑр тӑрса юлчӗ вӑл. Хӑй ӗҫе каять, аслисем шкула чупаҫҫӗ, кӗҫӗннине эпӗ хураллап. Мунча туса пӗтермелле тата. Айланкаласа пурӑнатпӑр ҫапла. Хӑв мӗнле чуптаратӑн-ха?

— Чулхуларан таврӑнсан, райкома ӗҫлеме ячӗҫ, — пӗлтерчӗ Крутов.

Тата тем каласшӑнччӗ пулас Карачӑм мучи, ҫӑварне уҫнӑччӗ кӑна, шофер алӑкпа ҫурӑмран

тĕртнине пула малалла ӳпĕнчĕ, унтан ухватне кăмака çумне кайса тăратрĕ.

Максим Максимович кĕрсенех тавралла пăхса çаврăнчĕ. Пӳрт ăш-чикки самаях пысăк. Кăмака тĕлĕнчен хăмапа картласа çывăрмалли пӳлĕм тунă. Ситсă карнă енче кухня пулас. Симĕс чейник йăтса унтан Анюта тухрĕ. Тумне улăштарма ĕлкĕрнĕскер, вăл чанкăлтатса тăракан паçăрхи «усал хĕрарăм» мар иккен, çара чĕркуççисене çепĕççĕн сĕртĕнсе вĕлкĕшекен йăрăмлă кĕпепе çăмран çыхнă кофта айĕнче вăйлă кĕлетке хускални сисĕнет. Палламан çынсем пĕр харăс пăхнинчен вăтаннăран-ши, Анютан тăрăхларах пит çăмартийĕсем çине хĕрлĕ тĕс çапса тухрĕ. Пурçăн тутăрне майланçи туса вăл арçынсене тĕпелелле иртме сĕнчĕ, тăм куркасене кăпăклă сăра тултарчĕ, кĕç, тем манса хăварнăн, кăмака хыçне кĕрсе çухалчĕ, Крутов умне йăпăрт çăм атăсем пырса лартрĕ. Максим Максимович хирĕçлесшĕнччĕ, анчах хĕрарăм куçĕнчен пăхса илчĕ те, турткалана-турткаланах ăшă çăм атăсене тăхăнса ячĕ.

Карачăм мучи çывăрмалли пӳлĕмрен йăм хура пуставран çĕлетнĕ пиншак тăхăнса тухрĕ. Сухалĕ хура тĕс çинче пушшех капăр. Крутовпа шофера вăл сĕтел хушшине, тур кĕтессине, кĕртсе лартрĕ, хăй хыçлă пуканпа вĕсене хирĕç вырнаçрĕ, Анютана чĕнсе хăлхинчен тем пăшăлтатрĕ. Мăнукĕ йăпăртатса кухньăран туххăмрах хăмла çырли варенийĕ йăтса килчĕ, савăтне кукашшĕне тыттарчĕ, хăй ача сассине илтсе пӳлĕме васкарĕ.

— Сире эп нумай тытмастăп, - терĕ Карачăм мучи сухалне тути хĕрринчен икĕ еннелле сирсе. — Яшка çитеретĕп те — марш хăвăр ĕçӳпе. Вăт каналья, хамах чавса хунăччĕ те çав шăтăкне... Мур шухвĕрĕсем, пӳртех çĕмĕрсе кĕрсе каяççĕ те. Кам пĕлнĕ, ыллăм, эс унта ура чиксе кăларасса. Ĕçер-ха çырлапа вĕри чей, унсăрăн пăрсутă пулĕ.

Кăвакал яшки çинĕ хыççăн шофер ларса тăмарĕ, самосвалĕ патне тухрĕ. Карачăм мучипе Крутов пĕр хушă хăйсен пурнăçĕ çинчен калаçса ларчĕç. Мучин чĕлхи, ахаль те якаскер тата уçăлчĕ, вара вăл сĕтел хушшинчен тухма хатĕрленекен Макçăма, хĕрхенсе-ши, вăлтса-ши, çапла каларĕ:

— Ĕç мар ку сан, ыллăм. Кулмалли те, йĕрмелли те пĕрлех. План тултармалла, терĕн-и-ха? Хула валли апла паранки. Йăлтах тĕрĕс. Ямаллах. Анкарти тавраше çук вĕсен, сад пекки çеç. Яшка пĕçерме те, ăшалама та умми кирлех. Паратпăр-ха ăна эпир, сутатпăр патшалăхне хамăртан ытлашшине, тепĕр чух, сахал тухсан та, хамăра валли юлмасан та. Патшалăхшăн ним те шалккă мар. Вăрçă чарăннă хыççăн сайăм çырăнтарнинех астăватăп. Китлĕр аçтахине пула юхăннă-арканнă çĕршыв хуçалăхне ура çине тăратма укçа кирлĕ-çке. Халăхран шăйăрмасăр ăçтан тупать-ха Сталин аттийĕ. Пирĕн кĕсье шăтăк. Ял суветра кашни кил пуçне валеçсе тухнă та мĕн чухлĕ илмеллине, сехре хăптарсах алла кăранташ тыттараççĕ. Хуçасемпе чурасен вăрçи пырать. Хăшĕсем лупас айне те, тĕп сакайне те пытанса пăхатчĕç, алăк та питĕрсе ларатчĕç. Карачăм яланах ялсуветрисене хирĕç тухса кĕтсе илнĕ. Патшалăхран, ара, епле пытанан? Патшалăхĕ хамăрах вĕт. Ют мар-çке.

Пӳлĕмрен Анюта сасси илтĕнчĕ:

— Ют мар тетĕн-ха та эсĕ, кукаçи, анчах миçе çынна пĕлеп халь эп. Çĕр улми пухнине курсанах пӳрт алăкĕсене çăраççипе питĕрсе таçта пытанаççĕ. Патшалăх кирлĕ-и вĕсене?

Карачăм мучи çăварне ал тупанĕпе хупласа типпĕн ӳсĕрчĕ те, мăнукне пӳлсех:

— Пурте пĕр мар çав çынсем. Тем хăтланакан та пур. Çапах та кулса вилмелле, — терĕ. — Пăхатăп та, шухăшлатăп та хамăн ухмах пуçăмпа... Чисти салтаксемсĕр

тăрса юлнă енерал атакăна чупнăн туйăнчĕ мана паян кăлхус хуçи кил тăрăх умма пухса çӳрени. Эх, хамăр «Шурăмпуçĕнче» пулсан! Çапла лăпăртатса çӳренĕ пулăттăрччĕ-ши эсĕр Кашкăр Тельманĕпе иксĕр?..

Крутов алăк патĕнче чарăнса тăчĕ те Карачăм мучие хирĕç çапла тавăрса каларĕ:

— «Шурăмпуçпе» çак «Çăлтăра» та, колхоз пуçлăхĕсене Волковпа Маминова та танлаштараймастăн. Икĕ хирĕçле япала, икĕ тĕрлĕ çын. Енерал, тетĕр-и-ха? Кулăшла. Ăçта çухалчĕ ман вăл халь? Комиссарăн каллех пĕччен чупма тивет пуль.

Кĕçех Крутов мучипе сыв пуллашрĕ, çав вăхăтра кил хуçи ăна тата «тепĕр сăмахлăх» тесе тытса чарчĕ.

— Итле-ха, ыллăм, — пăшăлтатрĕ вăл хăлхаран, — пит йывăр пуль кăмиссарсен шкулĕнче. Мĕн кăна вĕрентмен сана икĕ çул хушшинче...халăхпа ĕçлеме те, кил тăрăх ыйткаласа çӳресе умма пухма та...

Крутов ват çыннăн чее куçĕнчен пăхса шӳтлĕн кулчĕ те ăна алă пачĕ, вара пылчăк çăрса урам урлă пурăнакан Тан Ваçлисен еннелле утрĕ. Ăна хирĕç питĕрнĕ вырăсла хапха хыçĕнчен йытă хаяррăн вĕрсе ячĕ.

Хаяр сасă Максим Максимовичăн пуç миминех пырса тиврĕ. Шухăшсем йăшăлтатса çирĕп йĕркене вырнаçрĕç. Вăхăтлăха халăхран укçа кивçен илмелли «заем кампанине» те Мускавĕнче шăла çыртсах йышăннă та ĕнтĕ. Чухăна юлнă çынсемпе çапах та урнă йытăллах сиксе хăтланнă. 1953 çулта хăй вилнĕ хыççăн та патшалăх пуçлăхĕн «Сталин аттен» çак пушшийĕ тата тепĕр тăватă çул халăх çурăмĕ çинче юнпа вылянă. Шăршăнтарнă пушă йĕрри, паллах, Карачăм мучин çурăмĕ çинче те виличчен асăнмалăх сыхланса юлнă. Çĕнĕ патша Никита Хрущев та тӳрех пăрахăçлайман вăл йĕркене, 1957 çулта тин халăхран ирĕксĕрлесе укçа пухма пăрахнă. Укçине çирĕм çул иртмесĕр тавăрса пама чарнă. Кайран вăл каялла пуспа

кăна кĕнĕ. Ахальтен мар сиксе тухрĕ пуль çав ватă çын чĕлхи çине заем мыскари. Паянхи çĕр улми мыскарипе танлаштарма шăпах меллĕ пулчĕ Карачăм мучие. Хаяр йытă, пушă, пусахлу, ыйткалани...

2

Иртенпе çумăр лӳшкет. Эрнипех ĕнтĕ çапла. Таврари пĕтĕм çĕр лаптăкĕ хуранти силленекен кĕсел пек пулса кайрĕ. Кăмăл хуçăк. Карачăм мучин, мĕн ун, ăшă пӳртре кут хĕстерсе лараканăн, кулса пултăр. Темиçе çул каяллах-ха Хурăнварта вăл Крутова ыйту панăччĕ: «Ыллăм, хисеплĕ учитлă, кала-ха пире, апла ӳлĕм хăçан çумăр çутарас тетпĕр — çутаратпăр, хĕвелпе уйăха хăçан çутаттарас тетпĕр — çутаттаратпăр. Вăт пурнăç та пулать, ача. Çут çанталăка çăварлăхлатпăр, апла. Иçмасса. Чаплă, чаплă. Пурăнса пăхар-ха».

Çак ыйту хыççăн Максим Максимович ял хуçалăх университетĕнче вĕренекенсене наука çитĕнĕвĕсем малашне мĕнле пысăк усă кӳме пултарни çинчен сехете яхăн тăнлантарнăччĕ. Анчах та паянхи сăмахсем çамкаран пырса çапсан, вăл туйрĕ — Карачăм мучи ăна шанчăклах ĕненсе лартман иккен. Çумăр айĕнче кунĕпе шепĕртетсе çӳрекен агроном, райком инструкторĕ хăй сăмаххипе хăй хуçа пулайманнине витĕрех курать-çке ватă çын. Çавăнпа ĕнтĕ вăл ăна, сĕтел хушшинче кăвакал тукмакки кăшланă чухне те, тĕртсе илчĕ: «Эсир, çакăн пек нумай вĕреннĕ ăслă çынсем, темшĕн пĕлĕтри кăнцелярипе типломати тытаймастăр-çке. Начартарах ĕçленĕ пек туйăнать, тен, хăвăртан кама та пулин посол туса яратăр унта».

Тымартан Крутовсем тĕттĕмле тин тухрĕç. ЗИЛ пылчăк сирпĕтсе, кустăрма айĕнчен тĕтĕм мăкăрлантарса пĕве çийĕн аран-аран каçрĕ, машина-трактор паркĕ патне çитерехпе чарăнчĕ. «Капитальнă лартăмăр» тесе шофер

хутлă-хутлă сăмахпа вăрçса илчĕ, унтан кабинăран тухрĕ. Крутов та ун хыççăн лепре çине сиксе анчĕ. Хыçалти урапасем чăнах та курăнмиех касса кĕнĕ. Ирĕксĕрех вĕсен парка кĕме тиврĕ. Çумăрĕ тата вăйланчĕ. Малтанах шўнĕ тумтир çап-çутă пулчĕ, йывăрланчĕ.

Паркра чĕрĕ чун курăнмарĕ. Механизаторсен çурчĕ те пуш-пушах. Çĕтĕк-çатăк журналсене уçа-уçа хупнă вăхăтра пўрте пылчăкпа вараланса пĕтнĕ вăтăрсенчи арçын тайкаланса пырса кĕчĕ, хĕрĕнкĕскер, вăл вĕсене тўрех тĕпчеме пикенчĕ, «кам» та «кам» тесе тăнран ячĕ. Шофер хăйсем кам пулнине суймасăрах пĕлтерчĕ. Кăмака çумĕнче сĕнксе ларчĕ-ларчĕ те хайхискер:

— Четвĕртлĕх е çур литрлăх кирлĕ, унсăрăн трактор пулмасть. Шăчăртатаканни пур тăк — каятăп, çук тăк... — тесе аллине сулчĕ.

— Кунтах çĕр каçаяс çук-ха, мана килте матка кĕтет, мунча кĕмелле, — тутине пăркалантарса кĕсйисене хыпашланçи турĕ шофер, укçине пурпĕрех кăлармарĕ хăй, вара Крутов ыйтакана пилĕк тенкĕ тыттарчĕ. Çынни улталаканскер пулмарĕ, тем вăхăтран тракториста ертсе çитрĕ. Трактор тапратса çĕр улми машинине туртса кăлариччен сехет ытла иртрĕ.

Акă, умра поселок çутисем курăнчĕç. ГАИ посчĕ патĕнчен иртсен вĕсем сылтăмалла пăрănса чукун çул урлă каçрĕç, çĕр улми тиеме хатĕрленĕ эстакада тĕлĕнче чарăнчĕç. Тулли автомашинăсем турттармалли тараса çумĕнче темиçен хăлаçлансах тавлашаççĕ. Ял хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ хатĕрлев кантурĕн директорне пĕсехерен ярса илменни çеç. Райкомра ĕçлекен Пантелеймон Христофорович Оманов вĕсене хĕтĕртсе тăрать. Хатĕрлевçе хăрата-хăратах Крутовсен самосвалне эстакада çине кĕрттерчĕç. Лешĕ, ирĕксĕрлесех йĕпе çĕрулмие вакуна тиеттернĕшĕн тулхăраканскер, машина çине хăпарса пăхрĕ те пушшех урмăшса кайрĕ:

— Эсӗрӗ вӗт мана тӗрмене хуптаратӑрӑ, ами. Эх, пӗтеретӗрӗ ӗнтӗ, хӳме ҫумне тӑрататӑрӑ, ами...

Оманов Крутова ӳпкелешрӗ:

— Сахалтарах, Максим Максимович. Кун каҫипе те ҫакна ҫеҫ пухнӑ, ҫитменнине тата тӗп сакайӗнчен кӑларнӑ типӗ ҫӗр улмие ислетсе янӑ. Япӑх, япӑх пуҫлатӑн ӗҫлеме, вӗренейместӗн камантлама. Пӗрремӗш секретарь пӗлсен кун пирки...

Ахаль те кунӗпе тарӑхса пӗтнӗ Крутов Оманова «Кайса пӑх-ха ху Тымара, мӗнле пӗлӗн ӗҫлеме, район пуҫлӑхӗсем ҫумӗнче хышкаланса ҫӳрени мар унта», — тесе пӑрӑнса утрӗ.

Юнашарах — Энгельс ячӗллӗ мӑн урам. Урамӑнче тротуар пекки те пур, анчах вӑл путӑк-шӑтӑк пирки ҫынсем асфальт сарнӑ ҫулпа ҫӳреҫҫӗ. Анаталла ӳхӗрсе анакан грузовик пылчӑкпа сапса хӑварсан тин вӑл канав урлӑ сиксе карта ҫумне тухрӗ. Ӑна хирӗҫ арӑмӗ васкаса пырать.

— Макҫӑм, сана кӗте-кӗте паян, чӑтаймарӑм, тӑвалла хӑпарса пӑхас-ха, терӗм. Типӗ вырӑн пур-и хӑть кӗлеткӳре? — упӑшки ҫине хӗрхенӳллӗн пӑхса ыйтрӗ Маруҫ. — Вилен вӗт капла шӑнса. Ҫынсем пур, вӑхӑтпа ӗҫлеҫҫӗ те вӑхӑтра канаҫҫӗ. Хамӑр ҫумри врачсем каллех кинона кайрӗҫ, мана та чӗнчӗҫ. Сансӑр ҫӳрес килмерӗ. Хурӑнвартан куҫса килнӗренпе эсӗ манпа пӗр канмалли кун та пулин юнашар утса куртӑн-ши? Ӗҫшӗнех ӗнтӗ... Миҫе пӑт пухрӑн-ха?

— Шӑп пӗр самосвал, Маруҫ. Эпӗ санпала поселок тӑрӑх ытакланса ҫӳренӗ пулсан, патшалӑха тӑватӑ тонна ҫӗр улми ӑсанмастчӗ.

— Сан ӗҫӳ-ши вара вӑл кил тӑрӑх ҫӗр улми пухса ҫӳресси? Колхоз хуҫисем, ял Совечӗ, райӗҫтӑвком, хатӗрлев кантурӗсем тата тем те пур мар-и? Нимӗн те ӑнланмастӑп сан ӗҫне.

— Хам та ăнланатăп хам ĕçпе тӳррĕмĕн ĕçлеменнине, анчах нимĕн те тăваймастăн, хушаççĕ сана, итлес пулать, пурнăçлас пулать, вилсен те, çурăлсан та.

— Ан кӳренсем, Макçăм, сана эпĕ ăнланатăп. Кăшт чăтăмлăх çеç çитмерĕ. Ку вăл юрĕ-ха. Асту-ха паянхи кун пирĕншĕн мĕнпе пахине?

Тин аса илчĕ Макçăм Хурăнварти уйăхлă каçа, пулас арăмне чечек çыххи парнеленине, Чулхуларан çырса янă сăмахсене. Аса илчĕ те ăна хăй çумне хыттăнрах та хыттăнрах пăчăртарĕ. Юрату сăмахĕсем халĕ хăйсемех чĕлхе çине тухса пычĕç: «Чĕре юрри. Пĕр эсĕ çеç илтетĕн ăна...»

— Итле-ха, Макçăм, сан чĕрӳ ыратнă-и ун чухне? Çак сăмахсене çырнă вăхăтра, эппин.

Упăшки чĕнмесĕр ăшра кулнине сиснĕ Маруç унран тата ытларах тĕпчерĕ:

— Халь эс вĕсене темле туйăмсăр, артистла каларăн та... Вăхăт иртнĕçемĕн, тен, çыннăн туйăмĕ те хытса пырать?

Макçăм ăна утма чарсах хăй умне çавăрса тăратрĕ, куçĕпе тĕттĕмлĕхе çутатса, тинкерсе пăхрĕ.

— Эх, эсĕ те çав ман телей сачĕ! Ан кулян. Лайăх мана унта. Шăнса кӳтнĕскер, вăн, ăшăнтăм сана хирĕç пулсан. Чулхулара, Ока Атăлпа пĕрлешнĕ тăвайкки тăрринче туй тупи тунине мансан сана, Маруçка...

Шăкăлтатса калаçса пынипе вĕсем сисмесĕрех парк тĕлне çитнĕ. Маруç ăна «Хурăн çулçи» ятлă магазин еннелле пăрчĕ.

— Ман упăшка пĕрре çеç. Шăнса пăсăлсан, санпала. Хамăршăн та, халăхшăн та, партипе патшалăхшăн та усă пулмĕ. Кĕрсе илер-ха пĕр çур литр эрех.

Лавкаран тухсан арăмĕ упăшкине чуптарсах илсе кайрĕ. Чăнах та ăна вăл чаплă кунпах кĕтнĕ. Сĕтел çинче — чечек çыххи. Типнĕ пулин те кĕрен-кĕвак, шупка тĕссемпе пĕтĕм пӳлĕме çутатать. Ăна Маруç, юрату кунĕн пуçламăшĕ çитсен, пĕлтĕр те чăматанĕнчен кăларнăччĕ. Сентябрьти çав кун вĕсемшĕн чи чаплă кун.

Макçăм пĕчĕк пӳлĕме кĕчĕ. Ачи йывăç кравать çинче тутине чăплаттарса çыврать. Тетте упа çурийĕ хăяккăн кайса ӳкнĕ. Ыйхă Бориса чĕлхесĕр тусĕпе вылянă вăхăтрах минтер çумне пăталанă пулас. Пăхса тăчĕ те вăл пĕр хушă пепки çине, арăмĕ чĕннипе кухньăнаваскарĕ. Иккĕшĕ те сĕтел хушшине ларчĕç. Маруç ун çинчен куç илме пĕлмест, ăна пылпа чей, унта кăшт бальзам ярса ĕçтерет. Макçăм ӳсĕрличчен ĕçнине Маруç ку таранччен курман-ха. Пĕрлешнĕренпе хăнара та пулкаланă, упăшки йĕркеллех тытнă. Упăшкан усалĕ ĕçсен çиеле тухать тенине илтнĕскер, вăл Макçăмăн лайăх енĕсемшĕн çук турра та тахçанах пуç çапнă. Ĕмĕр пĕрле пурăнмалли çын вĕт. Юратса пĕрлешнĕ мăшăрсенчен çав путсĕр йăлана пула пурнăçне аркатни сахал-и? Упăшкине юратать, шанать вăл. Шăнса пăсăласран кăшт сипленни ăна ыран ĕçе кайма та, ĕçлеме те кансĕрлемест тесе шухăшлать. Маруçăн паян Макçăма шутсăр нумай калаçтарас, вĕçĕмсĕр култарас килет. Кулнă чухне вăл тата илемленет-çке. Хальхи пек пăхса тăранаймасть вара арăмĕ ун çине.

Макçăм та Маруç хитрелĕхĕпе йăпанать, унпа ăшшăн калаçать, шӳтлет, кулать. Çапах та пуç миминчи курăнман пăнчă ăна йăпанура чăрмантарать. Пуçра — çĕр улми хуйхи. Тем пек пусарасшăн вăл çак пăнча — анчах ниепле те пусарма пултараймасть. Маруç та упăшки темле тарăн шухăша путнине ăнланчĕ пулас, майĕпен-майĕпен шăпланчĕ, ăна çивĕч куçĕнчен ăшшăн пăхса тутлăн чуп турĕ. Макçăм арăмĕн лăпкă куçĕнче шанчăклăх хĕвелĕ çиçнине курать, унăн хĕмĕпе ăшăнать. Вăл вăтанчăк хĕрĕн вĕри тути хĕррисене хăйĕн тутипе сĕртĕннĕ чухне йăлкăшса тухнăчĕ ун умне çав хĕвел. Хĕвел, хăпарса пынă май, Крутов пурнăçĕн кил картине ура ячĕ, çемье ăшши пулса тăчĕ. Юрату хĕвелĕ хăй çумне

тепĕр хĕвел ялкăштарчĕ. Çĕнĕ хĕвел çуралса тухасса та кĕтет Максăм. Виçĕ хĕвел ăшшинче йăпанĕ вара вăл.

3

Районăн тĕп «хули» Вăрманкас, вăрман ăшне çурма уйăх пек путнăскер, кăнтăралла сарăлса пăхса ларать. Хырăм тутлăхра, çурăм хӳтлĕхре тенĕ евĕрех. «Хула»варрипе чукун çул иртет. Унпа пĕр майлă урамĕсем самаях вăрăм. Урлă урамĕсем кĕске. Пĕрисем уй хĕрринчен вăрманалла тăсăлаççĕ, теприсем тарăн çырма пусне тухаççĕ. Тĕп урамĕпе мăн çул иртет. Вăл Чăваш çĕршывĕн кăнтăр тата çурçĕр енчи районĕсене çыхăнтарать.

Йывăçсем хушшипе кукăрăлса выртакан сукмак тăрăх Крутов çав аслă çул хĕррине тухрĕ. Икĕ хутлă чул çуртсем енчен ун патнелле вĕтеленсе, сылтăм аллипе хыттăн сулкалашса, пĕтĕм кĕлеткипе пăркаланса Семен Быстров килет. Акă вăл шыв çисе кайнă тарăн шырлан урлă çăмăллăн сиксе каçрĕ те Крутова алă пачĕ.

— Айта тӳрĕрен, — вăрманалла туртрĕ вăл ăна. — Кунтан çывăхрах.

Унпа килĕшсе Крутов та çул урлă чупсах каçрĕ, вăрмана кĕнĕ май тавралăха сăнаса пычĕ. Тахçан касмасăр хăварнă йăрăс хырсем, авă, лутрарах юмансемпе çăкасене, амăшĕ ачисене хул хушшине хупнă пек, симĕс тураттисемпе витнĕ. Кăтрисене çаратма ĕлкĕрнĕ хурăнсем пусĕсене çĕрелле пĕкнĕ. Йывăç кучĕсенче çаврăмăн-çаврăмăн çĕр типех-ха. Пуç çине çумăр шывĕ тăкăнать.

Çемен Быстров Крутовран пĕр çул маларах партшкул пĕтерчĕ, райкомăн йĕркелӳ ĕç пайне ертсе пырать. Çемен вĕçĕмсĕр, чарăнма пĕлмесĕр калаçать. Райкома çитиччен вăл Цицерона та, партшкул профессорĕсене те, иртнĕ семинара пырайман парторгсене те аса илчĕ, ачисен пултарулăхĕпе те паллаштарчĕ. Крутов çĕр улмишĕн хуйхăрнине сиссен, Быстров çурхи аслати евĕр хăлтăртатса кулчĕ.

— Маминов пирки-и эс? Аптрамалла ĕнтĕ унпа, лӳппер упапа. Ăна выговор та параççĕ, асăрхаттараççĕ те... Уншăн пулсан — пурпĕрех хут купăс. Слона шăна çыртнă пек çеç. Ун хулăн тирне нимле сăнă та витмест. Ун хытнă çамкинчен темле вирлĕ сăмах та ахаль снаряд танк бронинчен аякалла сирпĕннĕ евĕр çеç сирпĕнет. Çапах та... Маминова кĕсьерен çапмалла. Кĕсйи унăн шăпах çемçе вырăн, унта брони çӳп-çӳхех, витĕрех шăтать. Чулхулаччен хам халăх контроль комитетне ертсе пынă чухне эпĕ ăна самаях ташлаттарнăччĕ те... Çĕр улми шăнтса янăччĕ вĕсем. Мургаев калать: «Эс ăна, Быстров, чĕнсе лайăх тăнкăрук пар та вĕçле ĕçне». Эпĕ те итлемерĕм райком хуçине. Халăх контролĕ райкома пăхăнмасть-çке. Шаплаттартăм икĕ уйăх ĕç укçипе кĕсьерен. Комитетран пулькка пек тухса сирпĕнчĕ, тӳрех иккĕмĕш хуталла качака путеккилле хăпарса кайрĕ. Çав кунах пĕрремĕш мана хăй патне чĕнчĕ. «Çапах та Маминов, — тет, — председатель, парти обкомĕн номенклатура çынни. Малашне те кунашкалах хăтлансан, эс пуçлăхсене çиллентерсе, тарăхтарса пĕтерен». Маминов, Маминов... Мургаевпа çывăх туссем çав вĕсем... Вĕренме те ахальтенех ямарĕç пуль мана, халăх контролĕнчен пăрмалли сăлтав тупса çеç хавхалантарчĕç пулас. Юрĕ, ыттине кайран, авă пире Оманов кĕтет.

Пантелеймон Христофорович райком çурчĕн картлашки тăрăх майĕпен анса вĕсене сывлăх сунчĕ, çурăм хыçĕнче тем кулса юлчĕ. Унпа танлаштарсан, Семен Ильич йăлтах урăхла çын: таса чунлă, уçă кăмăллă, ĕçе кăр-кар тытса тĕплĕ тăвать, нумай пĕлет. Оманов вăрттăн хăтланма юратать, пуçлăхсене йăпăлтатать. Крутов ĕнтĕ шăпах Панхристоф ертсе пыракан пропагандăпа агитаци пайĕнче инструкторта ĕçлет.

Максим Максимович хăйсен пӳлĕмне кĕрсе плащне хывса çакрĕ, тумне тирпейлерĕ, эрне хушшинче тунă

ĕçсене тепĕр хут аса илчĕ, вара коридора тухрĕ. Инструкторсемпе хирĕçле пӳлĕмре Оманов ларать.

Оманов вăтăр пиллĕкри хусах. Мĕншĕн ку таранччен те авланаймасть вăл, ăна Крутов пĕлмест. Çемьеллĕ пултăр тенĕ пекех, Пантелеймон Христофоровича райком икĕ пӳлĕмлĕ хваттер те панă. Крутовсен çуртĕнчех пурăнать. Чиперккесене çеç каçса кайсах юрататъ çав вăл. Шупашкартах тĕлĕнтернĕччĕ. Хусантан вĕренме пынă вашават, юрă-ташă юратакан, йăрăс пӳллĕ, хура çӳçлĕ, чикан сăнлă хĕршĕн шыва сикме те хатĕрччĕ. Лешĕн каччи пурччĕ.

Пыратчĕ те вăл Крутов патне, унран йăлăнса ыйтатчĕ: «Эп санпа çеç чунран-вартан калаçма пултаратăп, шанатăп темшĕн сана, ыттисем кулма пăхаççĕ манран, эсĕ кăмăллă пек туйăнатăн. Итле-ха, юрататъ-ши мана Алла?» Максим Максимович та унран хăйĕнчен ыйтатчĕ: «А эс, хăв, Пантелеймон Христофорович, мĕнле шутлатăн?».

Оманов тĕссĕр куçĕпе ялтăртаттарса Макçăм тăрăх çӳлелле выçă анчăк пек пăхатчĕ: «Юрататъ пуль, тетĕп. Юратмасан, мана ташша та чĕнес çук. Ĕнер те паркран пĕрле таврăнтăмăр. Питĕр урамĕпе общежитие çитиччченех юнашар пытăмăр, киоскра газировка ĕçтерчĕ, сироппа. Театра чĕнесшĕн-ха эпĕ ăна, опера кайса итлеттересшĕн, «Евгений Онегин». Крутов каллех хăйĕнчен ыйтатчĕ: «Юрату, качча илес пирки хăйпе калаçса пăхнă-и хăçан та пулин?» Пичĕ хĕрелнĕ каччă аран-аран сăмахлатчĕ: «Хăратăп эп унпа калаçма, куçĕнчен пăхма та вăтанатăп. Ăна курсанах чĕтреме еретĕп. Унăн туйăмĕ мана телепати саккунĕ пек силлет, чĕлхе-çăвара типĕтет, ал-урана тăллать. Çавăнпа та юрататех пуль, тетĕп. Иртнĕ эрнерех записка çырса панăччĕ, алăран тыттарма хăяймарăм, пӳлĕм алăкĕ айĕнчен ярса хăвартăм. Хуравĕ çуккă-çке, ма çырмать-ши?

Çырсассăнах, килĕшсессĕнех, арăм тусассăнах, ах... Итле-ха, Крутов, майлă арăм пулать вĕт?»

Юратупа минренĕ ват хусахран Крутов кулма та аптратчĕ, вара ăна тĕрĕссинех пĕлтернĕччĕ: «Алла Соснова мĕн шухăшлине пĕлеймĕп эп. Пĕрлешесси вăл сирĕн хăвăр хушăри ĕç. Тулĕк юлташла асăрхаттарасшăн. Мĕн пустуй çунтармалли ăш-чике. Эс юрататăн пуль те ăна... Хăй юратать-ши? Пирĕн группăрах каччи пур ун. Улатăр хулинчен. Туй тăватпăр теççĕ». Оманов çакна илтсен siксе чĕтреме тытăннăччĕ, кĕске пӳрнисемпе Крутова çатăрласа тытсах лăскама пуçланăччĕ: «Пулма пултараймасть. Суятăн! Тыттаратăн! Ман юратăва... Эп юратаканскерне... Кам ирĕк панă ăна ман Аллăна юратма!?»

Тепĕр эрнинче Оманов Крутова вăрттăн каласа панăччĕ: «Тĕрĕсех. Суйман эс. Юри сыхларăм. Улатăр ачи чăнах та çӳрет Аллăпа. Парка та пĕрлех кайрĕç. Акацисем хушшинче вăрттăн пăхса лартăм. Алла Соснова ăна хăех тытрĕ те чуп турĕ, ак çапла. Ман чĕре çĕр тĕпнех анса кайрĕ пулмалла çав вăхăтра. Вăтанмасть те вĕт. Юратма пăрахмаллах пуль ăна. Аллăн аллă тесе ахальтен аса илтермерĕн. Хушамачĕ лайăхчĕ. Ял та пирĕн Сосновка-çке. Омановăн хĕрĕ те яла хывнă тесе тĕлĕнтересшĕнччĕ пĕрре. Пулмарĕ. Улатăр ачиех пĕтерчĕ. Сана, Крутов, суйманшăн, тавтапуç. Атту пуçа пуйăс айне чикес тесе те шутланăччĕ».

Райкомра ĕçлекенсем яланах тăххăрччен маларах пухăнса çитеççĕ. Паян, тунти кун, пĕрремĕш секретарь канашлу ирттерет. Çавăнпа пурте пушшех хыпăнаççĕ.

Йышăну пӳлĕмне кĕрсен, сулахай енче, пĕрремĕш секретарĕн пӳлĕмĕ, сылтăмра — иккĕмĕшĕн. Яков Сидорович Мургаев пӳлĕмĕ анлă, урайне хĕрлĕ кавир сарнă, сарăрах тĕспе сăрланă стенасем пуш-пушах, мал енче çеç Ленин портречĕ çакăнса тăрать. Пӳлĕме икĕ

сĕтел лартнă: вăрăмми — бюро ларăвĕсем ирттермелли, пĕчĕкки — секретарĕн яланхи ĕç вырăнĕ. Урам енчи стена тăрăх — çемçе пукансем. Унта ларăва чĕннĕ çынсем е райкомра ĕçлекенсем лараççĕ. Акă, халĕ те вĕсенчен кашниех хăй вырăнне йышăнчĕ.

Мургаев сĕтеллипе кĕтеслĕн хĕрĕхсенчи вăтам пӳллĕ арçын ларать. Ку вăл — иккĕмĕш секретарь Майлов. Геннадий Васильевич райкомра промышленность, транспорт, суту-илӳ ыйтăвĕсемшĕн хуравлă. Унпа юнашар идеологи енĕпе ĕçлекен секретарь Василиса Матвеевна Посадкина, хĕрĕх урлă каçнăскер. Ун çумĕнче Семен Ильич Быстров, Крутов, ытти инструкторсем... Панхристоф чи хĕрринчи пукана йышăннă. Максим Максимович пĕрремĕш планеркăра пĕлмесĕр çав пукан çине ларнăччĕ. Оманов ăна унтан хăвалана майлах кăларса ячĕ, вара вăл, Быстров çумĕнчи пуш пукана асăрханăччĕ те, унта вырнаçнăччĕ. Камăн вырăнĕ пулнă вăл, ыйтса пĕлеймерĕ, халĕ те кашнинчех çавăнта ларать. Унтан ăна хăвалакан-тăвакан тупăнмарĕ. «Икĕ заведующи варринче ларса çӳлелле хăпарса ан кай эс капла», — хушăран кулкаласа илет Оманов. Крутовшăн пулсан кам пуканĕ çинче, хăш вырăнта ларни пурпĕрех.

Мургаев пӳлĕмĕнче яланах тĕтĕм шăрши. «Беломорне» вăл çăвартан ямасть, пĕр пирусĕ çунса пĕтет те теприне хыпать.

Райком аппаратĕнче ытларах вăтăр-хĕрĕх çулсенчи çынсем, тăн кĕрсе çитнĕ, пысăк пĕлӳ илнĕ, пурнăçра тăтăрхаланнă ĕçлевçĕсем ĕнтĕ. Пĕр Прошлин çеç аллăра илнĕ вăтам шкул аттестачĕпе. Ыттисен пурин те тĕрлĕ тĕслĕ ромбиксем, икшер аслă шкул пĕтернисем те пур. Майлов та, парти шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, пурнăçра тем те пулса тухма пултарĕ тесех, заочнă тепĕр институт пĕтернĕ.

Иртнĕ эрнере мĕн-мĕн туни çинчен кашниех пĕрремĕш секретаре йĕркипе пĕлтерме пуçларĕ. Быстров пай ĕçĕ çинчен кĕскен те витĕмлĕн шатăртаттарса тухрĕ. Оманов хăй мĕн тунине, заместителĕпе инструкторсен ĕçне уйрăммăн аса илсе вăхăта вăраха ячĕ. Мургаев итлемест те пулас ăна, чĕлĕм тĕтĕмĕ ăшĕнче çĕр улми ыйтăвĕ пирки телефонпа Шупашкарти хуçасемпе хĕрсех çуйхашать. Оманов ĕçĕнчи ваклăх, хăйĕн ансăр тавра курăмлăхĕ тӳрех сисĕнет. Пасар патĕнче машина таптаса вĕлерни анчăк эрне выртать, тасамарлăха хирĕç кĕрешменшĕн поссовет ĕçтăвкомĕн председательне райком бюровĕнче итлемелле тесе пĕрле ĕçлекенсене тавлаштарчĕ те ячĕ.

— Питĕ лайăх ĕçленĕ вара Пантелеймон Христофорович, — лăхлатсах кулчĕ Быстров, — куçпа-пуçпах ĕçленĕ, бюро кун йĕркийĕ валли калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту хатĕрленĕ.

Оманов хĕрелнĕ хăлхи тăррине сăтăра-сăтăрах мăкăртатрĕ:

— Эпĕр тем те тăватпăр пуль, куçпа та, пуçпа та ĕçлетпĕр пуль... Парти хушсан — халь те тем тума та хатĕр. Эпĕр... эпĕр — парти салтакĕсем.

— Эх, «парти салтакĕ», — илтĕнчĕ Быстров сасси, — парти пире урам тăрăх йытă вилли пухса çӳреме хушать пуль. Кил тăрăх ыйткалаканла çĕр улми пуçтарса çӳрени те çитет. Тавлашиччен — ĕçлесчĕ çамка тирне картлантарса, çанă тавăрса...

Максим Максимовича çакнашкал пухăнса пакăлтатса ларни пĕртте килĕшмест. Планерка ялан икĕ-виçĕ сехете тăсăлать-çке. Вăхăт иртсе пултăр тесе пустуй шавлани кăна ку.

Райком секретарĕ юлашкинчен пурне те икĕ тĕп ĕçе кӳлĕнме хушрĕ: çĕр улми сутмалли патшалăх планне тултармалла тата сĕт сăвассине чакармалла мар.

Райком, çĕр улми, ĕне... Ытла та çыхăнмаççĕ-çке ку сăмахсем пĕр-пĕринпе. Райком, парторганизаци, коммунист, этем... Янравлă та пĕрлĕхлĕ, пĕр çемĕллĕ. Çак йĕрпе пымалла парти ĕçлевçин, çын кăмăлĕн хевтипе, ĕне хӳринчен тытса çапкаланса мар. Мĕншĕн райкомăн тĕп ĕçĕ пулмалла çĕр улмипе сĕт планĕ? Мĕншĕн ял хуçалăх управленийĕн, райсовет ĕçтăвкомĕн мар? Мĕншĕн вĕсенчен мар, чи малтан райкомран ыйтаççĕ-ха çав плансене тултарманшăн? Мĕншĕн обком та райком секретарĕн ĕнси çинче çавăншăнах çивĕч пуртă тытса тăрать? Мĕншĕн тесен обком секретарĕн ĕнси çинче те çавнашкал пурттах çакăнса тăрать. Çӳлтен аялалла пусакан хуçалăх ĕçĕ парти ĕçне, халăхпа хутшăнса тумалли ăнлантару, кăмăл-туйăм çĕкленĕвĕн, ăс-хакăл пуянлăхĕн ĕçне аяккалла сирсе хăварать. Никама шанмасăр, никамран тĕплĕн ыйтмасăр такам ĕçне те райком хăй кунĕн-çĕрĕн туса пынине пула ярункана хăнăхнă хуçалăх пуçлăхĕсемпе Советсен хуçисем пуçарулăх пирки те, хуравлăх пирки те ытлах çунмаççĕ-мĕн. Райком çине шанса ларнине пула ĕçе-пуçа япăхтараççĕ. Çавна май парти ĕçлевçисене çулсерен ытларах та ытларах йывăрлăха тĕртсе кĕртсе пыраççĕ. Акă мĕншĕн çĕр улмипе сĕт ыйтăвĕ райкомшăн паян тĕп ĕç пулса тăрать. Акă мĕншĕн Крутовсем, пĕр пăт та пулин çĕр улми парăр-ха тесе, кил тăрăх анратса çӳреççĕ. Чĕр мăшкăл! Чĕр намăс!

Çак шухăшпа тухрĕ Крутов пĕрремĕш секретарь пӳлĕмĕнчен. Унтан тухсанах тата Омановĕ хăйĕн инструкторĕсемпе ялсенчи партком секретарĕсене васкавлă чĕнсе кĕртрĕ. Пай пуçлăхĕн пӳлĕмĕ пысăках мар, шăпах чӳрече сарлакăш. Сулахайра, стена çумĕнче, сĕтел. Пурте вырнаçса ларсан Пантелеймон Христофорович хĕрлĕ папкинчен хут кăларса вулама пуçларĕ:

— Эсир пӗлетӗр ӗнтӗ, кӑҫал, 1971 ҫулхи мартӑн 30-мӗшӗпе апрелӗн 9-мӗшӗ хушшинче парти сьезчӗ пулса иртрӗ. Ку вӑл, юлташсем, ҫав тери пысӑк пӗлтерӗшлӗ событи. Ӑна пирӗн асра тытмалла. Унӑн йышӑнӑвӗсене халӑх хушшине массӑллӑн сармалла, докуменчӗсене ӗҫ ҫыннисене тӑрӑшса вӗрентмелле. Ӗҫре те, канура та, килте те ҫавӑн ҫинчен ҫеҫ шухӑшламалла...

«Шурӑмпуҫ» колхоз парторгӗ Воробьев куллине чараймасӑр чӑхлатса илчӗ.

— Василий Фомич! — аллипе сӗтеле шаккарӗ Оманов.— Политикӑлла пысӑк пӗлтерӗшлӗ событи ҫинчен чунтан калаҫнӑ чухне ихӗрсе ларнипе эсир политикӑлла пысӑк йӑнӑш тӑватӑр.

Лешӗ ниепле те лӑпланаймасть. Ун ҫумне ыттисем те хутшӑнчӗҫ.

— Мӗн тӑвӑн унпа, политика тӗлӗшӗнчен пиҫсе ҫитменскерпе. Суйлаҫҫӗ темле агрономсене партком секретарьне... Колхоз ҫыннисене парти политикине ӑнлантарса, съезд йышӑнӑвӗсене пурнӑҫлассишӗн хӗрӳ кӗрешӗве ҫӗклеме пултараять-ши вӑл е пултараймасть-ши, Максим Максимович? — терӗ тарӑхса Оманов.

— Мӗншӗн пултараймасть? Пултарать! Оренбургран таврӑнсан агрономра та аванах ӗҫлерӗ. Коммунистсем шансах секретаре суйларӗҫ. Райком та ӗненчӗ. Ӗҫӗ йӗркеллех пырать-ха ун. Маттур ача, — хӳтӗлерӗ Воробьева инструктор.

Лешӗ, кӑххӑмлатса ура ҫине тӑчӗ те, пай пуҫлӑхӗ еннелле чеен пӑхса, каларӗ:

— Манӑн чӑннипех те партин ҫирӗм тӑваттӑмӗш сьезчӗн йышӑнӑвӗсене ӗҫе кӗртес пирки колхозра мӗн-мӗн тумалли ҫинчен татса памашкӑн яла васкамалла. Эсир кунта...

Пурте шавлама пуҫларӗҫ. Оманов вӗсене кӑшкӑрсах лӑплантарчӗ, ҫырнӑ хутне малалла вуларӗ:

— Пирӗн умра тӑракан тепӗр задача вӑл — партин Тӗп Комитечӗ социализмла ӑмӑртӑва малалла лайӑхлатасси ҫинчен йышӑнни. Кунта уйрӑмах чарӑнса тӑрӑпӑр. Йышӑнӑва пирӗн пурин те тӗплӗн пуҫа хывмалла.

Пай пуҫлӑхӗ вулама тытӑнсанах Воробьев пӳлӗмрен хуллен тухса кайма хатӗрленчӗ. Оманов та сиссе ӑна чарса лартрӗ:

— Воробьев юлташ! Эс хӑв ӑҫтине ан манса кай! Итле мӗн каланине! Ту мӗн хушнине! Райком мероприятине пурнӑҫлама чӑрмантарнӑшӑн пӗрремӗш секретарь патне чӗнсе уйрӑммӑн калаҫма тивет санпа.

Парторг ирӗксӗрех ларчӗ, куҫне хупса шухӑша путрӗ, унтан, тем аса илнӗн, каллех сиксе тӑчӗ, Омановран йӑлӑнсах ыйтрӗ:

— Итлӗр-ха, Пантелеймон Христофорович? Этем пулӑр тархасшӑн. Ярӑр мана? Фермӑра вун иккӗре ӗне сӑвакансемпе тӗл пулма килӗшнӗччӗ. Шӑпах ҫак ыйтупа. Йышӑнӑва эпӗ хӗрлӗ кӑранташпа паллӑ тусах вуларӑм. Акӑ, пӑхмасӑр каласа паратӑп. Вара яратӑр-и?

— Ничево! — сылтӑм аллине ҫеҫ сулчӗ Оманов. — Эс вӗсемпе паян та, ыран та, ирпе те, каҫпа та тӗл пулма пултаратӑн. Йышӑнӑва вара тарӑнрах вӗренме тӑрӑшмалла, хӑв тӗллӗн вуланипех ҫырлахса лармалла мар.

Пай пуҫлӑхӗ тата тепӗр хут таткине алла илчӗ.

— Пурте пӗлме кирлӗ ӗнтӗ, юлташсем, ҫак йышӑнӑва, — сассине хӑпартрӗ вӑл. — Ӑна Партин Тӗп комитечӗ ӗҫ ҫыннисен экономика вӗренӗвне лайӑхлатас пирки йышӑннӑ. Вӑл пирӗн ума ҫав тери пысӑк ӗҫ кӑларса тӑратать. Эпир ӑна алла илни шӑпах район экономикине ҫӗклеме пулӑшӗ. Вӗренӳре пирӗн унпа туллин усӑ курмалла. Ҫавӑнпа кашни йӗркине темиҫе хут вуласа тухӑр. Эсир ӑна никамран та лайӑхрах пӗлни райкомшӑн усӑллӑ. Тэк, юлташсем, ҫакӑнпа паянлӑха кӗскен вӗҫлӗпӗр.

Темле нушаран хăтăлнă евĕр пурте хаш та хаш сывласа ура çине тăчĕç. Çав вăхăтрах алăкра Быстров пуçĕ курăнчĕ, «иккĕре пĕрремĕш çĕр улмипе пухать» терĕ те вăл вăшт çухалчĕ.

Канашлуччен вунă минут çеç юлнăччĕ, апата каясси пулмарĕ. Крутов пӳлĕме кĕрес те темерĕ, коридор вĕçĕнчи чӳрече патнелле утрĕ, хыçра çын пуррине сиссе вăртах çаврăнчĕ: Оманов иккен. Тĕссĕр шывлă куçĕпе ун çине ыйтуллăн пăхса ыйтрĕ вăл:

— Мĕнле пек, сан шутупа, Максим Максимович, лайăх ирттертĕм-и планеркăна? Çӳллĕ шайра вĕт? Наука никĕсĕ çинче?..

— Тем калас ĕнтĕ сире, — аптраса тăчĕ Крутов. — Çăмарти чăххине вĕрентнĕ пек те... Ман шутпа, пĕрремĕш секретарь хыççăн, çынсене тепĕр хут пухма кирлĕ марах. Камшăн усăллă вăл паянхи пек пустуй пакăлтатса ларни? Парторгсене вырăнта ĕçлĕ пулăшу парасчĕ. Ахаль те ялсене йăпăр-япăрах тухса çӳрейместпĕр вĕт.

— Эс те çавсен юрринех юхтаран, сана, партшкул пĕтернĕ çынна, райком çуртĕнче кунашкал сӳпĕлтетни пушшех килĕшмест. Райкома хирĕç сурма юрамасть, асту...

Йышăну пӳлĕмĕ енчен Быстров алă сулсан калаçу татăлчĕ. Вĕсем кавир тăрăх унталла сассăр утрĕç.

Секретарь пӳлĕмĕнче тăп-тулли çын. Мургаевпа юнашар Шупашкартан килни ларать. Ку канашлăва ахальтен пухман. Ялта çĕр улми кăларса пĕтернĕ пулин те, ăна патшалăха сутасси, уйрăмах çĕршывăн промышленность центрĕсене ăсатмалли плана тултарасси йывăр лару-тăрура. Мургаев кашни хуçалăхра ĕç мĕнле пынине тĕплĕн тишкерчĕ, райком представителĕсене итлерĕ. Çапла йышăнчĕç: пурин те колхозсене тухса каймалла.

Канашлу хыççăн Крутов улттăччен хырăм выççине чăткаласа ларчĕ, радио пиклетсен, плащне тăхăнчĕ те райкомран тухса утрĕ. Тулта çумăр лӳшкет. Çанталăк никама та пăхăнмасть, итлемест: обком представителĕсене те, райком секретарьне те, Крутова та, Карачăм мучие те. Çанталăка кирлĕ пек йĕркелеме этем пĕтĕмпех вĕренсе çитеймен-ха, хăй канашлусенче, ларусенче вăрах палкаса вăхăта çумăр шывĕ пек шарлаттарса юхтарма ăсталанса çитнĕ пулин те. Çумăрĕ çăвать те çăвать, ислетет, çĕртет, çăрăлтарать, ăслă сăмахсене те пылчăка путарать.

Усăсăр ирттернĕ куншăн Крутов питĕ кулянчĕ, çав вăхăтрах каллех Оманова тарăхрĕ. Вăл тăлларĕ-çке çынсене, пăчă пӳлĕме хупса тем вĕрентĕвĕ пекки турĕ. Планерка хыççăнах Тымара тухса кайнă пулсан-и, паллах, мĕнле те пулин усăллă ĕç тăватчех вăл.

Упăшкин чунĕ кӳтнине Маруç тӳрех сисрĕ. Ун пек чух çын ахаль те тарăхса кайма пултарать, майĕпен хăех сăлтавне уçса парĕ-ха тесе мĕншĕнне ыйтса пĕлме васкамарĕ. Ывăлĕпе урайĕнче упаленсе вылянă май Максăмăн кăмăлĕ чăнах та çемçелчĕ, сĕтел хушшине апата ларсан вăл арăмне кула-кулах каларĕ:

— Тĕрĕссипе, паян мана нимĕн те çитерме юрамасть. Ĕçлемен эп. Пуш параппан çапса вăхăта ирттернĕ. Мана çеç мар, райком аппаратне, вăтăр çынна, пĕтĕмпех выçă лартмалла. Рабочи е колхозник, пирнешкел, яра куна пустуй ларсан, мĕн ĕçлесе илĕ-ши? Юрать пирĕн çирĕп шалу та. Патшалăх тытăмне юрăхсăрлатса, хавшатса пыракан тĕрексĕр авангард пулса юлать КПСС, тесе партшкулта тавлашни аса килет.

— Максăм, килте те пулин ман-ха хăвăн кăпăсăссупа ĕçӳ çинчен. Арăму, ачу пур. Тыт, вăн, кашăкна, Борис сана пасăртанпах сĕнсе ларать. Ан кулян ытлашши, эп

сана паян хам шутран тăрантаратăп. Эп ĕçленĕ, ултă урок ирттернĕ, вăхăта сая яман. Çи, Макçăм, çи, уншăн эс айăплă-им?

Апат хыççăн Макçăм алла хаçат илчĕ. Пĕрремĕш страницăра хуçалăхсем патшалăха вырьăх-чĕрлĕх сутмалли плана тăхăр уйăхра мĕн чухлĕ тултарнине кăтартни пур. Чи малта — тарăнварсем, аялти ретре — тымарсем.

«Çăлтăр» колхоз патшалăха çĕр улми сутассипе чи япăх ĕçлет. Колхоз председателĕ С.Т.Маминов тăрăшманнине пула виçĕ пин центнертан виççĕрĕшне çеç хатĕрлев кантурне çитернĕ», — вуларĕ вăл райхаçатра мĕн çырнине.

## 4

Районтан Тымара вăрманпа вунă çухрăм ытларах каймалла. Мăн çулпа шутсăр çавра, çитменнине кĕрхи йĕпе-сапара машина е трактор кĕтсе çур кун та ларма пулать. Çавăнпа Крутов унта тӳрĕрен тухма шутларĕ.

Йывăç тураттисене перĕнсенех çумăр тумламĕ пăрça пек шапăрр тăкăнать, пите-куçа уçăлтарсах ярать. Таврара кĕрхи йывăр сывлăш тăрать. Вăрманкаса çурçĕр енчен касса уйăракан çырма çийĕн çăра тĕтре сийĕн-сийĕн явăнать. Сукмак, прачака тухсан, пĕтет. Кунта уçăрах, утма та çăмăлрах.

Пырать вăл вăрман тăрăх хăйпе хăй калаçса.

«Мĕнешкел кăткăс вăл, çын тени. Çиелтен пăхсан, сăнĕ-пуçĕнчен, кĕлеткинчен, уттинчен, хăтланăвĕнчен, калаçăвĕнчен тĕрлĕрен ушкăна пайлама, уйăрма пулать ăна. Ăшри туйăмĕпе çеç çын нимле ушкăна та пайланмасть, кашни — уйрăм. Вăл — хăй пĕр кăмăл, уçса паман уйрăм пĕр тĕнче. Мĕншĕн тесен никам та ун ăшне кĕрсе курман, вăл çак самантра, çитес вăхăтра мĕн шухăшланине, мĕн палăртнине, мĕн шахвăртма пултарнине никам та пĕлмест. Карачăм мучиех илер.

Питĕ чее, вăлтма юратакан çын. Пурнăç вутĕнчен ăшаланса тухнă, çатма çинчи какай пек пиçсе хытнă, çĕршыв уттинчен кая юлман, халăх умĕнче намăс курман. Партин паянхи политикине те аванах ăнланать вăл, çĕршывра мĕн пулса иртнине те, таврара мĕн тунине те пĕлет, туять, çав хушăрах манран кăмиссарсен шкулĕнче кил тăрăх умма пухма та вĕрентеççĕ-и тесе кулать.

Çĕр улми ыйтăвĕ кăçал районта çеç мар, пĕтĕм республикăра чи пысăк та кăткăс ыйтусенчен пĕри пулса тăчĕ. «Иккĕмĕш çăкăрпа» ялан чапа тухнă чăваш çĕрĕ те уяр та типĕ çанталăкра намăс кăтартрĕ. Çавăнпа ĕнтĕ партипе Совет органĕсем вăл ыйтăва курăмлă татса парассишĕн çине тăраççĕ. Колхозсемпе совхозсен планĕсĕр пуçне ялти хуçалăхсем хăйсен ытлашши çĕр улмине патшалăха мĕн чухлĕ сутма пултарассине те шута илнĕ. Лайăх ĕçлекен ял Совечĕсем çĕршыв умĕнчи тивĕçе сăмахсăрах пурнăçланă. Тымарта çеç... Партире тăракан хăш-пĕр çынсен айăпне пула Крутов хăйне шеллемесĕр, çемйине пăхмасăр тарăхсах, шăлне çыртсах кил тăрăх çĕр улми пухать. Мĕншĕн тесен ял Совет ĕçтăвкомĕн председателĕ, вăлах колхозри парторганизаци секретарĕ Григорьев Çĕпĕрти хулана пиччĕшĕ патне хăнана тухса кайнă, колхоз хуçи Маминов ĕçке ернĕ. Вĕсем ăшă пӳртре, тулли кĕрекере тарлаççĕ, Крутов Тымара хăвăртрах çитесшĕн пуç тӳпинчен пăс кăларса утать. Ăна райкомра сăмсаран шакканă пекех каланăçке: «Плана тултармаллах! Унсăрăн партбилетна сĕтел çине кăларса хуратăн!» Партбилет... Çӳлти шайри пуçлăхсем, хăйсен вăйсăрлăхне, хăйсен умри шăтăкне курса-сиссе час-часах çак хăрушă саламатпа усă курма тăрăшаççĕ. Маншăн пулсан — ик айкки те тăвайкки тесе пурăнакан, хăйсен хырăмĕшĕн çеç çунакан пуçлăхсем хуравлăха çухатнăшăн ман Карачăм мучи

мăшкăлне тӳсмелле-и, райком секретарĕнчен усал ят илтмелле-и?»

Çук, вăл вĕсемшĕн чуна вараламасть, ята ямасть, сехĕрленсе ӳкмест, пултарнă таран ĕçлет, ура хума та, патшалăха улталама та памасть.

Ултав юхăмĕ комсомол кӳллинче те, парти тинĕсĕнче те вăйланса пынине, унăн чуна çӳçентерекен сассине илтет Крутов, парти çул пуçĕсем çинчен кăна мар, Совет пуçлăхĕсем пирки те кулăшла халап-мыскара халăх чĕлхи çинче вăйланнине туять. Аслă пуçлăхсене курайманлăх юхăм та картран вĕçерĕнесшĕн. Çынна çăварлăхласа, айăпсăр пусмăрлани, мĕльюнĕ-мĕльюнĕпе вĕлерсе пĕтерни, чура вырăнне нушалантарни манăçа тухмасть пуль çав. Уншăн çул пуçсемех айăплă-çке. Вĕсен усал ячĕ Крутовсене те пырса тивет.

Пĕрлешсе халăх пулнă этем вăл хăйне пĕлмест, пуриншĕн те пуçлăхсенех ятлать. Пĕр Владимир Ленин çеç хальлĕхе çветтуй вырăнĕнче тăрса юлнă. Раççей империйĕ патша пусмăрĕнчен хăтăлнă хыççăн Ильич ертсе пыракан большевиксен партийĕ халăха социализм çулĕ çине кăларчĕ, хресчене çĕрлĕ турĕ. Иосиф Сталин вара вак хуçалăхсен аллинчи çав çĕре ирĕксĕрлесе пĕрлештернĕ хуçалăхсен çĕрĕ туса хучĕ, патшалăх аллине çавăрса илчĕ. Кил çумне хăварса панă вăтăр-хĕрĕх соткă çĕр çинче тертленекен хресчен хуçалăхĕ хаяр вăрçа та тӳссе ирттерчĕ. Çĕнтерӳ хыççăн çĕршывне те пуянлатрĕ. Никита Хрущев 1961 çулта ял çыннине ĕçкунĕ шучĕпе çулталăкра пĕр хут тӳлессине кашни уйăхра укçан тӳлемелли йĕркепе улăштарчĕ. Çав вăхăтрах Совет Союзĕнче 1980 çулччен коммунизм туса çитерме палăртнă. «Тепĕр вунă çултан сарă кун çĕршывĕн сар хĕвелĕ хăш енчен тухĕ-ши?» — тесе кулмасăрах ыйтрĕ унран Салакайăк Карачăмĕ. «Коммунизмра пурăнса

курмасăр Салакайăксем те вилесшĕн мар-çке, йĕркине çирĕп тытса пыратпăр», — ыйтăвĕ çине хурав иличченех хушса хучĕ вăл клуб пĕрени çинче çакăнса тăракан коммунизм тăваканăн мораль кодексĕ çинчи эрешмен картине çанă вĕçĕпе шăлнă май. Халăх парти юмахне шансах каймасть иккен. 1964 çулта Хрущевран влаçа туртса илнĕ Леонид Брежнев хăйĕн пилĕк çуллăх планне ăнăçлах пурнăçларĕ-ха, анчах коммунизм çути нихăш енчен те курăнмасть. Сарă хĕвеле пуш сăмах купи çеç мар, çӳллĕ тăвĕ картланăнах туйăнать Крутова паянхи пурнăç мыскарисене курнă вăхăтра.

Крутов хăйăр купаласа тунă аслă çулпа пырать. Айккинче, йывăçсем хушшипе, сукмак кукăрланкалать. Çав сукмакпа вăл малалла утрĕ. Йĕпе туратсене сĕртĕне-сĕртĕне плащпа шăлаварĕ исленсех кайрĕç. Юрать-ха çанталăкĕ ăшă тăрать, унсăрăн шăнса хытăркамалла. Хирĕç килекен те, майлă каякан та курăнмасть. Хăлхара — кĕрхи кайăксен юрри.

Чылай вăхăтран вăл пĕчĕк юхан шыв урлă каçса уçă уя тухрĕ. Тымар ялĕ айлăмран вăрттăн пăхнăн курăнать. Çĕлĕке хывса илес пек çĕр çумнелле йăпшăнакан тачка пĕлĕтсем мăрьесенчен йăсăрланакан çăра тĕтĕме хăйсемпе пĕрле хутăштарса таçта илсе каяççĕ. Çунăк çĕр улми, ăшаланă сухан, ĕнтнĕ какай шăрши таврана сарăлнă. Вăрман ялĕ кун каçмалăх апат пĕçерет.

Ял çумĕнченех ыраш калчи пуçланать те вăрман хĕрринчи сарă тумлă йывăçсемпе пĕрлешсе каять. Хуп-хуран сарăлса выртакан çĕр улми пуссипе чикĕленекенскер вăл çĕр пичĕ çине симĕс саплăк лартса янă пекех. Нӳрĕкпе калча парка çитĕннĕ, тĕллĕн-тĕллĕн кĕпçеленнĕ. Ялалла кĕрекен çул çав саплăк çинчи тарăн суран евĕр епресе выртать. Икĕ енĕпе те ăна кустăрма йĕрĕсем тĕрлесе тухнă, кĕтеслĕ чĕнтĕр çыхтарнă, тейĕн. Крутов та ирĕксĕрех çав йĕр тăрăхах пырать. Çула май вăл калча çăрса çӳрекен

ěнесене хǎваласа кěртес тенěччě, пулмарě, выльǎхсем унталла-кунталла тарса саланчěç.

Максим Максимович ял пуçне тытнǎ карта умěнче чарǎнчě. Униче пекки те пур ěнтě, анчах хулǎн хǎмаран çапса тунǎ алǎкě сулахаялла тайǎлнǎ та, кěрхи çǎра пылчǎкпа лапǎртаннǎскер, хытсах ларнǎ. Çавǎнпа выльǎха çул уçǎ. Акǎ ǎна хирěç хур кěтěвě çунат çапса тухрě, тӳрех калча çине тǎрǎнчě. Тěлěнмеллипех тěлěнчě çакǎнтан вǎл: ял тěтěм кǎларать, пурǎнать, чěрě, чӳречисенчен, авǎ, çын пуçěсем курǎнаççě. Вěсем урамалла тинкерсе пǎхаççě. Куçěсем çеç вěсен тайǎлнǎ униче алǎкне те, симěс калча çинче выляса çӳрекен ěнесене те, ирхи вǎйǎра ахǎракан хур кěтěвне те асǎрхаманçи пулаççě.

Пӳрт умěнче купаланса выртакан пěренесене, юман кěрешěсене, хǎмасене вара пралукпах питě типтерлě çыха-çыха хунǎ. Чǎн-чǎн вǎрман склачех. Хуçи, Тан Васли, чӳрече умěнче янахне икě аллипе тěкěлесе канлěн, мухтаннǎн ларать. Куçě унǎн çивěч, урамри çынна витěрех курать, пылчǎклǎ атǎпа пěрене тǎрǎх утса тухма пуçланǎ Крутова та, авǎ, шаккасах юнать. Максим Максимович ǎна-кǎна асǎрхаман, илтмен пек пулса иртсе кайрě. Иртнинчех тарǎхнǎччě вǎл ун çине. Хǎйшěн çеç пурǎнса пуякан çак çын çěр улми пухнǎ чухне те хапхине уçмарě. Пӳрт тавра йывǎç купаласа крепоç тунǎ та, никам та кирлě мар ǎна. Тěрлě майпа майлаштарса е вǎрласа хатěрленě халǎх тупри ěнтě вǎл. Ывǎлě, Славикě, ашшěне хывман пулас, кǎмǎлě енчен уçǎрах, Чулхулара чухне хǎнана чěнчě.

Кěçех, акǎ, çанталǎк сивěтет те, çул шǎнса хытать, вара Тымар тǎрǎх машина-трактор ǎмǎртмалла чупма пуçлать. Хир енче пурǎнакан халǎх ирěксěрех çав крепоçе тапǎнать. Вǎйпа мар, укçапа, тырǎпа е çěр улмипе çěнсе илет вǎл ǎна. Ун чухне хайхи хуçа хапхине яриех уçса

ярать. Вăрманпа пуйса пурăнакан çын колхозшăн мĕншĕн çунманнине Крутов лайăх ăнланать, эртеллĕ хуçалăх пурлăхĕ çине мĕншĕн «суккăр куçпа» пăхнине те аван туять.

## 5

Çырма хĕрринчи клуб çурчĕн пуçне çĕнĕрен тĕксе купаланă. Унта колхоз правленийĕпе ял Совет ĕçтăвкомĕ вырнаçнă. Клубĕн кĕтесри пĕрене пуçĕсем çĕрсе татăла-татăла ÿкнĕ, урам енчи стени, такамран хăранă евĕр, шалалла тайăлса кĕнĕ, пĕчĕк чÿречисене урлă-пирлĕ чалăштарнă. Алăкĕ тăрринче — хĕрлĕ хăмач. Ун çине пысăк сас паллисемпе кукăрткаласа çырнă: «КПСС XXIV съезчĕн йышăнăвĕсене палăртнă вăхăтчен пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурар!» Максим Максимович ăна вуласа тухнă май шухăшларĕ: «Вăя шелленĕ пек туйăнмасть те, канмалли кун та пылчăк çăрса, çумăр айĕнче исленсе çÿретпĕр те...» Çапах та çамкине хĕрлĕ хăмач çыхнă ватă клуб унран чалăш куçĕпе вăйсăррăн пăхса кулнăнах туйăнчĕ.

Самаях çÿллĕ картлашка тăрăх хăпарса вăл правление кĕчĕ. Коридорĕ сарлака, унта арçынсем чĕлĕм мăкăрлантарса юмах çапаççĕ. Тĕтĕмĕ, сарална плакатсем çумĕнче вырăн шыраса, хут çийĕн йăсăрланать. Председатель пÿлĕмĕ питĕрĕнчĕк. Уçă бухгалтеринчен шут шăрçи шаклатни, «Феликс» шутлав машинкин сасси илтĕнет. Шалта виçĕ хĕрарăм пуç çĕклемесĕрех тем шутлать. Крутов вĕсене сывлăх сунчĕ, çав вăхăтрах хăй те сисмерĕ, хаш! сывласа ячĕ. Пурте харăсах ĕçлеме пăрахнăскерсем йĕп-йĕпе пулнă Крутов çине хĕрхенсе те ыйтуллăн пăхрĕç.

— Мĕншĕн пит кулянатăр çак? — пуçне чалăштарса сăмах хушрĕ вĕсенчен пĕри, варринчи сĕтел хушшинче лараканни.

— Сергей Тимофеевич çуккă-çке... Председатель кирлĕччĕ те...

Малтан сăмах хушни ура çине тăчĕ, сĕтелсем хушшипе çаврăнса Крутов умне тухрĕ, ăна хăюллăн алă тăсса пачĕ:

— Люда Белова. Эсир райкомран вĕт? Хывăнăр, хывăнăр. Акă, кунта плащне çакăр, çĕлĕкне, — вашаватлăн кускаларĕ вăл ун тавра.

— Хывăнса тăма вăхăт çук. Каллех çĕр улми ыйтăвĕпе. Ял Совет хуçи вырăнне кам юлнă-ши?

— Секретарĕ пуль ĕнтĕ, — терĕ вăтам çулсенчи хĕрарăм. — Хуларан килнĕ йăмăкĕсемпе вăл уплюнкката каяс тетчĕ-ха. Председатель?.. Сергей Тимофейч пирĕн «наука хушнă пек çеç ĕçлеп» тет те тунти кун ирпе наряд парать те тепĕр тунти кунччен ан та кĕт ăна правленире. Таçта халь вăл, тен, килĕнче, тен, вăрманти утарта. Тан Васлисен ĕçкинчен таврăннă-ши? Люда, эс çамрăкки, шыраса пăх. Килнĕ çынна пĕччен уттарма аван мар.

Вĕсем калаçнă вăхăтра Люда тумланма та ĕлкĕрчĕ, алăк еннелле утрĕ. Крутов — ун хыççăн.

Пĕве хĕрне çитсен Люда кăтра çăра пĕлĕтсем хушшинчен ярăнса тухнă хĕвелпе пĕрле кулса ячĕ, унтан аллипе тĕллесе кăтартрĕ:

— Куратăр-и, Маминов сăмсахĕ, çӳлте, авă, килĕ.

Крутов унталла витĕртерех сăнаса пăхрĕ. Çырма юпленнĕ çĕрте, мăн пĕвене варринчен касса кĕнĕ тĕлте, сăмсах тăрринче, кермен пек пӳрт сарăлса ларать. Килçурчĕ тавра çӳллĕ хӳме тытнă, шыв хĕррипе — йĕплĕ пралук. Шалта сад ешерет.

Пăхма çывăх та Маминов керменĕ, анчах ун патне çитме тепĕр урампа çаврăнса чылай хăпармалла пулчĕ.

— Пĕлетĕр-и, тăршшĕ çак пӳртĕн вун пилĕк метр, урлăшĕ — вуннă. Иккĕшех пурăнаççĕ. Сергей Тимофейч арăмĕ çункав заводĕнче буфетчицăра ĕçлет. Хĕрĕ, Лина, хамăр ял ачинех, офицера, качча тухрĕ. Агронома вĕреннĕччĕ, колхозра ĕçлемерĕ. Çакăнта çăрăлать-и...

Такăш хулара пăркаланса çӳрет-ха халь. Ун пеккине юрататъ-çке вăл, — тăнлантарчĕ Люда Белова.

Тепри пулсан ĕнтĕ Маминов хĕрĕ ăçта пурăннине мухтансах каласа памалла та, анчах Крутов ăшĕнче çеç шухăшларĕ: «Акă мĕнле пуян кил-çуртра саркаланса лармаллаччĕ Линăпа пĕрлешнĕ пулсан? Колхоз хуçин кĕрӳшĕ пулаттăмччĕ вĕт. Юрать «турă çырни» урăх килте, Каргинсен виçĕ чӳречеллĕ вăтам çуртĕнче тупăнчĕ».

Вырăсла хапха алăкне тĕртсе пăхрĕç: шал енчен питĕрнĕ. Электрица шăнкăрав пăнчине асăрханă Крутов пӳрнипе ун çине пусрĕ. Кăшт вăхăт иртсен алăк шакăртатса уçăлчĕ те вĕсем умне Маминов тухса тăчĕ. Арпашăнса кайнă çӳç-пуçлă, çăмламас ӳтлĕ, хырăмне кĕçех çуратас хĕрарăм пек уснă, кĕске йĕм тăхăннă çар уран председательтен вăтаннипе Люда пуçне аякалла пăрчĕ. Кил хуçи Крутов еннелле хăлаçланчĕ:

— Авă камсем килнĕ! Снашăтă, хăнасем. Ырă сунсах кĕтетпĕр.

Максим Максимович пӳрте кĕме килĕшмерĕ.

— Кĕместĕрех апла, тиркетĕр пире, юрать. Апла пулсан, снашăтă, кайăр фермăна, шăтăкри çĕр улмие уçса кăларма эп тунти кунах наряд панă. Кĕçех хам та пыратăп, снашăтă.

Сысна ферми вăрман çумĕнче, тепĕр çырми пуçĕнче. Унта çитме уй урлă каçмалла. Уттарчĕç вĕсем васкасах. Люда пĕвĕпе Максим Максимович çӳллĕш, арçынларах таплаттарса пырать. Сасси уçăмлă, чĕлхи-çăварĕ кăмăллă, Улатăрти финанс техникумĕнчен вĕренсе тухнăскер расчет уйрăмĕн бухгалтерĕнче ĕçлет. Кăçал Чăваш ял хуçалăх институтне хăй тĕллĕн вĕренме кĕнĕ, агроном пуласшăн. Комсорг заместителĕ. Каччи пур, Алеша Каргин, Моисей Семенович хурăнташĕ. Амăшĕпе çеç пурăнать. Тракторпа ĕçлет. Çанталăк тăтăрхалансанах туй тума шутлаççĕ. Çакăн çинчен пĕлчĕ çул çинче Крутов.

— Тăвалла хăпарсанах йывăçран тунă виçĕ вите тухса тăчĕ. Шалта — сысна кĕмсĕртеттернĕ, çухăрашнă сасă. Çырма хĕрринчи купасем шыв айĕпе çӳрекен кимĕсем пекех курăнаççĕ. Пĕрин пусĕнче сортировка ларать. Этем чунĕ пуласчĕ хăть. Çывăхри хăрăк вĕçлĕ юман тăрринче çеç çăхан кранклатать.

— Ах, çав усал кайăка! — аллине унталла сулчĕ Люда. — Сасси тискер-çке, чуна çӳçентерет.

— Мĕн тăвăн, Люда, тискер саслă пулсан та, итлес пулать. Хăлхана уншăн хуплаймăн. Çут çанталăкра пĕр вăхăтрах усалли те, лайăххи те пулса кайнă. Тĕнче аталанăвĕнче вĕсем пурте кирлĕ, пурте усăллă. Çынсем çеç...

— Пурте пĕр пек мар. Çапла вĕт? - терĕ Люда.

Крутов хĕр куçĕсене тин лайăххăн асăрхарĕ. Кăн-кăвакскерсем, кăшт шаларах путса кĕнĕскерсем, Крутов çине йăлкăшса пăхаççĕ.

Максим Максимович малалла каларĕ:

— Пур çав хăш-пĕрисем, пурнăçра чăрмав кӳрекенсем. Чĕр чун тĕнчинчен çĕнелсе уйрăлнă тапхăрта этем чи малтанах ыттисен хуйхи-суйхи те уншăн хăйĕн хуйхи-суйхиех иккенне ăнланма пултарнă пулсан, унашкаллисем çавна манаççĕ.

— Пирĕн Сергей Тимофеевич этем тесех утать-ши çĕр çинче? Пaçăр пăхрăм та ун çине, упăте пекех туйăнса кайрĕ. Тьфу! Йĕрĕнес килет. Уйрăлса çитменех вăл чĕр-чун тĕнчинчен. Ĕçкĕ пĕтерет ăна.

— Яланах çапла ĕçет пулсан вăл ăс-тăнне çухатнă, хăйĕн телейне те, çынсенне те эрехпе çăтса янă. Унашкал çын хуйхă-суйхă мĕнне ăнланма, туйма пăрахать. Этем чĕр-чун тĕнчинчен нумай-нумай ĕмĕрсем хушши ăслăланса куçса пынă пулсан, маминовсем этемлĕх тĕнчинчен темиçе çултах ăссăрланса каялла куçаççĕ. Епле хăватлă шĕвек вăл эрех тени — этемлĕх аталанăвĕн чăрмавĕ. Маминовсем хăйсен

киревсёрлёхне пурнăç виçи туса хунă. Вёсем, влаçпа усă курса, халăха хăйсемшĕн ытларах ĕçлеттересшĕн. Каларăр-çке паçăр çав керменне те колхоз шучĕпе, халăх вăйĕпе тугарнă тесе. Çапла, Люда, маминовсем никамшăн та нимĕн чухлĕ тăрăшма шутламаççĕ. Вĕсемшĕн пулсан патшалăх планĕ те план мар. Халăх умĕнчи тивĕçе маннă çын вăл — путсĕр, харам пыр. Çын вăл хăйĕн тивĕçне кăшт та пулин мансан та унра путсĕрлĕх пуçланать. Маминов вара ăна тахçанах, йăлтах маннă. Халăх умĕнчи путсĕрлĕх халĕ унăн чи çӳллĕ шая çитнĕ, çав çăхан кранклатса ларакан хăрăк тăраллă юман таранах. Унашкал пулмасан вăл паян та çакăнта ташласа тăмалла, килĕнче мухмăрласа выртас çук.

— Ăçтан тупăнаççĕ çавнашкал çынсем, — терĕ Люда темле кăпшанка аттипе пылчăк ăшне туса. — Пурте хитре, ыр кăмăллă пулас пулсанччĕ...

— Унашкал пулман-çке, Люда. Чиперрипе усалли те, лайăххипе путсĕрри те пур çав çут тĕнчере. Анчах вĕсем чĕр-чун тĕнчинчи пек пурте усăллă мар. Пирĕн ĕç тĕллевĕ вара — япăххисенчен те усăллă çын тăвасси.

— Туршăн та, хĕвелшĕн те, Маминовран усăллă çын пулмасть.

— Председательтех ларсан, паллах, пулмасть. ĕçкинчен сывалсан, калăпăр, урăх ĕçе куççан, пулма пултарать. Ирĕксĕрех ĕçлеме тивет-çке вара, эрнелĕх наряд парса хăяккăн йăванса выртаймастăн ун чухне.

— Çапли çапла та, — хаш сывларĕ Люда. — Мана лайăх çынсемех килĕшеççĕ. Вĕсемпе пуплеме те, тавлашма та кăмăллă, юнашар тăма та туйăмлă.

Вĕсем пысăках мар йывăç çурт умĕнче чарăнчĕç. Люда алăка чĕриклеттерсе уçрĕ. Тулта пылчăк пулин те урайĕ тап-тасах. Хăмапа уйăрнă пӳлĕмре ветеринарсен кĕтесĕ, унтан тухакан эмел шăрши сăмсана тăвăрлантарать. Икĕ чӳрече хушшинче — чалăшнă хыççăр

пукан. Кӗтесре, такам кăшласа пӗтернӗ евӗр, кăмака вăтанса ларать. Ун хысӗнче, чӳрече çумӗнче, çывăрмалли вырăн. Хăма кравать тăрринче... Крутов хăй кусне хăй ӗненмерӗ — «Çывăракан Венера» — вăтам ӗмӗрсем хыççăнхи искусство чӗрӗлсе аталанма пуçланăаслă тапхăр никӗслевçи, Итали живописчӗ Джорджоне ӳкернӗ вилӗмсӗр ӳкерчӗк çакăнса тăрать. Ӳкерчӗкре этем кӗлетки таврари çут çанталăкпа уйрăлми пӗрлешсе кайнă тейӗн. Çутăпа тӗттӗм вырăнсен ылмашăвӗ çемçен те тап таса янкăр курăнать. Тӗнчере тата этемре пытанса пурăнакан асамлăх вăйӗ капланса çӗкленнӗн, çут çанталăкăн, çынсен пытарулăх сывлавӗ илтӗннӗнех туйăнать. Çывăракан Венера çине тӗсесе пăхнă май чӗп-чӗрӗ пурнăçа, этемӗн илемлӗхне çӗнӗрен те çӗнӗрен юратса ăмсанас килсе кайрӗ Максим Максимовичăн. Вăл вара шӳтлерех ыйтрӗ:

— Сирӗн кунта искусствăна юратакан çын та пур-иç?

Арçынпа юнашар çара ӳтлӗ хӗрарăм умӗнче тăнăран вăтанса-ши, Люда хӗп-хӗрлӗ пулса кайрӗ, вара пуçне чиксе, каларӗ:

— Искусствăна пӗлсе-ăнланса тетӗр пуль. Мăшкăлласа çакнă ăна. Ӳсӗр-какăрсем, авă, кӗтессине чӗрнӗ. Чăн-чăн искусство вăрттăнлăхне курса чуна хывма вӗренсе çитеймен-ха эпир, ял çăрăлчăкӗсем. Картинăсем çине çиелтен пăхса ахăрма çеç пӗлетпӗр. Маминов килет, авă.

Ферма пӳртне председатель кив пăравус пек хашлатса çитсе кӗчӗ, тайкаланса каллӗ-маллӗ утрӗ те пӳлӗм тăрăх, «шырас пулать, снашăтă, тупас пулать, снашăтă» тесе тухса кайрӗ.

Крутовсем те тухрӗç. Вăрман енчен, ферма шăршине çӗнтересле, усă сывлăш капланса килет. Йăсăрланакан тӗтре, тӗмсем айне канма выртас пек, çӗр çумӗпе йăванать. Юман тăрринче çаплах çăхан кранклатать. Маминов вăрман çумӗнчи пӗчӗк ял еннелле лăкăштатрӗ:

— Бригадир тени, Тан Васли, Авруйёнче çухалса пурăнать-çке. Аншарли юхтаракан нумай унта. Ку та шырама васкарĕ, — алă сулчĕ Белова.

Ăнман куншăн тарăхнă Крутов çĕр улми хывнă тăрăхла купа патĕнче чарăнчĕ, такам пăрахса хăварнă кĕреçене тытрĕ те ĕçлеме пикенчĕ. Люда та вите пуçĕнчен тепĕр кĕреçе тупса килсе ун çумĕнче çĕр чаврĕ. Пуç тăрринчен сĕртĕнсе иртекен пĕлĕтсем, çĕре перĕнме хăранă евĕр, явăнса-явăнса ял хыçнелле кайса çухалаççĕ. Çăра пĕлĕтсем çаралнипе усă курса тӳпери хĕвел ăшшăн пăхать, йăлкăшать-йăлкăшать те вĕсен кăмăлне уçать. Ĕç хĕрсе пырать. Тар пĕрчисем куçа кĕреççĕ, çăвара юхса анаççĕ. Хыçалта трактор кĕрлет, пылчăк çăрса, кĕмсĕртеттерсе çывхарать. Сасса илтсе иккĕшĕ те пĕр харăс пуçĕсене çĕклерĕç. Кабина алăкĕнчен вĕсем çине çĕлĕкне чалăш лартнă, фуфайкăпа галифе тăхăннă каччă шăл йĕрсе пăхать. Крутов ăна астурĕ, машина-трактор паркĕ çумĕнчен самосвал туртса кăларса панăскер-çке. Белова хăлхаран пăшăлтатрĕ: «Çакă ёнтĕ вăл ман Алеша Каргин».

Тракторист çăмăллăн çĕре сикрĕ, йăпăр-йăпăр куçĕпе Максим Максимовича хыпашларĕ, хĕр тăсса панă кĕреçене ирĕксĕррĕн алла илчĕ, мăкăр-мăкăр турĕ:

— Камсем, тетĕп, трактор кĕрсе кайсан та сисес çук. Кунашкалах юнашар тарласа ĕçлесен эсир...

Люда ăна тӳрех ярса илчĕ:

— Чакаланнă пултăр сана, Алеша, пустуй ухмахлантарам. Райком инструкторĕ вăл — Максим Максимович Крутов. Пирĕншĕн çунса çӳрет. Çынпа паллашма пĕлместĕн, тăм писмен...

— Санран малтан палланă эп ăна, — Крутов аллине хыттăн чăмăртарĕ каччă. — Мĕн йăслан? Паян виççĕмĕш хут килетĕп... Мана никам та пĕр улма тиесе паракан çук. Çиччас, хамăрах, ак...

Каргинпа Крутов кĕçех сортировкăна ĕçлеттерсе ячĕç, акă, купари çĕр улми транспортер тăрăх прицеппа юхма пуçларĕ. Фермăна килнĕ хĕрарăмсем те вĕсене пулăшма васкарĕç.

Вăрман тăрринчи чалăшнă хĕвеле каллех çăра пĕлĕтсем ыталарĕç. Вăхăт каç енне сулăнчĕ, тĕттĕмленчĕ. Прицеп тулсан эртелпе купа пуçне улăм витсе хучĕç.

Хыçалта шавлани илтĕнчĕ. Çаврăнса пăхрĕ те Крутов, хăлаçланса килекен арçынсене курчĕ. Пĕри — Маминов. Вăл юлташĕнчен таçта уйрăлса кайма хатĕрленнĕн сылтăмалла чалăшса утать, урлă урисене икĕ еннелле çапăнтарать. Теприне Максим Максимович палламасть, çапах та Люда каланă Тан Ваçли пекех туйăнать.

— Акă, çитрĕç пирĕн Тансем, — тесе сенĕкĕсене тăратрĕç те сысна пăхакансем, тарăхса витенелле уттарчĕç.

— Çерки теп сана, Çерки, — мăкăлтатать Тан Ваçлийĕ. — Сысна çăварĕнчи уммана туртса илеççĕ вĕт. Паçăр чăтрăм. Хăваласах ятăм хĕрарăмсене, пуртти уçтармарăм. Пăх-ха эс: халь уçнă, тиенĕ. Кам хушнипе?!

Маминовĕ мăшлатать çеç. Тан Ваçли пĕрмай тăнкăлтатать:

— Вĕт-шакăр умма çеç юлать ман валли. На, çитер, тăрантар сыснусене, Ваçли, аш туса пар патшалăха... Çапла-и? Эх, Çерки, Çерки, тан та çав епĕр. Эс çавах ухмах. Тулман план — ĕçĕ пĕтнĕ. Ыттисем тултараççĕ. Тăктар уммана, тăктар!

Маминовĕ утă еккипе пĕрмай «планлатать те снашăтăлатать», лăкăртăккипе аптăрать. Акă Тан Ваçли Крутовпа Люда умне сарăлса тăчĕ, сарăхнă сайра шăлĕсене йĕрчĕ, аллине кĕреçе çаврăрса тытса çухăрчĕ:

— Марш! Пĕлетĕр-и кунта кам хуçине?!

Прицеп çаклашкине вĕçертме хăтланакан Тан Ваçлине Алеша кула-кулах çухаран çулса илчĕ те пĕрре лайăх силлерĕ, унтан çĕклесе купа тăрнех ывăтса ячĕ.

Маминовĕ, хăранипе-ши е ури шунипе, шывлă ланкашкана каялла кайса ларчĕ. Хырăмпа шуса аннă Тан Ваçли тути хĕррисене чĕтретсе нăйкăшрĕ:

— Ан тивĕрех мана урăх. Тан эпĕр, пурте тан, пурте пĕр тăван, пĕр вартан. Пĕрле пурăнар, тан пурнар. Пӳрте айтăр, пӳрте...

Пӳрте кĕрсен те ĕç пирки калаçасси пулмарĕ. Маминов кăмака хыçĕнчи сак çине кĕмсĕртеттерсе кĕрсе выртрĕ. Тан Ваçли пĕрре Люда енне, тепре чӳрече çумĕнчи хитре ӳкерчĕк çине пăхса ихĕрчĕ те «ман хамăн ĕç мăй таран» тесе алăк хыçĕнче çухалчĕ.

Тĕксĕм лампа çутинче пӳрт ăш-чикки пушшех кичеммĕн курăнчĕ. Крутов икĕ ӳкерчĕке пĕр-пĕринпе танлаштарчĕ. Хăшĕ вĕсенчен илемлĕрех-ха, чĕрĕрех, хăй патне ытларах туртать, ăшра тĕлĕнмелле ырă туйăм çуратма пултарать? Паллах, «Çывăракан Венера». Çуррине чĕрсе антарнă пулин те çак ӳкерчĕк этемлĕх юратăвне, илемлĕхне, вут-хĕлхемне, çын сăнарĕн чуна уçакан çутине сапалать. Ун çумĕнче урисемпе тапкаланса, сăмсипе хăрлаттарса, тути хĕрринчен сĕлеке юхтарса выртакан чĕрĕ çын этемлĕх сăнарне варалать. Пĕтĕм илемлĕх тĕнчи те уншăн ĕçкĕ-çикĕре, эрех кĕленчинче, сăра пичкинче.

Людăпа вăл пӳртрен тухрĕ. Маминов сăмси шăхăртни тата витери сыснасем çухăрашни хăлхаран кайма пĕлмерĕ. Ытла та пĕрешкел илтĕнеççĕ-çке сассисем, пĕр оркестри пек.

## 6

Крутов Карачăм мучи мăнукĕсем патне çитнĕ çĕре кĕр каçĕ тавралăха хура чаршавпа витрĕ. Чӳречесенчен сăрхăнса тухакан çутăпа пĕли-пĕлми сукмак тăрăх шукаласа пынипе урасем те ывăнчĕç. Пӳрт çумĕнчи шăтăка тепĕр хут кĕрсе ларас мар тесе вăл хапха çумнерех

пăрăнчĕ, хуллен картлашка тăрăх хăпарса пăлтăр алăкĕнчен шаккарĕ. Ăна Карачăм мучи уçса кĕртрĕ.

— Арăмăн тăванĕсем те пур кунта, çапах сирĕн патах килес терĕм, — ырă марланчĕ Крутов.

Карачăм мучи ăна ятламах пикенчĕ:

— Кĕмесĕр кайнă пулсан-и, ыллăм, çилленеттĕмĕр вĕт. Кĕр, кĕр, ирт малалла.

Ăшă пӳртри ăшă кăмăлпа Крутовăн чунĕ йăлтах уçăлчĕ. Карачăм мучи те ăна малтанхи пек йĕплемерĕ, сĕтел хушшине кĕртсе лартса апат çитерчĕ, хăй вĕçĕмсĕр калаçрĕ:

— Итле-ха, ыллăм, те ватăлнă май, те кĕнеке нумай вуланăран, пуç темле çӳлелле хăпарса кайнăн, пысăкланнăн туйăнать. Пĕччен чухне тухатăп та кил картине, пăхатăп пуçа каçăртса, тăратăп сухала пĕлĕт татăкĕнчен çаклатса, сăнатăп асамлă тĕнче карттинне, куç шывланиччченех — пурпĕрех карчăк çăлтăрне тупаймастăп. Пурте çунаççĕ, йăлкăшаççĕ, пурте ман çине пăхаççĕ, мана кăчăк туртаççĕ пек.

Карачăм мучи Макçăм куçĕнчен пăха-пăха илет те, вăл кăмăллăн итленипе, сăмахне малалла тăсать:

— Эс, ыллăм, мана йӳтенĕ тесе ан шутла. Тăн кĕлечĕ пушанман-ха. Чун уçăлчĕ-çке сана курнипе.

Анюта ачи пӳлĕмрен кăштăртатса тухрĕ те мăн кукашшĕн чĕрçийĕ çине хăпарса ларчĕ. Мăнукне пуçран шăла-шăла вăл калавне шалалла илсе кĕчĕ:

— Çав, хамăн карчăк çăлтăрĕпех супатăп-ха. Темшĕн вăл паян чĕлхе çинчен кайма пĕлмест. Аса илет пульши леш тĕнчере? Вăт, ыллăм, хальхи çамрăксенни пек, тӳпере çăлтăр суйласа тăма вăхăт пулман пирĕн. Кайса çураçнă та хĕр, лартса килнĕ ăна, пурăннă унпа, ача-пăча çуратса ӳстернĕ, юрату мĕнне те хайхи кинори пек ывăç тупанĕ çине хурса пăхайман, çаплах ĕмĕр ирттернĕ. Пурпĕрех ялта ята яман, паянхи ар çурисем пек çапăçса-уйрăлса халăха тĕлĕнтермен. Карчăк ман,

Анукăм, япăх марччĕ. Йывăр тăпри çăмăл пултăр-ха унăн. Хам шутпа, юратнах вăл мана. Хăй чĕрĕ чух ыйтса та пĕлеймен те ĕнтĕ ун çинчен... Вăн, халь, анчахрах юрларĕ-ха ративу. Мĕнлеччĕ-ха?

Асра юлнă сăмахсене Максим Максимович çемĕпе юрласа пачĕ: «Тĕнче уçлăхне вĕçĕттĕм, çĕр тĕпне анса кайăттăм, курăнми пулса пăхăттăм, чĕрӳне кĕрсе ларăттăм — юрату çинчен калăттăм». Çаплаччĕ вĕт?

— Çапла, çапла, Макçăм Макçăмч, — пуканне çывăхарах сиктерчĕ Карачăм мучи. — Халь, вăн, епле янрать юрату тăмĕ? Тăм-тăм! минретет пуçа. Тăм пуçлă çын пухнă пуль вăл сăмах купине? Анса кай-ха унта, çĕр тĕпне, курăнми пул, савни чĕрине кĕрсе ларăн-и, юрату çинчен пакăлтатăн-и? Вăн, карчăк ман, çĕре кĕчĕ те — пĕтрĕ. Çулталăк уш. Юрату пирки те калаймасть, хăйĕн çăлтăрĕ хăшне те кăтартаймасть. Вăт, халь ман хамăн шырас пать ăна. Ха, ăçта шыраттарасшăн юратăва ку пуэтсем. Шупашкар алăкĕнчен кăларса яраççĕ тата унашкал сăвва-юрра: çамрăксене тĕнче уçлăхĕнчен те, çĕр тĕпĕнчен те пăхса юратма вĕрентеççĕ, çĕр çинчен чĕрĕ çынна уйăрса яраççĕ. Халь ман карчăк çакăнта ларас пулсан-и? Çав юрра эп ăна юрласа парсан-и? Ик енчен чанклаттарса ярĕ те çавăрттарса хурĕ: «Ухмах эс, вил ухмах!» Юрату вăл, Макçăм Макçăмч, юрланинче-и? Хитре сăмахран юмах явнинче-и? Юрату вăл — пурнăçра, кăмăлунта, ăсунта, хăватунта! Ухмах çын нихçан та юратаймасть, ухмаха хăйне те никам та юратмасть.

Карачăм мучи ыйхăпа вăрçса ларакан ачана пуçĕнчен шăлать те шăлать, хăйне тăнласа итлекен Макçăма калать те калать:

— Карчăка эп хам та юратнă. Маншăн вăл чунне те пама хатĕрччĕ. Лайăх арăм тĕлне пулнăшăн савăннă. Таврăнатпăр пĕррехинче клубран. Темле спектакль

курнăччĕ, ятне-шывне маннă. Уйăх аннăччĕ. Тӳпе йăнкăр-йăнкăр таса, пĕр пĕлĕт татки курăнмасть. Çăлтăрĕсем... пытанмалла вылянă пекех чупаççĕ. Спектакльте çăлтăр шыракан хĕре аса илсе карчăка пас пӳрнепе янахран хуллен çӳлелле тĕкетĕп: «Пăх-ха çавăнталла, Анукăм, кăтарт-ха тытса хăвăн çăлтăрна?» — тетĕп. Карчăк ихĕре-ихĕрех мана сухалран ярса илчĕ те хăлхаран пăшăлтатрĕ: «Вă-ăн унталла, çăлтăр пăтти çинелле лайăхрах пăх, çавăнти чи çутти, чи хитри — ман çăлтăр», — терĕ. Куççуль тухичченех сăнарăм, анчах такăшĕ, пĕлеймерĕм, никăшин çине те карчăк ятне çырман. Унччен те пулмарĕ, шанк! тутарчĕ вăл мана янахран. Пуçа тин тăн пырса кĕчĕ: ара, юнашарах-çке çăлтăрăм, пĕртен-пĕр çăлтăрăм!

Крутов куланçи пулчĕ.

— Çапла, Макçăм Макçăмч, кашни çыннăн хăйĕн çăлтăрĕ пур. Шухăшлатăп-шухăшлатăп та, выврăт тăватăп: тен, куçне уçсанах ман карчăк Шурăм пуç çăлтăрне курнă, кам пĕлет? Тен, вăл халĕ шăпах унта пуль? Кайса курса килмеллех çавăнта. Сывлăх та аптрамасть-ха. Унччен пурăнмаллах. Унсăрăн эпир çĕр çынни те мар. Çын вăл çĕр çинче çеç пурăнать, çĕр çинче çеç çуратать хăйĕн çăлтăрне, çĕр çинче çеç çутатать...

Мучи шухăшне Крутов ăнланчĕ. Вăл ăна, çăлтăрпа карчăкĕ пирки сăмахланă май, çыннăн çĕр çинчи вырăнĕ, тивĕçĕ çинчен аса илтерет вĕт. Вара вăл унран ыйтрĕ:

— Эсир, Герасим Филиппович, çын вăл хăй çĕр çинчи çăлтăр, тесшĕнччĕ пулас?

Мучи, çакна илтсен, шĕвĕр пӳрнине ялт! çĕклерĕ:

— Вăт, ыллăм, кăна эс тĕп-тĕрĕс ăнланнă. А эп, ват супнă, ларап карчăкпа супса-çĕтсе. Чăнах, эс те çăлтăр, мăнук та, эп те... Çутатасса çеç пĕр пек çутатаймастпăр, тӳпери çăлтăрсем манерлех. Кашниех турă панă çутăпа йăлкăшатпăр.

— Çăлтăрсем хушшинче те сӳннисем пур, халăхра та пур çут çанталăк панă çутта вăхăтсăр сӳнтерекеннисем. Маминовах илĕпĕр. Çунмасть вăл. Сӳннĕ унăн çулăмĕ, хытнă чунĕ, — терĕ Крутов.

Карачăм мучи каллех унпа хирĕç майланса ларчĕ, сухалне шăла-шăла илнĕ май, куçне кăшт хĕсерех, ыйтрĕ:

— Уйăх та сӳннĕ теççĕ те, мĕншĕн çутатать тата?

— Уйăх вăл хĕвел çути ӳкнипе çеç çутатать. Çавăнпа çути тĕксĕм ун, ялкăшмасть. Сергей Тимофейчăн та ăшри çутти çук, ытти çынсен çути ӳкнипе çеç мĕлтлетет. Çын панă çутта вăл халăх умне кирлĕ пек сапалаймасть. Прожектор отражателĕ тутăхнă ун.

— Утрашателĕ çине сăмакун пăраки хытса ларнă пуль. Этем çутине каяш эрехпе сапса сӳнтернĕ пуль, — лăх-лăх кулчĕ мучи.

Аслашшĕ сассипе ача куçĕсене чăл уçрĕ, урайне шуса анса пӳлĕмелле тăплаттарчĕ.

— Çаплах-ха вăл эсир калани, — терĕ Крутов. — Çут çанталăк Маминова та çуралнă чух тĕнче çути парнеленĕ. Авă, мăнуку та епле хастар чупать, йăлкăшать? Маминов та ача чух çаплах пулнă ĕнтĕ. Хăйĕн çутине вăл кайран сӳнтернĕ. Çын, эппин, хамăр каланă пекех, çĕр çинчи çăлтăр, тӳпери мар. Тӳпери, сӳнчĕ пулсан, ăна урăх никам та йăлкăшакан тăваймасть, çут çанталăк саккунне улăштараймасть. Этем, Çĕр çинчи çăлтăр, сӳнсен те, хамăрпа пĕрлех, юнашарах. Чĕртме пулать вĕт ун ăшĕнчи вут-çулăма?

— Чĕртме пулать пуль те, ыллăм, çапах шывпа сӳнтернĕ вут пуççи те тăруках чĕрĕлесшĕн мар çав, чĕртсен те çулăмпах çунмасть.

— Кăварлантăр хăть. Çулăмсăр та пулин йăлкăштăр. Усси пурпĕрех мĕн чухлĕ те пулин пур.

— Чĕрĕлесшĕнех мар çав ун пекки, ыллăм. Çын чĕртнĕ çулăма та вĕрсе сӳнтерет вăл, Маминов йышши. Юрать эсир хăвăр чĕртетĕр те çулăмне...

— Чěртетěр те... хăвăр алăрах сӳнтеретěр, тесшěнччě пуль, Герасим Филиппович? — мучи куçěнчен пăхрě Крутов.

— Пулě-пулě, ун пек те калас терěм пуль, анчах сан пирки мар. Пурте санашкал чěртсен çын ăшěнчи çулăма?.. Муркаевчě пуль хальхи секретарь? Сирěн чи асли. Хăв каларăшле, чăнах та астарнă-астарнă вăл тусне, Маминова, хăех сӳнтерме пулăшнă ун çулăмне. Ыйтман пуль çав вăл унран çирěпрех, чěрине çěнěлле таптарассишěн тăрăшманах. Халăхпа ěçлеме тăнлă пуçпа çирěп алă кирлě çав... Курнă-çке хам пурнăçра тем те.

— Эсир хăвăр пěр ěмěр майлах çав, — йăпăрт ыталаса хавхалантарчě юмахçа итлекенě.

Пěр вăхăт сывлăш çавăрса ячě те мучи малалла kаларě:

— Тахçанхи çын-çке, тем те аса килет мана. Тěрěсех тупнă чăваш халăхě те Раççей—Çăлтăра. Ăшăнтăмăр, вăй илтěмěр ун çутипе. Халăх чěри те сӳнми çутăпа ялкăшма тытăнчě. Ун çине юн тěсě те çапрě. Ăна мěн пур халăхпа шăла-шăла тасатрăмăр, пурпěр çутине сиплерěмěр. Тěнчере хам вырăнтах-ши эп, теттěмччě çав çутăра тăнă май. Чěре çулăмпах ялкăшнă та, çěнě пурнăç çутине хытăрах çутатма хам та хутшăннăн туйăнатчě. Вара хама хам евитлеттěм: «Карачăм, тěрěс çул çинчех эс, çěр çинче хăв вырăнунтах, ěçле те ěçле, çемйӳне тăрантар, çěршыва вăй кěрт. Мěн кирлě сана урăх?» Выçăллă пулнă-и эпěр, тутăллă-и, çěтěк тумланнă-и, капăр-и... Пытармалли те, сăрласа кăтармалли те çук вăл вăхăта. Кăлхус пуçланнă çулсенчеччě...

Калама пат чарăнчě те мучи Макçăма аллинчен тытрě.

— Сисрěн-и? — куçне хěссе ыйтрě вăл, — Юн тымарě кăлтлатма чарăнчě.

— Çук, сисмерěм-çке. Чěрӳ кăртти-кăртти тапать, — тěлěнчě Крутов.

Алăк патне кайса килчĕ те мучи Макçăм çумне кĕрсе ларчĕ, вара халап хултăрчне малалла çавăрттарчĕ:

— Эс мана ăнланмарăн пулас, ыллăм. Итле. Пĕр мыскара аса килсенех ман чĕре кив мутур пек чăхлатма пуçлать. Çапла, колхозсем чăмăртаннă саманари вăтăрмĕш çулсемччĕ. Шашка Пашки пурччĕ пирĕн ялта. Ашшĕ ĕлĕк кăвалеринче пулнă та, хушаматне те çавăнпа Шашкă ятлă хунă. Пашки те ашшĕ çулĕпех кайнă, Путеннăй Çеменĕ патĕнче хĕçпе шуррисене туранă. Хаярччĕ ĕнтĕ, куçĕ-пуçĕпе те çунтаратчĕ, аллиурипе те тулласа тăкма пултаратчĕ, чĕлхипе те... касатчĕ, çиетчĕ чĕрĕллех, лайăх çынсене марччĕ, паллах, контрăна. Кăлхуса çырăнтăмăр çапла. Ăна пăртçетатель турăмăр. Хайхи-майхи пирĕн Шашка Пашки, ял лашисене пĕр çĕре пуçтарсан пурне те краштăн вăрçи керойĕсен хушамачĕпе ят парса тухрĕ. Хăма татăкки çине ячĕсене хăех çырчĕ те витере кашни урхамах умне çапса хучĕ. Хăй çӳрекен тур ăйăра Путеннăй ятне панăччĕ. «Сталин» та тулхăрса кукалесе тăратчĕ. Кăлхусне Чапаев ячĕпе хуртарчĕ.

Итленĕ май Максим Максимовичăн тути хĕрринче кулă палли сисĕнчĕ.

— Эс кулан, ыллăм, — сухалне чĕтретрĕ мучи. — Ун чухне ĕнтĕ кăлхусĕ те виççĕ арканса виççĕ пуçтарăнчĕ... Малтан лашапа кĕнĕччĕ, ăна аçа çапса вĕлерчĕ. Пĕрлешӳллĕ хуçалăх саланчĕ те, çынсем килĕсене ут утланса таврăнчĕç, ман çеç карчăк аллинчен аран-аран туртса илнĕ турчка çине утланма тиврĕ. Иккĕмĕш хутĕнче вăл килĕшмерĕ, кăлхуса пĕчченех кĕтĕм. Ним те парасшăн мар вĕт мур хĕрарăмĕ. Вăрттăн та пулин мишука автанпа чăх чиксе утрăм, тыттартăм Шашка Пашкине. Пĕр сăмах та чĕнмерĕ, куçĕпе çисе ярасла пăхрĕ те илсе юлчĕ. Каллех саланчĕ пирĕн кăмуна. Хăваларăм-хăваларăм автанпа чăхха, тытасси пулмарĕ.

Киле пуш алăпах çитрĕм. Çуркуннепе виççĕмĕш хут пуçтарăнтăмăр. Çур ял ытла. Карчăка çураçтаркаларăм та, ĕнене ик енчен çавăтсах кайса патăмăр. Тур калашле виççĕ тенĕ пекех пулчĕ. Тин çирĕпленчĕ кăлхус. Ферма турăмăр, вите валли эпĕ те кĕлет хĕрхенмерĕм. Унта хамăр ĕнене хупаттăмăрччĕ те, чун савăнатчĕ. Пĕрлешӳллĕ эртел вăйланчĕ-вăйланчех.

Тыр-пул пухса кĕртнĕ хыççăн вăрман касма кайрăмăр. Мана лӳппертерех кутăн «Сталина» çирĕплетсе панăччĕ. Те ĕшенчĕ эрне хушшинче йывăç кăларса, те пăлахая печĕ лашам, таврăннă чухне Вăрманкас варринче кĕрттĕр те ларттăрĕ урапана темле ланкашкана. Мĕн тăвас? Пушăпа çурăм тăрăх тăсса та пăхатăп — каялла тапать. Илĕртсе утăпа тутинчен тĕкетĕп — тулхăрса шăлĕсене кăтартать. Ун пек чух, хăвах пĕлен, чĕлхе картĕнчен вĕçерĕнсе каять-çке. Тăратăп çухăрса ухмахла. Ман «керой» вырăнтан та тапранмасть. Асăрхарăм, урам леш енчен пĕри мана кăчăк туртать. Ăна-кăна ăнкарса илейменскер эп «Мĕн мăшкăллан, кил кунта, пулăш урапана кăларма» тесе чĕнетĕп хайхискерне. Чăнах та çын пăркаланса пычĕ, хурмă тăхăннă хăй. Сăмах та чĕнмерĕ, хулран çатăрласа илчĕ те сĕтĕрсех çавăтса кĕрсе кайрĕ темле тăсмак çурта. Тин ăнлантăм: милици пулнă иккен. «Начальник юлташ, çак палламан гражданин граждан вăрçи геройне, юратнă Сталин аттене усал сăмахсемпе вăрçса тăрать», — евитлерĕ вăл тарăхуллăн. «Ăна мар эп, лашана ятлап!» тесе ура çине сиксе тăратăп. Мана милици лап пусарса лартать. Тавлашма параççĕ-и сана? Хупрĕç те лартрĕç сив пӳлĕме.

Вăт, ыллăм, çавăн чухне ман чĕре чутах тапма чарăнатчĕ. Шашка Пашкиех ман пуçа çиет ĕнтĕ тесе шухăшласа ирччен чĕрĕм куç хупмарăм. Тепĕр кунне, каçалапа, хăех персе çитрĕ, çĕмĕрĕлет, ухмах, милиципе...

Усси пулмарӗ, кӑлармарӗҫ мана. Шашка Пашки вара райкома кайнӑ. Пӗлетӗн-и, мана ҫӑлма кам пычӗ? Райком секретарӗ Михаил Йӑванч хӑй. Кулать вӑл манран начальник пӳлӗмӗнче. «Ҫакӑ-и-ха вӑл пирӗн геройсене, ҫул пуҫа усал сӑмахсемпе вӑрҫаканни, партие хирӗҫле сӑтӑрла ӗҫ тӑваканни?» — тет. Ман куҫ умӗнчех милици начальникне тӑн пачӗ, пирӗн колхозра мӗнле «керойсем» пуррине ӑнлантарчӗ. Тинех кӑларса ячӗҫ мана. Хамӑн «ҫул пуҫ» та урӑх чӑхӑмламарӗ, киле аванах ҫитрӗм. Лаша ячӗсене Шашка Пашки ҫак мыскара хыҫҫӑн улӑштарчӗ.

Карачӑм мучи витререн шыв кайса ӗҫрӗ, йӗпеннӗ сухалне аллипе шӑлса якатрӗ, чӳречерен пӑхса илчӗ те сӑмахне тӑсрӗ:

— Вӑт вӑл ҫын та ҫынччӗ, ҫав секретарь, мана, палламан хресчене, хута кӗме ятарласа райкомран пынӑскер. Чӑннипех ҫыншӑн тӑрӑшакан, ҫын хуйхине ӑнланакан пуҫлӑхчӗ. Ӑна кайран та темиҫе хут курнӑ. Хӗрарӑмсемпе пӗррехинче пӗверен сӳс кӑларатпӑр. Пӑр шӑна пуҫланӑччӗ. Мана шала, сулӑ ҫине кӗртсе ячӗҫ. эпӗ кантӑр ҫурӑмӗсене пайӑн-пайӑн ҫыхатӑп та, вӗрен вӗҫне персе паратӑп, вӗсем туртса кӑлараҫҫӗ. Сулӑ юлашкипе хам ларса тухаттӑмччӗ. Тем аташса кайрӗҫ кӗртсем, карт! туртрӗҫ те вӗрене, лак! лартӑм хыҫалалла кайса шыва. Сулӑ ҫыран хӗрнелле юхать, эп пӑрлӑ шывра шампӑлтататӑп. Вӑрҫӑра шӑнтса пӑснӑ урана шӑнӑр туртрӗ те лартрӗ. Ҫут тӗнчене куҫпа курсах путатӑп вӗт, сухал ҫеҫ ярӑнать умра. Хӗрарӑмсем тин сехӗрленсе ӳкрӗҫ, пакур тӑсса пачӗҫ — avри ҫитмест. Юрать-ха турри хампа пӗрлех, ҫав вӑхӑтра пирӗн паталла Шашка Пашкипе хайхи Михаил Йӑванч ҫывхарнӑ. Иккӗшӗ те харӑс шыва сикрӗҫ те туртса кӑларчӗҫ мана. Каллех вилӗмрен ҫӑлчӗ ҫав ҫын. Тепрехинче, Вӑрманкас пасарне ҫӑпата сутма кайсан, чайнӑйне яшка ҫиме кӗтӗм.

Пăхатăп — черетре Михаил Йăванч тăра парать. Палласа илчĕ те хăй умне туртсах тăратрĕ, апат илсе пачĕ, çинĕ хушăра кăлхус нушисем çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе ыйтса пĕлчĕ. Чайнăйра та чăн-чăн этем сувĕçлĕ çын пулчĕ вăл, халăхпа пĕрле... Хальхисем мĕнлерех-ши?

— Хальхисем, Карачăм мучи... — кăшт тăхтаса шухăшларĕ пулмалла та Крутов, çамкине ывăç тупанĕпе шăлкаласа илчĕ. — Хальхисем... Пысăк пуçлăхсен вăрттăнлăхне уçса парса, сутас-и вĕсене?

— Хăвăн мăнтăр кăмăлу ĕнтĕ, — чеен кулса ячĕ мучи. — Хăв вĕсен кумпанинче тăратăн пулсан, сутмăн, хăв...

— Итлĕр, апла. Район тăрăх ĕçпе çӳренĕ май мĕн кăна курмастăн пуль. Хуçалăхпа паллашнă, çынсемпе тĕл пулса калаçнă хыççăн кашни колхоз председателĕх апата чĕнет, килне мар, ăçта та пулин вăрттăн уçнă «ресторана». Сĕтел çинче така шӳрпи те, чăх тукмакки те, сар пулли те тулли. Эрехĕ хăшин ещĕкĕ-ещĕкĕпех ларать: хăналаççĕ те хăналаççĕ. Унашкал йăлана хăнăхманскер эпĕ малтанах аптăраса ӳкрĕм: çиме те, ĕçме те именетĕп. «Ыттисенчен уйрăм çын-им эс? Тупăннă идеал» тесе Мургаев хăтăрса тăкнă хыççăн эпĕ те юнашар кĕрсе лартăм. Апатне çирĕм, эрехне ĕçмерĕм. «Таса юласшăн-ха пирĕн инстркутор, кайран, мĕн те пулин сиксе тухас пулсан «эп хутшăнман, нимĕн те пĕлместĕп» тесшĕн. Страхлать хăйне. Юрать, юрать, типĕлле лар. Эс ĕçмесен те ĕçекен пур, эпир хăнăхнă. Эпир ĕçкине те ĕçетпĕр, ĕçне те тăватпăр», — лĕхлетсе кула-кулах Мургаев стакана пушатрĕ те пушатрĕ. Эпĕ алла кăкăр çумне тытсах ӳкĕтлетĕп колхоз хуçине: «Каçарăр мана, ĕç вăхăтĕнче ĕçме хăнăхман. Мĕн праçникĕ паян?» Председатель савăнăçне пытармарĕ: «Мĕнле праçник мар тата, пĕрремĕш секретарь килнĕ те, ма савăнас мар». «Кашни кун килсен, кашнинчех çапла кĕтсе илетĕр-и», — тĕлĕнтĕм эпĕ. Вăл вăтанмасăрах хуравларĕ: «Пуçлăхсене

типĕлле кăларса яни пулман-ха. Колхозăн çитет, ан хăрăр. Çийĕр, ĕçĕр, çиччас купăс илме ярап».

— Ташласах ĕçрĕр-и вара «хăнара?»

— Юрласа-ташласах. Председатель ыталашсах ăсатса ячĕ. Ялтан тухас умĕн райком шоферĕ Ваçли Михалч хыçалалла çаврăнса тĕллесе кăтартрĕ: «Кайран кучченеçĕсене илме ан манăр». «Мĕнле кучченеç?» — ыйтрăм хутпа чĕркенĕ тĕркесене асăрхаса. «Чăх-автан, — терĕ вăл çаврăнса пăхмасăрах. — Пĕри Яков Сидорович валли, тепри — сирĕн». Тин ăнлантăм: пире çийĕнчен тата кучченеç хурса панă иккен. Питĕ лайăх вĕренсе çитнĕ-çке, вăрттăн кĕртсе хураççĕ те машинăна, ыталаса ăсатаççĕ: «Пирĕн те хырăм тутă, сирĕн те тутă пултăр».

Эпĕ машинăна чарма ыйтрăм. Ваçли Михалч пĕрремĕш секретарь енне пăхса илчĕ те, лешĕ пуçĕпе сĕлтнине курса урине тормоз çине пусрĕ. «Е каялла кайса паратпăр, е...» — пĕр тĕркине çĕклерĕм те... «Е кăларса перетпĕр» тесе каласшăн-и?» — лăх-лăх кулчĕ ӳсĕр Мургаев. Çĕре сиксе антăм та, униче çумĕнчи икĕ ачана куртăм, кăчăк туртса вĕсене хам пата чĕнтĕм. Пылчăкпа вараланса пĕтнĕскерсем, çĕтĕк шăлаварĕсене турткаласа хăюсăррăн пырса тăчĕç. «Мейĕр, ачасем, çийĕр, пĕçернĕ чăх, хăвăр председателе тав тăвăр» тесе йывăр çыхха ирĕксĕрлесех тыттартăм кусене. Хирĕçлекелесех илчĕç те чăх-автансене ачасем, «сăпаççипă» тесех уçса ячĕç алăка. Чалăшнă кивĕ пӳрт патнелле чупакан шĕвĕрккесем çине хыçалти чӳрече витĕр хурланса пăхса илтĕм. «Чухăн пурăнаççĕ, вĕсем çеç мар, ялĕпех, районĕпех, республикипех... колхозĕ те ура сырайманскер, эпир тата вĕсенне вăрлатпăр», — шухăшларăм эпĕ. Яков Сидорович чĕнмерĕ, чăхсене çумарах куçарса хучĕ те юрă ĕнĕрлеме пуçларĕ.

Мана çул тăршшĕпех пĕр шухăш канăç памарĕ. Мургаев колхоз председателĕсемпе, директорсемпе, начальниксемпе тус-тăванланса кайни район аталанăвне

чарса тăракан сăлтавсенчен пĕри. Райком секретарĕпе ĕçкĕ-çикĕре, канура ытакланса юрланă, ура хуçса ташланă хыççăн вĕсем, паллах, хăрами пулаççĕ, ытлашши çывăхланаççĕ. Унран вĕренсе, хăйсен ял-поселокĕнче хуçалла тытма пуçлаççĕ. Çавăнпах-и, тен, Мургаев канашлусенче вĕсенчен пĕчĕк ачаран ыйтнă пек йăлăнса ларать: «Ӳкĕтлетĕп сире, тархасшăн тултарăр плансене, республика умĕнче намăс ан кăтартăр мана?» Намăсне те, симĕсне те вара унне халăх курать. Çавăнпах тухнă ĕнтĕ сăмахĕ: «Мургаев норми». Вăл ĕçкĕ норми — çур литр. Çакнашкал çул çӳревсем хыççăн ман чĕрене сивĕлĕх туйăмĕ шăнта пуçларĕ. Ай-яй çӳреççĕ те кĕрлеттерсе район хуçисем, ĕлĕкхи помещиксемпе купцасем аснă пекех асаççĕ. Каясчĕ сирĕн пĕрре вĕсем хыççăн йĕрлесе. Кунĕ-кунĕпе, çĕрĕ-çĕрĕпе мĕн-мĕн тунине курсассăн-и, тĕлĕннипе палтах йăванса ӳкмелле.

— Ĕçлеме апла йывăрах пуль çав сире, кăмиссарсене?..

— Йывăр çав, пит йывăр. Ĕçлеме мар, ĕçме çав тери йывăр. Кӳлле ĕçсе яр-ха эс... Мургаевпа Оманов, туршăн та, пĕр кун урăлса кураймаççĕ. Вĕсен — ялан çӳлтен килнĕ хăна, хăйсем те — ялан хăна. Сăлтавне хăйсемех шыраса-тупса лараççĕ те... Пионер организацийĕ çур ĕмĕр тултарнине те банкет тусах уявларĕç Вăрманкасра. «Ленин ĕçĕшĕн кĕрешме хатĕр пул!» — ĕрлешеççĕ хĕремесленсе. «Яланах хатĕр!» Чăнкăлл-чанкăлл, шăнкăрр-шанкăрр! чиркӳ чанĕ пек янăрать хаклă йышши черкке. Сасси ресторан уçă чӳречинчен урама сарăлать... Омановне, ай-яй, хĕрлĕ галстук çыхнă икĕ мăнттай хулран çавăтсах килне ăсатрĕç.

— Мĕнле пуçпа ĕçлеççĕ-ши вара вĕсем? — çăварне карса пăрахрĕ Карачăм мучи. — Вăхăт вĕсен, кăмиссарсен, тем тесен те ытларах ĕçре мар — панкетсенче çунать. Халăх çăтмахĕнче авă кам савăнать! Авă кам кăмуна райĕнче!

— Икĕ район чикки пур тата... Шăхран районĕпе ăмăртнине черккепе виçмелли çылăхлă вырăн.

— Халăхран та вăтанас темеççĕ-ши?

— Пичĕсене кĕççе çĕленĕ вĕсем.

— Хăрушă, мĕн патне илсе çитерĕ ку юрăхсăр усал йăла.

— Вĕсен вăл — пурнăçра йăлана кĕнĕ йĕрке.

— Çу-ук, кусем пирĕн çынсем мар, икĕ питлĕ путсĕр пуçлăхсем. Шашка Пашкипе Михаил Йăванч вара... Иккĕшĕ те çыншăн çунсах вилетчĕç. Пĕри кăлхуса, тепри района чапа кăларчĕ. Анчах вăрçăран таврăнаймарĕç. Вăт, ыллăм, вĕсен, хăйсем çуккă пулин те, этем çутихĕлхемĕ халăхра юлнă. Чăн та вĕсем пурнăçра хăйсен вырăнне тупнă, опчествăшăн кĕрешекенсен вырăнĕнче тăнă. Çынлăх тени вăл пĕчĕк япаларанах курăнать. Çынлăх вăл — çынра хăйĕнче, хăйĕн ăшĕнче. Пурнăç та, ыллăм, ай-яй... Курнă эп тем те, такама та, лайăххине те, усаллине те. Ăçта влаç, çавăнта этемĕн лайăх енĕсемпе япăх енĕсем халăх умне куç кĕски çинчи пек тухса тăраççĕ. Ним те пытараймастăн, паян пытарсан та, каярахпа пурпĕрех тухатех. Çавăнпа эп сана, Макçăм Макçăмч, çакна çеç каласшăн, вĕрентсе мар, ас тутарса: халь те пысăк ĕçре, малашне тата пысăкрах ĕç шанса парĕç, çын çине нихçан та хăвăн пуçу урлă ан пăх, пуçна халăх тăррине хăпартса ан ларт.

— Юрать, юрать, Герасим Филиппович, ăнлантăм сире, мĕншĕн çак калаçăва пуçланине те туйрăм, тавтапуç ырă сăмахăршăн, — тесе анасласа илчĕ Крутов.

— Куратăп, йăлăхтартăм. Çапла çав вăл ват çын, канăçсăр, тулккисĕр, хăнана та çывăрма памасть. Юрĕ, каçар эс мана, ват супнăна. Ман çынна ыр тăвас килет, çын савăнăçĕ çине пăхса савăнас килет. Айта халь тула тухса кĕрер те паппа тăвар...

Кил картинче пăч тĕттĕм. Таврара сас-хура илтĕнмест. Тӳпе якалнă. Çăлтăрсем пытанмалла выляççĕ.

Карачăм мучи хăй ĕçне тунă вăхăтра та пуçне каçăртса пăхнине курать Макçăм. Ахăртнех вăл тĕнче уçлăхĕнче карчăккин çăлтăрне шырать.

## 7

Тинех уяртрĕ. Çут çанталăк юрнă çĕр кĕселĕ пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех хытса пычĕ. Нӳрĕк йăтса ывăннă вăрман та ассăн сывласа ячĕ, тĕтĕм пек йăсăрланакан тĕтрене çӳлелле, çил çинелле хăваларĕ. Ăш-чике кĕрхи уçă сывлăш тулать. Йывăç тăррисенчен çĕкленеймен хĕвел Тымар çыннисене хĕл умĕнхи юлашки саламĕпе саламлать. Правлени еннелле васкаса утакан Крутова курăнми пуличченех пăхса тăчĕ Карачăм мучи. Яланах вут-çулăмпа çунакан çак çынна вăл тахçантанпах хисеплет, юратать, унран халĕ те вĕренет, ун пек пулма ăнтăлать. Хăй шутланă пек, «хăрах урипе тупăкра пулсан та», чĕрине Макçăм Макçăмч сăнарĕн хăюлăхĕпе çирĕплетме тăрăшать. Карачăм мучи шухăшĕпе, çын вилме çуралман, унăн нумай пурăнмалла, çут çанталăк тытăмне малалла аталантармалла, халăхшăн ĕçлесе, кĕрешсе, çĕр çинче ырă ят хăвармалла, çĕр çинче хăв мĕншĕн пурăннине чĕррисене чăн-чăн паттăрлăхпа кăтартса ĕнентермелле.

Крутов пыриччен Маминов правление çитнĕ. Ферма пӳртĕнчен тӳрех кунта килни паллă: лӳчĕркеннĕ пиншакĕ хыçĕнче — улăм пĕрчисем, тăртаннă пит-куçĕ выçлăх вăхăтĕнче шыçăнса кайнă çынăнни евĕр. Хыпăнман. Алеша Каргин бухгалтерирен тухнине курсан Максим Максимович унран райкома хут парса ячĕ. Мургаевран вăл виçĕ кунлăх колхозра юлма ыйтрĕ. Хыççăнах Крутов председательпе ĕç пирки калаçма пуçларĕ.

Пурттисенчи çĕр улмие кăларса суйлассине йĕркелесе янă çĕре «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕнчен икĕ самосвал çитрĕ. Пĕрне яла, кил тăрăх çĕр улми пухма ячĕç, теприне сортировка патне лартрĕç.

Тепĕр кунне Маминов Крутова çапла каларĕ:

— Кунашкал хыçалтан пушăпа хăваласа çӳренĕ пек ĕçлеме, снашăтă, хăнăхман эп. Район планĕ, снашăтă, пурпĕрех тулать. Кай эс, райкомра, снашăтă, тата ĕç нумай пуль.

— Эх, Сергей Тимофеевич, — Крутов ун çине кăмăлсăррăн пăхрĕ, — ыр выльăх валли никам та пушă явмасть те çав. Ăна никам та хыçран хӳтермест те...

— Илтрĕн-и, Ваçли? Председателе, снашăтă, райком çынни выльăх вырăнне хурать. Свидетель пулатăн, снашăтă. Пĕлеп эп вăл мĕншĕн тăрăннине. Хăйне ман хĕр ача, снашăтă, Лина, пăрахнăшăн кӳтсе çӳрет.

Хĕрĕнкĕскерпе Крутов урăх калаçса çăвар тутине те пĕтерес темерĕ, çаврăнчĕ те утрĕ. Ашшĕ Линăна аса илнипе хăлхара Хурăнварти хăмăшсен кĕвви янăрама пуçларĕ.

Тымар «командировки» вĕçленчĕ. Ĕçре Крутова пĕрремĕш секретарь каçалапа хăй патне чĕнтерчĕ. Яков Сидорович хĕремесленсех ятлаçать:

— Оманов та ахальтен каламарĕ пуль çав эс ĕçлеме пĕлместĕн тесе. Чăннипех пĕлместĕн! Вĕренӳпе теори мар кунта, Максим Максимович! Практика, пурнăç чăнлăхĕ. Хăв пуçупа нумай аппаланатăн. Эс каплах председательсене хирĕçтерсе пĕтерсен... Номенклатура çыннисем вĕсем. Кам хушнă сана Сергей Тимофейчпа чĕрре кĕме?!

— Каçарăр та, Яков Сидорович, — чăтаймарĕ Крутов, — вăтăр пилĕк тонна çĕр улми станцине ăсатнăшăн та вăрçатăр-çке. Ĕçлеме, тен, пĕлейместĕп те пуль сирĕн пек...

Мургаев чĕлĕм вучахĕ хыçĕнчен тухрĕ те кавир тăрăх каллĕ-маллĕ утса калаçрĕ:

— Эх, Максим Максимович, санашкал партшкул пĕтернисем кунта ахаль те туллиех. Тупăннă вĕрентекен. Янă сана райком представителĕ туса — ĕçле йĕркеллĕ,

план тултар! Сан ёçне çавăнпа хаклатпăр. Тултараймарăн — пултараймарăн. Эс унта ытти енĕпе чăкрашланса хирĕлсе çӳрени райкома усă мар, сиен кӳчĕ... Пантелеймон Христофорович ăна кунта вилсе кайса шырать, вăл — ялта... Асăрхаттаратăп малтанлăха, кайран — куç курĕ...

Секретарь Крутова урăх сăмах хуштармасăрах пӳлĕмрен кăларса ячĕ. «Вăт сана Тымар, çĕр улми, патшалăх планĕ. Çынсен кĕвĕçĕвĕ, тарăхăвĕ епле çамкаран пырса çапрĕ. Тĕрĕслĕхшĕн çунатăп вĕт», — шухăшларĕ вăл.

Ăна Мургаев çын элекĕ хыççăн кайни тĕлĕнтерет. Çук, вăл килĕшмест секретарьпе, ун умĕнче хăраса та ӳкмест, Омановсене парăнма та шутламасть. Малашне те çирĕп пулĕ, ленинла принциплăхпа ĕçлĕ. Парти, патшалăх, халăх интересĕсене хăйĕннинчен маларах хумашкăн ăна тарăн ĕненӳлĕх пулăшать. Маминовсем пек пурнăç юххинче анаталла юхмасть вăл, политикăлла курăмлăх енчен хăйне çӳлте тытать, нăйкăшмасть, тĕрĕслĕхе çиеле кăларассишĕн, çынлăхшăн кĕрешет. Çынна ĕçре çакнашкал, Мургаевла, Омановла, айăпсăр лăскаса тăкас меле сивлет. Шĕкĕсем партие кăшласа-шăтарса пĕтерсе пынишĕн шухăшла-шухăшла кулянать. Салтыков-Щедринăн Передрягинĕсем халĕ те чĕрĕ иккен. Епле вилĕмсĕр сăнарсем. Ансăр тавра курăм картинче лăпкăн тĕлĕрекен хуçасем ĕнсе çинчи сăвăслансем пек шĕвеççĕ.

Çунакан ăш-чикне пусарас тесе коридор тăрăх каллĕ-маллĕ хутланă вăхăтра Оманов тĕл пулчĕ.

— О-о-о! Çухалнă çынна тупăннă ятпа саламлатăп, — пичĕ çине кулă палли кăлармасăр алă тытрĕ Панхристоф. — Пĕрремĕшпе ан тавлаш тесе эпĕ сана тахçанах асăрхаттартăм, пурпĕрех çĕнтерейместĕн. Паян ун патĕнчен хĕрелсе çеç тухрăн-ха, тепрехинче лексен,

хĕрсемпе ытларах йăкăлтатса çӳресен, шап-шурă пулан, ак. Ялан вĕрентмелле çак «сар тутасене». Алеша Каргин тракторист хĕрне мĕнле туртса илме пуçлани çинчен ăнлантару çырса патăн-и-ха Яков Сидоровича? Çырман пулсан, ман сĕтел çинче ир тĕлне выртмалла çав хут.

— Кам çухалнă-ши? Ăçта? Тен, Пан Христос çухалнă хупахра? Çăварăнтан сывлама çук шăршă перет. Ах, çав ĕçкĕç-çăхавçăсене... Хăшĕ ёлкĕрнĕ-ши Тымартан элеклеме?

— Нумай пĕлсен час ватăлан, - тесе епĕл кулчĕ те Оманов, пӳлĕмне кĕрсе çухалчĕ, кĕç алăкне уçса, хыттăн хушса каларĕ: — Манран ыйтмасăр тек ниçта та ура ярса пусмастăн! Ирхине тăххăрта килсе каçхине улттăччен лармалла çак çуртра сан! Унсăрăн прогул пулать.

Крутов алă сулса хăварчĕ те уçă сывлăша тухрĕ.

Тавралăх йăсланса тăрать, пите-куçа йĕпхӳ çуса уçăлтарать.

Çил çавăрттарса килнипе райком картишĕнчи çăка çулçисем вĕлтĕртеттерсе анаççĕ, пуç çине, ума майланса выртаççĕ. Курайманлăх, тарăху тăвăлĕпе кĕрешекен Максим Максимовичăн çак çуртран халех яла тухса чупас, унти ыр кăмăллă çынсемпе чуна уçса калаçас килчĕ. Чышкă тытăмĕнчи халăх, халĕ те ĕлĕкхи патша саманинчи пекех, пӳрне витĕр хĕвел çутине хăраса пăхать. Пĕр йĕрпе, пĕр шухăшпа, пĕр тĕллевпе хăваласа уттарнине пулах ĕнтĕ çав тери анлă çĕршыври этем кĕтĕвĕ кĕçех ывăнса такăнассăн туйăнать. Мургаевсемпе Омановсем çапла халăха тĕпсĕр шăтăк умне çитсе тăратма пултараççĕ.

Тымара кайма урăх вăхăт юлмарĕ. Оманов Максим Максимовича телефон çумне «кăкарса» лартрĕ. Ялсенче тĕне хирĕçле миçе лекци ирттернине шута илмелле. Пушăлла таврăнакан самосвалсем райком умĕнче

чарӑнчӗҫ, акӑ... Крутов правление шӑнкӑравларӗ. Маминов ӑна итлеме те шутламарӗ.

Вӑл тепӗр кунне те пӳлӗмрен тухаймарӗ. Обком инструкторӗ Хиркин кӗрсе тӑнине те асӑрхаман.

— Телефон хуҫине саламлатӑп.

— Салам, салам! — хумханнипе ура ҫине сиксе тӑчӗ Крутов. — Ларатӑп эп кунта тӗмсӗлсе. Кунӗпе ҫухӑрса та ывӑнтӑм. Каҫарӑр, сисмен, Василий Николаевич.

Инструктор ӑна алӑ пачӗ:

— Пӗлтӗм мӗнле ӗҫленине, ӑнлантӑм. Авӑ епле усӑ кураҫҫӗ икӗ аслӑ шкул пӗтернӗ ҫынсемпе Вӑрманкасра. Алӑка уҫсанах, пӗрремӗш хутранах, илтӗнет сассу. Ҫавӑнпа тӳрех сан пата кӗрес терӗм. Политвӗренӳ пӳлӗмӗнче райком хӗрарӑмӗсем чӑлха ҫыхса лараҫҫӗ. Ҫавсене шӑнкӑравлаттармалла мар-ши?

Инструктор нумай тӑмарӗ, Мургаев патне кайрӗ. Вӗсем Хиркинпа Чулхулара пӗрле вӗреннӗччӗ. Кӗрнеклӗ, ӗлккен, васкаман ҫак культурӑллӑ ҫынна Максим Максимович хисеплет.

Кӗҫех ҫӗр улми пирки канашлу пулчӗ, райком представителӗсене итлерӗҫ. Черет Крутов патне ҫитсен, Яков Сидорович сассине юриех хӑпартса: «Ҫӑлтӑр» колхоз — чи кайри, Максим Максимович ҫине тӑманнипе план ҫунать, вӑл района каялла туртать. Каласа парӑр-ха, мӗншӗн начар ӗҫлетӗр?» — терӗ.

Крутов, малтан пуҫра шутласа хунӑ пекех, тӳрех сӗнӳ пачӗ:

— Ман шутпа, кунта, Яков Сидорович, бюро ларӑвӗ ирттермелле. Патшалӑха ҫӗр улми сутмалли план тулманшӑн эпир райком представителӗсем ҫеҫ айӑплӑ мар. Хуҫалӑхсене ертсе пыракансенчен чи малтан ҫивӗчрех ыйтмалла!

Ҫакна илтсен, канашлура ларакансенчен хӑшӗ-пӗри кӑмӑлсӑррӑн хускалса илчӗ, пӑшӑл-пӑшӑл туни илтӗнчӗ. Обком инструкторӗ ура ҫине тӑрсан, пурте шӑпланчӗҫ.

— Крутов юлташ сĕнĕвĕ тĕрĕсех те пуль, Яков Сидорович. Чăн та, тен, бюро шайĕпе калаçсан, усăллăрах пулассăн туйăнать, — терĕ вăл.

Мургаев пукана чĕриклеттерсе ларчĕ-ларчĕ те, Хиркинпа тем пăшăлтатса илнĕ хыççăн, бюро членĕсене ларусем irттермелли сĕтел хушшине куçма чĕнчĕ.

Маминов пуçне çĕклесе пăхма вăтанса мăк-мак тукаларĕ те сăмах-юмаха вĕçлерĕ. «Çăлтăр» колхозпа Тымар ял Совечĕ патшалăха çĕр улми хатĕрлесе парассине мĕншĕн вăраха янине ирĕксĕрех Крутовăн тĕпĕ-йĕрĕпе уçса памалла пулчĕ:

— Партбюро секретарĕ Григорьев юлташ, колхоз председателĕнчен партилле çирĕплĕхпе ыйтас вырăнне, ун юххипе кайнă, хăй те пĕрле ĕçке ернĕ. Çĕр улмие кăларнă вăхăтрах патшалăха çителĕклĕ пама май пулнă. Сергей Тимофеевич ăна юри шăтăксене хывтарнă. Халĕ вĕсене уçмалла. Унта ытлашши ĕç вăйĕ, укçа тăкакланать. Вăхăта ытларах тăсса пынипе Маминов юлташ çĕр улми пытарса хăварасшăн, çапла патшалăха тӳрременех улталать. Тĕрĕссипе ку — саботаж пекех! Ĕçе юри чарса тăни патшалăхшăн сиенлине пурте пĕлетпĕр. Унашкал хăтланакансемпе хăй вăхăтĕнче Ленин çивĕччĕн кĕрешнĕ, вĕсене чи хытă айăпланă. Халĕ те пуçран шăлмалла мар!

Мургаев Маминова тем пек хӳтĕлесе хăварасшăн пулчĕ, анчах май килмерĕ. Бюро членĕсем Крутов каланине шута илчĕç, «саботажниксен» учет карточки çине хаяр выговор çырса хума йышăнчĕç.

Кĕтмен çĕртен пулса иртнĕ бюро ларăвĕ райкомрисемшĕн те, халăх хуçалăхĕнче ĕçлекен пуçлăхсемшĕн те секретарь пӳлĕмне çавра çил çавăрттарса кĕнĕ пекех туйăнчĕ пулас. Тавлаша-тавлаша, пĕрне-пĕри «тăн парса» аялти хуталла шавласа анакан çынсем çине Крутов кăмăллăн пăхса

тăрса юлчĕ. Ĕç çакнашкал çивчĕ пулса тухнăшăн, паллах, пурте килĕшӳллĕ мар. Килĕшӳсĕррисем — кивĕлле ĕçлекенсем, малтан хатĕрлесе хунă штамп тăрăх ыйту татса пама хăнăхнăскерсем. Ун йышшисен сасси, авă, Оманов сасси, аялтан уçăмлăн илтĕнет: «Ай-яй, тупăнчĕ паттăр. Сăмсине чикме ĕлкĕреймерĕ ку Крутов кунта, ха, Мургаева чиперех вĕрентет.Василий Николаевичĕ те итлет-ха тата ăна. Ман шутпа Хиркин тĕрĕс мар турĕ, Яков Сидоровича ирĕксĕрлесе лару ирттертерчĕ. Ыйтăвне те, йышăну проектне те хатĕрлемен. Çӳлтен хĕсĕрлесе пусахлани пулать ку. Крутов пек хăйсене «эп кам» тесе кăтартма хăтланакансене, тем, малаллах яракан марччĕ-ха, туххăмрах çăварлăхлаканччĕ, лăплантараканччĕ кунти «кашкăрсем». Ай-яй, пиçнĕ ĕç виçине пăсасшăн...»

«Пуçна ялан кивĕлле ĕçлеттересшĕн эс, Пантелеймон, — хирĕçлет ăна Семен Ильич. — Çын хыççăн ан кай, çын хӳрешки ан пул. Пĕлетпĕр сана, мĕнле йăпăлтине. Итле, Мургаев Маминова хӳтĕлени вăрттăнлăх мар. Ăна вăл хăйĕн пиншак аркипе витсе хăварнă пулсан-и паян? Эсĕ те хĕпĕртеттĕн. Тусу вĕт. Шăпăрт пул луччĕ. Ялан аслисен юррине ĕнĕрлетĕн. Çирĕплĕх çук сан. Канашлуран бюро ларăвне тӳрех куçни вăл ĕç виçине пăхăнманнине пĕлтермест, ĕç йĕрки-мелне çĕнетнине пĕлтерет. Çапла ĕçлемелле — пуçпа».

Пан Христосăн йăлăхтаракан сасси çаплах янăрать: «Ах, çав Крутова ăна, мана та ура хучĕ вăл пĕррехинче Хурăнварта, темле йӳтенĕ Карачăм старике вун виççĕмĕш хисеп мыскари пирки ыйту партарса мана хура халăх умĕнче намăс кăтартасшăн пулчĕ, юрать хам ухмах мар та, ăнлантарса патăм. Хальхинче пĕрремĕшне епле такăнтарчĕ? Тарăхтарчĕ. Хăйне тăнкăрук панăшăн тавăрчĕ-ши? Тĕрĕс турĕ тетĕн-и?

Эп те сана лайăх пĕлеп, Семен Ильич. Эс ялан çавнашкал «паттăрсем» майлă, вĕсене хӳтĕлесех, вĕсемпе килĕшсех çакăнта, вăрман чăтлăхĕнче пăчланса ларан. Сан пеккисем, вăн, Хиркин та, — Шупашкарта е Мускавра. Дипломачĕсене те хăйсем йăтмаççĕ».

«Эп карьерист мар, — килĕшмест тавлашаканпа Быстров. — Эп хăлаçа кĕменнишĕн, капан пек мăннишĕн хапсăнмастăп, чапшăн çунмастăп. Мана хамăн ĕçе чĕререн туни чуна кантарать. Эс вара Максим Максимович пирки пустуй ан лĕпĕртет. Унра мĕнле вăй пуррине эп никамран та лайăх куратăп. «Çиçĕме» Крутова мар, ял хуçалăх управлени пуçлăхне Вьюнова ямаллаччĕ. Унти йĕркесĕрлĕхшĕн, тĕрĕссипе, пĕрремĕшĕ хăй айăплă. Пирĕн ĕçре çирĕплĕх пулмасан...»

Лешĕ ăна пӳлчĕ: «Çирĕплĕх», «йĕрке» тетĕн. Мĕн, халь «Çăлтăра» Яков Сидорович çĕр улми пуçтарма каять-им? Хăйĕн сумне-ятне яма-и?

«Журавлăха ӳстермелле тени пĕртте Яков Сидоровичăн хăйĕн кил тăрăх ыйткаласа çӳремеллине пĕлтермест. Унăн патшалăх умĕнчи тивĕçшĕн йĕркелĕве, ертсе пырас ĕçе вăйлатмалла çеç. Яла çитсе килнĕшĕн секретарĕн ячĕ каймасть. Юрать иксĕмĕр эпир Максим Максимович Тымарта курнă намăса курмарăмăр та... Ăна çеç намăс мар вăл эпир халăха пусахлани, ун умĕнче мĕскĕнленни, ыйткалакан рольне выляни, — райкома, партие тĕнче умĕнче намăс кăтартни. Çавăнпа кулаççĕ пиртен. Кут хыçĕнче те, куç умĕнче те...»

Хиркинпа Мургаев пӳлĕмрен тухрĕç. Обком çынни ӳсĕрнине илтсе-ши, тавлашакансем шăпланчĕç, Крутов та коридор тăрăх малалла утса кайрĕ. Василий Николаевич секретаре сăмсаран шакканă пекех асăрхаттарчĕ:

— Эп Крутова тахçантанпах лайăх пĕлетĕп. Вăл Чулхулара вĕреннĕ чухне те, практикăра та обком

секретарӗ умӗнче палӑрма пултарчӗ. Пуҫарулӑх юхса тӑрать ун пуҫӗнчен. Малашне те унран усси тухмаллах.

— Ӑна эп хам та сиртен начар мар пӗлетӗп-ха. Ӗҫе илсе нушине те курса пӗтнӗ. Кашниех ун пек пуҫару хыҫҫӑн пуҫару кӑтартса хӑпартлансан, Цӗка йышӑннине, эсир хушнине, эпир хӳтернине кам пурнӑҫлать? Ялан мӗнле те пулин пӑтӑрмахлӑ ыйту туртса кӑларать вӑл. Эпир ухмах ӗнтӗ, вӑл — чи ӑсли.

Обком инструкторӗ пуҫа пӑркаласа илчӗ, Мургаева ҫурӑмӗнчен лӑпкарӗ:

— Ватӑлса пынине пӗлтерет вӑл ҫак кӳренӳ, Яков Сидорович. Йывӑра ан илӗр. Пурпӗрех хамӑр вырӑна хӑҫан та пулин ҫын кирлӗ пулать. Хамӑртан лайӑхраххисем, вӑйлӑраххисем, ҫивӗчреххисем, пулас пурнӑҫ ыйтӑвне чӑннипех тивӗҫтерекеннисем таптаса каҫса кайма пултараҫҫӗ. Крутов пек ҫирӗп кӑмӑлтуйӑмлӑ, хӑйсене хӑйсем кирлӗ ҫӗрте ҫӑварлӑхласа ҫӗнтерме пултаракан, халӑха усӑ тумашкӑн чунне пама хатӗр ертӳҫӗсем кирлӗ. Ман шутпа, Максим Максимович пӗртте сире такӑнтарас ҫул ҫинче мар, усӑ тӑвасшӑн, пулӑшасшӑн тӑрӑшни сисӗнет. Сӑлтавсӑр хӗстерни темле ырӑ ҫынна та кӳрентерет, ҫиллентерет. Пӗлсе усӑ курмалла вӗсемпе... Юлташла калатӑп.

— Хамӑр йышра хамӑрах сӗллине хӑш ӑйӑрне памаллине те, пушшипе кама тивертмеллине те пӗлӗпӗр-ха, Василий Николаевич, — сасӑпах кулса ячӗ Мургаев. — Ҫитӗ сӳпӗлтетсе ӗҫ пирки, апата каяр.

8

Семен Ильич пӗррехинче Крутова хӑй пӳлӗмне туртса кӗчӗ. Быстровӑн ӗҫ пӳлӗмӗ пысӑках мар, аялтан хӑпарсан сылтӑм енче, кӗтесре. Анлӑ икӗ чӳрече, «Г» саспалли пек лартнӑ икӗ сӗтел, тумтир шкапӗ, сейф, пукансем. Чӗлӗм тӗтӗмӗ явӑнать. Мургаев пӗлӗчӗ пекех.

— Чӳречине уҫар-и? - ыйтрӗ Крутов.

Быстров ҫăра тĕтĕме маччаналла вĕрсе ячĕ те сигаречĕпе тĕллесе кăтартрĕ:

— Куратăн-и, шăна купи? Кĕрсе тулаççĕ. Тĕтĕмĕ сăмсана ҫеç кăтăклать, симĕс шăни хытă ҫыртать. Эп ăна Омановпа танлаштаратăп. Ресторантан капланса килеççĕ те...

— Палласҫĕ пуль вĕсем сана, — лăх-лăх кулчĕ Крутов.

— Темле, пĕлместĕп, кăнтăр апатне кайса килетĕп те, хам хыççăн вĕҫнине асăрхаман. Пан Христоса паллаççĕ пулсан ҫеç, ҫавна шыраççĕ пуль. Вăл хупаха хыҫалти алăкран час-часах кĕрсе тухать. Симĕс шăна ҫавăнта хыт явăнать.

Йĕркелӳ ĕҫне ертсе пыракан Быстров Максим Максимовича чĕлĕм тĕтĕмĕ ҫăтма чĕнмен иккен, вăл ăна хăй патне куҫарасшăн.

— Шухăшла-ха хăвах, — ыйтуллăн пăхать вăл Крутов ҫине, — ҫынсемпе ĕҫлеме те, ял хуҫалăхне те пĕлетĕн, агроном эс. Ман пайра ытларах усă кӳме пултаратăн. Мĕн туса лармалла Оманов ҫумĕнче?

Максим Максимович чӳрече умне пырса тăчĕ, шухăшласа илчĕ те, Быстров еннелле ҫаврăнчĕ.

— Хăвна ху хирĕҫлени мар-и ку? Иртнĕ планеркăра мĕн сĕнтĕн-ха? Астăватăн-и? — терĕ вара.

— Пирĕн пайсем хушшине Китай хӳми купаласа лартмалла мар, ĕҫе пĕр шухăшпа, пĕрле, пĕр евĕр туса пыма вĕренмелле, тенĕччĕ.

— Апла тăк, тусăм, пуҫарăва вĕҫне ҫитерер, — тĕреклĕ аллисене Семен Ильич хул пуҫҫийĕсем ҫине сисĕмлех хучĕ Крутов. — Ҫак ҫуртран кутран тапса кăларса яричченех симĕс шăнасемпе ҫапăҫар.

Тул енчен шаккани илтĕннĕ-илтĕнмен алăкра Хиркин курăнса кайрĕ. Обком кураторне — вĕсен тата

кӳршӗри тепӗр виҫӗ райком ӗҫне ҫӳлтен пӑхса тӑракан, аслӑ йышӑнусене мӗнле пурнӑҫланине тӗрӗслекен, вӗсене пулӑшакан, хута кӗрекен, хӳтерекен, кирлӗ пулсан, хӑратса та ятлакан инструктора — паян Быстров кӗтменччӗ, ҫавӑнпа-ши, тусӗн куҫӗнчен тӳррӗн пӑхса, ыйтрӗ:

— Мӗн вӑрттӑн шӑршласа ҫӳрен?

— Вӑртӑнни-качки, — сӑмсине пӑчӑртаса тытрӗ кӗтмен хӑна. — Ҫак кермене «хура пӳрте» куҫаратӑр ӗнтӗ. Ӑш-чик ыйтать те, туртӑрах, эп те, никам та сире чараяс ҫук. Шӑхранран ҫула май кӗрсе тухас терӗм, шӑнкӑравлама вӑхӑт пулмарӗ, — терӗ Василий Николаевич дипломатне пукан ҫине лартса.

Хиркин «хура пӳрт» тесе чӗлӗм тӗтӗмӗ саратнӑ пӳлӗмсене калать, туртаканӗсене «ӳпке тӗтӗмлекенсем» тет.

— Ҫынсенчен маларах ҫӑтмаха ҫитесшӗн-ҫке, — кулса ячӗ Быстров. — Ҫавӑнта канса пулӗ-и ӗнтӗ. Атту канмалли кунсене пӑхмасӑрах тапаҫланатпӑр, кӑнтӑра та ямарӗҫ. Те, эп ҫук пулсан, тӗнче пӗтет, те, райком пулмасан, пурнӑҫ чарӑнса ларать; те кирлӗ ӗҫех тӑватпӑр эпир, те, ухмахла, кӗл ҫинчи пӑрҫана шутласа ларатпӑр...

Обком ҫынни ӑна пуҫ пӳрнипе юнарӗ:

— Мутри эс, Семен Ильич, чӗлхӳне ытлашши ан ӗрӗхтерсе яр... Ҫапах та, хама та шухӑшлаттарать-ха вӑл хушӑран, ӑшра хӑра-хӑрах тем тӗрлӗ вывӑт тӑватӑп. Уҫҫӑн каласма, ачамсем, иртерех-ха. Ҫӑвара мӑн ушшӑпа питӗрнӗ саманара тем те пулса тухма пултарать. Ҫавӑнпа та, унта, — ҫӳлелле аллине ҫӗклесе кӑтартрӗ Хиркин, — лекме хӑвӑртах пулӗ. Унтан никам та хӑтӑлса юлаймӗ, паллах. Кам маларах, кам — каярах, кам вӑхӑтпа, кам — вӑхӑтсӑр каять. Ҫапах та ҫӗр ҫинче тамӑкри пек ӗҫлесе пурӑнакан леш тӗнчере те рая лекессӗн туйӑнмасть.

— Ҫӑтмахӗ-райӗ кунтах-ха пирӗн, — чӗнмесӗр тӑракан Крутов та калаҫӑва хутшӑнчӗ. — Хамӑр ӗҫпе

кăмăллă чухне тамăка аса илер мар. Пултарайман е наян çыншăн çеç тамăк пуль вăл ĕç тени. Шăпах çавăн пирки сăмах пуçарнăччĕ эпир.

— Апла эп сире чăрмантартăм, каçарăр, — Максим Максимович еннелле кăмăллăн пăхрĕ инструктор. — Çапах та пит кулăшла. Çак тĕтĕм сĕрĕмĕнче чăн та тĕн сĕрĕмĕ çинчен калаçма лайăх пек. Иккĕшĕ те сĕрĕм. Анчах... урăхла сĕрĕм. Чĕлĕм сĕрĕмне чӳрече-алăк уçса кăларса яма, пӳлĕмри сывлăша тасатма пулать. Тĕн сĕрĕмне вара... Чун-чĕре алăккине уçсан — ăша ĕмĕрлĕхех вырнаçать. Унтан ăна вĕрсе-хӳтерсе кăларма йывăр. Шел те, чиркĕве патшалăхпа шкултан уйăрни те, чиркӳсене аркатса пупĕсене вĕлерсе-хупса пĕтерни те, марксизм-ленинизм чăнлăхĕн тĕп шухăшне халăх хушшинче вуншар çул сарни те, çĕнĕ йăла-йĕркене ял-хулара тымарлантарма тăрăшни те, атеизма суккăрла вĕрентни те пулăшмасть иккен, тĕн сĕрĕмĕ сĕвĕрĕлесшĕн мар-ха халăх хушшинчен, юман кăварĕнчен тухакан наркăмăшлă тĕтĕм пекех йăсăрланать. Кунашкал уççăн калаçнăшăн эсир мана ан сутăрах, тусăмсем.

— Эпир Оманов пек иудăсем мар вĕт, пĕр шухăшлăскерсем, — алăкăн-тĕпелĕн утрĕ Быстров. — Аслă шкулта, вăл шутра пире те партшкулта, наукăллă атеизм вĕрентсе, турра ĕненмен çынсем калăплама тăн параççĕ, çав хушăрах теизмне — тĕнчене тытса тăраканни пĕр турă çеç тесе калакан тĕн вĕрентĕвне — çурăм хыçĕнче хăвараççĕ.

Крутов та ун çумне хушса каларĕ:

— Чăнах суккăрла вĕрентнĕ пире атеизма. Ара, Чулхулара та, кунта та «Библи» вуласа кураймарăм-ха та... Эсир вуланă-и çав тĕлĕнтермĕш кĕнекене?

Нихăшĕ те алла тытса курман иккен.

— Çапла çав эпир, — терĕ малалла Максим Максимович, — партин хĕç-пăшалсăр атеисчĕсем, теизм

мĕнне пĕлмесĕр минрететпĕр çыннăн пуç мимине. Кама е мĕне хирĕç кĕрешме тухас умĕн унăн вăйне, чеелĕхне, никĕс тымарне тĕпчемеллех пуль тетĕп. Çавăнпа эпир кĕл çинче пăрçа суйлатпăр та, стенана пăрçа сапатпăр.

Иккĕшне те куçран пăхса илнĕ хыççăн Хиркин пуçа пăркаласах пĕлтерчĕ:

— Ак сире пурнăçра пулни: «Çăлтăр» комиссарĕ Григорьев ачине Ижевска илсе кайса шыва кĕртнĕ. Виçĕм кун çеç Мускавран пĕлтерчĕç, халĕ вĕт пытарма çук, таçти шăтăкран шыраса тупаççĕ. Ну и ну... Çитменнине тата вăл ял Советне ертсе пырать-çке. Советсене те, партие те хура пылчăкпа вараларĕ вăл тесе урмăшсах çухăрашать обком секретарĕ. Çавăнпа лекрĕм те ĕнтĕ сирĕн ытамна.

Пĕр хушă пӳлĕм шăпланчĕ. Хупахран капланса килнĕ симĕс шăнасем çеç кантăк хушшинче сĕрлерĕç. Быстров чăтаймарĕ, хăлтăртатса кайрĕ:

— Мемме вăл Григорьев, пĕлтĕртенпе тăнран ячĕ ĕнтĕ. Унта эпир парторга вăр-вартарах çынна палăртнăччĕ те çав, райком сĕнни каяймарĕ. Прошлин пулнăччĕ пухура. Таврăнсан, евитлерĕ: «Маминов Григорьева суйлаттарчĕ». «Архип Андреевич, — тетĕп. — Эсир çак ĕçре пиçнĕ, туптаннă çын, мĕнле-ха хамăр кандидатурăна сыхласа хăвараймарăр?» Вăл манран кулать: «Эх, эсир, çамрăксем, пĕлместĕр-ха пурнăçа, парти ĕçĕ вăл нихçан та çăмăл пулман. Хирсе, ирĕксĕр мĕн те пулин тутармалли ĕç-çке вăл. Эп тем те курнă. Ĕнсерен те çапнă мана, кутран та тапнă, питрен те çутăлтарнă, — тем те тӳснĕ, такампа та ĕçленĕ, хушнине тунă, яланах. Райком туалечĕн алăкне уçса-хупса тăр тесен, ăна та тăватăп...» «Кут шăлма та хатĕр-и?» — тесе култăм та, тарăхса, хуравларĕ: «Ун пеккисем хамăр йышра мансăрах пур. Хушнине тума хăнăхнă-çке, те ăспах, те ухмах пуçпа, пĕлместĕп, турра пуç çапнă пек пуç çапатпăр та... Унччен те йывăрччĕ, халь тата йывăртарах

ĕçleme. Ывăнтăм эп. Çавăнпа хуçа сĕннĕ çынна хирĕçлесе коммунистсене вăрçтармарăм. Вĕсем ăна хăйсем пиртен лайăх пĕлеççĕ, вĕсем суйларĕç, вĕсен унпа ĕçлемелле». Ну, мĕн тăван ăна, Прошлина? Хамăрăн çын суйланнă пулсанах...

Хиркинăн пит-куçĕ тĕксĕмленнĕччĕ, тăрсан-тăрсан çуталчĕ, хăйпе пĕр тантăшах çынсем ăна татах кăмăла кайрĕç-ши е калаçу уçăлтарчĕ, сĕнсен те лармарĕ, алăк патне темиçе хутларĕ. Крутов та, калаçма хатĕрленсе, пуç кунтăкне пăтратса илчĕ. Вăл «Çăлтăрти» парторг пирки Семен Ильичпа килĕшесшĕн марччĕ. «Чăннипе, — шухăшларĕ Максим Максимович, — коммунистсем хăйсем хуçа, кама хисеплерех параççĕ — çавна суйлаççĕ». Унтан вăл Мургаев хăйне «Шурăмпуçне» лартса хăварнине аса илчĕ. Кириллов хирĕçленĕ пулсан-и, ун хыççăн каякансем тупăнатчех. Суйламасан та пултарнă Крутова партком секретарьне. Хуçалăх пуçлăхĕсем хăйсене хăйсем тĕп хуçа вырăннех хурасшăн-ха, хăйсене темле хуçса-авма хăтлансан та, партин халăх хуçалăхне тытса пырас тивĕçне сирсе ямашкăн е чакарса лартмашкăн вĕсемшĕн шахмăтла вылянă пек çеç. Çума çемçешке чунлă парторг лексен ĕнтĕ. Çавăнпа вĕсем, хăйсене тĕп ĕçе тума ан кансĕрлеччĕр тесе, ал майлă çын шыраççĕ. Крутов Кирилловпа чухне те, ун хыççăн Тельман Волковпа ĕçленĕ вăхăтра та мемме пулман, ăна çуллă пăтта чăмламасăр çăтса янă пек йăмпăлтаттарайман, яланах вăл вĕсен пырне ларнă. Пурнăç уттинчен иртмен. Ял халăхĕн кăмăлне, чунне ăнланса, унпа пĕрле ĕçленĕ, пурăннă. Григорьев вара, Быстров калашле, чăнах та «мемме».

— Ну ку Григорьева, — çаплах чарăнма пĕлмерĕ Семен Ильич. — Пĕрре член укçи вăхăтра пуçтараймасăр пĕтерет, тепре — пуху кашни уйăхра пухаймасть, иртнинче виç уйăхшăн пĕр уйăхра виçĕ пуху ирттертертĕмĕр, кун йĕркине лартмалли ыйту çуккă тенĕ те, Прошлин ăна

Тымарти коммунистсем ДОСААФăн автомотолотерейине сарассипе мĕнле пуçарулăх кăтартни çинчен шухăшласа кăларнă ыйтăва сӳтсе явтарнă. Кашни уйăхрах уписательнă пухăнса павраммалли йĕркене парти Уставне тем тума кĕртсе янă. Акă эпир, виççĕмĕр, Уставпа килĕшӳллĕн, пуçламăш парторганизаци тума пултаратпăр. Шутлăр-ха, кашни уйăхрах уписательнă пуху ирттермелле-и вара? Виççĕмĕр хушăри калаçăва эпир виç минутра татса паратпăр. Мĕн пустуй ыйту шыраса пакăлтатса лармалли? Юрĕ, çĕр, пилĕк çĕр, пин коммунист пулсан... Эсир пиртен ыйтатăр, Мускав сиртен ыйтать, пуху шучĕ ӳсет, унта калаçни, сĕнӳ пани купаланать. Кама валли? Мĕн тума? Халăхĕ пурпĕрех унсăрах ĕçлет, пурăнать, ача тусан, чиркĕве кайса шыва кĕртесшĕн тапаçланать. Ах, ку Григорьева! Чаплăран та чаплă, район историйĕнче хальччен пулман истори кăтартрĕ. Ах, ку Прошлина!

Крутов шутланă пекех, Хиркин та Семен Ильича хирĕçлерĕ:

— Прошлин та Прошлин тет. Архип Андреевич айăплă-ши順 уншăн? Юрĕ, ăна партбюро секретарьне суйламан пултăр. Ун вырăнне урăххи ларатчĕ. Григорьев арăмĕ пурпĕрех ача çурататчĕ, пурпĕрех ăна пачăшкăна тыттарса шыва кĕртетчĕç. Павел Иванович чун-чĕринче кам çывăхрах пулнине, ун ăшĕнче тĕн-тĕшмĕш сĕрĕмĕ тахçантанпах йăсăрланнине ан манăр эсир. Ку вăл паян шутласа, паян тунă ĕç мар. Авă халĕ усал сĕрĕм районĕпех йăсăрланать, Шупашкарта та хăшне-пĕрне апчхилеттерет.

Мургаев йĕркелӳ ĕçĕн маçтăрне шырама пуçласан, калаçу çакăнпа вĕçленчĕ.

9

Çĕр улми хуйхи иртсе кайсан, райком бюровĕнче Григорьевăн ятлă ĕçне пăхса тухрĕç. Йышăну хутне Оманов хатĕрленĕччĕ. Мургаев пуху ирттерме Тымара

Архип Андреевича ячĕ. Прошлин тилхепене каллех лăнчăлатнă. Ялтисем Павел Ивановича, чиркӳре ача шыва кĕртнĕшĕн, выговор панă. Райком комиссийĕ сĕнĕвĕпе (ăна Яков Сидоровичăн хупах тусĕ ертсе пырать) вара учет карточки çине хаяр выговор çырса хумаллаччĕ, бюрора çапла ыйтăва шăпăрт вĕçлемеллеччĕ.

Ларура çил ик еннелле вĕрме пуçларĕ: пĕрисем Оманов сĕнĕвĕпе килĕшесшĕн, теприсем Григорьева партирен хуса ярасшăн. Ятлă хура ĕçсене пăхса тухакан комисси пуçлăхĕ те хăйĕнчен иртме парасшăн мар. Райкомăн иккĕмĕш секретарĕ Майлов çеç чĕнмест, пурте калаçаççĕ пулин те, пуçне хĕрлĕ папка ăшне чикнĕ те, тем вуланă пек тукаласа шăпăрт ларать. «Эп идеологи ĕçĕпе хуравлă мар, ку вăл Василиса Матвеевнăн ĕçĕ, хуть те мĕнле çăрăлса тухтăр», — тет пуль. Геннадий Васильевич пит асăрханусăр çын, бюрора никампа та чĕрре кĕмест, ыттисем камшăн тата мĕншĕн алă çĕклессе çивĕч сăнать. Тăхăр çынран пиллĕкулттăшĕ сасăларĕç пулсан, малтанах ĕçе хатĕрлесе хунă сылтăм аллине вăшт çеç çĕклет. Хăйне кӳрентерекенсене çĕлен пек вăрттăн сăхма юрататъ.

Мургаев пирусне сӳнтерчĕ те ыйтăва вĕçлерĕ, Григорьева тарăхсах вăрçнă пекки турĕ:

— Мĕнле пултаруллă бригадирччĕ эс, Павел Иванович, партие те сана лайăх ĕçленĕшĕн илтĕмĕр, секретаре суйларăмăр, ял Советне ертсе пыма сĕнтĕмĕр. Эсĕ вара... Арçын пуçăн чиркĕве кайса намăс кăтартрăн. Хĕрарăм çукиm сан? Айăпламасан сана юрамасть. Мĕн тумалла санпа?

Тавлашăва Быстров çĕнĕрен чĕртсе ячĕ:

— Нихçан та чăн-чăн коммунист пулман эсир, Павел Иванович. Мĕнле суйласа лартнă сире секретаре? Сирĕншĕн Крутов çĕр улми пухса çӳрет. Эсир вăл вăхăтра пуппа юнашар сăх сăхса тăратăр. Мĕнле намăс мар сире? Пирĕн райкома хурапа вараларăр. Партире

шăршу та юлмалла мар сирĕн. Чи хаяр айăпран пуçлăр сасăлаттарма, Яков Сидорович.

— Эй, тăвансем-юлташăмсем, — васкамасăр ура çине тăчĕ «Шурăмпуç» хуçи Волков. — Çын шăпине татса панă чухне тухтăр сурана касса тӳрлетнĕ чухнехи пек питĕ тимлĕ пулар-ха. Куç хупса хĕçпе чашлаттарар мар Григорьевăн малашлăхне. Хăвăрах пĕлетĕр, паян партбилетне туртса илсен, ыран ăна ял Советĕнчен хуса ямалла пулать. Йĕрки çапла-çке пирĕн. Партирен тухса ӳкрĕн тĕк, эсĕ никама кирлĕ мар, ниме юрăхсăр çын пулса юлатăн. Сан çине унчченхи юлташ тенисем те шикленерех, темле усал ĕç тунă йăхтăр-яхтăр çине пăхнă пек пăхаççĕ, унччен алă тытаканни те, кăвапа таран пĕшкĕнсе сывлăх сунаканни те çурăмпа çаврăнса тăрать. Пусма картлашки те аялалла каять. Шутлăр-ха, çав териех пысăк айăпа кĕнĕ-ши хамăрăн ентешĕмĕр-юлташăмăр Григорьев?

— Паллах, — пуриншĕн те тенĕ пек хуравларĕ Быстров. — Эсир вара, Тельман Федотович, парторг, ял Совет ĕçтăвкомне ертсе пыракан ачине чиркӳре вăрттăн шыва кĕртнине те парти умĕнче айăпа кĕни тесе шутламастăр-и?

Волков ларма шутламарĕ-ха, шухăшне малалла аталантарчĕ:

— Çук, Семен Ильич, шутламастăп. Хамăра илсе пăхар-ха? Пур-и пирĕн хушăра кама та пулин шыва кĕртменни?

Пурте шавласа, пăшăлтатса илчĕç, хул пуççийĕсене сиктеркелерĕç, «Ку Григорьев ыйтăвĕпе çыхăннă сăмах-юмах мар» текелесе кулчĕç.

— Йышăнакан пулмарĕ тĕк — çуккă апла. Пурне те пире атте-анне хăй вăхăтĕнче куммисемпе пĕрле чиркĕве илсе кайнă. Пурте эпир пачăшкă аллинчи хĕресе чуп тунă, хуранти çветтуй шывра шăмпăлтатнă, тур юнĕ сыпнă — тĕне кĕнĕ. Григорьев та çаплах ĕнтĕ. Партие

кĕнипе, кĕсьере хĕрлĕ хуплашка чиксе çӳренипе эпир нумай улшăннă-ши? Тем тесен те çакăнта лараканСенчен кашнин ăшĕнчех пытанса пурăнать хăйĕн турри. Чи хăрушă та йывăр вăхăтра пиртен нихăшĕ те «ах, çулпуç, çăлах» тесе кĕл тумасть, пурте эпир хамăр сисмесĕрех «ах, турă, пулăшах» тесе çӳлти вăйран пулăшу кĕтетпĕр. Юрĕ, нумай калаçса кайрăм, вĕçлетĕп. Эпир кунта пуçран шăлсан та, Шупашкарта каçармĕç, парти виçевĕн читлĕхнех персе чикĕç, çырса хурар апла выговорне учет карточки çине. Çулталăкран тасалĕ вăл унран.

— Юлташсем, — терĕ Мургаев, — сасăлама вăхăт. Икĕ сĕнӳ пулчĕ. Çирĕпрех ыйтаканнинчен пуçлатăп. Кам та кам Григорьева партирен кăларас тет...

Быстровсăр пуçне пĕри те сасăламарĕ. Идеологи секретарĕ Посадкина та пуçне çĕклемерĕ. Комисси сĕнĕвĕпе кам килĕшет, тесен... Пĕри алă тăратрĕ, иккĕн... Волков сасăларĕ. Çур питне сулахай алăпа хуплană Майлов Мургаева сăнать. Яков Сидорович васкамасть, Посадкинапа ун майлă çаптарнă Липова, вăрманпромхоз пуçлăхне, кĕтет. Юрий Петрович чăтаймарĕ, пуçне аялалла чиксе, аллине хуллен хăлхи çумне хăпартрĕ. Геннадий Васильевич та юлас темерĕ. Василиса Матвеевна, Мургаев сасăланине курса, мăкăртата-мăкăртатах сулахай аллине тăсрĕ.

Пĕрремĕш секретарь тепĕр ыйту çине куçасшăнччĕ. Быстров ăна тăхтама ыйтрĕ, сăмах илчĕ. Яков Сидорович ăна чарас темерĕ.

— Итлĕр-ха эсир, юлташсем, — хыпăнса калаçрĕ Семен Ильич. — Çапах та Григорьева партирен кăлармасăр эпир йăнăш турăмăр. Эсир мана хуть те мĕн калăр, эпĕ хам шухăшран иртместĕп: пире ĕçре чăрмантаракан балласт çеç вăл. Ку вăл пĕр çын, пĕр факт тейĕпĕр. Районĕпе илсен, мĕнле ӳкерчĕк тухса тăрать-ха? Тĕне ĕненекенсен хисепĕ республикăра чакса пырать пулсан, пирĕн — ӳсет.

Пĕлтĕр çуралнă сакăр çĕр ачаран улт çĕрĕшне чиркӳре шыва кĕртнĕ. Кăçал та çавнашкалах. Венчете тăракан комсомолецсем те йышлă. Ăçталла каятпăр эпир?

Итлерĕ-итлерĕ те ăна Мургаев, йăшăлл чĕрĕлчĕ, ыттисене те кăштах юсаса хăварас терĕ пулас алă айне лекнĕ чухне, ура çине тăрсах калаçса кайрĕ:

— Килĕшетĕп Быстровпа. Çывăратпăр-ха. Парти чĕнĕвĕсемпе витĕнсех. Ăслă сăмаха çын чĕрине варăнтарма пĕлместпĕр. Районта тĕне хирĕçле кĕрешесси хавшанăшăн кам айăплă? Паллах. Посадкинапа Оманов. Обком пленумĕ атеизм ыйтăвне сӳтсе явнă хыççăн мĕн тунă-ха? Акă, Григорьев Ижевска кайса вăрттăн ĕç майлаштарса килчĕ, «пулăшрĕ» пире. Çавăнпа пуçа чиксе ларатпăр та. Ман сĕнӳ пур: турра ĕненекенсемпе кивĕ йăла-йĕркене хирĕç кĕрешессине хавшатнăшăн, райком секретарьне Посадкинана тата пропагандăпа агитаци пайĕн заведующине Оманова асăрхаттарса хăварас.

Унччен ытахальтен çеç итлесе ларакан Посадкина хĕсĕкрех куçне чарса пăрахрĕ, ура çине сиксе тăчĕ.

— Юлташсем... эпĕ, эпĕ, мĕн... Ман çинчен пăхса тухма пухăнман вĕт кунта паян. Григорьев ыйтăвĕ. Ытлашши чĕрре кĕрет Семен Ильич. Хăйĕн йĕркелӳ ыйтăвĕсене тарăнрах çавăрттарас чухне пирĕн ăс-хакăл ĕçне сăмсине чикет. Эпир хамăрах пĕлетпĕр мĕн тумаллине. Пирĕн хамăрăн çул-йĕр пур. Мана, хĕрарăм тесе... Мĕн, эп пĕччен те кунта. Куласшăн-и?

Крутов та тек чăтса ларай марĕ, калаçма ирĕк ыйтрĕ. Идеологсене чарас темерĕ Яков Сидорович. Ыттисем ытлашши хутшăнсах каймарĕç. Ăнлантару, агитаци, ăс-хакăл ĕçĕ халăхра мĕншĕн пурнăç шайĕнче пулса пыманнин сăлтавĕсене ятарласа хатĕрленнĕ пекех тĕплĕн уçса пачĕ Максим Максимович. Чĕлхипе Пан Христоса çурăм çинех çавăрса çапрĕ. Пантелеймон Христофорович пукана чĕриклеттерсе ларчĕ, хирĕçлеме хăяймарĕ. Секретарь хăйĕн сĕнĕвне вăя кĕртрĕ.

Ларуран тухсан Майлов хăйĕн çывăх тусне Оманова пӳлĕме кăчăк туртрĕ. Шалта вĕсене райпо пуçлăхĕ Милов кулкаласа кĕтсе ларать.

— Ăçта, кунтах уçатпăр-и хупах е хамăн саккуннăй хупахне каятпăр? — ура çине сиксе тăчĕ те мăн сумккине уçма пуçларĕ Тит Нилович. — Ăшаланă чăхсемпе хуплăвĕ те сивĕнсе кайрĕç пуль.

— Лере пушшех çын курать, юрĕ, кунтах, — хушу пачĕ пӳлĕм хуçи.

— Сана мĕн пулнă, Панька? — ыйтрĕ Милов. — Мĕн, выговор çапса ячĕç-им кутна?

— Хăвăртрах уç-ха эс! Ăш çунать, — аллине сулчĕ лешĕ.

— Пулăш, пулăш, кансервине уç, кăлпассине кас, вилетĕн пулсан, ак, кĕленчинченех яр, эс уяса каякан марччĕ.

Оманов эрех кĕленчине кутăн тытса лăнкăртаттарчĕ те, «ах, ку Крутова!» тесе сывлăш çавăрса ячĕ.

— Карьеру çунма пуçланине сисрĕн-и, Пантелеймон Христофорович? — Омановăн эрехпе сӳнеймен пушарне çĕнĕрен чĕртсе ячĕ иккĕмĕш секретарь. — «Кĕçех эп те сан пекех секретарь пулатăп» тесе мухтанаттăнччĕ-и-ха? Куртăн-и халь? Паян асăрхаттарчĕç, ыран — выговор, унтан — строгий. Конференци çитет те, аллю... Посадкинана пĕр-пĕр шкула пăраççĕ. Крутова е Быстрова хăпартаççĕ те лартаççĕ идеологи секретарьне. Вăт сана урок, пулас «секретарь». Йăлтах паянхи асăрхаттарупа çыхăннă сан карьеру. Эх, Пантелеймон... Эх, Христофорч... Эх, Оманов юлташ...

Ахаль те пăлханнă Оманов сив чир силленĕ пек чĕтреме тытăнчĕ, ĕçсен-ĕçсен чĕлхи те çĕтрĕ, çăварĕ типсе пычĕ, сурчăкне çăта-çăта çинçе сассипе калаçрĕ:

— Эс суймастăн пуль, Игорь Васильевич. Крутов райкомра ĕçлеме пуçланăранпа чун шилеме пуçларĕ. Пуçлă çын вăл. Пĕлеп эп ăна. Хăратăп. Темскер ырă мар

пулса тухасса туятăп. Усал тĕлĕксем аташтараççĕ. Пĕрмай вăл ман пуç çинче ташланă пек. Чăнах ман вырăна ларасшăн-ши вăл? Хăратăп, Игорь Васильевич. Контрмерăсем йышăнмалла, вырăна сыхласа хăвармалла. Крутов пуçанăшĕ, эй, илтетĕн-и? Мĕн тумалла халь ман?

Чăх тукмакки кăшлакан Милов çăварĕнчи какая çăтса ячĕ те, хэ-хэ! кулса илчĕ:

— Ăс памалла ăна, çытаксăр пепкене. Хăвна пăхăнакана мĕнле ташлаттармаллине те пĕлместĕн. Ай, айван. Яр-ха тепре, хастарлан.

Майлов «хупахĕнчен» пусăрăнса тухнă Пан Христос хăйĕн пӳлĕмне ĕмĕлке пек кĕрсе çухалчĕ.

10

Крутов «Шурăмпуç» колхоза çул тытнăччĕ, поселокран тухса вăрмана кĕчĕ, кĕр илемĕпе киленсе пырать. Шухăша путнăскер, вăл хыçра машина пиклетнĕ сасăпа шартах сикрĕ. Уçă алăкран ăна Быстров кăчăк туртать. Макçăм васкасах кĕрсе ларчĕ. Семен Ильич обком инструкторĕпе Хиркинпа иккен. Акă, пĕчĕк юхан шыв çумĕнче вăрман пĕтрĕ. Умра — йывăç кĕпер. Ун пуçĕнче пĕр çын тăрать. Патнерех çитсен ăна Крутов палларĕ: Карачăм мучи.

Машинăран сиксе тухнă Максим Максимович ватă çынна ларма пулăшрĕ. Мучи пурне те сăнаса пăхрĕ, таса тутăр кăларса питне шăлчĕ, унтан тин сывлăх сунчĕ:

— Турра шĕкĕр, çăпаççипă сире, ачасем, таса пурăнăр, — тесе хутаçне ура çумне хучĕ. Макçăмпа ялти çинчен ик-виç сăмах перкелешсе илчĕ.

Çул тăвалла кайрĕ. Шофер газ хушрĕ те машина йывăррăн чĕтренсе улама пуçларĕ.

— Лашана мар, машина та йывăр-иç тăвалла? Ха, епле мĕкĕрет? Техник темерĕн, чăхăмлать, — калаçу пуçарчĕ мучи.

— Пирĕн шоферĕ сатур, Василий Михалч, чăхăмлама памасть, — «ямшăка» мухтарĕ Быстров. — Рульне кам алли тытнинчен, моторне кам мĕнле хăватпа ĕçлеттернинчен килет вĕт йăлтах.

Карачăм мучи, сурчăкне сирпĕтес мар тесе пулас, каярах таянса ларчĕ те, унпа килĕшсе, пуçне сулчĕ:

— Çаплах çав, ачсем, çаплах, кам мĕне мĕнле тыткаланинчен килет. Çак тăвайккирен хăпарнă пекех мекĕрлентĕмĕр-çке, пурнăç тăвайкки ытла вăрăм.

— Тĕрĕссипе, ун, мучи, пурнăç тăвайккин, вĕçĕ-хĕрри çук, пăхсан та курăнмасть, пĕрмаях тăвалла хăпаратпăр, — терĕ Хиркин.

— Çапли çапла пуль те çав, ачсем, анчах тепĕр чух, хăпараймасăр, чăхăмăç лаша пек тапăртатса та тăратпăр, вăй пĕтнипе каялла та шутаратпăр. Çăмăл мар-çке улăхма. Эпĕ ăна хамăр кăлхуспах танлаштарса пăхап. Вăрçăчченхинех илес. Кашкăр Хĕветучĕ пăртçетательте чухне пит çӳле улăхнăччĕ. Савăнаттăмăр, кăлхус ĕçкинче инкесемпе ура хуçсах ташлаттăмăр, уй тулмалла юрлаттăмăр. Пĕр тĕлте чарăнтăмăр та çав усал хвашистсемшĕн, вĕçертсе ятăмăр та кăлхус турмăсне, каялла, выçса, шăнса, куççуль тăкса анса лартăмăр. Асăнас та килмест вăл йывăр вăхăта...

Шывланнă куçне тутăрпа шăлса типĕтнĕ хыççăн мучи малалла каларĕ:

— Истори урапи тетпĕр-и-ха?

— Çапла, Карачăм мучи, истори урапи, — никам та чĕнменнине кура, хуравларĕ Крутов.

— Вăт, ачсем, истори урапи текенни пурпĕрех чарăнмарĕ, малаллах илсе кайрĕ пире. Анчах та кăлхус урапи чылайччен вырăнтах канса ларчĕ. Вĕлер те тапранмасть вĕт, çĕр çумне пăталанă, тейĕн. Вăт çав, темиçе çул каялла, партин аслă çыннисем тапратма пулăшрĕç кăлхус урапине. Ăслăскерсем лараççĕ иккен

Мускавӗнче. Аслӑ пухӑвне те самӑй ҫут ҫанталӑк чӗрӗлнӗ чухне, ҫуркунне, irттерчӗҫ.

Мучи партин Тӗп комитечӗн 1965 ҫулхи пуш уйӑхӗнче пулса иртнӗ пленумӗ ҫинчен хӑй чӗлхипе каласа пани пурне те кӑмӑла кайрӗ. Темиҫе хут кӑххӑмлатса сывлӑш ҫавӑрса янӑ хыҫҫӑн вӑл калавне малалла тӑсрӗ:

— Пӗчӗк эртелтен пысӑккине те турӑмӑр, виҫӗ кӑлхуса пӗрлештерсе вӑйланас терӗмӗр. Вӑйӗ пурччӗ ӗнтӗ халӑхӑн, анчах ҫав вӑй тарпа ҫурхи шыв пек усӑсӑр юхса кайнӑн туйӑнатчӗ. Чӑнах, ӗҫлен-ӗҫлен те, куннеҫӗрне пӑхмасӑр тапӑлтатан, урара пурпӗрех ҫӑпатаччӗ, сӗтел ҫинче — шӗв яшкаччӗ. Патшалӑх умӗнчи парӑма та татаймастпӑр, хамӑр хырӑма та тӑрантараймастпӑр. Аптранӑ кӑвакал кутӑн чӑмнӑ евӗр, кашни ҫул хуҫа улӑштаратпӑр. Мана та тапӑнса пӑхрӗҫ. «Ват ҫын ӑслӑ пулакан, тавай тӗрӗслесе пӑхас, ҫулталӑка чӑтать, сухалӗ ҫирӗп!» — кӑшкӑраҫҫӗ, ухмах, пухура. Килӗшмерӗм. Ара эп, нумай вӗренмен ҫын, ҫав мӑн хуҫалӑха тытма пултараятӑп-и? Килти ҫемьепе ӑс ҫитерейместӗн... Вӗсем пӗрмай тӗрӗслесшӗн. Шутласах пыраттӑмччӗ-ха, хальхи пӑртҫетатель вун улттӑмӗш. Ку вара, Кашкӑр Хветучӗн ывӑлӗ, Тельман, Макҫӑм Макҫӑмч лайӑх пӗлет-ха ӑна, пӗрле ӗҫлесе курнӑ, ҫын тӑк — ҫын. Пӑхӑр-ха тавралла?

Мучи хыҫҫӑн пурте чӳречерен сӑнама пуҫларӗҫ. Сулахайра, ҫырма тӑрӑх, инҫете-инҫете пӗве тӑсӑлать, шыв ҫийӗн ирхи хӗвел шевли йӑлтӑртатать. Ҫыран хӗрринче — тӑлпан ӗнесем. Юнашарах — шап-шурӑ тӗслӗ витесем, шыв уҫламалли башня, ҫил арманӗ тата ытти ҫуртсем. Тӑварах — машина-трактор паркӗ: мастерской, вӑрӑм гараж, комбайнсем тӑратмалли виткӗҫ...

— Мӑтӑсӑ ку пирӗн, — сухалне шӑла-шӑла мухтанчӗ мучи. — Мӑнуксем ҫак тимӗр хулинчен тухма пӗлмеҫҫӗ. Вӑл, хӑй кам машинипе ларса пынине пӗлнӗ хыҫҫӑн, «ӑнта» терӗ те паҫӑрхи сӑмах вӗҫне ҫиеле кӑларчӗ:

— Вăт вăл ачсем, çынранах нумай килет, этем ăс-тăнĕнчен, кăмăлĕнчен, вăйĕнчен. Лексантăр Çеркейча та шаннăччĕ эпĕр. Çук, хал çитерейменĕ Кириллов кăлхуса çĕклеме. Кашкăр Хĕветучĕн ачи çăкăрлă турĕ яла.Туртса кайрĕ вĕт кăлхус урапине. Аван çын. Акă, Макçăм Макçăмчă суйма памасть мана. Иккĕшĕ пĕр хуранта пиçрĕç.

Колхоз правленийĕпе хирĕç, çул урлă, «Беларусь» кантăр çулать. Кантăр пуçĕсене кĕлтелекен хĕрарăмсем патĕнче машина чарăнчĕ.Пурте çĕре сиксе анчĕç. Обкомран килни Василий Фомичпа калаçса кайрĕ.

— Вăтăр гектар акатпăр кашни çулах, — ăнлантарчĕ партком секретарĕ. — Вĕренсе çитрĕмĕр пек ĕнтĕ ӳстерме. Малтанах нуша кăтартнăччĕ те. Тăвата пин тăкак тӳсрĕмĕр. Хăвăрах пĕлме кирлĕ, кантăр тăпрана питĕ тиркет, units тислĕк-торф нумай ыйтать, çĕр культурине юрататать. Мĕн ыйтнине пама тăрăшрăмăр. Кăмăла хирĕç кăмăл тенĕ пекех вăл та пире ырă турĕ. Вунă пин колхоз кĕсйине юлчĕ. Нумаях мар та, çапах тупăшлă. Пĕрчĕрен пухатпăр-çке усламне.

Районта кантăр акса тумалли лайăх вырăн нумай. Воробьев шухăшĕпе, унăн лаптăкне сарсан, тарăнварсем пек ĕçлеме вĕренсен, çуллен çĕршер пин таса тупăш илме пулать.

Кантăр çулса пухакансемпе сыв пуллашнă хыççăн вĕсем правлени патне каçрĕç. Çурчĕ çĕнĕ. Алăкран кĕрсен пĕри те малалла утма хăяймарĕ. Çăка хăмаран сарнă шап-шурă урайне тин çеç сĕрсе кайнă-çке. Пушмак хывса вĕсем нуски вĕççĕн шалалла иртрĕç.

— Председатель тирпее юрататать те, çусах тăратăп, — терĕ аллинчи ĕç халатне хулĕ урлă уртса янă ватăрах хĕрарăм. — Путинккисене хывмалла марччĕ-ха.

Тулти пӳлĕме капăр илемлетнĕ. Кунта тахçантанпа пулмансккер, Крутов та обком инструкторĕпе пĕрле тавралла пăхса çаврăнчĕ. Хиркин пĕр япаларан тĕлĕнчĕ:

Воробьев хушамат çине-çинех тĕл пулать. Акă, вăрçă ветеранĕсем хушшинче Карачăм мучипе ывăлĕ Хумма сухала каçăртса ларaççĕ. Юнашарах — хисеплĕ колхозниксен сăнĕсем. Кунта та вĕсем пур. Хисеп хăми çинче икĕ Воробьев: Петĕрпе Павăл. Орден илнисен ретĕнче тата виçĕ Воробьев.

— Сала кайăк — ял кайăкĕ, кил кайăкĕ, аякка вĕçмест, кил-çурт ăшшинчех, сарай çунаттинчех йăва çавăрса, пахча-çимĕç хуртне пĕтерсе, çĕр çыннине пулăшса пурăнать. Воробьев хушамат та çавăнпах ĕнтĕ ял хушамачĕ — чыслă хушамат, — савăнăçне пытараймарĕ Крутов, вăл хăй те нимле Максим Максимович та мар, Владик Васильевич Воробьев, Салакайăк Мĕтрин мăнукĕ пулни çинчен çеç персе ямарĕ.

— Чăн-чăн паттăрсен йăхĕ, династийĕ, — Василий Фомич çине хăпартланса пăхрĕ Хиркин. — Пур, пур мухтамалли-мухтанмалли çынсем кунта. кашни колхозрах çакнашкал стендсем тумалла сирĕн, Семен Ильич. Хăш-пĕр правленисене, каçарăр та, кĕрес килмест. Сирĕн мар, пропаганда пайĕн, Максим Максимовичсен ĕçĕ те ĕнтĕ ку, пурпĕрех райкомăн пĕрлех тумалла. Халĕ хуçине шыраса тупар-ха. Ăçта пытанса ларать вăл?

Волков хăй пӳлĕмĕнчех иккен. Вĕсене вăл ăшшăн йышăнчĕ, сĕтел хушшине кĕрсе ларма сĕнчĕ.

— Эпир çакăн пирки ĕмĕтленме те пултарайман, — терĕ Волков пӳрнисемпе вăрăм пучаха пĕтĕрсе. — Епле йывăр вăл — хĕрĕх пилĕк центнер е икçĕр çитмĕл пăт таять. Василий Фомич Шупашкара, выставкăна илсе кайса, пĕрле вĕреннĕ юлташĕсене тĕлĕнтересшĕн-ха.

Парторг председателе пӳрнипе юнарĕ те, кулса ячĕ. Волков та лăхлатмасăр чăтаймарĕ, пурин еннелле те чеен пăхса çаврăнчĕ.

— Министр пирки кулать вăл. Тахçан мана Шупашкара ĕçлеме чĕннĕччĕ-çке. «Кĕçех хам вырăна

сана хăвāратăп, ялта унта çĕрен, тислĕк пулан, карьеру пĕтет, хама итле», — тесе ӳкĕтлетчĕ министерство пуçлăхĕ. Эпĕ килĕштермерĕм пӳлĕм ĕçне, чун уях туртрĕ. Уншăн халĕ пĕртте кулянмастăп.

— Ялтах çĕр министрĕ пултăн, — председателе аякран кăлт тĕртрĕ Воробьев.

— Ытла вырăнлă-çке ку — ялти çĕр министрĕ Волков. Янравлă илтĕнет, — хушса хучĕ Хиркин.

— Хайхи министр пулнă çынна выставкăна чĕнсе хăйĕн карьери хăш картлашкана хăпарса çитнине кăтартасшăн çунать-ха Тельман Федотович, — тулă кĕлтине маччаналла çĕклерĕ Воробьев.

— Мухтанса мар ĕнтĕ, — сулахай тăнлавне сăтăрса илчĕ председатель. — Çитĕнĕве кăтартма. Малтан çынсенчен хамăр вĕреннĕ пулсан, халĕ — хамăр вĕрентетпĕр. Халăх каларăшле, çăкăрлă пулас тесен, çĕре ытларах юратмалла çеç.

— Юратнипех пулмасть-ха вăл, — тарăннăн сывласа илчĕ те ура çине тăчĕ Быстров. — Ĕçлемесĕр, тар тăкмасăр, ыйхă катмасăр ӳсмест тырă. Эх, хăçан сирĕн колхоз шайне çитерĕпĕр-ши эпир района, вара халăх умне тухма та намăс пулмĕччĕ. Çапла-и, Максим Максимович?

— Пĕлетĕп. Ăнланатăп. Хамăр колхоз çитĕнĕвĕсемпе тем пекех мухтанатăп. Ыттисене вĕрентмелли нумай. Астăватăп, çĕре тарăн сухаласси, ăна аммиак шывĕпе сиплесси, сортлă вăрлăх акасси, тыр-пул пухса кĕртессипе типĕтес ĕçри мĕн пур çĕнĕлĕх районта чи малтан «Шурăмпуçĕнче», эп Тельман Федотовичпа пĕрле ĕçленĕ çулсенче пуçланчĕ-çке. Пуçланчĕ те... вырăнтах тымар ячĕ, ытти хуçалăхсене саланаймарĕ. Кĕсьери тутă мăйăра кăларса катма пĕлмерĕç, — алă сулчĕ Крутов.

— Максим Максимович, ăнланатăп сире. Çапах та эпир кунта çынсене хурлама килмен. Ĕçлес пулать, сирĕн Семен Ильичпа иксĕрĕн ĕçлес пулать малашне

лайăххине кашни хуçалăха çитерессишĕн, — çурăмĕнчен лăпкарĕ ăна обком инструкторĕ, унтан пурне те тулалла чĕнчĕ. Василий Николаевича стройкăри ĕçсем интереслентерчĕç. Колхоз хăй вăйĕпе шкул çурчĕ тума тытăннă, анчах кирпĕч çитмест, тимĕр-бетон япалисене Шупашкартан леçсе параймаççĕ.

— Строительсен бригадине, авă, кантăр пуçĕ çыхма ятăм. Никама та ахаль лартмастпăр, — çул урлă тĕллесе кăтартрĕ Волков. — Хĕрарăмсемпе ăмăртчăр-ха пĕреххут.

Крутов Быстров ушкăнĕнчен тăрса юлчĕ, партком секретарьне те хăварчĕ. Инструктор хăй патне ятарласа килнине пĕлсен, Воробьев тавралла пăхса çаврăнчĕ те:

— Коммунистсем пирĕн, хăвах пĕлен, йышланчĕç. Механизаторсем вун виççĕн. Хамăр Петĕр, авă унта, кантăр çулать. Паян вĕçлетпĕр, урăхран уйри ĕç юлмасть. Айта канцелярине, — терĕ.

Тимĕр ешĕкрен тирпейлĕ çĕлесе хунă ĕç хучĕсем кăларнă май, Василий Фомич мăкăртатрĕ:

— Килеççĕ те пуçĕсене тӳрех «делă» ăшне чикеççĕ. «Тĕп Комитет йышăннине пурнăçа кĕртессишĕн эсир паян мĕн тунă?! — тĕпчет пĕр кун Оманов. — Отчет парăр. Хăвăртрах!» «Хальлĕхе нимех те тăваймарăмăр-ха, çĕр улмипе çăрăлатпăр-çке. Çумăрĕ чарăнмасть. Ирĕкленер-ха кăштах», — тетĕп. Эй, ваçка, хирĕлме пуçларĕ манпа: «Ларатăр унта пуçпа ĕçлемесĕр. Йышăну тухни икĕ уйăх. Çаплах çывратăр. Партин экономика политикине хакламастăр. Халех массăллăн ĕçе тытăнмалла. Йышăнăва кашни колхозник хутлав таблицине пĕлнĕ пек вĕренме тивĕç. Массăллă-политикăллă ĕçĕн мĕн пур формисемпе усă курмалла... ала...лла..., ла-ла-ла...» Вĕçне-хĕрне çитиччен итлесе пĕтерейменрĕм. Юрать пире ун пек чухне çăлаканни пур: телефон-автомат. Пат татать усăсăр калаçăва. Пире хушса, тулăксăр кăтарту парса «çӳле çĕкленме пулăшасси» хăçан

пĕтет-ши? Хăвах пĕлетĕн, çĕр улми кăларнă вăхăтра ялта пирĕн пĕр чĕрĕ чун юлмасть. Пурте уйра, пурте пуç çĕклеме мансах чакаланаççĕ, çĕр пуянлăхне пухаççĕ. Вĕсем пур, манран васкавлă отчет ыйтса лараççĕ. Шупашкартан темле доцента колорадă нăрри çинчен лекци вулама илсе килчĕç тата. Халăх хĕрсе ĕçленĕ чух... Ик çĕр çын икшер сехет çухатни пирĕн ĕнсене епле çӳхетет? Килĕшмерĕмĕр. Халь илсе килччĕр — профессора та йышăнатпăр.

Ăна итлесе ларакан инструктор тĕркесене каялла шутарчĕ: пурте йĕркеллех. Секретарь вĕсене ещĕке питĕрсе илчĕ, хăй вĕçĕмсĕрех калаçрĕ:

— Кампани пуçланчĕ ĕнтĕ, каллех...

— Эсир партин Тĕп Комитечĕ йышăнĕвĕ пирки-и?

— Ăхă.

— Ĕç çынnисен экономика вĕренĕвне лайăхлатасси çинчен пит вăхăтра йышăннă-ха, Василий Фомич. Шутсăр кирлĕ вăл. Шутлама, тишкерме манатпăр. Пуспа тенке хакламастпăр. Пĕлтĕр те, авă, районти виçĕ колхозăн кăна ĕç тухăçлăхĕ ӳснĕ, ыттисен — чакнă. Маминовăн, вăн, «Çăлтăрта», гектар çĕр шăп та лăп икĕ тенкĕ тупăш панă. Мĕн усси унтан? Ĕçлесе пустуй тăкакланма та кирлĕ мар ман шутпа.

— Экономикине вĕренмеллех-ха ăна, пуçа хывмаллах. Эпир хамăр та начартарах пĕлетпĕр тăкакуслам арифметикине, пурте ăс-пуç шутĕнче явăнмалла, усăллă тĕллевшĕн, Брежнев пуçлăх каланă пек перекетлĕх перекетлĕ пултăр тесе пур енĕпе те тирпейлĕ те пултаруллă ĕçлемелле. Пирĕн ĕнтĕ кашни гектарĕ çĕр хĕрĕх тенкĕ таса тупăш пачĕ-ха. Районта чи тухăçли шутланать. Çапах чăвашри ытти вăйлă колхозсенчен каярах. Хăçан çитĕпĕр-ши вĕсене?

— Эсир çитĕр-ха, иртсе те кайăр, — терĕ Крутов, — ыттисен хăçан çĕкленес, хăть сирĕн шайпа танлашасчĕ.

Çак хĕрӳ çын хуçалăх малашлăхĕшĕн мар, район пуласлăхĕшĕн те чĕререн кулянса, хушăран тарăхса калаçни Крутова питĕ кăмăла кайрĕ. Воробьевсем çӳлтен хăваласса кĕтмеççĕ, тĕртсе пырас йăлана юратмаççĕ, хăйсемех тытаççĕ те тăваççĕ ĕçе. Секретарĕн ĕçĕ çыпăçуллă, курăмлă. Пурте пур ун, пурте йĕркеллĕ. Лекцийĕ те, калаçăвĕ те, курăнакан агитацийĕ те çителĕклех. Культура университечĕ уçнă. Хор, драма кружокĕ, оркестр ĕçлет. Райком хушицченех вăл политикăпа экономикăна тата малтисен опытне вĕренмелли шкулсемпе кружоксене правленипе пĕрле йĕркелесе хунă. Паян секретарь механизаторсен партгруппинче пулма шутлать. Унти пухăва вăл Максим Максимовича та чĕнчĕ.

11

Паçăр килнĕ çул тăрăх, анкартисем хыçĕпе, вĕсем çурран утрĕç. Карачăм мучи «пирĕн мăтăсă» текен техника паркне çитсе кĕчĕç. Кунти типтерлĕх Максим Максимовича тахçантанпах килĕшет. Ытти хуçалăхсенчи пек трактор е автомашина, плуг е сеялка юхăнса ларнине асăрхаймăн. Çакса, кăкарса ĕçлемелли машина хатĕрĕсене пылчăкран тасатса, çупа сĕрсе каскасем çине вырнаçтарнă. Техника лартса упрама бетонран тунă вырăнсем, запас пайсем тытмалли склад, автомашинăсемпе тракторсен эстакади, машинăсене юсаса йĕркене кĕртмелли вырăн... Халăх пурлăхĕ çине чăннипех хуçалла пăхаççĕ.

Мастерскойри ултă цехра техникăна пĕтĕмпе тенĕ пекех хăйсем юсаççĕ. «Мăтăсă» хуçи Павăл Фомич Воробьев ĕçе йăлтах çĕнетнĕ. «Техникăна лайăх пăхса упрамасăр пурнăç çамкаран шаккать, кĕсьене хыпашлаттарать», — теме юрататчĕ вăл тахçанах. Халĕ те, ик еннелле усăнса аннă çӳç пайăркисене якатнă май, çавнах аса илчĕ:

— Çакăнта пирĕн кашни çул вунă пин тенкĕ перекетленсе юлать. Ăнланмашкăн танлаштару кирлĕ-çке.

Çиччас. Пĕлтĕр юсав ĕçĕсем тума колхоз бухгалтерĕ Марков вун пилĕк пин уйăрса пачĕ, тăкакĕ вун икĕ пин кăна пулчĕ. Ăна кура кăçал тата сахалтарах уйăрчĕç. Эпир тата тепĕр икĕ пин сыхласа хăваратпăрах. Типтерлĕхшĕн, перекетлĕхшĕн тăрăшатпăр-çке, ĕçĕн пĕрремĕш паллишĕн. Унсăрăн çăкăрсăр, укçасăр юлатпăр.

Çавăнпа ĕнтĕ, инженер каланă тăрăх, «Шурăмпуçĕнче» техника юсассипе упрассине, унпа усă курассине çĕнĕлле йĕркелесе çитерне. Мастерскойри слесарьсем машинăна е трактора хуçисемпе пĕрле юсаççĕ. Техникăна вырнаçтарса лартнă, упранă çĕрте те слесарьсем механизаторсене пулăшаççĕ. Çĕнĕ машина пухмалла-и, агрегатсем улăштармалла-и, техника тĕрĕслевĕ тумалла-и — каллех слесарьсем трактористсемпе пĕрле.

— Пурте пĕрле, — терĕ Воробьев мастерскойран тухсан, — ĕçре те, кĕрекере те яланах пĕрле. Ял вĕт. Пĕтĕмпех тăванланса, кум-хăйматлăхланса пĕтнĕ. Пĕрлешнĕ ĕнтĕ пĕрлештернĕ хуçалăхра: кăмăлĕ те, ĕмĕт-шухăшĕ те. Коммунизмри майлах пурăнатпăр.

Механизаторсен хĕрлĕ кĕтесĕ финсен пӳртĕнче. Шалта урайĕ шап-шурă, çыннисен тумĕ тап-таса.

— Эсир тĕлĕннине сисрĕм, — Максим Максимович куçĕнчен пăхса илчĕ Хумма Петĕрĕ. — Сирĕнтен кантăр çулса юлтăм, киле те кайса килеймерĕм, мотоциклпа тӳрех кунта вĕçтертĕм, комбинезонпаччĕ, халĕ — уяври пек костюмпа, галстукпа, одеколон сапнă. Çапла-и? Лартнăранпах ĕнтĕ ку çурта çăвăнса тасалмасăр, йĕркеллĕ тумланмасăр никам та кĕрекен çук. Саккун. Хамăр çапла йышăннă — хамăрах ăна пурнăçлатпăр.

— Эсир ялтан кайнăранпа, Максим Максимович, епле улшăну пулнă пирĕн, куртăр пуль, — мухтанса илчĕ Хумма Петĕрĕн ачи. — Ĕç тумтирĕ, заводри пек, ĕçре юлать. Душра çăвăнатпăр та... мунчана та каятпăр хущăран, вăн унта, фермăна...

— Хӗрсене çурӑм çаптарма-и? — йӗплесе илесшӗн пулчӗ ӑна хулӑн саслӑ Тимухха, Мулла Микушӗн ывӑлӗ. — Венера Ивановна фермӑра мӗнле кружок уçнӑччӗ-ха? Пурнӑç вӑрттӑнлӑхне туйма вӗренеççӗ-и-ха унта вӗсем? Пӗр кун пире зоотехник кӗртмерӗ, çывӑха та ямарӗ. Хаяр вара председатель арӑмӗ. Эс, Воробьев, тем, мунчара кӑтартуллӑ урок ирттересшӗн мар-и-ха?

Пурте ахӑлтатса янипе çамрӑк Воробьев хӗрелнӗ питне сӑтӑрса илчӗ, унтан хура мӑйӑхне якатрӗ те тавӑрса хучӗ:

— Çурӑмне те, хырӑмне те çаптарни чармасть. Мунча тени — мунчах. Милӗк сиплӗхӗ. Итле, Тимухха, хӗрсем пурнӑç вӑрттӑнлӑхне мар, пурнӑç илемлӗхне туйма вӗренеççӗ. Кружокӗ те вӗсен «Пурнӑç эстетики» ятлӑ. Сан вара ун пек çӗре сӑмсуна чикме иртерех-ха. Арçынпа хӗрарӑм хушшинчи вӑрттӑнлӑх та илемлӗх тӗнчи пулнине ӑнланмастӑн. Çав илемлӗх сана, Тимухха, ирхине юрласа ӗçлеме, ӗç пӗтсен ташласа канма пулӑшмалла. А эс, çурӑм вырӑнне хырӑм тесе мӑшкӑллатӑн. Пурнӑç илемне вӗренесси, ай-яй, хӗрсем мунчара çӑвӑннине чӳречерен вӑрттӑн сӑнани мар. Çын илемлӗхне вӑрттӑн вӑрлани вӑл çылӑхлӑ, путсӗр ӗç.

Тимухха именчӗ, унӑн пичӗ вӑтаннӑ пек хӗрелчӗ.

— Пӗрре пӑхнӑ те ӗнтӗ чӳречерен, — тин сассине çемçетрӗ вӑл. Тем лӑпӑртататать. Эп унта арӑм пулмалли хӗр суйланӑ. Тупнӑ. Авланнӑ.

— Арӑм милӗкпе ӑшаланӑ хыççӑн çурӑм кӗçӗтме пӑрахрӗ тесе мухтанаттӑнччӗ-и-ха? — кулчӗ Воробьев.

— Кӗçӗтмест, пӗртте кӗçӗтмест, пит канлӗ çӳреп. Çитӗ, çитӗ сана, — калаçӑва чарса лартасшӑн пулчӗ лешӗ.

Воробьевӗ те вӗçнех çитересшӗн, ӑна çаплах тӑн парать:

— Арӑм çурӑм çапма, хырӑм шӑлма пӗлни те вӑл хамӑр хушӑри культура пулмалла. Хайхи эстетика урокӗсене сан арӑму ахальтен çӳремен пуль-ха. Чипер-

скер тата илемлĕрех пуласшăн, сана та, мазут çăрăлчăкне, хăй пекех илеме юратма вĕрентесшĕн ĕнтĕ.

Пуху пуçлама вăхăт çитрĕ. Пурте Павăл Фомича итлеме пуçларĕç. Партгрупорг кун йĕркине механизатор тивĕçĕ çинчен ыйту лартрĕ. Крутов ăнланнă тăрăх, ун пирки колхозра хыттăн калаçма сăлтав та çук пек. Çапах та — пурмĕн. Вăл шăллĕне, Петĕре, ушкăнра тăн парасшăн.

Хумма Петĕрĕ çумне çуркунне училищĕрен вĕренсе тухнă Тимуххана çирĕплетнĕ пулнă. Çур аки те, ĕççи те вĕсен лайăхах иртнĕ. Куçса çӳрекен вымпел та тракторĕ çинче час-часах вĕлкĕшнĕ. Кĕр акинче вара.. чăпă пулнă. Петĕр ун пирки ăнлантарать:

— Ферма çумĕнче сухалаттăмăр. Каçпа хам вырăна хăвартăм та Тимуххана, канма киле таврăнтăм. Вăл, эсремет пуçĕ, хĕрĕпе... Ĕçне пĕлме пĕлет, çавăнпа шаннă эп ăна. Вĕрентсех пынă. Ăшне кĕрейместĕм, тăн парса çитерейместĕм пулас. Вĕсен юратăвĕнче эп ытлашши те... Айăплă ĕнтĕ, хамах айăплă. Павăл тĕрĕсех ятлать мана.

— Ман ывăл юрнă вĕри кĕселе ма Петĕре çитерес? Хыптăр, пĕçерттĕр хăех чĕлхине! — ура çине сиксе тăчĕ Мулла Микушĕ. — Хам ача пулсан та хĕрхенместĕп эп ăна. Ман ята ячĕ вăл, шаймăк!

Павăл шăллĕне вырăна лартрĕ те айăплă тракториста сĕтел умне кăларчĕ. Тимухха вăтаннипе пуçне çĕклеймест, сасси те чĕтревлĕ тухать хăйĕн:

— Маншăн Петĕр пичине тархасшăн ан хĕсĕрлĕр. Таса çынна вараласа айăпа кĕрер мар. Эп хам йăнăша йышăнатăп. Мĕн тăвас, хĕрех пĕтерчĕ. Эпĕ ăна кабинăна лартрăм. Авланас пирки унччене ыйту хускатнăччĕ. Çăмăлттайланса пер те яр: «Саншăн шыва сикме те, вута кĕме те хатĕр». Çакна илтсен вăл тытрĕ те мана хулран пăчăртаса, хăлхаран кăшкăрчĕ: «Апла каç çак пĕве урлă, вара кĕçĕрех арăму пулатăп!» Ăçтан чăтан унта юнашар ларакан хĕр хăвăн арăму пулма килĕшнĕ самантра. Плука вĕçертсе хăвартăм та урхамаха тӳрех

çырманалла тытрăм, кăртти-картти, хăнтăр-хантăр тутарса шыва кĕрсе кайрăмăр. Вăл хăранипе çухăрса ячĕ, трактор чарăнса ларчĕ. Лачакана сиксе антăм та, ăна алла илтĕм... Çапла суха турăм...

— Арăм пулчĕ-и вара çав каç? — кула-кула ыйтрĕ çамрăк Воробьев.

— Пĕве урлă каçайманскер... Лачакара, темле-çке, лекнĕ-ши тута хĕрринчи çу, — ихĕрчĕç хыçалти ретрен.

Павăл Фомич вĕсене чарса лартрĕ:

— Ним ахăрмалли те çук кунта. Тимухха хăйĕн кăмăл-туйăмне пылаклатассишĕн трактора çĕр каçа усăсăр тăратрĕ. Ирпе унта урăх ĕçрен икĕ трактор тытса яма тиврĕ, аран-аран туртса кăлартăмăр. Кун хыççăн юсамалла пулчĕ. Вунă çул каяллине астăвакансем пурха кунта. Комбайнсемпе тракторсене тата ытти техникăна кирлĕ пек упрайманшăн, çĕмĕрсе-ватса пĕтернĕшĕн уголовнăй йĕркепе хурав тыттарма патшалăх ятарлă хушу кăларнăччĕ. Чылай çĕрте активсе курчĕç çав указ тутине. Вăл халĕ вăйне çухатман. Сана та, Тимухха, унпа çамкаран çапма пултарнă эпир. Анчах... хĕрхентĕмĕр. Юратушăн пурте Тимухха пек алхасма тытăнсан, мĕн патне çитсе тухăпăр эпир? Пире ялти тĕп ĕçчен теççĕ. Эпир кам пулатпăр çакăн хыççăн, э? Чăнчăн каскăн! Пăхăр-ха тинкеререх пуçне чиксе тăраканскер çине. Хĕрĕ умĕнче вăл — арăслан, юлташĕсем умĕнче — мулкач. Эс, Тимухха, механизатор чысне варалярăн. Тĕрĕссипе, колхоз ятне ятăн. Çавăнпа халь слесарьте ларма тивет. Ĕçле, тăрăш, юсан, унтан курăнĕ мĕн шанса памалли. — Вăл шăллĕ енне çаврăнса сассине хăпартрĕ: — Сана, Петĕр, юлташсем умĕнчех калатăп: япăх воспитатель эс. Паян çакăнта хурав тытатăн — саконнăй хурав! Ашшĕ-амăшĕ ачишĕн, вĕрентекен вĕренекеншĕн хуравлă пулсан, Эсĕ — Тимуххашăн хуравлă.

— Шăллĕне те хĕрхенместкуку? — илтĕнчĕ Мулла Микушĕн сасси.

— Кунта маншăн тăван çук. Кĕреке хушшинче мар эпир, ĕçре. Коммунистсем пурте пĕр, никамшăн та нимĕнле çăмăллăх, чаплă уйрăмлăх пулмалла мар. Выговор памалла пулать сана паян, Петĕр Фомич, эпир хушнине пурнăçласси çине çиелтен пăхнăшăн. Ача вăййи выляма кĕмен партие. Кам та кам...

Крутов ăна чарчĕ те, сăмах ыйтса, ăнлантарса пачĕ:

— Юлташсем, йĕркене пăсар мар. Уставра коммуниста айăпламалли çинчен, паллах, каланă. Ăна эсир пĕлетĕр. Кунта вара сирĕн çакна астумалла. Коммунистăн тивĕçĕ чăннипех те питĕ пысăк. Парти йĕрки пиртен кашнинченех çирĕп пулма ыйтать. Паян, акă, çавăн пиркиех ыйту сӳтсе яврăр, Петр Фомича ятларăр, ăна намăслантартăр. Вăл, ман шутпа, ăнланма тивĕç. Акă мĕн, партгруппа пухăвĕнче коммуниста айăпламаççĕ. Кирлех пулсан, ун çинчен пуçламăш парторганизацие е парткома пĕлтермелле, секретарĕ, авă, кунтах. Тивĕç çинчен пуçарнă кунашкал калаçу чăнах та усăллă, вырăнлă, кирлĕ — пуриншĕн те.

«Пĕртте Тымарти пек мар кунта — çирĕп йĕрке. Пĕрпĕрне хĕрхенмесĕр, вăтанмасăр пĕр-пĕринчен çирĕп ыйтаççĕ», — шухăшларĕ пуху хыççăн инструктор. Çирĕплĕхе Крутов юрататъ. Уншăн вăл çак колхозра ĕçленĕ вăхăтра та пуç тарне нумай тăкнă. Йĕрке туса çитернĕччĕ çав. Халĕ вăл йĕркене çирĕпех тытса пыраççĕ.

Тĕттĕм пуласпа тин Крутов Вăрманкаса кайма тухрĕ. Воробьевсем мотоциклпа леçсе хăварасшăнччĕ. Килĕшмерĕ. Çĕтĕлсе пĕтнĕ асфальтлă çул тăрăх вăл çуранах утрĕ. Шухăш «Шурăмпуçпе» «Çăлтăр» таврах явăнчĕ. Ун шучĕпе çак хуçалăхсен аталанăвĕ хушшинче сахалтан та вун-вун пилĕк çул хушши сыпăк пур, колхозниксен пурнăç шайĕ енĕпе вара иккĕшĕ те пĕрпекрехех темелле. Тарăнварта та, Тымарта та халăх пуян пурăнать: пĕрисем — çĕр уссине курса, теприсем — вăрман

хӳттипе те колхоз пурлăхне çаратса. «Шурăмпуç» район пурнăçĕн тытăмĕнчи чи çӳлти хутĕнче, «Çăлтăр» — никĕс çумĕнче. Пĕри района малалла туртать, тепри — каялла. Тымарсене тарăнварсен чуппине çитерме мĕнле вăй кирлĕ-ха? Камăн вăйĕ? Тупсăмĕ паллă: райкомпа райсовет ĕçтăвкомĕн вăйĕ. Пуян хуçалăхра та, чухăннинче те çынсем пĕрешкелех,вĕсем пĕр ĕçех тăваççĕ, пĕр çĕр синчех тар тăкаççĕ. Тупăшĕ çеç кĕсьене пĕр пек кĕмест: пĕрин — тенкĕ, теприн — пус. Çак тан марлăхшăн ертсе пыракансемех айăплă. Район пуçлăхĕсем кăна мар, республикăна ертсе пыракансем те, тем тесен те, чухăн колхоз çыннисен умĕнче парăмра, каçарма çук пысăк парăмра.

Парти съезчĕсем, Тĕп Комитет пленумĕсем пулса иртеççĕ. Вĕсем çĕршыв, халăх умне пысăк тĕллевсем лартаççĕ. Йышăнусенче кашнинчех парторганизацисене, хуçалăхсене, ĕç эртелĕсене ертсе пырас меле çĕнĕлле йĕркелеме хушаççĕ, майĕсене кăтартса параççĕ. Вĕсене пурнăçламалли ĕçсене те темĕн чухлех палăртнă ĕнтĕ районта. Çапах партин Тĕп Комитечĕн утмăл пиллĕкмĕш çулхи мартри Пленумĕ хыççăнхи улшăнусем «Çăлтăрта» палăрсах каймаççĕ-ха. Тутлă вĕри шӳрпене сĕтел çине лартса парсан та çын ăна ывăçпа ывăçласа çăвара хыпаймасть. Кашăк кирлĕ. Парти чĕнĕвĕсене халăх патне çитерсен те, вĕсене ăнлантарса памалли, вĕсемпе усă курмалли хатĕр кирлĕ. Унсăрăн вĕсене çын ăша илеймест. Халăха ура çине кар тăратса кĕрешĕве çĕклемесĕр, хавхалантарса йĕркелесе пымасăр, темле усăллă палăрту та пуш параппан çапнă хыççăнхи пек çеç тăрса юлать.

Ертсе пырас ĕç мелне улăштармашкăн Вăрманкасра мĕншĕн аялти сыпăкран мар, çӳлерехрен тытăнмаллине Крутов лайăх ăнланать. Мургаев, вată лашалла, касса пăсмасăр, пуçа чиксе пĕр йĕрпе пĕрмаях мĕшĕлтетет. Халĕ касă пăсма вăхăт çитнĕ. Кивĕ йĕр вырăнне çĕннине хывмалла. Анчах, камăн?..

*Пĕрремĕш кĕнекен вĕçĕ*

**Владимир Прокопьевич Кузьмин**

# КОРЕНЬ ЖИЗНИ

Роман

*На чувашском языке*

Книга первая

*Издается в авторской редакции.*

Подписано к печати 12.12.2008. Формат 60x84/16.
Бумага офсетная. Печать оперативная. Гарнитура Таймс.
Физ. печ. л. 17. Тираж 1500 экз. Заказ № 171.

Отпечатано в типографии «Новое Время».
428034, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98, 46-43-46. E-mail: newtime1@mail.ru.

80.00

## ВЗАИМОДЕЙСТВИЕ В ИНТЕРЕСАХ ПОВЫШЕНИЯ ЭКОНОМИЧЕСКОГО ПОТЕНЦИАЛА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ





З.В. Воробьева,
генеральный директор

### ОТКРЫТОЕ АКЦИОНЕРНОЕ ОБЩЕСТВО СТРАХОВАЯ КОМПАНИЯ "ЧУВАШИЯ-ПОДДЕРЖКА"

428024, г. Чебоксары, проспект Мира, д. 90, корпус 1

ОАО СК «Чувашия-Поддержка» успешно работает более 15 лет. В его уставном капитале доля Прав тельства Чувашской Республики составляет 33,15 процента. Компания предоставляет широкий спект страховых услуг, динамично развивается и имеет устойчивое финансовое положение. По объему соб ранных страховых взносов она входит в число лидеров регионального страхового рынка, а по страхо ванию урожая сельхозкультур занимает лидирующие позиции на российском страховом рынке. В целя доступности страховых услуг представительства компании открыты во всех городах и районах Чуваши а с 2008 года ее филиалы открываются в других регионах России.

За заслуги и достижения в лидерстве по управлению бизнесом и за использование инновационных техно логий компания награждена тремя международными призами общественного признания. В 2008 году он стала лауреатом Поволжской национальной премии в области страхования «Серебряный зонт» в номи нации «Информационно-открытая страховая компания» .

### ЧУВАШСКИЙ РЕСПУБЛИКАНСКИЙ СЕЛЬСКОХОЗЯЙСТВЕННЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КРЕДИТНЫЙ КООПЕРАТИВ «СОГЛАСИЕ» (ВТОРОЙ УРОВЕНЬ)

ЧРСПКК «Согласие» создан в 1998 году при содействии СК «Чувашия-Поддержка». Сегодня он входит число крупнейших сельских кредитных кооперативов России. Большой опыт работы на микрофинансово рынке и высокая квалификация персонала позволяют кооперативу быть финансово-устойчивым и конку рентноспособным. Он успешно участвует в реализации социально-значимых республиканских целевы программ. В рамках его взаимодействия со СК «Чувашия-Поддержка» сформирована и развивается ре иональная двухуровневая система сельской кредитной кооперации. Микрофинансовые услуги становят ся все более доступными и востребованными. Люди учатся жить в долг и успешно пользуются займам на выгодных для них условиях. Кредитные кооперативы хорошо вписываются в локальную социально экономическую среду и становятся надежными партнерами для хозяйствующих субъектов, граждан и ор анов местного самоуправления.

### РЕСПУБЛИКАНСКИЙ СЕЛЬСКОХОЗЯЙСТВЕННЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ ОБСЛУЖИВАЮЩИЙ КООПЕРАТИВ «СОДЕЙСТВИЕ» (ВТОРОЙ УРОВЕНЬ)

Неотъемлемой частью многоукладной сельской экономики становятся сельскохозяйственные потреб ельские кооперативы сельскохозяйственных и несельскохозяйственных видов деятельности. Их предна начение - обеспечивать личным подворьям граждан доступ к рынкам сбыта и переработки сельхозпро укции, оказывать на селе услуги по обработке земельных участков и уборке урожая, продаже материал ых ресурсов, перевозке грузов, выполнению ремонтно-строительных и других работ. В целях объедин ия и координации работы таких кооперативов, более эффективного ведения хозяйства и увеличения д одов их членов в 2006 году при участии СК «Чувашия-Поддержка» и ЧРСПКК «Согласие» создан РСПО Содействие». Он оказывает своим членам консультационные, информационные и маркетинговые услуг омогает им создавать и развивать материально-техническую базу, проводит для руководителей и спе иалистов кооперативов обучающие семинары.

### УЧЕБНО-ИННОВАЦИОННЫЙ ЦЕНТР С УЧЕБНО-ДЕМОНСТРАЦИОННЫМИ ПЛОЩАДКАМИ

В рамках взаимодействия СК «Чувашия-Поддержка», ЧРСПКК «Согласие» и РСПОК «Содействие» на ба е имущественного комплекса страховой компании осуществляются меры по созданию Учебно-инноваци нного центра с учебно-демонстрационными площадками на базе сельскохозяйственных потребительски ооперативов. Эта инициатива получила поддержку со стороны Минсельхоза Чувашии и России, а опы аботы этих трех структур востребован и за пределами республики.

ОАО СК "Чувашия -Поддержка"
тел./факс: (8352) 286-484
www. podderjka.ru

ЧРСПКК "Согласие"
тел./факс: (8352) 286-400
www. chrspkk.ru

РСПОК "Содействие"
тел./факс: (8352) 286-873
www. rspoksod.ru